ҪĂВАШ СОВЕТ ПИССАТТĔЛĔСЕН СОЙУСĔ

# ТРАКТĂР

ҪĂВАШ СОВЕТ ПИССАТТĔЛЕСЕН ЛИТТЕРАТТУРĂПА КРИТТĔК АЛЬМАНАХĔ

ТĂВАТТĂМĔШ
КĔНЕКЕ

ҪĂВШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР 1933 ҫул

Отпечатано в типографии № 1
ЧУВАШГИЗА
Канашская 16

# МУҪАР

КАЛАВ)

## ТРУПИНА МАРХВИ.

I

Муҫара йалканашӗ пайан ҫухӑнсен спискине кӳртрӗ. Муҫар савӑнат, вӑл хӑй тӑвас тепине турӗ.

— Ну, арам, ӗнтӗ тип прӗккӗн сывласа йама пултаратпӑр, пурӑнатпӑр пурӑнӑҫа, терӗ вӑл хавассӑн, йалканашӗ ӑна ҫухӑнсен спискине кӳртни ҫинҫеп пӗлтерсе. Муҫар ҫейен куҫне хессе илҫӗ, ҫӗтӗк-ҫатак аҫисем ҫинелле кӑмаллӑн пӑхрӗ. Унтан пасара тухса сулӑнҫӗ.

Муҫаршӑн пурӑнӑҫ пӗр ҫӑрмавлӑ шухӑшсӑр, майӗпе шуса кайрӗ. Пурӑнӑҫ майӗпе шусах хӗл вӗҫнелле ныҫӗ. Йалта ҫураки кампани пуҫланса кайрӗ. Кантарла варлӑх пухаҫҫӗ, суртлаҫҫӗ. Шкул аҫисем трактӑр фонҫе ваҫҫи укҫа, тимӗр-ташка пухаҫҫӗ. Йалканаш таврашӗнҫе сынсем халҫенхниҫен ытларах вӗркӗшеҫҫӗ. Каҫсерен пухусем: ҫухӑнсен пуххи, хӗрарӑмсен пуххи. Тепрер касран пур халӑх пуххи пулса иртет. Канашлаҫҫӗ, сӳтсе йаваҫҫӗ, халиҫҫен туман ҫӗнӗ йапалалене тума йышӑнаҫҫӗ. Йал вӗрет. Йал вӑраннӑ хӑйӗн нысӑк ӗҫне тума—ҫураки кампани иртерме.

Пӗрре ҫухӑнсемпе йал активӗ пуххиҫе акмалли ҫӗр лаптӑкӗшне ӳстермелли ҫинҫен канашлаҫҫӗ. Хура пусса ҫӗрулми, турнепс акса хӑварас теҫҫӗ. Пухура акмалли ҫӗр лаптӑкӗшне ӳстерме йышӑнҫӗҫ. Сынсем пухуран саланаҫҫӗ. Акӑ виҫ-тӑват ҫын пӳртрен тухнӑ та, ӑкум вӗҫӗнҫе пӗр ҫӗре пухӑнса ҫӗлӗмсем ҫӗрткелесе тӑраҫҫӗ. Муҫар та пухуран тухрӗ. Ҫӗлӗм ҫӗртсе тӑракан ҫынсене тӗттӗмре сӑласшӑн пулса вӑл вӗсем патнерех пырса тӑҫӗ. Калле-малле пӑхкаласа илҫӗ.

— Аван калаҫаҫҫӗ комсомолӗссем... Халӑха серепепе тытна пек тытасшӑн вӗсем,—терӗ вӑл шӑппӑн.

— Мӗн апла? Ҫӑнахах аван вӗт вӑл хура пусӑра ҫимӗҫ туса ларни,—терӗ пӗри.

— Аванҫке, пит аван,—терӗҫ тата пӗр иккӗшӗ.

— Аванни аван та,—тет Муҫар йӑваш сасӑпа, совеҫӗ пур—ҫӗр умай акнашӗн палук хываҫскеха. Халӗ пире комсомолӗссем йапатса, ӑслаlаса тенӗ пек, хура пусса актарса илесшӗн, кӗркунне вара, есӗр аванҫухлӗ ҫӗр акса илнӗ тесе, палукне ӳстерсе шаварса илеҫҫӗ.

— Сапла пулӗ те ҫав,—терӗ пӗри иккӗленсе.

— Ҫӑн та ҫапла пулма пултарать,—терӗ тепри.

— Акмалли ҫӗр лаптакӗшне ӳстересси кирлех те мар пулӗ вӑл пӑр пулсан,—терӗ виҫҫӗмӗшӗ.

— Ара кирлĕ мар пулмасăр,—тет Муҫар.

— Пышанас мар ана ыранхи халăх пуххинҫе,—терĕ иккĕленсе каласма тытăнни.

— Йышанас мар, йышанас мар.—терĕç ун хыççăн ик-виçĕ сасă.

Муҫар ним пулман пек тенер ушкăн таракан çынсем патнелле утса канат. Кунта та кам пуррине санаса илсе, çакнашкал калаçăвах хуллен манăн танратса йарат.

Тепĕр кун халах пуххи—пысăк пуху. Акмалли çĕр лаптăкĕшне ӳстересси çинҫен ыйту лартна.

— Кирлĕ мар! Акмастпăр хура пусса!—теççĕ ĕнер актив пуххинҫе çак ынтава хапăл туна çынсемех.

— Акмастпар! теççĕ вĕсем хыççăн теприсем те. Комсомол,—кал активе н тĕм вăй хурат хура пусса çимĕççем акса хăварассипĕн, хăшпĕр ҫухансемех кайалла нахаççĕ—акмалли çĕр лаптăкĕшне ӳстерме пышăнасшан мар.

Кетесре пĕр шарламасар Муҫар ларат. Унан хура куçĕсем кăмăллăн ҫăл-ҫал выҫаççĕ.

* * *

Мутар 1925—26-мĕш çулсенте аш нҫен уйрăлса тухрĕ. Ашшĕн ҫăвашла ханхапа улам витнĕ пӳртпе кĕлет çеçҫĕ, Муҫар хăй выҫҫи çенĕ, тĕреклĕ çурт лартрĕ. Пӳрҫĕ урамалла виçĕ жаитăклă, хапхи вырăсла. Карташ йĕри-таврашĕпе икĕ хутлă хама витнĕ сарай. Лаша. не пурҫҫĕ. Ратлă сыснасем усратҫĕ.

— Муҫар ашшĕнҫен ирттерҫĕ. Тăманаран хурҫăка пулнă пек ҫухан çын ывăлĕ пулин те, тĕреклĕ пурăнма тытанҫĕ,—текелетҫĕç сынсем Муҫарăн таса çуртне, мăнтар выҫхине пахса.

Ҫăн та Муҫар тирпейле, çителĕклĕ аван пурăнаçпа пурăнакан ватам хресҫен пулҫĕ. Муҫар арамĕн ратнисем, хурăнташĕсем пурт пуйан çынсем, суту-илӳ тăвакан çынсем пулнă.

— Муҫар пуйан çын хĕрне илсе, пуйансемпе çӳресе, йупаха тăкрĕ,—тетҫĕç тата хăшпе пĕри Муҫар аван пурăнма тытăннине пĕлтерсе. Муҫар сутă тăват, йе ана-çаран тара илсе акат тени йал хушшинҫ илтĕнместҫĕ. Муҫар çулла та, хĕлле те таçта кайа-кайа çухалса пурăнатҫе те, каллех киле килетҫĕ.

— Еç патне кайса пурăнтăм-ха,—тетҫĕ вара хăй Муҫар çавăн пек таста кайса çухалса пурăннă хыççăн килне таврăнсан. Килте ҫу Муҫар пĕр пасартан та йулмастҫĕ. Тем илет, тем сутат пасарта Муҫар, тем тума кайат пасара, ана никам та пĕлмест. Çанлах Муҫар хала лашине кӳлсе кашни пасара ҫуптарат.

— Ушкăнлă хуçалăхсем туса кулаксене тĕшшипех пĕтермелле! илтĕнҫĕ йалсем тарăх çирĕп сасă.

Палсем хускалҫĕç. Вăйлăрах, тăҫăрах ҫамартанҫĕç йалсенҫ ратраксем, ҫухансем, йал активĕ. Кулаксене лапҫăтаççĕ. Акă çăмарт хуçи пулна Иван Çеменҫа раскулаҫҫит турĕç. Прахут пек пысăк, пур сарпа сарлана, темиçе пӳлемлĕ çуртне йалканашĕ илҫĕ. Унтан лапкаçа арман хуççине, тата ытти пуйансене те ҫерет тиврĕ. Пал вĕрет

çаврăнаť, пĕтĕрĕнет—йун сăхакансене, хăйсен пуйанлăхĕпе хăратса, йала пусмарлакансене йал хăй ашĕнђен кăларђ- кăлара ыватаť. Телĕнсе хăраса ўкнĕ ĕнер кăна йун сăхакансем, пайан вĕсем йăваын пек, йăппăнса пытанса çўреççĕ. Аçта та пулин май тупса, хўтлĕм шыраса тупса çăлăнса пулмастпи, теççĕ.

Йал кĕрлет. Йал йун сăхакансенђен тасаласшăн, урăхланасшăн. пурнăçа çĕнĕ çулпа йарасшăн тапаланаť. Кĕрлет, вĕрет йал. Киве йал ванса çĕнĕ пуласшăн çине танă. Йалсенђе колхоссем тăмăртанаççĕ. К. йалĕнђе те 25 килĕрен колхос пулнăђђĕ, анђах çурхи акана туха умĕн колхос саланђе—К. йалĕнђе вăйлăрах пулђĕ пулĕ кулакпа тĕттĕмлĕх вăйĕ. Кăçал кана ку йалта шкул уçăлђĕ, комсомол пађђейкки оркансатсиленнĕ. Актив вăйсăртарах, çивĕђленсе çитеймен.

Пуйансене пĕтерме тытăнсан шарт сикнĕ пекех пулђе Муђар. Унăн тилĕ пек шĕвĕр, ырхан пиђе тата ытларах ырханланса шĕвĕрелђе. Халиђђен те кускаласа йăл-йăл выђаса таракан хура, ђĕрс кучĕсем халĕ канăçсăр кускалама тытăнђĕç. Муђар сынпа калаçнă ђух сынна куçран пăхмаст, куçне таçталла йарса, тем шыранă пек, тем шухăшлана пек, куçне выђатса тăраť. Муђар хай лутрарахскер шăмшакне тўп-тўрĕ тытса, çăмаллăн утса çўретђĕ, халĕ хутланса çўренĕ пек туйăнаť. Пасарсене йарккама Муђар пађах пăрахрĕ. Перре çуркуннене Муђар ĕнине, лашине сутса йађĕ. Унђђен те пулмин пĕтĕм çурт-йĕрне Çĕрпў йенђи сынсем куçарса кайрĕç. Муђар çурт выранне. апи-çаранне пулашкома пађĕ те, ађи-пађи мĕнĕпе шакăрти-шакăрти Йанаула тухса кайаť.

— Пуранмаллах куçрам, сывă пулăр, тесе хаварђе Муђар йалйышна.

Çу иртсен, кĕркуннене, Муђар çемйипех хăйсен йалне кайалла персе çитет.

— Çука йертĕм, тĕп пултăм, тет Муђар. Хай те, ађи-пађисемпе арăмĕ те çĕтĕк-çатак. Муђар пулашкомран пулăшу ыйтаť. Пулăшком тырă, çĕрулми параť. Йур çавиђђен пўрт лартса кересђе тесе Муђар хыпаланса çўрет. Йалканашне пырса Муђар пўрт тупса пулмаст-иш тесе пулăшу ыйтаť, тархаслаť. Йалканашĕ Муђара пĕр кулак мунђине пўрт тума йўне хакпа пађĕ. Муђар мунђана сипленкелесе ђасах хай çурт выранне куçарса лартрĕ те, ађисемпе кĕрсе вырнаçрĕ, пурнаť...

* * *

Муђар халъхи вахăтра халăх çине йаланах тухкалаť. Йалканаш кенђелерне те ђас-ђасах пыркаласа кайаť. Сынсем калаçнине пĕр шарламасăр итлесе лараť.

Ака пайан халăх пуххи пысăк пулмалла. Йалти уђитлĕсемпе комсомолĕссем колхос тăвасси çинђен ыйту лартассĕ. Муђар çĕтĕк пиншакне тăхăнаť те, пухăва утаť. Пумай калаçаççĕ, керлеççĕ пухура. Çурçĕр иртсен тин пуху саланаť. Пĕлтĕр ванса, саланса кайнă колхос активиссем тарăннине тепĕр хут ђамăртанаť. Ђухансем, вăтамсем колхоса кĕрес текенсем тата пумаихха, керетпĕр теççĕ, анђах киле арăмсемпе калаçса татăлман тесе сыранмасăр тађеç. Пухуран сынсем виççĕп-тăваттăн, пилĕкĕн-улттăн килĕсенелле саланаççĕ. Муђар та

килнелле утрĕ. Малта пыракансене хуса çитрĕ. Кашни çыннине сăпаса илĕ, палларĕ. Çук, ку çынсем Муђара кирлĕ мар. Ку çынсемшĕн пулсан Муђар нихçан та çăвар уçас çук. Ку çынсене Муђар пĕтĕм ђеререн кураймасť. Кусем кулаксене пĕтерес, колхос тăвас тесе çунса таракан активиссем. Муђар ку ушкăна пăрахса малалла утрĕ. Урам кĕтессинелле çитнĕпе пилĕк-ултă çынна хуса çитрĕ. Кусене те сăпаса палларĕ.

— Ват кусемпе калаçас пулаť,—терĕ Муђар хăй ăшĕнђе. Çынсен ушкăнне çывçăнђĕ.

— Менле, тăвансем, кĕретпĕри колхоса? терĕ Муђар.

— Кĕмелле пуђ, кĕрес пулаť,—терĕ Савин Михађи тирпейлĕ, ĕçђен вăтам, Муђар кÿршийех.

— Кĕмесĕр... кĕресђĕ-ха манăн та, тет Анушки, 4 ађа амăшĕ, ђуханскер. Унан упăшки иртне кĕркунне кана Елетре шыва кайса вилнĕ.

Çынсем урам кĕтессинђе ђаранса тăђĕç. Колхоса кĕресси çинђен калаççĕ.

— Кĕме йураť, канешнă,—терĕ Муђар хуллен.

—Кемелле çав, кĕмелле. Никам кĕмесен те манăн кĕресђĕ-ха. терĕ Савин Михађи.

— Епĕ ват, пайан вĕлеретĕн тесен те колхоса кĕрессĕм çук. терĕ Муђар. Унăн сасси ђререн тухнă пек туйăнаť. Вăл ку сăмахсене пит ĕнентермелле каларĕ.

— Мĕншĕн апла калатăн есĕ?—терĕ Муђара Савин Михађи

— Мĕншĕн тет... Хам пĕлетĕп, хам курнă колхосра пуранса Колхос вăл çынна тĕп тăваканни! Епĕ кунтан кайсан хам та, ухмаха йерсе тенĕ пек, колхоса кĕтĕм те, хама хам пĕтертĕм. Куратăр вĕт есĕр хăварах, епĕ сирĕн пата кĕлмĕçле пулса килтĕм. Колхоса выђăху-ђĕрлехĕне, мĕн пур пурлахуна кĕр те, вара тытанаť совет сана çаратма Выђăх-ђĕрлĕхе трактар паратпăр тесе илсе кайрĕç. Акма варлăх пухрăмăр, ăна та урăх, лайăх варлăх паратпăр тесе илсе кайрĕç те, петрĕ, пимĕн те памарĕç. Мĕнле ĕçлес? Мĕнпе пусса шуратса хăварас? Ним тума аптранă йенне колхос саланђĕ. Тĕреклĕ ватамсем колхосран йерикĕ уйăх хушшинђе ыйткалама каймалла пулса тухрĕç. Хам курнă та, хам ђухланă та çавăнпа сире хĕрхенсе калатăп..

Муђара итлесе тăракан çынсен кашнин ђере кăрт сикрĕ. Ăша темĕн сивĕ напала кĕрсе ўкнĕ пек пулђе. Аш вăркама тапратрĕ.

— Кунта та çапла пулĕ-и тен, пĕлес çук, терĕ Сахрун.

— Епĕр. ун пек канçĕррине колхос çинђен шухăшламан-ха. ђутах кĕрсе кайаттăмăр,—терĕ Савин Михађи.

Саланђĕç. Муђар калани ђылайĕшĕн умĕнђе харушла ĕмĕлке пек тăђĕ. Колхоса кĕресси шиклентерет. Пухуран тухнă ђух савăнăçла пулнă шухăшсем таткан-кĕскĕн каскаланса сапаланђĕç. Анушки Муђар сăмахне итсен ђĕтрене йерђĕ, сипĕ пек. ђĕре. тем шкек пулнă пек, ыратма тытăнђе.

— Ай тур, колхоса керес ан пултăр. Хĕрарăм пуçпа пушнех пуша курмалла пулĕ, тесе шухăшларĕ Анушки. Колхоса кĕрес мар тенĕ шухăша Анушки хăй ăшĕнђе çирĕплетсе хуђĕ.

Муђар хуллен ҫынсемпе калаҫат. Хайен ҫӗрӗк шухӑшӗсене ҫынсен пуҫӗсене кӳртсе вырнаҫтарасшӑн ҫӳрет.

Акӑ йалта вӑрлӑх сортлама тытӑнђӗҫ. Йалканашӗ ҫурђӗ умне лавсемпе, ҫунашкасемпе тулли михӗсем турттара турттара пыраҫҫӗ. Трийӗр патенђе ђерет кетсе тараҫҫӗ. Трийӗрӗ пӗр ђарӑнмасӑр кӗрлет. Трийӗр патенђен пӗлӗт пек тусан мӑкӑрланса тӑрат. Ҫынсем кӑшкӑрашса калаҫнипе, трийӗр сасси карташне тултарса тӑрат.

Муђар йалканаш картанинелле пырса кайат, пӑхкаласа ҫӳрет. Вара йалканашӗнђен айӑккарах урамсенелле уттарат. Хӑш-пӗр киле ђелем ђӗртме текелесе кӗрет.

Акӑ ку урамра Вађӑ-пионер хайӗн ҫинҫе сассипе вӑрлӑх сортлама каймалли ҫинђен кашни кантӑкран уҫҫӑн ҫухӑрса калат.

— Кайса сортламалла та-ха, тет Улђана, Муђар кӗрсе ларнӑ кил-хуҫи арӑмӗ, кӑмака умӗнђе таракансќер.

— Кайатӑп акӑ халех. Ҫак ҫӑпатана туса пӗтерем-ха, тет Хумма. Хай ҫапатине васкавла ҫавӑркаласа, шӑлне ҫыртса шаккат.

Муђар ђӗлем мӑкӑрлантарса ларат. Хумма тӗшмӗшле ҫын иккенне, турра ӗненнине Муђар пит аван пӗлет. Хӑй сӑмахӗсене витӗмлӗрех пултар тесе Муђар турӑ ҫинђен асӑнса калаҫма ђытӑнат.

— Ех, ҫылӑха кӗретпӗр ҫав епӗр турӑ хушман ӗҫсене туса. Елӗк сортламасӑрах тырӑ аван пулнӑ. Халӗ сортласа та выҫӑ ларатпӑр. Турри парсан тыр-пул хӑйех аван пулат. Турӑран туртса илме ҫук,—терӗ Муђар. Выраххӑн сывласа илчӗ. Унђен те пулмин ҫӑварӗнђен ђӗлеме каларса алӑк патнелле ђаът сурђе. Сисӗнкӗсӗр Хуммана сӑпаса пӑхса илђӗ.

— Пионерӗсем пур, кашни кунах вӑрлах сортлама хӑвалаҫҫӗ. Сортламасан та нимех пулмасӑ пулӗ те-ха, терӗ Улђана. Ҫапата шаккаса ларакан упашки ҫине пӑхса илђе. Улђана хай ашӗнђе Муђар сӑмахӗсемпе килӗшсех те пырат, анђах упӑшки мӗн калассине кӗтет.

— Йал мӗн тунине тавасах пулат ӗнтӗ,—тет Хумма ҫӑпатине кӗрнешсе.

— Епнин есӗ формалинпа та ђӳхес тетӗн тен?—терӗ Муђар тӗлӗннӗ пек пулса.

— Ҫынсем ђӳхеҫҫӗ тӗк, ђӳхес пулат,—тет Хумма.

— Ей, тупнӑ вӑрлӑха формалинпа ђӳхеме, сортлама. Епӗ кайса пурӑннӑ ҫӗрте, Йанаул йенђе, пӗр сортламасӑрах тырӑ калама ҫук аван пулат. Халӑхӗ те унта питӗ турӑ саккунӗне пуранат те, турри ҫавӑнпа тырӑ-пула антарат. Тура парсан кампка ҫинђе те тырӑ пулнине илтмени есӗ? Елӗк, пӗр ҫулхине, ҫу каҫа та пӗр пӗрђӗ ҫӑмӑр ҫуман, тет. Пусӑри тырӑ типсе хӑрса кайма пуҫларӗ, тет. Пӗр ҫын хайӗн ани ҫинђи туллине пиђкене шыв турттарса шӑварат, тет. Пӗрре ҫак ҫын тулӑ шӑварса килет те, курах кайат, кӑмака ҫинђе нем йешӗл тула лара парат. Тула пуђахесем ҫиђе сывлӑм шӑрҫаланса тӑрат. Ку ҫын тӗлӗнсе кайса пӑхса тӑђӗ тет те пахса тӑнӑ ҫӗртех тулӑ сарӑхма тытӑнђӗ, тет. Пуђахсем ҫын пӑхса тӑна ҫӗртех тӑрӑнма тапратрӗҫ, тет. Тытса пӑхат хайхи ҫын пуђахсене—тулӑ пӗрђи сап-сара та шултра таранса ларнӑ. Пусӑри тулли шывпа шӑварса

тапа çĕртех типсе ларнă тет. Вăт, турă мĕнле хăй хăватне кăтартать. Кăмака тăпри çинђе тулă пулнă, шăварса тăпă ана çинђе пулман. Тен, ăçтан пелен, каçал та çапла пулĕ акă: суртламаппписенех турă çнне шапниле вĕсене турă тырă-пулă авантарах туса парĕ. Епе хам суртласа мĕн туса аппаланасăм çук. Елĕк мĕнле пурăнна, елĕк мĕнле акнă, çаплипех туса пурăнас тетĕп епĕ, тере те, Муђар киле тухса кайма тăђĕ. Кăшт тем каласса кĕтсе тăнă пек тађĕ те, тухса кайрĕ.

Муђар кăмака çинђе тулă тăранса ларни çинђен калана ђух Хумма çăпатине шаккама та манса кайна. Пĕр куç илмесĕр Муђар çние пăхса, унăн сăмахĕсене ђăнласа хăлхине ђиксе ларђĕ.

— Пайанах каймăпар-ха еппин варлăхне суртлама, тăхтарха каштах, терĕ Хумма. Çăпатипе туса пĕтерсе пăтана çакса йађĕ.

Хумма турра ĕнепекен çын. Муђар каланине вăл, тĕттĕмскер, ђеререн йышăнђĕ. Хађ ĕнтĕ Хумман çынсем пек мар, вăрлăха суртласа мар, хăй тĕллĕн, пер пĕђтен, варлăха суртламасăр акас килђĕ.

— Суртламастпăр вăрлăха, формалинпа та ђуҳеместпĕр, терĕ Хумма арăмне. Хăй кĕрĕк тахăнђĕ те, таçта тухса кайрĕ.

II

Хуллен-майăн вăхăт шăватех. Çур çывхарђĕ. Йур кайса пĕтрĕ. Хевел хĕртнĕçем хĕртсе çĕре типĕтрĕ. Çуртырри акма вăхăт çитре. Колхоçнексем çуракипе ђан маттап тухрĕç. Пеђђец хуçалăхсем хăшĕ пери акма та тухаймăн-ха, колхос акса та ĕлкĕрнĕ—машиннăпа акнă.

Анушкин çуртырри ани колхосĕннипе йунашарах. Анушки Муђар сăмахне ĕненсе колхоса кĕмерĕ, анђах Муђар каланă пек пулмарĕ: колхосăнне вăрлăхне те, выђăх-ђĕрлĕхне те никам та илсе каймарĕ. Илсе кайма мар—колхоса хăйне пер хĕрлĕ пысăк вакăр тата сакăр ратлă сысна çури районтан пађĕç. Анушки хăйĕн пилĕк йатак çĕрпе ырхан лашине аран-аран сухакаласа шураткаласа хăварђĕ..

Çăмăр та çукаларĕ, ăшă та пулђĕ. Çуртырри аван шăтса, аван ўсет. Колхоçнĕксем хайсен тыррине пăхса амсапаççĕ. Колхос пуссинђе пĕр çăм куракĕ, пĕр хура вырăн çук. Шыв пек тан таса, пĕр тикĕс хитре выртать колхос пусси.

Вахăт шăвать. Çуртырри пуç кăларђĕ, пулса та çитет.

Пĕрре Хумма, ђĕлĕмне паклаттарса, тыррине пахма хирелле утрĕ. Тыра шатсанах Хумма хире тухса, хăй анисем çине çитсе курнăђђе. Ун ђух Хумман тыррисем çынсенни майлах пекђĕ, хале аплах мар пек, Хумман саваймаллийех çук. Урпа ани çинђе сар ђеђек варăланса ларнă. Тĕл-тĕл майзи керлесе ларать. Урпа çăм куракеем хушшинђе пăђăр-пађăр курăнать. Пырать Хуммэ сĕлĕ патнелле.

— Сĕлĕрен те пулин турă телей паман-ши тесе шухăшлат Хумма. Пахать—сĕлĕ тăррисем хуран куранса лараççĕ. Тытса пăхать Хумма селлине—сĕлĕн пĕр ђĕшшийĕ те çук, хура тусан пекки кăна алла сарать—пĕтĕмпех селĕ кăмпаллă. Çынсенĕн шкамăнах та Хумманан пек пађар тыра çук.

Хуйхăрса килелле утрĕ Хумма. Халĕ Хуммана уçă сасăлă пионер

та, трийер кĕрлени те аса килђĕ. Çук ентĕ, иртсе кайна вал çурхи вăхăт. Колхоçнĕксем, ытти хресђенсем те суртласа, формалинпа тăхесе акнисем тырăллă пулĕç, Хумманан тыррине, курăк пуснăскерне, кăмпаллăскерне, çавапа кăпа çулмалла.

— Кирлех пулнă çав трийĕрĕ те, формалинĕ те, тет Хумма хађ хăй ăшĕнђе. Муђар сăмахне пăхнăшăн хăйне хăй нитĕ хытă ўкĕнет. Ђĕререн тарăхса, калама çук хуйхарса Хумма килнелле нуçпе ђиксе хуллен утрĕ.

Ырăш вырса пĕтерсенех çуртырри те тăранђĕ. Çуртырри вырма ђăн малтан колхоçнĕксем тухрĕç. Анушки те колхоçнĕксем урпа вырма тухна кунах хăйĕн икĕ пысăкрах ывăл ађипе ана çине çитсе тăђĕ.

— Колхоçнĕксенђен йулас марђђĕ-ха, пĕрлех пуçтарса кĕресђĕ, тет Анушки наттарланса шухăшласа. Вырас килсе, васкаса вырма тытăнђĕ Анушки. Кађăрт та, кăђăрт тутараћ çурлине. Ађисем те амăшне кура тăрăшсах выраççĕ.

Халĕ, ирхине, пусăра уçă. Кăшт тўлех çил вĕркелет. Сывлăм типменха. Урпа пуçахĕсем нўрлĕ, вырма авап.

Колхосăн урпа пусси хĕррипе пысăк кайăк йевĕрлĕ машини хăлаçланса çаврăнаћ. Кĕрлет машини. Ун сасси таврана йанратса тăраћ. Вĕлт те вĕлт машини хыççăн çыхмалли тыра ўксе йулат. Колхоçнĕксем урпа пусси хĕррипе йĕри таврa тăпă та, машини вырнине çыхса пыраççĕ. Кашни çын хыççăн тĕмсем купаланса пыраççĕ. Колхоçнĕксем хушшинђе уççăн калаçни, шўт туса кулни илтĕнет.

Хĕвел çўлерех хăпарнă çемĕн хĕртме тытăнђĕ. Шăрăх, пађа пула пуçларĕ. Кăнтăрлапа çилĕ те ђарăнђĕ—таçта кайса кĕђĕ. Хĕвелĕ пур—пĕђĕкçĕ кăна курăнаћ пулин те, çапах калама çук йăлтăртатса ђенĕтсе пĕçерет.

Анушпа ађисем тар йухтарса выраççĕ. Ирхипе ађасем самай калаçкаласа вырађђĕç, халĕ пĕри те нимен те шарламаççĕ. Вырассине те пасăрхи пекех вырайманççĕ. 11 çулхи Хвеђук кăнтăрлахи апат çиме вахăт çитиђђенех кăнтăрлахи апат çийес тесе йăнкартатма тытăнђĕ.

— Анне, ав колхоçри ађасем, пирĕн пеккисем, хĕвел хĕртме тапратсанах çĕрле парахрĕç. Киле йађĕç вĕсене... тет Хвеђук. Хай йал йеннелле куçне хĕссе пăхаћ. Колхос ађисем йăмраллă, сулхăнла урама кĕрсе кайнипе Хвеђук пăхсах тăђĕ. Колхос ађисем шăрах вахăта канса иртереççĕ. Каçалапа, шăрăх иртсе кайсан, каллех çĕлеме тухаççĕ.

— Пирĕн анне колхоса кĕнĕ пулсан епĕр те çав колхос ађисемпе пĕрле пулаттамăрђђĕ,—тет Хвеђук ђĕререн кампăлсарланса. Сасси унăн хађ йĕрсе йарас пек ђетрет, тутисене мăкартна.

— Колхоса кĕнĕ пулсан епĕр те çак тырра çурлапа вырса асапланмастамăрђђĕ,—тет 13 çулхи Ваççук—Анушкин ђăн асла ывалĕ. Ваççук та колхос ађисем киле кайнине курнă. Паçар Ваççук, тăрăшса выраканскер, халĕ вырайманаћ, ывăннă вăл. Унăн шăрăхпа

пуҫе ыратма тапратре. Колхоҫнӗксен йоннелле Ваҫҫук ђас-ђасах пăхат.

Колхос хиренђе машшин саплах кӗрлет. Иккӗмӗш хут улăштарђӗҫ ӗнтӗ колхоҫнӗксем машшинăна кӳлнӗ лашасене. Колхоҫнӗксем хушшинђе ҫаплах, паҫăрхи пекех уҫҫăн калаҫин, пӗр-пӗрнине шут туса кулкалани илтӗнет. Колхоҫнӗксем кăмăллă, тарăхмасăр ӗҫлеҫҫӗ. Машшин пусă хӗррипе ҫаврăнса ҫӳренӗ ҫемӗн вырмалли тырра сахаллатса пырат. Пысăк кайак хăлаҫланса ҫӳресе, тырра хыпласа ҫисе пына пек туйăнат. Сахал вăхатрах колхоҫнӗксем нумай ӗҫлесе тăкрӗҫ.

Йап!.. йап!.. уҫҫăн илемлӗн кӗђӗ хăлхана. Кавак пӗлӗтре кесле сасси йанранă пек туйăнђӗ. Колхос хирӗ йепђе илтӗнђӗ... Ратио калама тытăннă иккен. Камала ҫӗклентерекен илемлӗ кӗвӗ йанăраса тарат. Енер-виҫӗм кунах комсомолӗҫсем шкулти ратиоприйомнӗкрен трансљатси тăватђӗҫ. Колхоҫнӗксем апат ҫимелли, канмалли вырăнта пайан кромкоковориттел лартнă.

Акă колхоҫнӗксем ӗҫе пăрахса урапасем патнелле пыђӗҫ. Унта урапасем хыҫнерех, паҫартаннах кăвак тӗтӗм авкаланса вӗҫкелет. Шурă саппунлă хӗрарам колхоҫнӗксем валђи апат пӗҫернӗ. Колхоҫнӗксем пурте урапасен сулхăнне ларса тухрӗҫ. Шурă саппунлă хӗрарăм апат антарса парат. Ҫил колхос пусси йепђен вӗрђӗ те. Анушки сăмсине йаппа шăрши тутлăн пырса ҫапăнђӗ.

Анушки те ађисемпе кăнтăрлахи апат ҫиме ларђӗ. Хутаҫран ҫакăрпа тăвар, тымарӗпех тăпалтарна сухан каларса хыврӗ. Ҫиме тытанђӗҫ.

— Ҫийӗр, ҫийӗр,—тет ађисене Анушки. Хăй тинсе кушаса кайнă ҫăкара пӗђӗк витрери шывпа сыпса ҫийет.

Колхоҫнӗксем апат ҫисе ларнă хушăра вӗсем патне икӗ ача хаҫатсем ҫӗклесе пыђӗҫ. Сисе ларакан колхоҫнӗксен хушшине салатрӗҫ. Ратио тӳлек сывлăша йантратса пуҫăра илемлӗн илтӗнет.

Апат ҫисен Анушки канма выртмасарах вырма тытанђӗ. Ваҫҫукпа Хрепук колхоҫнӗксем патне ратио итлеме кайрӗҫ. Анушки вырат, вырат... Колхоҫнӗксем апат ҫинӗ хыҫҫăн канна хушăра Анушки вӗсем ђулах, пӗђђепех вырса тăкас пек васкаса вырат, хăй мӗн ђухле вырнине кайалла ҫаврăнса пăхат. Анушкин вырнă ани нумай мар-ха, нименђул та ӗҫ малалла кайайман. Кăнтарлађђен вырни, ана пысăкӗшне танлаштарсан, ытла сахалха. Анушки пăхат, пăхат малалла, вырмалли анине. Ђылай сарлака та. пăрăмха Анушкин урпа аннйӗ. Хађ пайан кăна вырма тытăннă. Тата миҫе кун вырмалла пулат-ха ку анана? Малалла пăхсан куҫ хăрат, вырса пӗтерессӗн туйанмаст. Ҫанталăкӗ пур—унар та, шарăх тăрат. Ав мӗнле Атăл хӗрри йоннелле вӗлтӗр-вӗлтӗр курăнса вӗри сывлăш хумханат. Каҫалак умӗнђе тăнă ҫӗртех ҫав таҫтан хумханса килекен вӗри сывлăш хумӗ пырса ҫапăнат пек туйăнат: кас-кас пӗҫерсе илекен сывлаш ăшнех кӗрсе кайатан. шăрăх, пăђă вара ун пек ђух. Анушкин те ҫак шăрăхрап урапа айӗнелле, йе ăҫта та пулин сулхăналла пытанасђӗ, канасђӗ пăртакҫă, ялăсем те ыратаҫҫӗ, анђах йурамаст-ха канма. Анушки тырă вырса пӗтерсен тин канма пултарат. Анушкин пуҫе пӗр ҫак тырра хăйӗннех

вырас пулат̆. Ҫына тара тытса выртарма Анушкин пӗр пус укҫийӗ ҫук. Кама та пулин пулӑшма ђенес—пулӑшма халӗ никамах та килес ҫук: кашни харпӑр хӑйӗнне вырса пӗтерме тӑрӑшаҫҫӗ.

— Ей! Прикатирсем! Еҫе!—терӗ колхоҫнӗксем патенђе пӗр сасӑ хыттӑн.

Пӗр ҫын пек харӑс тӑђӗҫ колхоҫнӗксем. Ратно сасси илтӗнми пулђӗ. Кӗрлесе кайре татах машшин. Пур колхоҫнӗксем те ӗҫе харӑс тытӑнђӗҫ. Хӑлаҫланат̆, васкаса ђупса ҫаврӑнат̆ пуҫа йӗрп тавра улӑппа кайак—машшин. Йаванса йулат̆ ун хыҫҫан ҫыхмалли тырӑ, ҫыхӑнат̆ кӗлте, купаланат тӗм хыҫҫӑн тӗм...

Анушки ађисем те амӑш патне пыђӗҫ, вырма тытӑнђӗҫ.

— Колхоҫнӗксем [illegible] вырӑнне кӑвас ӗҫеҫҫӗ. Плаки анна пире те пӗрер курка ӗҫтерђӗ,—терӗ Хвет̆ук.

— Тата какӑй йашки хыҫҫан турӑх ҫирӗҫ. Аван вӗсен—колхоҫнӗксен. Йаҫлӗри ађисене те шурӑ кулађӑпа сет, манна пӑтти ҫитереҫҫӗ. Паркун йаҫлине хам кӗрсе куртӑм. Кунта тата, палаткӑра, ђеђӗ ађисем сулхӑн, уҫӑ ҫӗртре шура кипкесем ҫинђе тапкаланса выртаҫҫӗ. Вӗсене Аңук пахат̆. Аңук ђӗђӗ ађисене пахма вӗренткен курса кайса вӗренсӗскер. Ку ађасене те, апат ҫиескен пулинсене, маннӑ патти ҫитерђӗҫ. Аван ҫав колхосри ађасен пурнӑҫӗ. Пирен Мишшана Наҫтук килте иккӗшех хӑйсем тӗллен йулаҫҫӗ. Кунӗ кунӗпе хамӑр пекех пађар апатиҫ пурӑнаҫҫӗ. Колхосран пӑрӑнсах ађасене тетсата йамарӑн, терӗ Ваҫҫук.

Ађасем амӑшӗ колхоса кӗменшӗн ӳкелесе калаҫни амӑшӗн кӑмалне каймаст. Анушки ађасен шухӑшне урӑх ҫерелле пӑрас шухӑшпа:

— Урпана ђас вырса пӗтеретнӗр теҫҫӗ-и колхоҫнӗксем?—тесе ыйтрӗ.

— Тенӗр икӗ кунтан пӗтеретпӗр урпине, вара тула выратпӑр теҫҫӗ. Ҫӗрле вырмалли прикатӑ та колхоҫнӗксем туса хунӑ. Пит хаварт ӗҫлеҫҫӗ вӗт вӗсем,—терӗ Ваҫҫук.

— Пирӗн те колхоҫнӗксенђен йулас марђђӗ-ха. Вӗсемпе пӗрле вырса пӗтересђӗ. Епӗр те вырар-ха хӑвӑртрах. Тырӑ пӗтерсен лашапах куккусем патне пынулми кайса илепӗр,—тет Анушки ађасен вырас камалне хӑпартса.

Хӗвел касала йеннелле сулӑнсан шӑрӑх сирӗлђӗ. Ваҫҫукпа Хвет̆ук халӗ амӑш текӗрлесех тапиме вырас тесех вырасҫӗ. Ав колхос ађисем те уйрӑм прикатӑпа кӗлте ҫӗклеме тухрӗҫ. Каппӑ ађасем ӑмартса, ђупкаласа ҫӳресе ӗҫлеҫҫӗ. Ватӑрах ҫынсем виҫҫӗн-тавattӑн ађасем ҫӗклене кӗлтене сурат туса пыраҫҫӗ. Колхоҫнӗксен ӗҫӗ калама ҫук хӑвӑрт ӳсӗнсе пырат̆. Вӗсем ђап та урпала ђасах та вырса пӑрахӗҫ. Сантаӑлак уйар шарӑх тарат̆ те, тулӑпа сӗлӗ те пулса ҫитеҫҫӗ. Весене вырма тытӑнмалла.

Пӗр капӑҫа пӗлмесер Анушки ађисемпе 4 кун вырђӗ. Урпа ани вырпи ҫурри кӑна пулна-ха. Колхоҫнӗксем урпана 3 кун, пӗр ҫӗр вырђӗҫ те, 4-мӗш кун ҫинђе урпала пер ҫере туртгарса, капан туса лартрӗҫ. Халӗ колхоҫнӗксем тула выраҫҫӗ. Колхос мар хреҫђенсем те, йышлӑраххисем, урпана вырса пӗтере пыраҫҫӗ. Сантаӑлак шӑрӑх

тăннпе урпа тăкăнма тытăнџĕ. Урпана ирсенџе кана вырма пулаť. Кăнтăрла телĕнџе урпана пырса тĕртĕнме те май çук—калама çук ванаť. Урпа пуçахĕсем çекĕл пек кукленсе, џикĕнсе ларaççĕ. Анушки урпине ирсенџе выркалаť, кăнтăрла тулă выраť. Колхосан 3 куптан туллине те вырса пĕтерџĕç. Темле колхосан ĕç ннт хăварт ÿсĕнсе пыраť çав. Унăн вырмалли симĕсрех сĕлĕне пăрçа çеç йулна.

Пĕр кунхине çанталăкĕ тата шăрăхрах пулџĕ. Çĕрле вăйлă çил тухрĕ. Анушки вырса пĕтереймен тыррншĕн хуйхăрса çĕрĕпе çывраймарĕ. Ирхпне Анушки ирех, аџисемсĕрех, хăй анн çине џупрĕ. Урпа пĕр пуџахсăр, шăпăр пек лараť. Пуçахсем çĕре шап-шурă такăнпă. Анушки тулли патне џупса ныџĕ. Туллине сирсе пăхрĕ. Сарă тула пĕрџисем те çĕрте сапаланса выртаççĕ. Анушкин пыр тавăрланса килџĕ, куçĕ шывланџĕ. Ассăн сывласа сывлăш çавăрса йарнџџенех вĕри куççуџ ннт çăмарти çинџен пăпартаттарса анџĕ. Анушки сурат кутне луџăрканса анџĕ те, питне хуплаcа ĕсĕклерĕ.

Çанталак пайăп сулхăн, пĕлĕтлĕ. Кая йенџен мал йенелле çăмăр пĕлĕџĕсем кайаççĕ. Çанталăк кăр йеннелле кайнăн туйанаť. Тискерленнĕ. Çăмăр çăвасшăн тăраť.

Анушкин ăш вaркаť. Пысак, йавар йапала хулпуççи çине нерсе аннă пек, пусса, хĕплесе тана пек Анушкине хуйхă пусрĕ. Анушкин вăй петсе кайна пекех туйăнџĕ. Алă-урана та сиктерес килми пулџĕ. Пĕтĕм шăмшак шĕлтĕрех кайрĕ. Шел, ах, ннт шелçке тырра, калама çук шел! Анушки колхос хирнелле пахрĕ. Колхосăн, ех, мĕнтĕрлĕ ырă пулџĕ. Çилпе колхосăн пĕр тырă пĕрџи те ÿкмерĕ вĕт. Анушки хăй мĕншĕн колхоса кĕменнине аса илџе. Колхоса кĕменшĕн ÿкĕнни Анушкин џерине пăшатан пек шăтарма тытăнџĕ. Çăмăр пĕлĕџĕсем џушă пек шухăшсем вĕçĕмсĕр џупрĕç. Анушки хĕллехи каçа аса илтĕ... Џухăнсемпе йал активĕ пуххинџен Анушкиť ытти сынсемпе килелле утре. Анушки пухуран хăй колхоса кĕрессине џап ырă кăмăлпа џеререн йышăнса тухрĕ. Колхос çинџен шухăшлани ăна савантарна, џан паха йапала пек туйăннă. Тĕл пулџĕ вĕсене Муџар. Анушки çав Муџара аса илсен, халĕ Муџара çиленес килсе кайрĕ. Çав Муџар колхос пурнăçне хурласа калана сăмахсем Анушкин паха шухăшĕсене луџăркаса, çĕмĕрсе пăрахрĕç. Муџар самаххине пула Анушки колхоса кемерĕ. Шухăшласа ларнă çемĕн Анушки џĕринџе Муџара çиленесси, кураймании çивĕтленсе ныџĕ, Муџар тăшманăн туйăнса кайрĕ.

Çапла йавар хуйхăна шухăша кайса ларнă вахатра Анушки курах кайрĕ—колхос хирĕ урлă пер çын иртсе Анушки патнелле пыраť. Пăхаť Анушки—Савин Михаџи иккен. Михаџа лăпсăр-лапсăр кивĕ пиншак тăхăнса йана. Лапџак карттусне çамки çине лăп лартнă. Михаџа хуллен, ывăннă çын пек утса Анушки патне ныџе.

— Ес, Анушки, мен пăхса ларатăн? Урпа пуçне мĕншĕн пухма тытанма тăн? Курмастăни, пĕлет таталса анас пек. Акă халџ çăмăр џăрса нетсе йаџĕ тĕк, урпа пуçе шатса та кайаť, терĕ Михаџа. Анушки çумне суратран пер кайте илсе ларџĕ. Михаџа ăна пăхма кайна пулнă.

— Пухмалла та-ха,—терĕ Анушки, хăй йĕнине палартасшăн мар пулса, питне-куçне тутăр вĕçĕпе шалкаласа илсе.

— Мта, Анушки. Санăн кăна мар, манăн та пĕр çурпилĕк тулă йухса тухпă. Елкĕреймерĕмĕр. Уринĕ те, туллинĕ те пĕр вахăтрах пулса çитрĕç те... Колхоссем ав, антăрамарĕç. Машинипа ђасах пулаŧ çав ĕçĕ те. Так кемерĕм çав колхоса, терĕ Михађа хуйхăллăн. Упăн хĕвелие хуралса кайнă пиђĕ-куçĕ пайан хађђенхинђен ырхантарах пек туйлнаŧ. Куçĕсем тин ђирлесе тăнă çыннăн пек путса кĕнĕ. Анушки пекех Михађа та кĕçĕр çил тулашинпе çĕрĕпе çывăрман, çурпилĕк тулă ăна каяăç паман. Хĕрĕх çулхи Михађа пайан ватăлса кайна пекех пулнă. Аллинђе виç-таватă пушă тула пуђахĕсем.

— Мта, кĕмеллеђђĕ, пятĕ кĕмеллеђђĕ çав колхоса,—терĕ татах Михађа.

— Ан та кала,—терĕ Анушки.

Михађа калаçнипе Анушкин тата ăшђик тепĕр хут тăвăнса килђе. Тутасем хăйсемех ђетренсе, турткаланса илђĕç. Анушки йĕрсе йарас килпи паллă ап пултар тесе, тутисене тутăр вĕçĕпе хупларĕ. Айккинелле пăхса куçĕсене мађ-мăђ тутарса илђе.

— Епĕ колхоса кĕрес тесех танађђĕ те, так... çын сăмахĕ хыççăн кайса хама хдм муталантăм. Муђар каланипе ђăпларам çав епĕ,—терĕ Михађа.

— Епĕ те Муђар каланипе пит ĕнентĕмçке çав, терĕ Анушки хуйхăллăн, ўкĕнсе.

— Хелле Муђар колхос çинђен мен пур ырă маррипе çеç пит калаŧђĕ те, нумайĕшĕ ђухансем те, вăтамсем те ширен пекех Муђара ĕненсе колхосран пăрăнса йулђĕç. Халĕ Муђар хай те вĕлт çеç колхоса кĕрсе кайрĕ,—терĕ Михађа.

— Ан калаç,—терĕ Анушки тĕлĕнсе пĕççипе çапса илсе. Суйа пуђ вăл?

— Йĕрре те суйа мар. Хађ, çуртырри вырма тытанас умĕн кĕнĕ. Муђаран çуртырри анисем колхосĕнпе пуназпарах вет. ав, лем йенђе, терĕ Михађа, аллипе колхос пусси урла катартса.

— Ара, Муђар хĕлле колхоса вилес пулсан та кĕместĕп теттђеçке,—терĕ Анушки, çаплах тĕлĕнсе.

— Кĕместĕп тетђе те, кĕђĕ çав. Муђар вăл ђейе. Пирĕн йышшисене, колхосшăн çунакансене, вăл колхосран сивĕтсе хăварђĕ. Муђаран пĕр тырă пĕрђи те тăкăнмарĕ. Епĕр курпа хуйăхъ вăл пĕлмест те. Курас килми пулђĕ ĕнтĕ манăн çав Муђара. Колхос пирки суйса çўресе муталанашăн тем тусă пăрахас килет. Ех, ăна, йыттта! Муђар пире улталаман пулсан пире пайанхи хуйхă та туламасŧђĕ. Пĕçертрĕ ăшђике Муђар!

Михађа ырхан пиђĕ-куçĕ çилĕпе çивĕђлепђĕ, хăвăрт сывлапипе самса çунаттисем хăпартланаççĕ. Пуса урлă айаккалла пăхна куçĕсем тапмана тĕллесе пăхă пек çилепе тулнă.

— Ытла мăшкăл айне пултамăр çав. Ђун тулашаŧ!—терĕ Анушки тепĕр хут тата вăйтарах хуйхпие хыпăнса.

Хађ ĕнтĕ Анушки Михађарăн йĕрес килпипе те пытарса тăмарĕ. Пĕр хуйхăпа çакă икĕ çын пер-пĕрне сывăхрах пек пулђеç. Анушкин шывланнă куçĕсенђен куççуђ тумламĕсем йар та йар йуха-йуха анаççĕ.

— Тулашасси тулашатпар епӗр, анҫах тулашнипех иртерсе йайаратпӑр. Ҫавӑн пек путсӗр ҫынсене, вӗсем мӗнлине влаҫ умӗнҫе, йал ҫинҫе палӑртма тӑрӑшмалла. Пӑркунах, хӗллех Муҫар колхос ҫинҫен мӗнле-суйа сӑмахсем сарса ҫӳренине комсомол йаҫҫейкки ҫыруҫине Арманӑва, йе йалканашне пӗлтермеллеҫҫӗ. А хаҫ ӗнтӗ Муҫар колхоса кӗрсе кайнӑ. Хамӑр паҫар епӗр. Ҫавнашкал йурӑхсӑр ҫынсем ҫинҫен влаҫа вӑхӑҫӗпе пӗлтерместпӗр. Муҫар мана колхосран пӑрса хӑварнашӑн, ҫавнашкал колхос ҫинҫен суйнӑшӑн, пире уҫтала-нӑшӑн епӗ ахалех ирттерес ҫук! Туйрам, сисрӗм Муҫар мӗнле ҫыннине, анҫах ҫынсен куҫ умне курӑнмалли ирсӗр ӗҫӗсене тӗшлӗн пӗлейместӗпха, тупсӑмне тупаймапха. Ех, хамӑр паҫар ҫав, хамӑр тӑш-мана хамӑртап кӗрекене иртеретпӗр.

Анушки пӗр ҫӗҫмесӗр Михаҫа каланине итлесе ларҫе. Михаҫа каланипе Анушки килӗшет.

— Муҫар ҫинҫен хӗрарӑмсен пуххинҫе сӑмах тапратса йарасха. Уҫитлӗ Анна Петровнӑ ун пеккисене хытӑ йӗркелекенҫӗха. Отпуск-ран килсенех Аннӑ Петровнӑпа Муҫар ҫинҫен каласа парам. Херҫҫер ӑна—Муҫара. Кӑларса парахҫар колхосран!

— Ҫапла кирлӗ. Ну, Анушки, киле кайас пулаҭ, ҫапталӑк йӑсӑр-лапма тытапҫе, терӗ йулашкинҫен Михаҫа, ура ҫине таҫе.

Пӗлӗт хӗрри йасарланса, таврана хупӑрласа киле пуҫларӗ. Ми-хаҫана Анушки йывӑр хуйхӑпа хыпӑнса йалалла хуллен утреҫ. Вӗсене хирӗҫ вӗтӗ ҫамӑр пӗрӗхме тытӑнҫе.

## III

Савин Михаҫипе Муҫар пӗр кӳрӗшре, йунашар пурӑнаҫҫӗ. Пӗр-пӗрин патне ҫӳрекелетҫеҫ. Нумайах пулмаҭ, Михаҫа Муҫара кӗлет куҫарса лартма та пулӑшрӗ. Михаҫа Муҫара курайми пулнаранпа халӗ Муҫар патне каймаҭ, анҫах хӑй пӗрмайах Муҫар ҫинҫен шу-хӑшлаҭ. Муҫара курайми пулнӑранпа унӑн шухӑшӗ ҫавӑн ҫинех пырса тӑрӑнаҭ.

— Ӑҫта кайса килетха Муҫар? Мӗншӗн кашни пасарах кайаҭ-ха вӑл? Ӑҫтан тухаҭ-ха Муҫарӑн укҫа? Муҫар хӑй Йанаултан тавӑрӑнсан ҫука йертӗм, тӗп пултӑм тесе ҫӳретҫӗ, халӗ Муҫар аҫисене пушмак-сем, фуффайккӑсем илсе тумлантарҫӗ. Хӑй ваҫҫи 60 тенкӗлӗх пиншак, 120 тенкӗлӗх атӑпа калуш илҫӗ. Тавай пӗрер Муҫара сыхлас, вӑрӑпа мӗнпе хатланмастши вал? Ҫак ыйтусем Михаҫана йалан Муҫар ҫинҫен шухӑплаттараҫҫӗ.

Перре Михаҫа Муҫар Кавал пасарне кайнине пӗлҫӗ. Михаҫа та пӗр сӑлтавсӑрах пасара тухса утрӗ. Муҫара пасарта шыраҭ. Тупрӗ. Муҫар пасар тулашнерех пӗр шатра питлӗ, саплӑклӑ пиншаклӑ ҫынна калаҫса тӑраҭ. Михаҫа ку ҫынна халиҫҫен курман. Муҫарпа ҫав пал-laман ҫын калаҫкаласа тӑҫеҫ те, иккӗшӗ икӗ йенелле уйӑрӑлҫеҫ. Михаҫа вӑрттӑнтарах Муҫара куҫран ҫухатмасӑрах ҫӳрекелерӗ, нимӗн те пӗлеймерӗ. Муҫар киле кайаспа 10 кӗренке ӗне ашӗ, 5 кӗренке сар ҫу, аҫисем ваҫҫи 4 машӑр ҫӑматӑ илҫӗ те, хӑйсен йалӗ ҫыннипе лав ҫине ларса килҫе.

— Ăçтан çăваран тухаť çав Муђарап укçа? Укçа кăларса тăракан ... пурах ĕнтĕ çак Муђарăн, мĕнле майпа пĕлес, ăçтан тупеăмне ту... с,—тесе шухăшласа тавранђĕ пасартан Михађа.

Кĕр çывхарђĕ. Ђас-ђасах çăмăрла́ кунсем пулкалаççĕ. Пĕр кун... ине кунĕпе çăмăр çурĕ. Каçхине, теттĕм пула пуçласан, Михађа ла... шне сĕлĕ кĕлти илсе парас тесе апкартие тухрĕ. Пăхаť—Муђар ...карти хапхине такам хуллен уçса кĕђĕ те, йăпшăнса пек, карта ...ррипе утса, Муђар патне кĕрсе кайрĕ. Кам пулђеши ку? Çакнашкал ...сĕр çанталăкра, каç пулсан мĕн туса çÿретши ку çын? Михаđанан ...в çын каммине питĕ пĕлес килђĕ. Лашипе апатласанах Михађа ...ама тухрĕ те, Муђар пÿртне кантакран кайса пăхрĕ. Пÿртре çута ...к. Пĕђĕк ађи йĕрет. Амашĕ ăна темĕн сăвалла́ каласа йăпатаť. ...уђар сасси илтĕнмест. Те такам тухрĕ, те кĕђе, пÿрт алăкĕ шал... ...са хупанни илтĕнђĕ.

— Муђар хăй кĕлетре пулĕ. Вал унта çывараť вĕт, тесе тавçăрса ...ђĕ Михађа. Пахђа йенђен кĕлет патне пĕр сисĕнкĕсĕр утса пыђе. ...ан та кĕлетре ура сасси, пукана тĕртсе шутарни илтĕнђĕ. Унђен ... пулмин, кĕлетре кĕтесри пеђек хушăкран çута куранђĕ—кĕлетре ...аççын çутрĕç пулмалла. Кĕлет айне Муђар питĕрме ĕлкĕрейменха... ...ихађа хуллен шуса кĕлет айне кеђе. Тулта çăмăр ђĕреслетсе çапса ...ваť. Пăхат Михађа—кĕлет айне пĕр тĕлтен çута ÿкет. Астуса илђе ...ихађа. Пăркун кĕлет урайне сарпа ђух пĕр çур шите йахăн урай ...ми çитменђђĕ, çаплипех, питĕрмесĕрех хăварнађђĕ. Михађа çав ...та ÿкекен тĕле хырăмпа хуллен, пит хуллен шуса пыђĕ те, пăхрĕ. ...еш, Кавал пасарĕнђе курнă çĕр саплакла́ ђађка пиншакла́ çын иккен. ...ђар та, хађ ун патне килпĕ çын та Михађана пилĕк таран кура... ...ççĕ. Çтана çумнелле сĕтел лараť. Сĕтел çинђе краççын çунаť.

— Салтăн, Иван Михалђ. Шÿрĕн пулĕçке есĕ пайап. Çăмăр пит ...ват те, епĕ сапа килеймест пуђ тесе тăраттăмха.

— Килес терĕм, калана́ сăмах çине тăрас терĕм, терĕ лешĕ... ...плăкла́, çамăрпа шÿнĕ пиншакне хыврĕ те, пăтана çакса йађĕ, ...й çÿхе пиншакпа кăна йулђĕ.

Муђар сĕтел çине çур литтăр ерех лартрĕ. Келетрен тухса çăкăр, ...варлана́ хăйар, ђакăт, пиçпĕ аш татки илсе кеђе. Ĕçрĕç, çирĕç... ...ра Иван Михалђ текепни хăйĕн тађка пиншакне пăтаран илђĕ те, ...ел çине хурса, çурăм çинђи пĕр саплăкне хуçмалла çĕçĕпе сÿтме... ...танђе. Саплак çинчисем хуçмалла çĕçĕ айĕнђе пăтăрт, пăтăрт каса... ...çĕ. Саплăка сÿтсе шăтарђĕ те, ватка ăшĕнђен вĕлт те вĕлт темĕн ...ел çине кăларса хума тытăнђĕ. Михађа авантарах пăхрĕ те, курах ...рĕ—ватка ашĕнђен ылттăн укçасем тухаççĕ иккен. Муђар тухна́ ... ылттансене пуçтарса, ывăç çинђе шутласа пыраť. Лăп 21 ылт... тухрĕ.

— Тек çук, терĕ Иван Михалђ. Пиншакки ăшĕнђенех таçтан ...лĕ йĕп кăларђĕ те, саплăкне тепĕр хут сапласа та хуђĕ. Пиншакне ...ана çакса йађĕ.

— Ну, мĕнле? Пăркунхи хакпахн? терĕ Муђар шаппăн.

— Пĕрер çĕрне хушатан пуле,—терĕ Иван Михалҫ тутине кашт ҫава сиктерсе.

— Çу-ук, Иван Михалҫ, хушмастăп. Халĕ епĕ ылттанпа хытланма сасçимех пăрахасшăн. Халĕ вĕт ĕнтĕ ĕлĕкхи мар, КПУ пит ҫас тытат. Хусанта, Çĕрпӳре ылттăнпа сута тăваканșене миçе çын тытса хупнăха? Йалканашсем миçе çынна халĕ ылттăнпа хатланнине сиссе раскулаҫҫит тунă?

— Есĕ те, епĕ те лекмеçкеха ку таранҫҫен, 'раскулаҫҫит тумançкеха пире?—терĕ Иван Михалҫ, лăш кулса, шăппăн.

— Саппала мана мен каласси пур? Епĕр хут иксĕмĕр те ҫейерех пулса хамăра хамăр раскулаҫҫит турăмăр. Та... Пирĕн пĕр шарпак та совета каймарĕ. Ҫухăна кĕрсе ĕлкĕртĕмĕр. Ҫышкă пек пӳртсенҫе пурăнатпăр. Полнăй пролеттари вĕт епĕр, хи-хи-хи, раскулаҫҫит тăвăр ĕнтĕ пире. Мĕн илесси пур пирĕнне?—терĕ Муҫар çинçе сассипе шăппан кулса.

— Илĕр вĕт йĕре шалма пĕлекен тилĕсем пултăмăр. Ех! хайамат. хăçан пĕтĕшин ку совет власĕ. Мул пур çинҫе ҫухан çынла пурăнасси йăлăхтарҫĕ ĕнтĕ,—терĕ Иван Михалҫ.

— Йăлăхтарат çав, анҫах тӳсес пулат вăхăтлăха. Совет власĕ пĕтсен вара епĕр хуçаҫҫĕ те-ха. Есĕ сыхйатпе миçе ылттан усратăн? терĕ Муҫар.

— 5 çĕртен пĕрре те катман епĕ.

— Манăн та çавăн.патнеллех çывхарат. Хут укçана епĕ ăна укçа тесе шутламастăп, шанмастăп та. Епĕ çурт сутнă укçана петĕмпе ылттăн туса хутăм. Влаç урăхла майлă çаврăпас пулсан, халех епĕ хула пек çурт лартатăп, çĕлен пек кукăр майлă хура ăйар туйанăттăм Йалти ҫухансене пĕтĕмпе алла çаварса илсе, кирпĕҫ савăҫĕ, йе мĕн те пулин çавăн пек пуймалли ĕç пуçласа йарăттăм. Хаҫ пур çурҫан, çĕтĕк пиншакпа, çăпатапа лапсăртатса çӳре. Хăçан пĕтĕшин кун пек тарăхасси. Хăçан совет власĕ ӳппе-питпе çаврăнса ӳксе ҫикеленсе кайĕши? Совет власĕ пĕтессипе ĕмĕтленсе кана пурăнатăп. Ах, пĕттерҫĕ хăвăртрах!—тесе усалан пашăлтатрĕ Иван Михалҫ.

— Пĕтесси пĕтет те-ха, тӳсер-ха ĕнтĕ вăхăтлăха. Пĕр çуллăха мулкаҫа тирĕ те тӳсне тет, тенĕ авалхи ăслă çынсем. Ват çав колхоссене йĕркеленме парас пулмаст. Епĕ кĕтĕм-ха ĕнтĕ колхоса.

— Есĕ колхосра-и вара?

— Кĕтĕм çав, мĕншĕн тесен колхоса кĕмесен те май килмест. Хĕллерене мĕн ҫухлĕ колхоса хирĕç ĕçлерĕм, витемлĕ пулаймарăм. Колхос пулса ларҫĕ-ларҫех вĕт. Ентĕ колхосра та-ха, сийенлес тĕлĕшĕнҫен мĕнле пулĕха малашне. Пурĕ пĕр салататăп салататăпах колхоса, пăхса çеç тăр. Колхоса сийен тумасан манăн ҫун канас çук. Сҫетовота кӳртес тесе сăмахларĕç паркун, хĕпĕртерĕм.

— Сҫетоворан колхос пуçлăхнелле тĕлле. Акă май килҫĕ санан,—терĕ Иван Михалҫ.

— Унта майалла кус курат-ха. Колхосра та «тохотнай статйа» пулат ман валҫи, пурăнатпăр пурнăçа, аптрамастпăр, колхосра лубҫа хӳтĕре,—терĕ Муҫар ҫейеш кулкаласа.

— Ну, ку ушкӑн ылттӑн ҫине ҫӗрӗшне хушсах паратӑн-ҫке ентӗ,—терӗ Иван Михалҫ таварлӑ хӑйар ҫамласа.

— Парас пуҫ еппин. Мӗн вӑхӑтра киле кайас тетӗн?

— Ҫынсем тариҫҫен ирхине киле ҫитмелле,—терӗ Иван Михалҫ.

— Апла пулсан халех хатӗрлем, терӗ Муҫар, таҫта тухса кайрӗ. Михаҫа сывламасӑр тенӗ пек, пӗр сиккелемесӗр выртат. Ана выртма пит канҫӑр. Ҫурӑм айӗнҫе те тӑпра муклашки, те ҫул татки, пӑтарас пек ыраттарат. Михаҫа ҫапах йашалтатмаст те. Хӑш ҫух ӳсӗрес килнӗ пек. Михаҫа ӳслӗкне те ҫавӑрса йарат. Тем пулсан та Михаҫан вӗҫне ҫитиҫҫен тӳсесех пулат ентӗ. Калама ҫук тӗлӗнмелле йапала ҫинҫен пӗлҫӗ вӗт Михаҫа. Вӑт мӗнле ҫейелле пуранат вӑл Муҫар. Ака ӑҫтан тухат унӑн укҫи. Вӑл ҫухӑна персе ылттӑнпа сутӑ туса пуранат иккен! Ҫухансен спискине кӗресшӗн пурлӑхне сутнӑ, ҫухӑнсен спискине хӳтлӗх шырама кӗнӗ иккен! Ҫухӑн шутӗнҫе, хӳтлӗхре пурӑнса ака мӗн хатланат Муҫар!

Ҫавӑн пек шухӑшсемпе Михаҫа ашҫикне пӑлхатса выртнӑ ҫӗртех пер вӗриленсе, пӗр сивӗнсе кайат. Хӑш ҫух Михаҫанӑн ҫавантах сиксе тӑрса ҫак ҫынсене пӑвса пӑрахас килет, анҫах Михаҫа малаяла мӗн калаҫҫӗшиха тесе, хайне хӑй пусӑрӑнса выртат. Халех йалканашне ҫупасҫӗ, иккӗшне те ҫакӑнтах влаҫ аллине парасҫӗ...

Кӑшт тӑрсан Муҫар кӗлете кӗҫӗ. Аллинҫе пӗҫӗк тимӗр арҫа. Пиҫихх҃ ҫумӗнҫи уҫҫине арҫана ҫӑпкарт тутарса уҫрӗ те, сӗтел ҫине укҫана паҫки-паҫкипе Иван Михалҫ умне кӑлара-кӑлара хума тытӑнҫӗ. Иван Михалҫ укҫа паҫкисене салатмасӑрах паҫка пуҫӗнҫен сирсе шутлат те, уйрамрах хурат. Иван Михалҫ хӑй умне темиҫе паҫкӑ илсе, купаласа хыврӗ. Пиншак кӑсйинҫен тутар пысакӗш хура сӑран татӑкӗ кларҫӗ те, укҫана ҫав сӑран таткипе ҫаркаса каллех пиншак кӑсйине ҫикрӗ.

— Кӑшт выртса канас та, тӑрса утас пулӗ, 30 ҫухрама йахӑн ылтҫак ҫӑрса утас пулат вӗт,—терӗ Иван Михалҫ.

— Выртапӑр та ҫыврӑлӑр еппин,—терӗ Муҫар. Хайӗн вырӑнӗ ҫинҫен пӗр минтер, аҫам, пӑтара ҫакӑнса таракан тӑлӑпа илсе, Муҫар Иван Михалҫ ваҫҫи урайне вырӑн сарса хатӗрлерӗ. Вара Муҫар пӳрте ҫупса кайса, пӗр ҫашӑк ҫӑмарта илсе килҫе.

— Ҫийерха ҫывараҫҫен. Паҫар аҫа макӑрат те, арӑм ҫӑмарта пӗҫерсе параймарӗ вӗт,—терӗ Муҫар. Ҫӑмартисене Иван Михалҫ умне шаклаттара шаклаттара лартса хурат.

Каллех ерехне ӗҫрӗҫ, ҫӑмарта ҫиме тытӑнҫӗҫ. Ҫапталӑк ҫинҫен, тырпул хакӗ ҫинҫен калаҫкаларӗҫ те, ҫывӑрма выртрӗҫ, краҫҫынпе сӳнтерҫӗҫ.

Иван Михалҫ ҫасах харлаттарма та тытанҫӗ. Муҫар ҫывӑрмаст ха: кроват хӑмипе ҫӗриклеттерсе ҫаврӑнкалат. Михаҫанан ӗнтӗ кӗлет айӗнҫен пит тухса вӗҫмелле, анҫах Муҫар сисесрен хӑрат. Кӑшт тӑрсан Муҫар та ҫаврӑнкалами пулҫӗ—ҫывӑрса кайрӗ пуҫ. Михаҫа паҫӑрхи пекех хуллен хырампа шуҫса кӗлет айӗнҫен тухма тапаланат. Сывламасӑр шават. Акӑ тухса тӑма патнех ҫитрӗ. Теплерен, тухма

пуçласан, хăрах ура кĕлет уратине тăпк перĕнђĕ. Муђар вырăн çин-
ђен урайне тӳп! тутарса хыттăн пусса анђĕ.

— Кам вăл? терĕ Муђар сасартăк хайаррăн. Михађа кĕлет айĕн-
ђен тухса анкартинелле ђупрĕ. Муђар та Михађа хыççăн анкарти-
ђупса та тухрĕ.

— Кам вал?! Кам?! тесе кăшкăрашса Михађана хăвалат. Ми-
хађа пĕтĕм вăйран питĕ хытă ђупасђĕ тесе ђупат. Муђар пеђекке-
скер, çаррап, кĕпе вĕççĕн çăмăл ђупса Михађана çитсе пырат. Карт-
урла каçса ӳкес ђухне Михађана Муђар хăваласа çитсе çанаран йарса
та илђĕ.

— Кам ес?! Хе... Михађаçке!.. терĕ Муђар сывлăшне çавăрс-
йараймасăр хăвăрт сывласа, тĕлĕнсе.

— Епĕ, терĕ Михађа та пашкаса. Хăй патнелле утрĕ.

— Шуйттан! Вăрă-хурах! Мен сыхласа çӳретĕн?! Варă шуђепе
çӳрекенскер! Хаван çитмест сана, кулака! Ђухăнăнне мĕн те пули-
хĕстерешĕн çӳретĕн, намăссăр!.. Муђар ђылайђђен Михађана йат-
ласа тађĕ. Вал кăшкрашни кĕрхи теттĕм çĕрте тискерĕн туйанђе.
Лăпăстат а çăвакап в тĕ çамăр Муђ ра сӳçентер ĕ. Муђар килнелле утр-

Кĕлете кĕрсенех Муђар Иван Михалђа вăратрĕ, краççын çутрĕ.

— Ну, тусăм, халех тăрса утатăн пулĕ. Тем пулса тем килес-
пĕр путсĕр етем пире кĕçĕр сăпаса тăнă. Кĕлет айенђен тухса тарђĕ.
Епĕ хамăнне хам пĕлетĕп, есĕ хăвăнне ху пĕл. Ата, вĕçтер хăвăртрах!

Иван Михалђ ывăннă çинђен тутлă çывăрса кайнаскер, вĕлт çе-
викс тађĕ, кăпăр-капăр урисене сырђĕ, тумланђĕ..

— Казалтан?—терĕ пĕр сăмах Иван Михалђ, ăйхăпа тытăнна
сассипе.

— Çавăнта,—терĕ Муђар кĕскен татса.

— Иван Михалђ калама çук хăвăрт урамалла тухса шурĕ.

Муђар Иван Михалђ тухса кайсанах ђетрекен а липе арђине илђ-
те, кĕлетрен çĕклесе тухса, пĕр хăй кăна пĕлекен карташĕнђи кин-
йупа вырăнне ђикрĕ. Йăваррăн сывласа, ĕштеленсе çӳрет. Пĕр йапа-
лине тытат, тепĕр йапалине тытат. Сĕтел çинђи ерех кĕленђине ва-
çеç алăкран ыватрĕ. Кĕленђи пылђăк çине лап туса ӳкни илтĕнђĕ.
Анат-çимĕç йулашкисене тирки-ђашкипех пӳрте илсе кайрĕ. Унт-
çывракан арăмне вăратса, унпала тем çинђен хĕрӳллĕн калаçрĕ. Вар-
кĕлетне тухса, вырăнĕ çине лапланса выртрĕ.

Михађа вăл темĕн йал хыçĕнђи çырмапа ђупса анса, йалăн айал-
вĕçне тухрĕ.

— Тыттарасђĕ-ха кусене иккĕшне—тесе, Михађа тӳрех йал-
канашĕ çурђĕ патнелле утрĕ. Çамăр çаплах лăпăстатат, тĕттĕм.
Сăртри урамсенђе хăй çуттисем йăлтăртатаççĕ. Михађа шӳсе йăвăр-
ланнă çăпатисемпе пылђăка лађăртаттарса урам тăрăх васкаса утат.
Акă çитрĕ пер пысăк çурт патне. Ку çурт ĕлĕк çăмарта хуçи-
пулнă. Халĕ кунта йалканаш кĕнђелерĕ, испа-ђиттађиă, уђаскăр-
милитсине Арманăв хваттерĕ. Çурт пысăкскер, çап çутă кантăкĕсемпе
прахут пек курăнса ларат. Михађа йалканаш кĕнђелерие ниг васкаса

кĕђĕ. Пӳлĕмре пĕр пĕђђен тешурнăй çелисполниттĕл ларат. Йалканаш нуçлăхĕ Трофимав килте-ши тесе ыйтсан, çелисполниттĕл:

— Çук. Пайан района кайнă, ыран ирсĕр килеймест пуљ,—терĕ.

— Йалканаш çыруçиййĕ те кӳршĕ йала тырă хатĕрлес ĕçпе тухса кайнă.

Кĕрет Михаља милитси хваттерне. Милитси те çук. Вăл вийçĕ çухрăмри йала, тухтăрпа пĕрле çул çинђе вилсе выртнă çыниа пăхма кайнă. Комсомол йађђейкки çыруçи Арманăв çине пĕр шанђăк йулђĕ. Ђиттаљнăра сасăсем илтĕнеççĕ. Арманăв вăл ђиттаљнă пуçлăхĕ пулнă пирки йаланах ђиттаљнара ларакантђе. Михаља Арманăва шыраса ђиттаљнана перĕнсе кĕрсе кайат. Ђиттаљнăра çамрăксем хаçатсем, кĕнекесем вуласа, шахмăтла, шашкăлла выљаса лараççĕ. Арманăв çук иккен. Икĕ кунлăха райкомол пленăмне кайнă терĕç.

— Пĕтрĕ, ĕç тухмарĕ пайан. Пайан майĕ килмерĕ пулсан—тепĕр ђух. Халĕ ку ĕç çинђен никама та шарлас мар. Ентĕ йĕрне ӳкрĕм. Май килнĕ ђух Муђара влаç умне тăрататăп таратататапах. Малалла мĕн пулĕ-ха, сăнас-ха. Вăт йеплелле пурăнат вăл Муђар...

Çак шухăшсемпе Михаља килнелле утрĕ. Урам вĕçĕнђе шкул çуталса ларат. Анна Петровна—уђђиттĕлнитсă хваттерĕ икĕ кантăкĕпе урамалла тăрăх пăхат.

— Кĕрем Анна Петровна патне, каласа парам Муђар çинђен, тесе шухăшларĕ пĕрре Михаља, анђах темшĕн кĕмерĕ Анна Петровна патне.

— Пурĕ пĕр Муђара тыттаратăп тыттаратапах, терĕ Михаља хăй ăшĕнђе, малалла, килне кайма утрĕ.

Çăмăр çума ђарăннă. Çанталăк уйартат пулмалла. Çăмăр пĕлĕђĕсем сирĕлме тытăннă. Тĕл, тĕл кăвак пĕлĕт татки, пеђђен пĕђђен çăлтăрсем курăнкалаççĕ. Паçăрхинђен кăшт сивĕрех: Михаља çӳçенсех илђĕ. Михаља çанталăк уйартсан мĕн мĕн ĕçсем тумалли çинђен шухăшлама тытăнђĕ, анђах Муђар çинђен мĕн пĕлни, Муђар сăмахĕсем пуçран тухмаççĕ.

Михаља килне таврăнсан ађисене вăратас мар тесе, краççын çутмасăрах хуранти сивĕ йашкана сыпса выртрĕ. Михаљаран арăмĕ мĕншĕн вăхăтра йашка çиме карташĕнђен кĕменнине, ăçта çӳреннне ыйтсан, Михаља арăмне мĕн курни, илтни, Муђар мĕнле çын иккенне пĕтĕмпе каласа пађĕ. Пайанхи каç мĕн курни, мĕн илтни Михаљашăн тĕлĕкри пек туййăнат. Михаљапа арăмĕ Муђар çинђен ђылайђђен калаçса выртрĕç.

— Пурĕ пĕр Муђара тăрă шыв çине кăларатăп-кăларатăпах. Çынсене муталаса, совета мăшкăланă пек пурăнат. Колхоса курайманскер, колхос хӳтĕлĕхĕнђе сарăлса пурăнĕши вара? Тепĕр май килсенех милитсисене, йалканаш ђленĕсене Муђар патне илсе пыратăп та, хупăнса ларат вара хайхи тилĕ, терĕ йулашкинђен Михаља.

Автансем авăтсан тин Михаљапа арăмĕ çывăрса кайрĕç.

Тепĕр кун ирхине çанталăк уйартса кайнă. Сапсар хĕвел пăхат. Михаља арăмĕ ĕнер çăмăр çунă ђух, ђĕђĕ пăрушне улмуççи пахђине кăларса йанăђђĕ. Халĕ Михаља арăмĕ пăрува ытти выљăхсемпе кетӳве хăваласа кайас тесе пахђана пăру илме тухрĕ. Парушĕ Муђар

йенђи карта айккинђе, хевел ăшшинђе, кавлесе тăрат. Михађа арăмĕ те карта патне пару хăвалама пыђĕ, Муђар арăмĕ те çав вăхăтра пӳртĕнђен тухса карта патне ађа кипкисем çакма пыђĕ.

— Сан ухмах упăшку мĕн антраса çӳрет вал? Мĕне кирлĕ ăна пирĕн кĕлет айĕн-мĕнĕн выртса çӳресе пире сыхлама? Те антрипе пырса кĕнĕ ĕнер каç пирĕн кĕлет айне?—терĕ Муђар арăмĕ Михађа арăмĕ çине шăрђăкланса пăхса.

— Есĕр хăвăр вăрă-хурах йевĕрлĕ. Сирĕн пата çĕрле анкарти хыçĕне çӳрекен çынсем кĕрсе выртаççĕ. Епĕр мар вăрă-хурах! Пулсан есĕр пулĕ!—терĕ Михађа арăмĕ.

— Санăн мĕн ĕç вара, кĕрсе выртăçин?! Вăрă теме епĕр санăнне вăрласа пурăнатпăри мĕн? Куртăни епĕр çын йапалине вăрланине? Пире ђухăна курса мăшкăлама тытăннă есĕ: уссăр çинђен вăрă тетĕн. Пирĕн пек ђухăн пулса пирĕн нушана есĕ те кур. Ай-йай тур! Турă илттĕр ман сăмаха! Тарăхнипе калатăп!—тесе ылханса хуђе Муђар арăмĕ.

— Ђухăни, пуйанн есĕр, ман уп çинђен пĕр сăмах та çук. Есĕ çын упăшкине антра тесе ан кала!—терĕ Михађа арăмĕ çилĕпех.

— Ан ђанккаса тăр!

— Есĕ те ан ђанкка!

— Хăвăр пурнăçупа мухтанса çынна ним вырăнне хумастăр пулĕ те, вăрă тетĕр, епĕр ĕлĕк сиртен иртерне. Пирĕн пурăнăçа есĕр курайман, курас та çук! Ĕлĕк есĕ ман умра кĕлмĕç, хытă-хĕтĕ, тĕнђе хăлти, пăхлă кут çеç пулнă. Халĕ, епĕр çука йултăмăр та, есĕ сысна пек сăмсуна тавăрса хунă, ђипер çынпах вăрă тетĕн, йытă пиђĕ. намăссăр! Мапăн кунта та ĕлĕк пурçăн та ђĕпгĕр пулнă! Акă, пăх. куратна çакна. Епĕ кута тăхăннипе есĕ пуçа хыпайман!

Муђар арăмĕ кĕпине уçрĕ те, кутне Михађа арăмĕ патнелле мăкăртса алипе çат! çат! çапса илђе, йулашкинђен шарт тутарса усал шăршă кăларђĕ.

— Вăт сана! Çӳпĕ вĕт есĕ! Тĕнђе хăлти! терĕ Муђар арăмĕ. Тутисене ирсĕр йапаларан йĕрĕннĕ пек пăрса хуђĕ. Куçĕсем, çиле калама çук вăйлă килнипе, йăлтăртатса кайрĕç. Хăй ăшĕнђе Муђар арăмĕ: хăратса путарса хутăм, çăварне пăкăларăм, çĕнтертĕм тăшманне терĕ пуђ, апђах Михађа арăмĕ тăшман айне пулма шухăшламасŤ-ха. çилĕпе тӳп-тӳрĕ шăтарас пек Муђар арăмне куçран пăхса тăрат. Михађа арăмĕн Муђар арăмне ђĕрене тивекен сăмах калас килђĕ

— Çпекуђантсем вĕт есĕр! Шăпи тулĕха сирĕн! Колхоса кĕнĕ. колхосра—хӳтĕре тетĕр пулĕ те, епĕр—кӳршĕ-аршă, сисетпĕр есĕр мĕнле пурăннине! Комсомолĕссем. йалканашĕ есĕр спекуђатсипе хăтлаппипе сиссен, сикеймĕр вара çӳлелле, караймăр пайанхи пек çăварсене!—терĕ Михађа арăмĕ Муђар арăмне путарса хурас шухăшпа. Пăрушне çавăтса пахђаран тухса кайрĕ.

Муђар арăмĕ тăпманăн йулатки сăмахĕсене илтсеп çилĕ тулса килнипе ђутах çурăлса кайатђĕ. Пӳртне кĕме çаврăнса кайнăскер. кайалла çаврăнса карта патне автан пек сиксе пыђĕ. Хăйĕн пиђĕ-куçĕ

хёп-хёрлё таларса кайна. Кусёсем сиксе тухас пек, такама сисе йарас пек силёпе выђаса тараççё. Анђах тăшман куç умёнђе çук. Сурђăкне сирпётсе Муђар арамё Михађа арамё çинђен темён те каласа йантрарё. Урамалла пăхса, çынсем илтђёр тесе пуђ, йури хыта кăшкарат. Пурте те йатласса, тулашсах кёђё.

— Мён çёмёрёлтёр есӗр Михађа арамёпе?—терё Муђар кёлетрен пурте кёрсе.

— Çав путсёр шуйттан вӗт! Çпекуђантсем есёр тет! Çпекуђант тесе йалканашне пёлтерес тет!—терё Муђар арамё, пусăранайман çилине çаварса йараймасăр хăвăрт сывласа.

Муђар арăмне хирёç нимён те шарламарё. Çамкине пёрсе пăрахса çилёллё пит кусёпе кёлете тухрё. Вырăнё çине ларса шухăша кайса ларђё. Унтан тăрса сётелне сутталла алăк патнерех лартрё те, сётелрен хут, руђка, ђернил кёленђи кăларђё.

— Тăшман мана çапиђђен хам ăна çапса хурам. Епё Михађана халех путарса, ăна влаç умёнђе пётерсе, шанђăксăра кăларса хумаан. Михађа мана хама пётерет,—терё Муђар хăй ăшёнђе йулашкинђен. Хутне умма туртса илђё те, çырма тытăнђё. Шухăшласа лара-лара çырат. Хăш ђух мён çырнине çурса пăрахат те, тепёр хут çёнёрен çырат. Çапла ђылайђђен çырса ларсан, Муђар пёр листă хут шăрçа пек тикёс таса çырђё те, темиçе хут вуласа тухса, хута тăраткăл хуçлатса, луђăркамасăр, кăсйине ђикрё. Вара пурте кёрсе Муђар ирхи апат çиме ларђё. Апат çинё ђух Муђар арăмне сыхлапарах пурăнмалли çинђен сăмах тапратса йађё.

— Ептё пире курайманссем пирён çине куç хывёç. Ав Михађа мана тапăнма хăтланат-ха. Тапăнса пăхтăр-ха, кам кама путарё,—терё Муђар сётел хушшинђен сар çупа ăшаланă çăмартапа тулă кулађи çисе тăранса тухса. Арăмне Муђар анкартинђи çёрулмине виçё хёрата тара тытса кăларттарса пётерме хушрё. Хăй тасра тухса кайрё. Ђасах килеймёп тесе хăварђё.

### IV

Районри РКИ пуçлăхё Хариттонăв умёнђе пёр хут выртат. Вăл хута Хариттонăв пёр хут вуласа тухнă хыççăн каллех алла тытрё те, шухăша кайса ларђё.

— Мёнлеха. К .. йалканашё ку таранђђен çителёклё тёрёс ёçлесе пыпăђђё, халё унăн ирсёр ёçёсем çинђен çырса пёлтерекенё пур, тесе шухăшларё те, хута тепёр хут вулама тытăнђё.

Районти Рапођђисемпе Хресђен Инспексине.
К... йалёнђи колхоçнёкён Иван Муђаровăн сайавлени.
К... йалканашё тырă, пахђа çимёçё, аш хатёрлес ёçре йурăхсăр ёçсем тăват. Пуйан пурăнакан çынсенех тырă, çёрулми, аш хывтармасă. Акă илер Савин Михађине. Вăл кăçал совета 10 пăт ыраш, 3 пăт урпа, 10 пăт çёрулми панă та, ытлашши тыррине сутат. Савинённе тёреклё пурăнăçне пăхсан, халиђђен ана-çаран тара илсе акнипе пăхсан, Савина темиçе çёр пăт тырă, çёрулми тулеттермелле. Савин хăйне тырă тулеттересрен шикленсе анкартинђи улăм урн айне 15 михё тырă пытарђё те, халё çавăнтан пёрер-икшер михён кăларса пасара илсе кайса сутат. Çёрулмине ман сумри пахђине пытăк алтса темиçе çёр

пăт пытарҫĕ. Тырă, ҫĕрулми пытарнине хам куҫпа хам курнă. Пайан ухтарсан, ку йапаласене пайан тупма пулаť. Кунсăр пӳҫне тата Савин аш сутти тăваť. Пасарта ĕне илсе ҫывăхри йала кĕрсе вăрттăн пусаť те, ашне киле турттарса килсе вăрттăн пысăк хакпа сутаť. Выҫăх ăшҫиккине ҫас ҫасах мунҫара ҫăваҫҫĕ, урисене ĕнтеҫҫĕ. Епĕ йунашар пурăнатпăр та, ҫак ирсĕрлĕхсене пĕтĕмпе хам куҫпа хам курнă. Йалканаш пуҫлăхĕ Савинпа ратнеллĕ. Арманăв та, уҫастковăй милитсионер Никиттин та пурте Савин майла, ана хутелеҫҫе. Ҫакна ҫырса пелтерсе, нуман вахăта ,йамасăрах Савин патне ухтару тума ыйгатăп

И. Муҫарăв.

Ҫенťапĕрĕн 25-мĕш кунĕ, 1931-мĕш ҫул.

Ҫак шăрҫа пек ҫырнă хут ҫумне тепĕр хут—Муҫар ҫăн та ҫухăн ҫын иккенне ĕнептерекен хут ҫыпĭҫтарнă.

— Ку К... йалканашĕ ҫăн та сылтăм сулăнҫăклă лаҫакана кĕрсе ӳкнĕ пулмалла. Вырăнта тĕрĕслесе тухас пулаť. Савин патĕнҫе ухтару туса пытарнă йапаласене тупсан—йалкачашĕ ҫан та тĕрĕс ĕҫлеменни паллă вара. Ыран ирех К... йалне ҫитетĕп те, Савин патĕнҫе ухтару тутарса, йатти РКИ ҫексине пухса йалканаш ĕҫне тĕрĕслесе тухас. Кама хĕртмелле тĕк—хĕртес. Кама тасатмалла—тасатас. Кам сулăпса кайнă—ăна тĕрĕс, ҫăп ҫул ҫине тăратас...

Ҫапла шухăшласа, Хариттонăв И. Муҫар ҫырнă хута портфĕлне ҫикрĕ те, хăйĕн йулташĕсемпе К... йалне ыран ирхине кайасси ҫинҫен калаҫса татăлҫĕ.

* *

Савин Михаҫи пайан сурăх картинҫи тислĕке пахҫине такаť. Пахҫана тислĕке кĕркунне тăкса сухаласа хăварас тет. Ҫапла тусан пахта ҫимĕҫĕ ăнса пулаť,—тесе шухăшласа ĕҫлет Михаҫа.

— Атте, пирĕн пата милитсионерсем килеҫҫĕ, терĕ урама выҫама тухнă аҫи.

— Ҫук пулĕҫке. Мутар патне килеҫҫĕ пуҫ вĕсем. Пирĕн пата мĕн тума килĕҫ,—терĕ Михаҫа ывăлне.

Ҫакна калаҫса та пĕтерейменҫĕ, икĕ милитсионерпе пĕр ҫелисполниттĕл, йалсовет ҫленĕ хапхаран кĕҫĕҫ те, тӳрех Михаҫа патне пыҫĕҫ.

— Ну, Савин, епĕр сан пата тырă пăхма килтĕмĕр. Тырра пытарса хумани есĕ? терĕ пĕр милитсионерĕ.

— Пытарманҫке, пытарман. Веҫ авă, мĕн пур тыра ампартах, кĕрсе пăхăр.

Милитсионерсем ампара кĕрсе пăхрĕҫ.

— Ҫак ҫеҫи санăн тырă? Нумайах марҫке.

— Ҫак ҫеҫ сав. Кăҫал ҫуртырри йухса тухрĕ манăн.

— Улăм урп айне, ăҫта та пулин урах ҫĕре пытармарăни михĕсемпе тырă тултарса?

— Ҫук, пытарман. Ăмма пытарас манăн. Йалканашĕ мĕн ҫул тӳлемелле тунине епĕ тӳлесе татанă. Епĕ ни лишентсĕ мар, ни ҫирĕп сатапи ҫук ман ҫинҫе. Тырра пытарса аппаланма шухăшламан та —терĕ Михаҫа.

Милитсионерсем тытăнҫĕҫ шырама. Тĕпсакайĕнҫен, пӳхрепран,

вӳрт тӳпиҫен, витесентен, аммар айӗссиҫен пӗтӗмпе шыраса ҫаврӑнҫӗҫ. Витесенҫе урай хӑмине хӑпартласа пӑхса тухрӗҫ. Анкартнелле тухрӗҫ те, улӑм ури айккисене шалҫапа тӗртсе пӑхса шыраҫҫӗ. Пӗр милитсионерӗ сасартӑк улӑм ӑшӗнҫен пӗр михӗ тырӑ туртса кӑларҫӗ. Тырӑ миххине шалах та ҫиммен, улӑм ури пуҫне кӑшт кана витӗнтерсе хывна.

Михаҫа шап шурӑ шуралса кайса:

—Ку мӗн?—терӗҫ милитсионерсем.

— Епе пытарман ку миххе, манӑн мар,—терӗ Михаҫа кавакарса кайнӑ тутисене кӑшт кӑна сиктерсе.

Милитсионерсем улӑм урине салатма тытӑнҫӗҫ. Тата тырӑ пур пулӗ тесе шыраҫҫӗ. Улӑм урине пӗтӗмпе салатса парахрӗҫ, урах пӗр михӗ тырӑ та тупӑнмарӗ.

— Ҫӗрулмине ӑҫта пытартӑн тата?

— Ҫӗрулмине те пытарман. Ав унта шӑтӑк алтса, хӗл каҫма хывнӑҫҫӗ.

— Пытарни мари вара вӑл?

— Ҫук, пытарман епӗ. Епӗ ҫулленех ҫӗрулмине ҫавнашкал хывса хӑварнӑ.

— Ан сутлӑх пури санӑн?

— Ҫук. Питрав ҫух пер та а пуснӑҫҫӗ те, унтанпа хамӑр та ан ҫисе курман, каккуй сутма. Пӗр сысна пур акӑ. Ӑна сивӗтсем пусатпӑр. Тепӗр сыснине, пысӑкккине, контрактоваӗ тунӑ.

Милитсионерсем йулашкинҫен шыраса мунҫана кӗҫӗҫ, Мунҫа ҫенӗх урайне уҫса пӑхрӗҫ. Шӑрпланса кайнӑ ӗне пыршисем выр-

— Ку мӗн?

— Пӗлместӗп, епӗ хуман,—терӗ кӑвакарса кайнӑ Михаҫа тарӑхнӑ сасӑпа.

Ухтару туса мӗн-мӗн тупни ҫинҫен актӑ ҫырҫӗҫ те, милитсионерсем Михаҫана йалканашне илсе кайрӗҫ.

Вӑл вӑхӑтра йалканашӗнҫе Хариттонӑв йул. йалти РКП секснйӗн ҫленӗсемпе йалканаш ӗҫне тӗрӗслесе ларнӑ. Пӑхса тухнӑ ӗҫсенҫе йалканашӗн сулӑнҫакла, тӗрӗс мар ӗҫсем курӑнсах каймарӗҫ.. Милитсионерсем Савин Михаҫи патӗнҫен епыскӑ туса таврӑнсан, сӑмах Савин Михаҫи ҫинҫен тапранса кайрӗ. РКП секси ҫленӗсемпе йалсовет ҫленӗсем ку ӗҫ нирки пит нумай, хӗрӳллӗн каласрӗҫ. Савин Михаҫи ку таранҫҫен сутӑҫ пулманни, тырӑ тара илсе алманни, йаланах пур тӳлевсене те малтан тӳлесе татса пыни ҫинҫен асӑнҫӗҫ. Йулашкинҫен Хариттонӑв йул. самах илсе кӗскен ҫапла каларӗ:

— Пытарнӑ йапаласем тупӑннӑ. Факты на лицо! Пӗр-пӗр вӑтам, иртнӗ ҫулсенҫе сутапа хӑтланман пулсан, халӗ ҫав ҫын вӑрттӑн сута тумасӗ тесе кам калама пултарат? Вӗт есӗр никӑшӗ те, Савин хыҫҫан, мӗн тӑваӗ-ха Савин, тесе кунӗн-ҫӗрен сыхласа ҫӳремен вӗт? Епӗр ӗҫе фактасене илсе пӑхмалла. Савин пӗлтер вылҫах илсе пусса анна сутӑ туман пулсан, кӑҫал, йалканаш пуҫлӑхне Трофимӑв йул. кӗнӗрен, Савин тӑванех пулнӑран. Савин ытлашши укҫа пур майӗне ан суттине хӑтланма пултарманни?—Пултарнӑ темех те

кирлĕ—факты на лицо! Çавăнпа епĕ Савин пирки çапла ресоҫутсн йышăнма сĕнетĕп, вуласа парам:

> Савин Михаилне вăтăмран çирĕп сатани памалла çынсен спискине кÿртмелле. Хялех 100 пăт тырă, 200 пăт çĕрулми тулеттермелле. Аш хатĕрлессипе пĕр ĕне, икĕ сысна, пилĕк сурăх хывмалла. Вăртăн ашпа сут тунăшăн 500 т. налук тÿлеттермелле. Савинне хайне сут умне хăлех тăратмалла

Йалти РКИ çекси ҫленĕсем çак ресоҫутсине хăйсен ăшĕнҫе йăшăрханса йышанҫĕç. Мĕн тăвас? Ухтарнă ҫух тупаннă йапаласем мĕн çинҫен кăтартнине ĕненесех пулат. Тĕрĕс калат Хариттонăв йул.

Йалканаш пуçлăхĕ Трофимов Савин Михаҫп хутне кĕрес тесе çăварта уçмарĕ. Михаҫа Трофимова хурăнташ лекнĕрен, Трофимов ахаҫ те хăравçăскер, хăйне айăпа хывасран хăрарĕ. Комсомол йаҫҫейкки çыруçи Арманăв та ку ĕç пирки Хариттонăвпа килĕшрĕ.

— Çивĕҫрех тăмалла малашне. Клас сисĕмне çивĕҫлетсерех ĕçлемелле. Ав йепле, сăмса айĕнҫех ватам кулакла хытлана пуçланă,—терĕ Арманăв хăй ăшенҫе, кăтраланса тăракан йĕпкĕн хура çÿçĕсене çÿлелле сăтăрса.

Савин Михаҫн пирки йышăннă ресоҫутсине виçĕ кун хушшинҫе йалканашĕ пурнăçа кÿртме пулҫĕ.

Муҫар çав кун Хусана кайма тухпă. Иван Михалҫ илсе килнĕ ылттăна Хусанти ылттăнпа сута тăвакан çынна кайса памалла. Пристаҫа Муҫар çурран утат. Кĕске пинилак тăхăнна. Урине çĕн çăпатапа шурă пир тăла сырнă, аллинҫе туйа. Муҫара Савин Михаҫн патĕнҫе йапаласем тупанни, районти РКИ пуçлăхĕ ĕçс хăй килсе тĕрĕслени, Михаҫа хайне йалканачине ил е кайни Муҫара калама çук саванттарат. Муҫар Михаҫа пирки йышăнни ресоҫутсине те ыйтса пĕлҫĕ.

— Çуртне й рне, пĕтĕм т кне-çÿçне вĕçтереççĕ ĕнтĕ Михаҫанне. Пÿртне хам илесҫĕ-ха, Михаҫа тарăхтăр.

Муҫар савăнат. Муҫаран кĕвĕç анҫикĕ канҫĕ.

— Пĕтертĕм тăшмана,—терĕ Муҫар хăйне хăй маттуран, паттăрăн туйăнса. Савин Михаҫине сийен тунăшăн Муҫар кăмăллă. Муҫаршан пайан кĕрхи уйар çанталăк çуркуннехи сарă илемлĕ кунран та авантарах пек туйăнат. Утма та çăмăл пек. Атăл хĕрнелле, пĕлĕт уççăн курăнакан çĕрелле хăпартланса вĕçсех кайас килет. Ала-ура çĕре лекни сисĕнмест. Муҫаран çăмăллăн малалла утас, утас килет. Кĕçĕр прахут çине ларса, ыран ире йахăн Хусана çитсе, ылттăна ҫинер лайăх хакпа ыранаçтарсан, Муҫарăн тата ытларах хĕпĕртемелле. Саванса, çăмăллăн йашлаттарса пырат Муҫар. Никам та сисмен, никам та курман Муҫар Михаҫа патне, мунҫана ĕне ырши пырса парахнине. Муҫар ĕне ыршине йури Кавал пасарне кайса илҫĕ те, çурма çĕрте мунҫа çенĕх урайне уçса йаҫĕ. Михаҫа улăм ури айне те пĕр михĕ ыраш пырса ҫикнине никам пĕлеймен. Муҫаршăн тăшмана путарас тесен пĕр михĕ ыраш мар, вунă михĕ те шелех мар. Анҫах Муҫар пĕр михĕпех çырлахтарҫĕ. Шел мар Муҫара пĕр михĕ ыраш. Тыррийĕ те тăпраллăҫҫĕ, пĕттĕр.

— Тавăртăм, тавартăмах. Ÿлем ан сыпăçтăр ман çума, терĕ Муҫар. Михаҫапа пĕтерес тесе хăй мĕн-мен тунине шухашласа илсе.

Ыванмасăр, хĕпĕртесе, çăмăллăн вĕлт, вĕлт утать Муҫар, пристăнь патнелле çывхарать...

Çав вахăтра Савин Михаҫи йалканашĕн пĕҫĕк пӳлĕмĕнҫе пĕр пĕҫҫен ларнă. Шухăшка кайса хурлăхлă пуçне уснă. Айапла мар çинҫен айаплă туса хупи Михаҫана пит тарахтарнă, хурлантарнă. Арăмне, аҫи-пăҫине Михаҫа пит хĕрхеннĕ.

— Хама илсе кайĕç те, хупĕç. Аҫасем, арăм хамсăр пуçне çука йулса, мĕнле пурăнĕç? Аш çунать.

Татăклăн Михаҫа çак ухтару пирки ним калама та пултарайман, анҫах хай патĕнҫе тупăннă йапаласене ун патне Муҫар пырса пăрахни çинҫен пĕрре те иккĕлеңмен.

— Муҫарах пырса парахнă, мĕншĕн тесен михĕ те çавах, тесе çирĕплетсе хуҫĕ Михаҫа хăй шухăшне.

Муҫар паркун Михаҫаран наҫҫаслăха михĕ кирлĕ тесе, михĕ илсе кайрĕ. Миххине тĕпĕнҫен кăвак кĕпе татăкĕпе сапланăҫҫĕ. Улăм ури айне пырса ҫикне михĕ çавах пулнă.

— Пĕтерҫĕ мана Муҫар, çапса хуçрĕ. Муҫар совет влаçне курайманнине, ылттăнпа сутă тунине, колхоса кураймасăр тăнине тăра шыв çине кăлараймарăм. Никам та ĕнте мана ĕненес çук, петрĕм, пĕтерҫĕ мана кукăр-макăр çулпа çӳрекен çĕлен...

Ҫĕрене касакан шухăшсем пĕрин хыççăн пĕри Михаҫа пуçне пыра-пыра кĕреççĕ. Ларать пуçне усса. Кантăкран хĕвеланăç йенҫи хĕрлĕ çутă кĕрет. Айакри пӳлĕмре çын сассисем илтĕнеççĕ. Аш вăрканипе таçтах кайса кĕрес килет. Муҫар ирсĕр ĕçĕсем çинҫен тĕнҫене илтĕнмеллех çухăрса йарасҫĕ, анҫах кам ĕненĕ кулакă сутăс йатне илтнĕ çын сăмахне?..

Тĕттĕм пулсан Михаҫана пĕҫĕк пӳлĕмрен кăларса кило йаҫĕç. Сут пулаҫҫен Михаҫача йалканаш пуçлăхĕ ниçта кайма хупимарĕ. Михаҫа калама çук хуйхăрса, çынсем умĕнҫе намăсланса йалканаш çуртĕнҫен пуçран çапнă пек тухса килнелле утрĕ.

## V

Çуртырри вырса пĕтерсенех, Анушки авăнне те çапсах пăрахас терĕ. Хветукпа Ваççук шкула вĕренме çӳре пуçлиҫҫен тырă-пулă ĕçне Анушки пуçтарса пĕтересшĕн пулҫĕ. Нумайах мар Анушкийĕн çапмалли тыррийĕ те. Çилпе йухса тухнă тулăпа урпана çавапа çеç çăлма тиврĕ—çапмалли те çук. Пĕрикĕ-виçĕ кун Анушки аҫисемпе авăн çапкаларĕ те, пĕтерҫĕ. Пулашкинҫен Анушки вырнă туллине—тăкăйманнине пĕр урапа пек çапрĕ. Тулă тыткаланă ҫух Анушкин ҫĕри тулă çилпе тăкăннăшăн хытăрах вăркарĕ.

— Мăнтарăн сарă тулли! Аҫапҫампала хĕл каça çикелес йапала сайа кайрĕçке. Тулăллă пулҫĕç колхоçнĕксем. Муҫар муталаман пулсан, манăн та тулă пулатҫĕ тесе, Анушки темиçе хутҫен те туллине шеллесе, колхоса кĕменшĕн ӳкĕнсе илҫĕ. Темиçе хутҫен Муҫара ырă маррипе асăнҫĕ.

— Савин Михаҫи Муҫара пĕтересшĕнҫĕ: Муҫар колхоса хирĕç

каласа ҫӳреписене влас умӗнҫе каласа паратӑп, тетҫӗ. Хам та Анна Петровнӑна Муҫар ҫинчен кайса калас тетгӗм те-ха. йершеймерем.

Ҫапла шухӑшласа Анушки й теммн ҫинҫе шӑпӑрпа сарӑ, шултра тулӑ пӗрҫине шӑлса пӗр ҫӗрэ пухат. Ваҫҫукпа Хветук тулла кӗреплесемпе тӗртсе пӗр ҫӗрэ купаласҫӗ.

— Сирӗн пата килес терӗмха, вӑй патӑр! терӗ Михаҫа, кӗтмен ҫӗртен Анушки йӗтемми ҫине карта урла каҫса кӗрсе.

— Спаҫҫипа! терӗ Анушки, Михаҫа килнине тӗлӗнсе.—Шухӑш ҫинех пултӑн, Михаҫа. Ӑшӑмра хаҫ ҫеҫ сана аса илсе таратгӑм. Муҫар ҫинҫен есӗ калачине: унашкал йурӑхсӑр сынсем ҫинҫен власа пӗлтермелле, сынсем умӗнҫе каламалла, тенине аса илсе шухӑшларӑм. Хытӑрах ҫапса хурасҫӗ ҫав пуҫсӑр Муҫара,—терӗ Анушки.

— Хен ҫав Муҫара ҫапса хума. Епӗ ҫапса хурас тесе тытӑнтӑм та, Муҫар хӑй мана ҫапса хуҫрӗ. Ишсе тухмалла мар лаҫакана тертсе ӳкерҫӗ мана. Пӗтерҫӗ вӗт мана Муҫар,—терӗ Михаҫа куйхаллӑн.

— Мӗнле? Хӑҫҫан?—терӗ Анушки. Анушки Михаҫа патенҫе ӗнер ухтару пулнине, Михаҫа никсӗ ҫинҫен нимӗн те илтмен иккен. Михаҫапа Анушки пӗр-пӗринҫен айакра пурӑнаҫҫӗ.

Михаҫа й тем хӗрне ларсах Муҫар ҫинҫен калама тытӑнҫӗ. Муҫар хӑй ҫӗйелӗхӗпе Михаҫана пӗтерешӗп, мӗн-м н тупи ҫинҫ н пӗтӗмпе каласа паҫӗ.

— Анушки, йӑлӑнатӑп сана, кайса кала-ха Анна Петровнӑна Муҫар ҫинҫен. Пӗлтер Анна Петровнӑна Муҫар мӗнле сын иккенне. Анна Петровна сан самахха ӗненсе, йалканачӗнҫе, комсомол йаҫҫейккинҫе Муҫар мӗнле сынниие астуса тӑрса, мана кӑшт та пулин ҫӑмӑллӑх пулмӗши? тетӗп. Муҫар таранҫӗ вӗт ӗнтӗ ман ҫине. Хам кай а калас, мана кулак йатпе илтнӗ сынна—нимам та ӗнепес ҫук. Кайса кала-ха, Анушки. Сана йӑлӑнма килтӗм, терӗ йулашкинҫен

Пуҫне усиӑ Михаҫа. Сӑн-сана ҫе кинҫемлӗ. Питҫӑмартисем сарӑхса кайнӑ, йалах шӑммисем паларса, ҫийелле тухса тӑраҫҫӗ. Куҫӗсем, пуҫҫа кӗнӗскерсем, таҫталла, айакалла кинҫемен пӑхаҫҫӗ.

Анушки ҫӗререн хӗрхенҫӗ Михаҫана. Муҫара пулшех кураймиҫ пулҫӗ. Михаҫача пӗтерсе хунӑшӑн Анушки Муҫар ҫине ҫилӗ тӑвӑл пек капланса килҫӗ.

— Ах, шуйттан Муҫарӗ! Хӑй мӗнлине пӗлмест! Ҫынна пӗтерет! Хатех тыттарса йарасҫӗ ӑна—пуҫсӗрэ!

— Районти хаҫат ҫине ҫырса парас-ха Муҫар ҫинҫен,—терӗ Ваҫҫук.

— Епӗ шкулти ҫтена хаҫаҫӗ ҫине ҫырам-ха, лайӑх шӑйӑрам. Пӗтермелле ӑна—Муҫара, хӑй йурӑхсӑр вӑл. Пире колхоса кӗресрен хӑварҫӗ. Аҫине пионертан кӑларса сирпӗтесҫӗ-ха, терӗ Хветук.

Тата кӑшт калаҫкаласан, Михаҫа каҫӑрхи пекех карта урлӑ каҫса, Анушкине, аҫасене. Муҫар пирки хавартрах ӗҫлеме тытӑнӑр,—тесе йалӑнса, хуллен килелле кайрӗ. Уйпа, хамӑл тӑрӑх утрӗ. Пӗкӗренсе, сӗлкӗш пырат.

Йӗтем ҫинҫи ӗҫе пуҫтарса кӗрсе, Анушки аҫисене апат пӗҫерсе ситерҫе. Пушансан, аслӑ аҫисене ҫапла каларӗ:

— Епӗ Анна Петровна катпо кайса ларам-ха. Есӗр ҫырӑр хӑвӑрӑнне. Михаҫана ҫав пулсӗр Муҫар айнэ кӳртес мар. Ҫипер ларӑр, ан ашкӑнӑр, терӗ те, Анушка тухса кайрӗ.

Ваҫҫукпа Хветук хӑйсенҫен пӗҫӗккисене ҫывӑрттарҫӗҫ. Вара сумккисене илсе, хут кӑларса, кашни харпӑр хай тӗллӗн ҫырма тытӑнҫӗҫ.

Тӗксӗмӗн ҫунат пӗҫӗк пуртре пеҫек лампӑ. Хитрех мар тухат аҫасем ҫырни—алӑсем ӗҫле хытнӑран халӗ вӑхӑтлӑха хитре ҫырма маннӑ. Антраса, тиркесе тамарӗҫ ҫамкорсем. Вӗсем клас тӑшманӗпе кӗрешес ӗҫсенҫен пӗрне туса хуҫӗҫ—хайсем пӗлнӗ пек Муҫар ҫинҫен ҫырҫӗҫ. Ҫырса пӗтерсен аҫасем амӑшне кӗтсе илеймесӗрех выртса ҫывӑрҫӗҫ. Ыран вӗсен шкула каймалла.

Анушки Анна Петровнӑ катенҫен вунӑ сехет тӗлнелле тин тухса килҫӗ.

— Пурӗ, Анушки. Савин Михаҫиле. айӑпсӑр пулсан, пӗтерсех хумӑпӑр. Муҫара ӗнтӗ матаччие комсомол йаҫҫейккийӗ те, йалка ташӗ куҫ хывӗ. Ыранах Муҫар ниркн сӑмах тапратса йарӑпӑр. Пӗрикӗ йе пӗр кунтан хӗрарӑм пухӑвӗ пулат. Есӗ кил вара, хӗрарӑмсене Муҫар ҫинҫен каласа катарт. Теп, сан пек. Михаҫа пек, Муҫар есерепине лексе, колхоса кӗмеписем тата тупӑнеҫ.

Ҫапла каласа Анна Петровнӑ хай патӗнҫен Анушкине ӑсатса кӑларса йаҫе. Анушки каласа пачипе Анна Петровнӑ пит кӑмӑллӑ.

— Ака йӗрӗ тупӑнат ик ел ҫейе тӑшманӑн. Акӑ кам иккен вал колхос Жухӑмне ҫӑрмаҫтарса пыракани,—терӗ Анна Петровнӑ хан ӑшӗнҫе. Анушки мӗн-мен на а а папинэ тепӗр хут аса илсе, шухӑшла кайса.

VI

— Ват епӗ пултаратӑп тӑк, пултаратӑп. Власран та пӗрре хӑрап а тӑмастӑп епӗ. Влаҫа та хама усӑллӑ йенне ҫавӑрайса хуратӑп. Мана ҫепекел ташман ҫук! Влас та мана тытаймаст. Хам умри ташмансене шӑлайса хуратӑп. Пӗтерсе хутам вӗт Михаҫана. Хаҫ епӗ пурне те тума пултаратӑп. Епӗ вӗт йалта первый петӗҫак! Епӗ Пачаултан килсен ман пек ҫухан ҫын пулман. Епӗ вӗт йалта первый петӗҫак, первый петӗҫак!

Кӑкрине ҫыпса ҫапса калат Муҫар. Хай кӑшт ӳсӗр. Кӗлетре, сӗтел хушшинҫе, хайне хирӗҫ ларакан ҫынна ерех ӗҫтерет. Хӑпарат Муҫар камалӗ. Мухтанат хай ҫейелӗхӗпе влаҫа улталаса пурайма пултарнипе. Хусанта пӗр ҫӗр выртса Муҫар пайан иркине кило таврӑнна. Анаҫуллӑ, телейле пулин Муҫарпӑн Хусань кайни: ыттание вӑл аван хӑкна вырнаҫтарнӑ, никам та курман, тытман. Тӑшмана—Михаҫана—ҫӑварне пакӑлана, хайне ҫыхса пӑрахна пек вунӑ, тата Михаҫана хытӑрах пӗтерсе хурасҫӗ-ха тыттарсах йӑрсҫӗ весе, Муҫар пайан, кӗҫӗрки тӗттӗм ҫер, Михаҫана пуҫпех пӗтермелли вепӗр ӗҫ тума шухӑшлат.

— Ну, ӗҫ! Ӗҫ те кай вара,—терӗ Муҫар хайпе хирӗҫ ларакан ҫынна—Уйри Ваҫҫана.

— Кайасси кайатăп та, ђун хăрат çав. Комсомолĕссем курсан. тытсан—пĕтрĕ пуç!

— Ей! Лепĕркке! Çавна тума хăратăн! Менех вăл сапа кĕрĕке тавăрса тăхăнса, урам тăрăх кăшкарса кайасси. Есĕ сассуна улăштар. Кам та пулин сана тытас тесе хăваласан, тÿрех Михађа карташнелле кĕрсе кай. Хађ хута куратăн, Михађанне витине сарайĕсене куçарса тăкнă. Шкул вађђи вутăлăх пайан куçарђĕç. Улăмĕ, хăми, пĕрени тавраш пĕтĕмпе сапаланса выртат. Сана, Михађа карташне пырса кĕрсе пытансан, шуйттан та тупас çук. Пурĕ пĕр, сан çине кам шухăшлат, Михађа çине шухăшлама май пур.

— Хама çăмăллăх пулас пулсан кайасси кайатăп, ăмма кайас мар, тет Ваççа, пиçĕкрех куçĕсене хура, пысăк аллисемпе шăлса.

— Çăмăллăх пулат, конешнă. Акă çапла килсе тухатçкеха ĕç. Калăпăр, есĕ кĕçĕр урам тăрăх: совета ыран тырă пама ан кайăр. тепĕр ернерен совет пĕтет!—тесе кăшкăрса çÿресен, паллах, ыран совета тырă пама кайакан никам та пулмасť. Тырă хатĕрлес ĕç пĕтсе ларат. Ыттисем тырă памаççĕ тĕк, сапа мĕн хуйăх, есĕ те памастăн, ĕçĕ те пĕтрĕ. Аллă пăт тыра сапа тĕрткелетин мен? Мĕн совета уссăр тырă кайса тăкасси пур,—тет Муђар, кăшт ерех ĕçнипе ђĕлхи-çăварне çивĕтлетсе.

— Кайатăп,—терĕ Уйри Ваççа. Умри ђерккене илсе çăварне ÿпĕнтерђĕ те, сĕтел çине шак! тутарса лартрĕ. Çавантах кĕрĕкне, çĕлĕкне тавăрса тахăнђĕ те, хăй те, хăйне тăрăххăн нăхса кулса йађĕ:

— Çветкĕ пултăм. Аллă пат тырра, мана совета пама хушнине. çветке пулса çăлма кайатăп,—ха-ха-ха!

—Хавăнне çеç мар, темиçе çĕр пăт, пин пăт çăлса хăварăн есĕ. Халĕ сана та, мана та есĕ капла тумланса тухса кайни кулăшла пек туйăнат, анђах совета килĕштермен çынсем сан сасса илтсен, тем пекех савăнĕç. Ку ĕç—саншăн хушăн та, мĕн пур хамăр пеккисемшĕн пысăк ĕç! Ата! Тух! Уттар!

Çапла каласа Муђар Ваççана кĕлетрен ăсатса кăларса йађĕ, карташĕнђе Ваççана тĕреклĕ ђукмар тупса тыттарђĕ. Ваççа урамалла тухса утрĕ.

Кĕрхи çĕр тĕттĕм. Пайан ахађ те пĕлĕте каçхипех хура, мăнтăр çăмăр пĕлĕђĕсем хупăрланăђђĕ. Куçран тĕртсен куç курмасť. Çĕр тĕттĕмми Муђара савăнтарат. Ваççана каларса йарсанах Муђар кĕлетре лампăна сÿнтерђĕ те, хуллен тухса, урамалла утрĕ.

Кам-ши вăл Ваççа? Мĕнле-ха Муђар Ваççана çак ĕçе тутарат?

Ваççа вăл варттан тырăпа суту-илÿ туса, ĕлĕкхи пуйансемпе çыхăну тытса пуранна пĕђђен хуçалăхлă вăтам хресђен. Халиђђен Ваççа çине тырă, аш тавраш çирĕп сатанипе хуман пулнă, анђах кăçал, варттăн суту-илÿпе çÿренине йалканашĕ пĕлсе, Ваççана çирĕп сатанипе 50 пăт тырă памалла тунă. Ваççа ним тума аптранипе, Муђар патне ăс ыйтма пынă. Муђар Ваççана кĕçĕр çак ĕçе тутарђĕ. Муђаршăн ку Ваççана хушнă ĕç икĕ йенђен те аван пулнă: пĕрре—йалта тырă хатĕрлес ĕçе ђăрмантарни, тепре—Михађана тыттарса

картарма май пулни. Хӗпӗртет пайан Муђар. Ыран ирхине никам та тыра пама тухмасан, мӗн тӗрлӗ камăл пулӗ Муђаран! Тырă-пулă хатӗрлес ӗҫе пӗтӗмпе Михаља ђăрмантарат тесе, Михаљана айăплама пулат. Михаља ҫӗрле: тыра совета ан парăр, совет тепӗр ернерен пӗтет тесе кăшкарса ҫӳренӗ—тесе, йалканашне, комсомол йађђейкки ҫыруҫине Арманăва ӗнентерме пулат. Пӗтерсех хурас-ха Михаљана! Тасалтăр кунтан!—терӗ Муђар, урам тăрăх хуллен йалканаш ҫурђӗ патнелле утса.

Ҫӗр паҫăрхи пекех тӗттӗм. Йалта хăй суттисем курăнмаҫҫӗ. Вăхăт ҫурҫӗр патнелле ҫывхарат пулӗ. Муђар утат, хуллен утат. Утсан-утсан тара-тăра итлет: Ваҫҫа кашкăрни илтӗнмест-и тет.

Акă темӗнле сасă илтӗнђӗ. Ваҫҫа сассине улаштарса темӗнле хăрушла сасăпа кашкăрса йађӗ. Пыр шăтакӗпе ӳкӗрет. Хайаррăн нӗр йытă вӗрсе ӳларӗ, йынăшрӗ. Уп хыҫҫăн тата тепри, тата тепри... Йалти мӗн пур йытă ҫав хăрушла сасса илтсе, вӗрсе йађӗҫ.

— Хи-хи-хи! тесе кăмăлӗ тулнипе кулса илђӗ Муђар. Тӗттӗм ҫӗр варринђе йанăрса, хăрушла илтӗнекен сасă Муђара савăнтарнă. Йалканаш ҫурђӗ кетессинђе тăрса, Муђар ҫав киревсӗр сăмахсем калакан сасса савăнтаракан кӗвӗ сассине итлене пек итлесе тађе. Уҫҫăнах илтӗнеҫҫӗ сăмаххисем те: «Совета тырă пӗр пӗрђӗ те ан парăр! Совет пӗтет!» Ҫак сăмахсене Муђар хăй те шăппăн темиҫе хут, ҫав айакран илтӗнекен сасăпа перле каларӗ. Унђђен те пулмин, таҫта тепӗр сасă кăшкăрса илђӗ. Щăп-шан! турӗ. Ҫӗнӗрен кăшкăрса йапа сасă ҫумне тата икӗ-виҫӗ сасă хутшанђӗҫ. Темӗн йатлаҫнă пек калаҫма тытăнђӗҫ, хăрушла сасă, ирсӗр сăмахсем калаканни, ҫав самантрах петсе ларђӗ.

— Хамăр касри комсомолӗссем тухрӗҫ пулђ. Хупăрларӗҫ пулђ Ваҫҫана... Тарса хăтăлма пелсен йуратђе. Маншăн ҫапах та ӗҫ тухнă теме йурат. Кӗрес пулђ милитси патне, Арманăв патне,—терӗ Муђар.

Муђар кӗтесрен хăпса, милитси, Арманăв пурăнакан пӳлӗмсен кантăкӗсем патне пырса шаккаса:

— Пирӗн касра контрреволђутсийӗн вăйӗсем палăрма тытăнђӗҫ, айăр-ха хăвăртрах! Такам совета хирӗҫле сăмахсем калат, тесе кăшкăрђе.

Ђăн малтан урама Арманăв сиксе тухрӗ. Ăҫта! Аҫа!—терӗ вăл Муђара. Ђупрӗҫ. Вӗсен хыҫҫăнех милитси ђупре.

Ҫул ҫинђе Муђар хашка-хашка мӗнле сасă, мӗнле сăмахсем калани илтӗнни ҫинђен каласа пађӗ.

Ђупса ҫитрӗҫ Муђар пурăнакан урамалла. Михаљана Муђар тӗлнелле виҫӗ тăвата ҫын кăшкăрашни илтӗнет. Муђар, Арманăв, милитси пыђӗҫ ҫынсем патне.

— Камсем есӗр,—терӗ Арманăв, ђупса пынипе хашкаса.

— Епӗр! Такам ҫакăнта урам тăрăх: совет пӗтет! Тырă совета ан парăр тесе ӗрлешрӗ. Сассине хăй темскерле, тискеррӗн кăларат,—терӗҫ икӗ ҫын, Арманăв патне пырса. Муђар шухăшлани тӗрӗс пулнă иккен: ку ађасем Ивановпа Крикорйӗв, ҫак касри комсомолӗссем.

Тепӗр икӗ ҫынӗ—колхоҫнӗксем. Урам тепӗр вӗҫӗнҙен тата тепӗр ҫын ҙупса ҫитрӗ. Ку Трофимав, йалтанаш пуҫлӑхӗ пулҙӗ.

— Мӗн пулнӑ, камсем есӗр? Кам ҫухарҙӗ?—терӗ вӑл ҫилӗллӗ пек сасӑпа, пит хытӑ ҙупса килсе.

—Епӗр-ха вал! Епӗр—терӗҫ Арманӑв, милитси.

—Кам хӑйамат кӑшкарса ҫӳрерӗ? Епӗ малтан пушар тухнӑ тесе. Итлесе татӑм—вӑл иккен тырӑ намалла марри ҫинҙен калат. Ах, персе ӳкерме, шуйттана!—терӗ Трофимӑв.

—Персе ӳкеретҙен тарҙӗ-ха вӑл, таҫта кӗрсе кайнӑ,—терӗ Арманӑв.

— Епӗр ҙупса тухнӑ ҙух сак кӗтесрех тарагҙӗ. Паллас тесе ҙупса пытӑм—мана кӳсекпе урарan йара паҙӗ, аран парӑнтӑм,—терӗ Крикорйӗв.

— Епӗ ҙупса ҫитнӗ ҫӗре вӑл вара тарма тытӑнна. Пӗрмай кӳсекпе пуҫ йери-тавра ҫавӑрат, кӳсекӗ уласа кӑна тӑрат, нийепле те хӑйне пырса тытма май килмест,—терӗ колхоҫнӗк.

— Ӑҫталла тарҙӗ вӑл?—терӗ Трофимӑв.

— Те Муҙар патне, те Михаҙа пиҙҙесем патне. Кӗтесрен ҫак тӗлелле килсен ҫухалҙе,—терӗ Иванов.

— Мана Михаҙа патне кӗрсе кайна пек пулҙӗ,—терӗ тепӗр колхоҫнӗкӗ.

— Мана Муҙарпа Михаҙа хушшипе анкарти хыҫнелле тарнӑ пек пулҙӗ. Атӑр хавалар. Ку йышна хӑваласа ҫитсе хупӑрласа илме пулат ӑна,—терӗ Крикорйӗв, тытас килнипе ҫунса.

Муҙар пӗр шарламасӑр тӑрат. Тата мӗн калаҫҫӗ-ши, хӑҫан Михаҙана айӑпласа сӑмах хушма май килетши, тесе кӗтсе тарат.

— Атӑр, тупӑр халех хунарсем! Атӑр, шырар,—терӗҫ Арманӑвпа Трофимӑв. Хӑйсем хаварттан Муҙарпа Михаҙа хушшинҙи уҫланкӑпа утрӗҫ. Крикорйӗв хунар илме ҙупрӗ.

— Шырамалли те ҫук, унталла кайман вӑл! Уссӑрах пулат кайни те! тесе кӑшкӑрҙӗ Муҙар.

— Ӑҫтан пелен, теп, кайна,—терӗ милитси, шӑрпӑк ҫута ҫута, йанӑхса выртакан перенесем урла Михаҙа картаппелле кӗрсе.

— Ниҫта та кайман вал. Епӗ пӗлетӗп вал каммипе.

— Кам вӑл? Ӑҫтан пӗлетӗн?—терӗ милитси.

— Курсан пӗлмесӗр,—терӗ Муҙар.

— Ан кайар ха! терӗ Армаиӑвпа Трофимӑва милитси.

— Каҫхинех сиспӗ епӗ Михаҙа ҫак ӗҫе тӑвассине, тухса кайнинех куртам. Ҫавӑнпа Михаҙана тыттарас тесе сире пырса каларам.

— Ан кайар! Тупӑнна! Тупӑнна! Килӗр кайалла!—тесе тепӗр хут кӑшкарҙӗ милитси Арманӑвпа Трофимӑва.

Лешсем тупанна тенине илтсен кайалла ҙупса ҫитрӗҫ.

— Ӑҫта пытаннӑ?! Хӑш тӗлте?! Кам?! теҫҫӗ ҙупса килнисем.

— Вӑт Муҙар паллана тет, курна тет, терӗ милитси.

— Кам вӑл? терӗ Арманав Муҙара.

— Михаҙа, манпа йунашарри, раскулаҙҙӗт тунн,—терӗ Муҙар ҫӑмӑллан.

— Мĕншĕн пасăран ка амаран тата?—терĕ Трофимăвĕ сиввĕн.

— Епĕ хăвăр килсе тытма ĕлкĕретĕр пуђ терĕм, çаванпа пасарах Арманăвна милитсине пырса систертĕм вĕт.

Пурте пĕр çĕре пухăнса тăђĕç. Крикорйĕв вăл темĕн хунар çутса, ђупса ситрĕ.

— Кĕрсе пăхăрха епшин Михађа патне,—терĕ милитси.

— Атăр, кĕрер,—терĕç ыттисем те.

— Михађа ку çĕçе тавассипе епĕ касхинех сисрĕм, татах калама тытăнђе Муђар. Хăйсене анăплама тытăнăрапна „Михађа совета ытла та пит кураймаст. Касхине урамра ларнă ђухне те совета хирççле самахсем çеç калат. Епĕ Михађана килĕнђен кўсек çĕклесе кĕрĕкне тўнтерле тавăрса тухса кайнине куртам. Михађа çухăрма тытăнса, кирevсĕр самахсем калама тытăнсанах, хăвăртрах сирĕн пата ђупса пытăм, терĕ Муђар.

— Ыранах Михађана района арĕслесе йамалла пулат, терĕç Арманăвпа Трофимăв. Хыттăн шаккарĕ милитси Михађа алăкне. Ђĕтресе тухса уçрĕ алăка Михађ арăмĕ.

— Михађа пури?

— Пур, çывăрат.

— Çывăрма касах выртрĕи, йе хађ урамран кĕрсени?—терĕ милитси.

— Касах выртнă, касах,—терĕ Михађа арăмĕ тата хытарах ђĕтресе.

— Тăрса тухтăр-ха вăл кунта,—терĕ Арманăв.

— Йурĕ,—терĕ арамĕ, йĕрсе йарас пек сассипе. Ырă маррине сиссе, пит хăраса ўксе, арăм пўрте кĕрсе кайрĕ.

— Арăмĕне пер çăварлă пулнă. Ав йепле упăшкине хўтĕлесшĕн: касах çывăрма выртнă,—тет, терĕ милитси.

Кăшт тăрсан пўртре краççын çутти куранђе те, Михађа тухрĕ те.

— Айа йалканашне,—терĕ кĕскен милитси. Михађа, харама вĕренпĕскер, ђĕтресе ўксе, ним шарламасăр йатлă çынсем хыççăн утрĕ. Муђар хăйне Михађана палаттарасшăн мар пулса, ђасах пăранса тăрса, килне кĕрсе кайрĕ. Комсомолĕссем, колхоçнĕксем килĕсенелле кайрĕç.

Милитси йалканашне çитсенех Михађана пайанхи ĕç çинђен тĕпђесе ыйтма тапратрĕ. Ыйтрĕ, ыйтрĕ, тĕпђерĕ-тĕпђерĕ милитси, ĕç тупсăмне тупаймарĕ.

— Курман, нимен те пĕлместĕп, çывăрнă та, епĕ туйман,—тенĕ Михађа. Пит хăрана, пит тарăхнă Михађа, хăй тĕрĕслĕхне ĕнентерессшĕн пулнă, ним айăп та ку ĕçре çук манăн тесе, ђĕререн каланă пăл милитсине, анђах Муђар каласа пани хăватлăрах, витĕмлĕрех пулнă. Паллах Михађа хăй айăпсăрлăхне нимĕнпе те кăтартайман. Трофимăв, милитси, Арманăв виççĕн канашласа, Михађана ирђен йалканашĕнђех хăварђĕç. Тешурнăй çелисполнитттĕле Михађана астума хушрĕç. Вара милитси хăйĕн пўлĕмне, Арманăв хăйĕнне кĕрсе кайрĕç, Трофимăв килне кайрĕ.

— Мĕншĕн? Мĕн апапшан? тесе ыйтнă Михађа хăй йăшăнђе

хуйхӑрса. Ҫӗре хаҫҫенхинҫен те ытларах вӑркама тытӑнҫӗ. Ҫывӑрнӑ хушӑрах Михаҫанан айӑпӗ пулса танӑ.

— Паркун Муҫар петерҫӗ, халӗ те ҫавах елеклесе тыттарса килмерӗ-ши мана,—тесе тавҫарса илҫӗ Михаҫа. Тата ҫавна та аса илҫе Михаҫа: йатлӑ ҫынсем пайан Михаҫана килӗнҫен каларса килнӗ ҫух, Муҫар хапхи ҫӗриклетсе хупӑннӑ пек туйанҫӗ. Ҫав Муҫар елекленипех пулҫӗ пуҫ пананхи никек те. Пӗр купта килнӗ пек ҫух пӗтӗмпе Арманава Муҫар ҫинҫен каласа парам-ха. Пӗтнӗ пӗтнех ӗнтӗ епӗ, кунран хӑрушши пулас ҫук. Тытса кайинҫен Арманӑва каласа хӑварам. Тен, ӗпенӗ, ҫерипе туйса илӗ Арманӑв епӗ айӑпсӑррине, тен, кӑшт та пулин ҫамаллах пулӗ...

Ҫак шухӑшсемпе пӗр вӑхӑтлӑха пуҫне усса ларҫе Михаҫа. Ҫелисполниттӗл ҫывӑрса кайрӗ. Михаҫа тӑҫӗ те, Арманӑв·алӑкӗ патне пырса шаккарӗ.

— Уҫ-ха паҫҫаслаха.

Арманав ҫывӑрман пулнӑ. Алӑкне уҫрӗ.

— Ҫере тӳсмерӗ, кӗрсе калас терӗм,—терӗ Михаҫа алӑка уҫсанах.

— Кала ара, мӗн каламаллине каласах пулат, терӗ Арманӑв. Хӑй ӑшӗнҫе Арманӑв ҫапла шухӑшларӗ: ку кулак ӗнтӗ манран хӳтлӗх шырама килҫе. Ирсӗр ӗҫне сӗвресшӗн.

Михаҫа хуллен ҫапла пуҫларӗ:

—Епӗ кулак пултам ӗнтӗ, ан тив, кулаках пулам, анҫах, йулашкинҫен кам мана сутӑҫ, кулак туни ҫинҫен пӗрик сӑмах калама килтем,—терӗ Михаҫа.

Кӑмалӗ хуҫалнипе Михаҫанӑн сасси ҫетреме тытӑнҫӗ. Михаҫа кӑшт ҫаранса тӑҫӗ.

— Кала, Михаҫа пиҫве, кала, ала калаҫса ларар,—терӗ Арманав Михаҫа мӗн калассипе интересленсе кайса.

— Шухӑшласан ӗненмелле те мар пек, анҫах епӗ ҫӑнние калатап, тесе пуҫласа йаҫэ Михаҫа тепер хут. Михаҫа хӑй Муҫара мӗншӗн курайми пулнине, Муҫар колхос ҫинҫен мӗнле кирлӗ мар сӑмахсем сарса ҫӳренине, кӗлет айӗнҫе выртнӑ ҫух хӑй мӗн курнине, илтнине Михаҫа пӗтӗмпе тӗппи-йӗррипе, вырпаҫуллӑ каласа паҫӗ. Арманав Михаҫа каласа панине пӗр ҫӗнмесӗр, тӗлӗнмелле калав вуланине итленӗ пек итлесе ларҫӗ. Михаҫа петерҫӗ, вӑрӑмӑн сывласа илҫӗ.

— Есӗ хӑвӑн патанта милитсисем ухтарна ҫух тупӑннӑ йапаласене Муҫар пырса пӑрахнӑ тесех шухӑшлатӑн-и?—терӗ Арманӑв.

— Ҫав Муҫарах, урах никам та пулас ҫук. Тырпа улӑм айне пырса ҫикне михӗ те хамӑннах. Пӗрик кун маларах кӑна Муҫар манран михӗ кирлӗ тесе илсе кайнӑҫӗ. Епӗ Муҫара йуратмастӑп. Тӑшманӑн куранат мана Муҫар. Муҫар та мана епӗ кӗлет айӗнҫе вӗсем калаҫнине итлесе выртнӑранпа курайми пулҫӗ. Муҫар епӗ унӑн ӗҫӗсене тара шыв ҫине кӑларма пултарнине ҫухласа илнӗ, ҫавӑнпа мана пӗтересшӗн.

Пӗр самантлӑха ҫаранса Михаҫа вӑрӑммӑн ахлатса, сывласа илҫӗ те, каллех малалла калама тытӑнҫӗ.

— Ӗнтӗ мана Муҫар путарҫӗ. Кулак, сутӑҫ туса хуҫӗ вӑл мана.

Тыррине. çерулмине, мён ђухле хывнине тулерем. Выђахсене те ёнер картанёнђен каларса йалканашне ăсатрăм. Сарайне, ампарне, витине куçарђĕç. Тепер виçĕ кунран Муђар ман пÿртре хай патне куçарса лартас тет. Муђарах илђĕ пÿрте. Укçине йалканашне пайла кайса тÿлерĕм, пÿрте куçарса лартма хут алла илтĕм, терĕ. Ёлĕ тĕн пултăм ёнтĕ. Шел арăма, ађасене. Хам тĕрĕслĕхе, ђанлăха катартса çăлăнассине емĕтленместĕп, анђах Муђар совет влаçне мăшкăласа, ана кураймасар пурăннине ђĕре тÿсмест. Колхоса çак тырă пулă праçникĕпе коллективисатси кунĕ кĕрес теттĕм, пулмарĕ ёнтĕ...

Михаља çак йулашки сăмахсене каласанах ура çине тађе те, çĕлĕкне хăвăрт тахăнса, кайас-ха ёнтĕ текелесе, мескĕнĕн пăхкаласа ђасах тухса кайрĕ.

Арманăва Михаља килсе кайни, каласа хăварни телентерђе. Арманав çапла шухăшларĕ: пит хитре ёненмелле кулаќ ку кулак. Вăл калани тĕрĕсех пулас пулсан, пайанах унтан туртса илнĕ пурлăхне кайалла памалла, Муђара хупса лартмалла. Пайанхи ес Михаљана мĕн йенђен катартрĕ-ха? Михаља вет тырă хатĕрлес еçе муталасшăн пайан мĕн хытлашнă? Пайанхи ĕç пирки Михаља нимĕн те калаймасќ, снађђат Муђар калани терес. Хăй çинђен Михаља каласа нини вăл— Михаља хăйне хÿтĕлес, Муђара путарас тесе туртса кăларнă йумах çеç. Ах, путсăр кулак Михаља! Ђухан Муђар сине елеклет. Çавă ёнтĕ кулакан: хайех вăл тĕрĕс, пĕр айăпсăр. çынпа пула влаç умĕнђе айăпланатпар теççĕ, кулак вăл айăпли çук...

Çак шухăшсемпе Арманăв ђылайђен çывăрса кайаймарĕ. Кантак çине тулçути шуррăн ÿкрĕ. Тул çутăлнине курсан, Арманав вырăнне çинђен сиксе те тађĕ: пайан ирех хĕвел тухиђен йалтан тырăпа хĕрлĕ опос тухса каймалла. Арманăван çывăрма йурамасќ ёнтĕ. Мĕнле пухăнатши опос? Ёнер Михаља урамра кăшкăрса çÿрени еçе пасмарĕ-ши?

Арманăв хапăл-хапал питне çуса тумланђе те, урама тухма хăй пÿлĕмĕнђен тухрĕ. Алăк патĕнђе Михаља куђкенсе ларнă та, саванах çывăраќ.

— Пайан опос тухса кайайма ан ёнтĕ, çак çын ай пла, -терĕ хăй шĕнђе Арманăв. Хăвăрт урамалла тухса кайрĕ.

Кĕрхи ир сиввите çÿçесепе Арманăв хăвăрт пĕр урам тарăх тса тухрĕ.

Йал вăранна. Таврара шăн-шан илтенет. Ђепавтансем уçалса нтеймен сассисемпе хăварт авата-авата илеççĕ. Унта-кунта çынсем лаçни, сурăхсем макарни, хăлт-халт. шăп-шан илтĕнет. Таçта апха уçăлса хупанђĕ—хăлт! турĕ. Арманăв копператтив лавки немис утрĕ. Вăхат -енте, вăхат тырăлла лавсем копператтив умне ырса тăма. Акă айалти урамрал пĕр лав хапарђĕ. Урапа çинђе ăли михĕсем. Çав михесене, лав хыççăн утса ыракан çынна , Арманăв куçĕ савса пахре. Ку çын—Ђĕлпĕр Иванĕ—ђухăн çын. ăш тĕплерен колхоса кемесер пулнаскер. патшалаха тырă парасси ињђен ыйту тапрансан, ђан маттан тырă парассипе хăйне утарпĕк

туса 10 пăт пама пулҫĕ. Халĕ вăл пĕр лав тиенĕ: кӳршĕсенне тиейенĕ, кӳршсемпе пĕрлешсе пĕр лав ҫине хурса тухнă пулмалла. Вăтам урамран, халĕ Ленин урамĕ текен урамран, тата икĕ лав ҫитсе тăҫĕҫ. Уралисем, йывăр тиейенĕрен, лаҫăртатса, шăтăртатса кăна пыҫеҫ. Ку ҫынсем те хăйсен кӳршисемпе пĕрлешсе тиесе тухнă.

Хĕвел тухăҫ хĕрелнĕ—хĕвел тухасшăн. Лавсем, тулли лавсем уптан та кунтан та кирлĕ вырăна ҫитсе тăҫĕҫ. Арманăв списка тăрăххăн кам-кам тырă панине тĕрĕслесе тухрĕ. Пур вăтамсем, ҫухăнсем, кам пайан хĕрлĕ опоспа тырă кайса пама пулнă, пурте пур. Пилĕк хуҫалăхран ҫук. Камсем? Уйри Ваҫҫа—кăҫал ҫирĕп сатанине лекнĕскер. Вавил—йаланах тырă, аш, пахҫа-ҫимĕҫ парас тĕлĕшпе кутăнланса тăракан вăтамрах хресҫен. Тата тепĕр виҫĕ кармаҫаварсем—пăркун лишентсăсене тырă тӳлеттернĕ ҫухнех тырă хатĕрлес ĕҫе хирĕҫ пыракансем.

— Лишентсăсем ҫын мари?! Унҫухлĕ тырă тӳлеттерсен мĕн ҫисе нурăнҫҫăр вĕсем?!—тесе кăшкрашрĕ пăркун Сапака Микули—пуйансен хутне кĕрекен, вĕсем патĕнҫе ĕҫсе ҫапкаланса ҫӳрекенскер. Анҫах Сапака Микули хута кĕнипе те пуйансен ĕҫ тухмарĕ: мĕн пур лишентсăсене пĕрех кунта тырă района кайса тӳлеттерҫĕҫ..

Ҫак куштансем, карма-ҫăварсем тырă илсе тухманни Арманăва тарăхтарат, ĕҫ апманшăн ҫилĕ килет. Паллах, ҫĕрле Михаҫа кăшкăрашса ҫӳрени карма-ҫăварсен пуҫне, ҫĕрине аван кĕрсе ӳкпĕ. Хăйсене хăйсем камăллă пулҫĕҫ пуҫ.

Арманăвăн ҫатăртатас килет.

— Михаҫа пĕтерҫĕ пайан пирĕн тырă тултарас плана. Анҫах савнаймеҫ тăшмансем. Йал активĕ пурĕ пĕр хăй ĕҫне тăвĕ: пананах ноткулаҫнĕксен тыррине тăпăлтарса илсе района йарăпăр. Михаҫа пайанах лекĕ тĕрмене, ҫĕрĕ вăл унтах!

Хĕвел тухса сарăлҫĕ. Кетӳ хăвалама та тытăнҫĕҫ, тырă илсе тухман ҫынсем килмеҫҫех, пĕри те тухмарĕҫ. Ҫасах лавсем патне йалканаш ҫлепĕсем, комсомолĕссем, ытти халăх, шкула кайакан вĕтĕр-шакăр пухăнҫĕҫ. Лашасем кĕҫенни, тулхăрни, ҫынсем калаҫни таврапа тултарса тăрат...

Арманăв митĕнк уҫса, тырă хатĕрлес ĕҫ ҫинҫеп, хулапа йал выхăнăвне ҫирĕплетесси ҫинҫен кĕскен сăмах каларĕ. Пилĕк килĕрен тырă илсе тухманнине йурăхсăр, сийенлĕ ĕҫсенҫен ҫăн пĕри тесе калăртса хуҫĕ. Трофимăв та тухса кĕскен сăмах каларĕ. Йулашкинҫен пăлне ҫыртса, ҫышкисене ҫăмăртаса: пайанах пурĕ пĕр вăл тырра кăларса йаратпăр. Тăшман кăшкăрашса ҫӳрени хыҫҫăн кайакансене пĕр пĕрҫĕ хĕрхенӳсĕр ҫапатпар,—терĕ.

Лавсем йеркеленсе пĕрин хыҫҫăн пĕри уйхапхи патнелле уттарҫĕҫ. Лашасем талпăнса туртаҫҫĕ, урапасем лаҫăртатса пыраҫҫĕ. Лавсем ҫасах йалтан тухса кайрĕҫ, курăнми те пулҫĕҫ. Малтанхи лав ҫинҫи хĕрлĕ йалав ҫеҫ ҫилайҫҫен вĕлкĕнсе пыни курăнса тăҫĕ, кайран вăл та йулашкинҫен вĕлтĕр-вăлтĕр турĕ те, лавсем анаталла айнипе лаҫах ҫухалҫĕ.

Арманăв ку лавсем тухса кайнипе кăмаллă пулђĕ, анђах çак килĕк килтеп тырă тухмасни калама çук çилентерет. Михађана хађ тем туса пăрахас килет. Çак йалта Михађа пурри Арманавшăн темĕнле йысăк сийеп пек туйăнать. Арманăв нађђаслăха çав Михађа пирки Аннă Петровнă патне кĕрсе калаçма шухăшларĕ. Çынсем митĕнк пулнă çĕртеп саланнă саланман Арманăв шкул йеннелле, вĕтĕр-шакăр ађасенђен ирте ирте кайса хăвăрт утрĕ.

Арманăв йалапах çапла: пĕр-пĕр пысăкрах ыйту сиксе тухсан, йе ĕç аннман пирки йывăрлах килсен, йаланах Аннă Петровнă патне ђупать. Аннă Петровнă вал ăслă, пултаруллă ĕçлекен комсомолка-уђителнитсă, комсомол йађейккин пўро ђленĕ, хĕрарăмсем хушшиђе ĕçлет. Анна Петровна йаланах Арманава хăйĕн канашĕпе усăллă пулна. Петтехникумран вĕренсе тухнăскер, Анна Петровнă йалти опђă ĕçне тума антрасах тăман. Икĕ çултанпа ĕнтĕ Аннă Петровнă çак йалта ĕçлет. Арманăвпа пĕр çул килнĕ вĕсем çак тĕттĕм йала. Арманăв та ку йалсем мар. Вăл кўршĕ йалтап килнĕ. Арманăв 18—19 çулхи ађа, совпартшкул пĕтерет те, çак йала комсомол йађейкки çыруçи, тата ђиттађнă пуçлăхĕ пулса ĕçлеме килет. Унђђен ку йалта шкулĕ те, комсомол йађейкки те пулман. Арманав ђухăн çын ывăлĕ пулнă-скер, пĕтĕм ђĕререн халăх хушшиђи ĕçе парăнђĕ. Нумай вăй хунă Арманăвпа Аннă Петровнă йалта колхос тăвас тесе. Турĕç колхосне. Татах çине тарса ĕçлеççĕ колхосра çирĕп йĕрке тăвас тесе. Колхос правлени пуçлăхĕ Иванов, хай пĕлмпе, хай пултаруллахĕпе кăна колхоса йертсе пыпа пулсан, колхос пысăк çитĕнўсемех тăвас çукђĕ. Колхос правленипе Арманăвпа Аннă Петровнă йертсе пынипе йалти пĕтĕм актив хутшăннипе, колхосра çирĕп йĕрке пулђĕ, мĕн пур ĕçĕ колхосăн ăнса пыђĕ. Арманăвпа Аннă Петровнăшăн йăвăр килнĕ вăхăтсем те пулнă. Колхос пуçлансанах, çураки вăхăтĕнђе, хĕрарăмсем колхос правленипе пыра-пыра тавăнаттђĕç.

— Тухатпар колхосран!

— Вăрçа çĕмĕрсе килет, колхоçнĕксене пĕтермелле тет!

— Çыншăн ĕçлеси колхосра, хамар выçă вилеси?!

— Колхос тырри пĕтĕмпех совета теççĕ, пирĕн выçă вилеси?!

— Петтĕр колхос!

— Кирлĕ мар! Халех тухатпăр! ушкăнпех тухатпăр! Ђăларар пире колхосран!

Çĕмĕрлеççĕ, тулашаççĕ хĕрарăмсем. Пĕринђе колхос правлени кĕпекисене çурса тăкнă, сĕтелсене пукапсене çапа-çапа ватса пĕтернĕ. Колхос пуçлăхне, Иванова, кăмака хыçнелле хĕстерсе хурса пиђĕнђен ђăрмаласа илнĕ. Хĕрарăмсем тулашнине курса тăракан çыннăн çўç-пуç вĕрилле тăмалла, пуç çаврăнса каймалла. Анђах Арманăвпа Аннă Петровнăн пуçĕсем çаврăнман.

— Малалла ĕçлеме çук, май килмест.

— Вăй-хал çитерес çук, пирĕн çеç ĕçлемелле тесе тăмарĕç Арманăвпа Аннă Петровнă. Йалĕ тĕттĕм. Малтанах шкул та, комсомол йађейкки те ку йалта пулман пирки йалти çамрăксенђен активлă комсомолĕссем сахал, вĕренў çитменнипе пултаруллă ĕçлеймеççĕ.

Пётём йал хуппинҫи ёҫ ҫак икё ҫамрӑк ҫине тийенет. Кунне ҫӧрне пӗлмесӗр тенӗ пек, ырми-канми ӗҫлерӗҫ Арманӑвпа Аннӑ Петровнӑ. Кашни хӗрарӑм тӑнлапиҫҫенех, йӗркене кӗриҫҫенех комсомолсем пухусем туса, колхос мӗнле пулмалли, колхосра мӗнле ӗҫ йӗрки, ӗҫшӗн тӳлесси, колхосри ҫӑмӑллӑхсем мӗнле пуласси т. ыт. ҫинҫен кала-кала панӑ. Виҫӗ телекаткӑва Анна Петровнӑ М. йалӗнҫи колхоса илсе кайса кӑтартрӗ. М. йалӗнҫе колхос ситӗ 5 ҫултанпах пур. Пит йӗркеленсе, аваллапса ҫитрӗ. Хуллен, пӗҫӗкӗн колхосран тухас тесе ҫӗмӗрлекен хӗрарӑмсем лӑпланҫӗҫ. Комсомолӗссем тӗпе хирӗҫ ӗҫлени, клас кӗрешӗвӗ ҫинҫен танлантарни, М. колхосне кайса курни, тӗттӗм хӗрарӑмсен куҫне уҫрӗ. Уй-хир ӗҫӗнҫе, хӑлле йӗркесӗр ҫӗмӗрлекен хӗрарӑмсем, халӗ ҫап лайӑх утарпитсӑсем пулҫӗҫ. Колхос кӗрхи ҫӑмӑрсем пуҫланиҫҫен тырра вырса пӗтерме мар, ҫапса пӗтерне. К. колхосӗнҫен ытти колхоссенҫен ҫӑп малтан района хӗрлӗ онос тухса кайрӗ...

Арманӑв пырса кӗнӗ ҫух Анна Петровнӑ шкул аҫисен тетраҫӗсене пӑхса, йӑнӑш ҫырнисене тӳрлетсе ларат. Пӳлӗмре тирпейлӗ, таса. Кантӑкран хевел кӗрсе сӗтел ҫине. Аннӑ Петровна ҫине ӳкет.

— Мӗн ирех ҫемӗрттерсе килтӗн,—терӗ Аннӑ Петровнӑ шӳтле пек. Хӑй Арманав ҫине хӑмӑр куҫӗсемпе йӑлтӑшла ӑшшӑн пӑхса илҫе Арманав пукан илсе ун умне ларҫӗ.

— Еҫ пур. Анна Петровнӑ! утарлӑ ӗҫ.

— Мӗн тата? Темле утарлӑ пулсан та халех шкулти аҫасене вӗҫҫенех пӑрахса тухса ҫупаймӑп. шкултан тухсан—йалапах хатӗр,—терӗ Аннӑ Петровнӑ, каллех шӳтле, йалапах хатӗр тенӗ ҫух алляне пионерла ҫӗклесе илҫӗ.

— Есӗ ан шӳтлесе ларха. Поткулаҫнексем тырӑ леҫме каймарӗҫ вӗт.

— Ан калаҫ! Енер каштӑрла пурте тухатпӑр тыра пама тесе епе хам алӑ пустарса ҫӳрерӗмҫке,—терӗ Аппа Петровна тӗлӗнсе.

— Тухатпӑр тетҫӗҫ те, клас тӑшманӗ пирӗн ӗҫ ҫине пырса сурҫе. Раскулаҫҫӗт тупа Михаҫа урам тарах тыра памалла марри ҫинҫен, совет тепӗр ерherен пӗтесси ҫинҫен кӑшкӑрса ҫӳренӗ те, пӗтӗм ӗҫе пӑснӑ.

— Михаҫа тетсн? Савин Михаҫи-и?

— Ҫавӑ, самӑй ҫава. Мӗнрен пит тӗлентен есӗ. Савин Михаҫи ку ӗҫе тӑвас тесшӗнни мӗн? Тытса хупнӑ ӗнтӗ Михаҫана. Муҫар курса тӑпа вӗт Михаҫа килӗнҫен тухса кайса ӗрлешсе ҫӳренине. Муҫар хӑй пире пырса каларӗ.

Арманӑв каласнӑ ҫемӗн Аннӑ Петровна пит-куҫӗ тӗлӗннипе улшӑнса пыҫе. Малтан Анна Петровнӑ хӑмӑр куҫӗсене пӗр ҫӗре тӗллесе пӑхрӗ те, йалалана тип курнӑ пек ҫылайҫҫен шухӑша кайса пӑхса таҫе. Вара хӑвӑрт ура ҫине тӑҫӗ. Арманӑва хулпуҫҫирен ҫат ҫапса илҫӗ те, ҫапла каларӗ:

— Ҫук! Лексантр, йӑнӑшатӑн! Савин Михаҫи ун пек ҫын мар! Муҫар хӑй мутаlама пултарнӑ сире. Муҫар мӗнле пире колхос тӑвас

ёçре муталани çинђен мана Анушки—шанђакла ђухли хёрарам, каласа пађё. Муђар вал ђăн-ђан клас тăшманё. Муђар ирсёрлёхёсене Савин Михађи пёлнё, Муђар ёçёсене тарă шыв çине кăларасшăн пулнă, анђах Муђар çавна сисеç, Савин Михађине иетерсе хунă. Айăпсăр пётнё Савин Михађи. Асту! эпирхи ёçре те Муђарах айаплă пулна пулё. Тёплён пёлес тесен, пирен Муђарпа Савин Михађи çинђен масса хушшинђе, уйрам шанђăкла ђуханеенђен ыйтса пёлес пулат, пухусенђе вёсем çинђен сăмах тапратса йарас пулаţ. Халех тупмалла тăшмана! Халех тупса массă хушшинђен тапса, сирпетсе каларса пăрахмалла!—терё Анна Петровнă, хёрўлён, куçёсемпе Арманава тўрё пахса, санаса..

— Йанăшмастап пуљ Анна Петровнă. Епё ёнер хам çав ерлешсе çўрекен çынна тытма кайна вёт. Анушки вăл поткулађнитсă пулё,—терё Арманăв.

— Ну, Лексантăр, тавлашмапар, тавлашатђен ёçе тытăнар. Еç терёс пырсан, клас сисёмне çивёђ тытсан, епёр ђан-ђан айаплине тупăпар. Кунта ђейе, пит сиеллё клас тăшманё пурах. Йёрлесе пăхар-ха. Есе ђиттађнара. çамрăксем, арçынсем хушшинђе Муђарпа Савин Михађи пирки калаçса пăх. Епё акă пайан каçхинех хёрарăм вуххи пухăп та, хёрарамсем хушшинђе Муђарпа Савин Михађи çинђен ыйтса пёлёп. Муђар патне сăмăл кавалерипе çитсе пăхас пулат. Мана тата ађасем Муђар çинђен икё саметка пађёç. Паха саметкăсем!

— Йуре, йышанар-ха еппин есе каланине,—терё Арманăв. Хађ ана Михађа хăй çинђен, Муђар ирсёр ёçсем туни çинђен аса илђё.

— Саметкăсене пăхса тух,—терё Анна Петровна Хветукпа Васçук çырнă хут таткисене Арманăва парса.

Арманăв хăй ăшенђе саметкăсене вуласа тухрё.

— Муђара ђăнах йурăхсăр йенђен палăртакан, кирле токументсем, ку хут таткисем,—терё Арманăв, саметкисене хăйён кăсйине тирпейлён ђикрё. Тёрёссипех, тёлнех тупасђё ёнтё ку ёçен тупсăмне.

— Тăрăшар ёнтё. Тăрăшсан тупăпăрах. Полђшевиксем илеймен крепаç çук тене вёт, терё Аннă Петровнă кулкаласа.

Анна Петровна кулкаласа калаçни Арманăв кăмăлне çёклентерет. Еçпе пиçсе хресђен ç мăнигље ўсиё тёреклё, лутрарах илемлё шăмшаллă Анна Петровна хăй кулђттурлăхёпе, пултаруллă ёçленипе, хăмăр куçё ăслан пахнипе Арманăв ђёрипе ђылапраппах пахантарнă. Килёштерет Арманав Аннă Петровнапа, анђах хёре йурату çинђен пёр сăмах та каламаст. Калама та тўр килмест пек, вăхăт çук пек, пёрмай ёç. Кашни куллехи ёçсем вёресе, пёрмай вăл ыйтса тăна ђухне Арманăван йурату йурри пуçласа йама та хапу çитмест.

— Урăх ђух, малашне, хам Вусран вёренсе тухсан, тесе ађаплаţ Арманăв хăйён ђёри тёпёнђи хайусăр шухăшёсене.

— Ун ђух кайа пуле.... Тен, Анна Петровнă урăххине йуратё, сана халё йуратмаţ те пулё... сиксе тухаţ хăш ђух Арманăв пуçёнђе çакнашкал шухаш.

— Çук, йуратаţ мана Анна Петровна. куç-пуђ пех палла, йуртаţ.

Мана йуратмасан, хисеплемесен, Анна Петровна мана вěрентесшěн. Культтурла тăвасшăн тăрăшěҫҫěн? Кашни утăмра вăл манпала аппа пек, йамăк пек ырă кăмăллă, тепě ăшри хирěҫле сасă..

Хаҫхи вăхăтра Анна Петровна Арманăвшăн тăван пек, ҫăн ҫывăх йулташ пек паха. Ҫав паха йулташлăх икě ҫамрăка опҫă ěҫěнҫе таҫă ҫыхăнтарса, пěр-пěрне пулăштарса тăнă.

Ҫав кунах йалканашě комсомол йаҫейкки, йал активě ҫине тăнипе. каҫалапа района пилěк хуҫалăхран тырă кăларса йаҫě йаҫех. Кунěпех лара тара пěлмесěр Арманăв тырра кăларса йарассишěн кěрешрě. Ěҫ тухрě кăшт канам!—терě Арманăв ҫěрěне пěр пěрҫе ыйхă курмансккер, пайан кунěпе ěштелене ҫÿрепěскер, хăй выранě ҫине ҫикěнсе. Кăштах лăпланҫě Арманăвăн ҫěри, кăшт канма выртрě. Халě ěнтě пěтěм шухăш Арманăвăн Савин Михалипе Муҫар ҫинҫе пулнă. Муҫар патне ухтарма кайассине Арманăв Трофимăвпа, милитсипе таталсах хунă. Папан каҫхине Арманав ҫиттаҫнăра, Муҫар ҫинҫен ыйтса пěлме шухăшлать. Пайан та ҫиттаҫнăна халăх пумай пухăнать пулěка. Йалта уй-хир ěҫě пуҫтарăнса пынăҫемěн ҫиттаҫнăра ҫынсем каҫсерен йышлăрах пухăнма тытăнҫěҫ. Ратио итлеҫҫě, кěнеке-хаҫат вулаҫҫě, тěрлě хыпарсем ҫинҫен калаҫаҫҫě. Ҫас акă тěрлě крушоксем вăйлăрах ěҫлеме тытăнҫěҫ. Крушоксене йертсе пыракансем Арманăвпа Анна Петровна.

Арманăв, выртсанах ҫывăрса кайнăскер, пěрикě сехетрен вăранҫě те. Ана алăк хулт! туса хупăнни вăратрě. Вăрансанах Арманăв ҫынсем ҫиттаҫнăна пухăнма тытăннă пулě тесе ура ҫине сиксе тăҫě те, ҫиттаҫнăна тухрě. Колхоҫнěксем те, колхос маррисем те ҫиттаҫнăра ҫылайăн лараҫҫě. Арманăв колхос ҫинҫеп, колхоса вăйлатса йарасси ҫинҫен сăмах тапратса йарать. Хуллеп-майăп, сисěнкěсěр колхоса хирěҫ пыракан ҫынсем ҫинҫен те каласа йаҫě, Муҫара асанҫě. Колхоса кеме кирли ҫинҫен калать.

— Кěмелле теха ҫав колхосне,—тет пěр сухаллă ҫын.

— Мěншěн кěместěнха, мěнле хěллех кěменха есě колхоса?—терě Арманăв ҫак ҫынна.

— Хамăр ҫухлайман пирки колхосран шаварăнса йултăмăр. Хěрарăмсем вěт колхос тěлěшпе пит «пěлеҫҫě», терě мăк сухаллă ҫын.

— Ака санăн арăму меншěн кěресшěн пулманха колхоса? тет Арманăв.

— Мěншěн тет... Паллах хěрарам ҫын сăмахě хыҫҫăн кайать вăл. Таҫта, ҫăм ниминҫе калаҫаҫҫě тети, Муҫар калать тет: колхос вăл етеме сеп таваканни, епě хам колхоса кěрсе тěп пултăм, аран-аран хамăр йала ҫитсе ÿкрěм тесе каланине илтнě те ман карҫăк, вěрепне сěтěрсен те колхоса кěрес ҫук, савăнпа кěмен епě.

Арманăв ҫак мăк сухал Муҫар ҫинҫен каласа йарсан вěриленсе кайрě. Унăн ҫак старике татах Муҫар ҫинҫен сăмахлаттарас кăмăл мурҫě, анҫах тепěр хресҫен, сар кěрěкли тÿрех ҫапла каласа йаҫě:

— Муҫар самахне мěн ěненмелли пур ăна? Епě пăркун колхос правленипе пытăм. Колхоса кěрес шухăшпах пытăм ěнтě. Правлени

алкумĕ картлашки çинђе виçĕ-тăватă çын лараççĕ. Муђар та уптах. Колхоса кĕрес тесе сăмах тапранса кайрĕ. Муђар çапла каларĕ:

— Есĕр колхоса кĕрес тетĕр, епĕр колхосран тухасшăн çунатпăр. Ырапи, пайапи колхос тĕпии-йĕррипе саланса кайат пулмалла, мĕншĕн тесен, пирĕн колхосра тырă пĕр перђе те йулмĕ акă. Пирĕн колхосран тет, пуçлăхсем, комсомолĕссем мухтава тухасшăн, ђăн малтан хĕрлĕ опос кăларса йађĕç. Ку тапхăрта пана тырă советшăн шутра мар, пирĕп тырра совет тата çавăнђухлĕ 10 хут илет. Акă вара çын пуçне хĕл каçма пĕрикшер пăт тырă лекет. Пурăн вара унпала, тет. Епĕ çав кун колхоса кĕрес тесе сайавлени пама шиклентĕм. Тепĕр кун колхос савхосне тĕл пултăм та, тыра çинђен сăмах тапратса йатăм. Муђар куç кĕретех*) суйат иккен. Колхосра тырă халĕ колхоçнĕксене валеçсе памалли пит нумай. Хăй Муђар колхоса кĕрсе ўкнĕ те, пире колхоса ан кĕђђĕр, кансĕр пурăнăçпах тарăхса пурăнђђăр тет пуђ. Епĕ çине тарсах çав кун ирхинех колхоса кĕме сайавлени парса хăвартăм. Муђар çын ырă курасран кĕвĕçет, çынна ырă сунмаст вăл, суйкăн,—терĕ сар кĕрĕклĕ çын.

— Епини Муђар хăй колхосра пулин те колхоса килĕштермест иккен. Колхос çинђен суйа суйат. Тата кам та пулин Муђар çинђен мĕн те пулин калас текенсем пур-и?—терĕ Арманăв.

— Епĕ калас тетĕп,—терĕ Хумма, алăк патĕнђе тенкел вĕçĕнђе ларакансекер. Хумма пайан йалканашне тешура килнĕ те, ђиттађнăна кĕрсе ларнă. Çынсем калаçнине пĕр шарламасăр итлесе ларат.

— Кала-ха, кала! Сана тата Муђар мĕнле суйса ђавса тăршшĕ лартнă!—терĕç сасăсем.

— Çынсем тырра машинипа суртласа, хурмалин текеннипе ђўкесе акрĕç, çынсем тырăллă пулђĕç. Епĕ тырă аллама кайас ђух çак Муђар ман инкеке кура таçтан ман пата килсе кĕђĕ. Тырă, тет, суртламасан, ёмелпе ђўкемесен луђђă аван пулат, тет. Епĕ ухмах пек ĕнен кай çав Муђар сăмахне. Манăн пек пађарри тырă кăçал никамăн та пулман. Пит çиленетĕп çавăншăн çав шуйттан Муђарне! Мана çакна ширсса улталанăшăн сута пама пулмаст-ши ăна пуђсĕре? терĕ Хумма.

— Епĕр малашне Муђара унашкал ĕрĕхсе çўреме памăпăр, йĕвен тăхантарапăр, терĕ Арманăв, кĕскен.

— Вăт тăк Муђар. Хха! Пур çĕртре те суйса çўреме ĕлкĕрнĕ,— теççĕ хыçалтан сасăсем. Хха, кулакла йаратçке вăл,—теççĕ.

Арманăв плокнот çинђен хут татса илђĕ те, ђылайђђел химиђђески карантапппа çырђĕ.

— Йултащсем, терĕ вăл хутне кăтартса, епĕ ку хут çине Муђар çинђен мĕн каланипе кĕскен çыртăм. Каласа паракансем! есĕр хăвăр калани тĕрĕссине çак хут çине алă пусса çирĕплететтĕр-и?

— Çирĕплететпĕр, алă пусатпăр!—терĕç мăк сухалпа сар кĕрĕкпи. Тухса алă пусрĕç.

— Епĕ хут пĕлместĕп çав, вĕрепеймерĕм вĕт ĕлĕк. Хађ ĕнтĕ вĕрепме те куç курмарĕ. Муђар мана сийен тунă тесе пĕр хут çине

*) Куç умĕнђех, пĕлсе тăнă çĕртех!

мар. вуна хут çиме ала пусаттăм. Ах ана йытта!—тере Хумма сĕтел патне пырса тарса. Хуммашан пĕр çамрăк тухса алă пусрĕ.

Арманăв пайан Муђар çинђен пĕлмине пит камăлла пулђĕ. Савин Михаљи Муђар çинђен калани вырана та лара пырат мĕн. Арманăв хĕрарамсен пуххине çитсе пахас шухăшпа ђиттаљнăри йĕркене астума хăйĕн пулташне пĕр комсомолеса хушса хаварђĕ те, шкула тухса утрĕ.

Шкулта пĕр класĕнђе хĕрарам лăп тулли. Пуху пуçланни ђылай пулмалла.

— Мĕнле ыйту çинђен калаçаççе тесе ыйтсан, пĕр хĕрарăм Арманана:

— Тĕрлерен çине куçпа. терĕ.

Арманăв алăк патĕнђен хĕсĕнкелесе класа кĕђĕ. Такам йатлаçна пек калаçат. Анушки ик-кен, сĕтел умне пырса тăнă та, аллисемпе кармашьа аса хыттан калат:

— **Муђара епĕ совет тăшманĕ тесе шутлатăп.**

— Аха, кунта та хайхи Муђара йарса илнĕ,—тере хай ăшĕнђе Арманăв, Анушки сăмахне хăлхине тăратса итлеме тытăнђĕ.

...Муђар шре колхоса кĕртмесĕр хаварђĕ. Курас килмест ĕнте çав Муђара: Выçа хаварђĕ вăл мана! Хăйне колхосран кăларасђĕ ăна!

— Колхосран каларма йышăнас Муђара-а!—терес колхосçнĕтсасем.

— Колхоса кĕме епĕр хатĕр. кересси кĕретпĕр, хăвалар унтан Муђара-а!—терес темиçе хĕрарам сасси. Анушки хыççăн сăмах колхос правлени пуçлăхĕ илђĕ.

— Епĕр Муђара ку тĕрлĕ сийенлĕ çын иженнне пĕлмен-хе, сиемен. Пайапах правленинђе Муђар çинђен ыйту лартса, ăна колхосран кăлармалла тăватпăр,—терĕ. Анушки татах сиксе тађĕ.

— Хаљ аса илтĕм-ха, астуман та паçăр. Савин Михаљпийĕн те качăн покох пер çурпилĕк тула йухса тухнă. Епĕр Михаљапа пĕрле ăна çинђе икеĕмĕр Муђар çапла колхоса хирĕç пыни çинђен комсомолессене калат теттĕмĕр. Михаља Муђар çинђен калама хытă çине танăђђĕ, Михаљана. пумăйах та тăмарĕç, раскулађђĕт турĕç. Кулака тухсан Михаља сăмахне ĕненмелле те пулмарĕ пулĕ. Епĕ йĕршу çуккипе Анна Петровнана Муђар мапа мĕнле колхосран улталаса хăварни çинђен кил-се калаймарăм. Куç тĕлне пулмаст-ха шуйттан Муђарĕ! Пĕр сура сура йатлаçђĕ ăна! Кăларса пăрахăрах ăна колхосран! Ырă курса ан пурантăр çав ултавçă шуйттан!

Анушки йатлаçните Арманăв хай темиçе хутђен вориленсе, сивенсе кайрĕ. Михаља Муђар ирхĕр ĕççĕсем çинђен калани пĕрмайах тĕрĕсе тухса пырат. Ентĕ Арманăв хăй ăшĕнђе пĕтĕмпех Михаљана хĕрхенсе. ун хутне кĕрес шухăш тытрĕ.

Хĕрарăм пуххи саланас умĕн Аннă Петровна пухуи протоколне вуласа пађĕ. Протокол вулана ђух Муђар çинђен, ăна колхосран кăлармалла тесе йышăнниие вуласан. хĕрарăмсем сĕрлесе:

— Çавă кирлĕ Муђара!

— Паттан хăваласах йамалла ăна!

— Арамĕ те йĕркесĕр усал! тенĕ сасасем илтенђеç.

Пуху саланса Арманăв Аннă Петровнă патне кĕђĕ те. пайанах,

халех пађсiкка пуровен ларавне иртермелле тере. Вара ыран прех Муђар çинђен пухăннă маттериалсене йалканашне, РКИ-не, милитсине пĕлтермелле терĕ.

Аннă Петровнă та Арманав казанпе килĕшрĕ.

— Васкас пулат, вăхат кĕтме т! Алхасма тытăнна клас тăшманавне пуçне çинђех çапса лапђăтманни вăл пиреншĕн калама çук йурăхсар, усал ĕç. Йепле ђепе пулнă вăл Муђар? Ку таранђђен вĕт тăшман хай ђĕрнине катартман. Ака кам пире колхоз ĕçне пĕркелеме ђармантарса пынă! Колхоса салатма, акă кам хĕрарăмсене ĕшкĕртсе. пирĕн çине тăрантарнă! Полђшевикла кĕрешсе ыран-пайанах тăшман пуçне таптаса çĕмĕрмелле!—терĕ Аннă Петровнă. Хăй хĕрарăмсен пуххинђе пăђа пулнипе, нумай калаçнипе хĕрелсе канна. Йулашки сăмахсене Анна Петровнă хĕрсе кайса, умра Муђар пулсан, ђанахах та тыт а çапса пăрахас пек каларе.

— Та, вахат кĕтмест! Епĕ ђасрах кайса пÿро ђленĕсене пухам-ха, есĕ пыр!—тере Арманăв. Унăн та ашђике пăлханнă. Аннă Петровна патне кĕнĕремпе вăл пĕрре лара-тăра пелмере. Перман пÿлĕмре урлă-пирле уткалаҫ. Вара кухђа кĕрсе сивĕ шыв ĕçрĕ те, тухса кайрĕ.

## VII

Сарт аиккипе симĕс курак. Симĕс куракпа илемлен такар сукмак авкаланса сăрт айккипе кайаҫ. Ашă çу кунĕ, сап-сар хĕвел пăхаҫ. Муђар çав сукмакпа утса пыраҫ. Сунара тухнă Муђар. Ав сарт айккишђе хăмăшлă çутă кÿлĕсем. Муђар çавăнта çитсе тăђе. Хăмăшлăхран кайăк кăвакалсем вĕçсе тăраççĕ те, тарасшăн айаккалла вĕçеççĕ, анђах Муђар вĕсене пĕрне те айаккалла вĕçтерсе йамасҫ. Пĕрин хыççан пĕрне пере-пере ÿкерет. Ака тата кайăк хур тĕл пулђе, акăшсем тухрĕç, вĕçсе кайма тапратрĕç. Муђар та кайăксем хыççăн вĕçме тапратрĕ. Аллисемпе çунат пек сулларĕ, урине пĕрре çĕре тапрĕ те, çунатланнă пек йар çÿлелле вĕçрĕ. Симĕс улăх тăрăх, çут кÿлĕсем урлă, кавак пĕлĕт айĕпе Муђар акăшсем пек йар та йар малалла вĕçрĕ. Вĕçет, вĕçет, вĕçнĕ çĕртех аллинђи пашалĕпе кайăксене персе ÿкерет. Аванçке, çăмăлçке вĕçме, вĕçĕмсĕр вĕçес килĕт!

Тÿн. тÿн! тутарђĕç алăка. Муђар алăка тÿнлеттернине вăранах кайрĕ. Муђар пÿртре выртаҫ иккен. Касхине тулта сиве пулнипе Муђар çывăрма пÿрте кусна

— Ну, арăм, шит авап тĕлĕк куртам, тере вăл арăмне пăратса. Кăвакалсене, хур кайăксене пере-пере ÿкеретĕп пек, ахăр хамăр тăнмансене нерсе пĕтерне пек пулђĕ пуђ вăл? тере Алăка калах ытăрах тÿнлеттерђĕç.

— Кам вăл, тухса пăхха. Неушле Иван Михалђ татах ыттан ысе килђĕ пуђ?—терĕ Муђар шыв ĕçме тăрса Арăмĕ краççын çутса хăвăрт тула тухса кайрĕ Алăк уçăлса хупăннă ђухнех Муђар алкум несĕнђе çыпсом каласса тăшне илтрĕ. Унђђен те пулмин пÿрте Арманăв, милитси, йалсовет ђлене тата тепĕр комсомолĕс Крикорйĕв пырса та кĕрђĕç.

Муђарăн кусене курсан ђĕри лашт çурăлса кайнă пекех пулђĕ Ах, арђа пÿртрехçке манăн, аса илђĕ Муђар. Ĕнерхи пасартан Муђар ылттăн çĕрĕсем илсе таврăннăђђĕ те, вĕсене хурса вырнаçтарма арђана йупа шăтăкĕнђен пÿрте илсе кенĕђђĕ. Тем телек тĕлно пулнă, тухса хывма манна.

— Сан пата енĕр ухтарма килтĕмĕр—терĕ Арманăв пырса кĕрсенех.

— Ухтарма хушрĕç,—терĕ милитси.

— Ухтарăр,—терĕ Муђар тÿлеккĕн, ђĕтрекен сасăпа, хăйĕн ăшђнкĕ пăлханса кайнине палăртасшăн мар пулса.

Ухтаракансем тытăнђĕç хăйсен ĕçне. Милитси малтанах выран айне лапђанса пăхрĕ те, арђана туртса та каларђе. Уçса пăхрĕç арђана: ылттăн, куçа çиет ылттан. Ылттăн укçасăр пуçне ылттăн хĕрессем, çĕрĕсем; хăлха ункисем, сулăсем. Арманăвпа милитси арђана питĕрсе сăркăђласа пиђетлерĕç. Муђар арăмĕ арђана милитси аллинђе курсан улаçа йĕрсе йађĕ. Ун сассине пĕђĕк ађи варанђĕ те, ÿсре, ÿсре, каçăхса кайса хыта кăшкăрса йĕрме тытанђĕ. Амăш ађине алла тытрĕ. Ађине амăш çухрашса йĕрни халхана ĕерĕнтерет. ит. ес килмест. Муђар çав вăхăтра камака кĕтессипелле хĕсĕнсе тăнă та. урса кайна пек тискер куçпа, сиксе ђĕтресе, ухтаракансене пăхса тарат.

— Ан макăрт ађуна!—терĕ вăл сасартăк хайарран, тискорĕн çухăрса.—Çухрат шуйттан çури пек! Вĕлерен!

Хурђака ђенне тытна пек Муђар ађана амăш аллинђен хайаррăн туртса илђе те, алăка уçса ывăтрĕ.

— Ай-йай! Вĕлертĕн вĕт ађапа! Вĕлертĕн! тесе арăмĕ тулалла вирьĕнђĕ.

— Вилђђĕр! Пĕтђер! Пур ађине те вĕлеретĕп! Пире пурăнма ирĕк памаççĕ. Луђђă вилђђер! терĕ Муђар. Сетел патне сиксе пырса çĕçĕ йарса илђĕ. Çисĕм пек хăвăрт çĕççине урайĕнђе çывракан ађисем çинелле сулласа йађĕ. Муђар куçне-пуçне ђарса пăрахнă, пырĕ харалтатат, шалĕсене йĕрсе шăтартаттарат.

— Пире пурăнма ирĕк çук! Ађасене вĕлеретĕп. хам та вилетĕп! Пурне те вĕлеретĕп!—тесе аллинђи çĕççине выђатса çавăрпат—пĕтĕрнет урса кайнă Муђар.

— Тытăрха тата хытăрах, тытар!—терĕ Арманăв Муђара хыçалтан тĕреклĕ аллисемпе хыта йарса илсе.

— Çыхас ăна! терĕ милитси. Виççĕн Муђара алли урисене хутлатса урайне парахрĕç, алли-урине туртса çыхрĕç. Харалтатса, вилетĕп тесе, хурах çухăрат Муђар.

— Ниђђево, куркалапа куп пеккисене. Пире çиленсе ађисене вĕлеретĕп тет, терĕ милитси.

Муђара ҫыхса пăрахсан. ҫенĕхелле сĕтĕрсе тухрĕҫ.

— Арăмĕ йĕре-йĕре ансăр пулна ађине пӳрте ҫĕклесе кĕђĕ. Ухтаракансем хăйсен ĕҫнех тăваҫҫĕ.

— Ай-йай тур, ах тур! Есĕр килсе кĕрсе ашшĕ ађапа вĕлерђĕҫке! Ай тур! Пĕтрĕмĕр! Мĕнле самана килђĕ капла! Ђухăн ҫын патне те кулак патне пынă пек ҫĕрле ухтарма киле пуҫларĕҫ! Пирĕн пек ҫука йерпĕ ҫынсене, нуша курса пурăнакансене те кулаксене ҫаратнă пек ҫаратма хушатн сире совет влаҫĕ?! Ай-йай! Ђухăн пулсан та кулаксем куракан мăшкăла курмалла пулђĕ!

Нăйкат, йĕрет Муђар арăмĕ, хăлхана йĕрĕнтерет. Ухтаракансем пӳртре ăҫта мĕн пахмаллине пăхса, шыраса тухрĕҫ те, кĕлете кайрĕҫ. Кĕлетре ларакан пысăк арђара тĕрки тĕркипе хура йĕпкĕн хаклă йышши пустав, караккуљ, тилĕ тирĕсем, тĕрки тĕркипе ҫитсă.... Ухтарса пĕтерсен Муђара хăйне те иалканашне илсе кайрĕҫ. Халĕ ĕнтĕ Муђар ҫемҫелнĕ: йĕрет, ним ђенмесĕр йĕрет.

Тул ҫутăлнă ҫутăлманах Савин Михаљине йалканашне ђенђĕҫ. Михаља, хăрама вĕренпĕскер, йалканаш суртне пит хăраса пырса кĕђĕ.

— Мĕн пулĕши ĕнтĕ тата, те тытсах кайаҫҫĕ ĕнтĕ, тесе шухăшлаħа алак урла хуллен йарса пусрĕ. Алăк патенђен иртмесĕр тарат. Арманăв хăй пӳлĕмĕнђен тухрĕ те, тӳрех Михаља патне кăмăллăн утса пыђе. Темле ăпшал, аванăн туйăнса кайрĕ Михаљана Арманав ун патне тӳрех хирĕҫ утса пыни. Михаљанăн хăравҫă ђĕри хăй тĕ лĕнех лăпланђĕ.

— Ну, Михаља пиђђе, ĕҫ тухрĕ! Муђар лекрĕ вĕт тапă айне!— терĕ Арманăв Михаљана алă парса.

Ку хыпара илтсен Михаљан ырĕнђе темĕн пухăнса тăвăрларĕ пек туйăнђе, анђах Михаља хăйĕн кăмăлне хытарса, тăвăрласа тăракан пананана ҫăтса йарас пек темиҫе хутђен ҫăвартн сĕлекене ҫăтса, хуллен ҫапла каларĕ:

— Епĕ Муђар ҫинђен ҫак сăмаха илтессе сунман. Пысăк тав сана. Арманăв, тĕрĕслĕхе йерлесе тупнăшăн. Ентĕ ман ҫинђен те кулак, сутăҫ йађе сирĕлет пулĕ...

— Сана ĕнтĕ мĕн нур пурлăхна кайалла парĕҫ,—терĕ Арманăв, колхоса та илетпĕр.

— Пурлăхĕ те ҫемйене кирлĕ те, анђах мана ђăн пахи хаљ ҫака: епĕ сутăҫ, кулак йатенђен хаталин мана хама хам тепĕр хут ҫĕнĕрен ҫуралнă пек туйăнат, терĕ Михаља. Арманăва хăй тепĕр хут алă пырса парђе те, ним шарламасăр тухса кайрĕ.

Михаља Муђар олекĕ айне пулнăранпа пĕтĕмпех йăшса ҫемҫелсе кайнађђе. Ура вăйĕ ҫук пек, ĕҫлес те, пурăнас та килмест. Ҫак кунсене Михаља кунĕ-кунĕпе пĕр ĕҫлемесĕр иртеретђе.

— Ку ак турĕҫ мана, ĕнтĕ мана колхоса илес ҫук, тетђĕ хăй шĕнђе Михаља. Ҫак шухăш Михаљана пит хурлантарнă. Тепле ывăр йапала пуҫ ҫине пусса, асап парса тăнă пекђĕ. Халĕ пайӑн

Михађа йанканашенђен çамалпан утса тухрӗ. Кӗрхи, уйар уçӑ ир Михађана вӑй кӳртнӗ пекех туйӑнђе. Ав, колхос пахђинђе колхосникк-сем купӑста ка аççӗ, туртгараççӗ. Ес нумайха кунта Михађан ӗçлес килсе кайрӗ.

— Панапах колхоса ӗçлеме кайатап. Арӑмпа, ађа-пађампа пурте ӗçе тухасђӗ. ӗçлес килет' терӗ хӑй ӑшӗнђе Михађа. Çапла шухӑшласа килелле кайакан çын патт! пӑрӑнђӗ те, колхос правлени йеннелле утрӗ.

Михађа утат. Хӗрлӗ хевел Михађа пиђе çине ӳкес, ӗçлес килнӗ камӑла хӑпартат.

# СОВЕТ СОЙУСĔПЕ ЙЕВРОП

ПОЕМĂ КĂЛЕПИ

**И. ТУКТАШ.**

## 1. ИСТОРИ ЙУППИСЕМ

Кунсем...
    çулсем...
        ĕмĕрсем...

Кунçулсем
    куç умĕнҫе
        сĕмленсе
            выртаççĕ.

Истори хăйăрĕ çинҫе
    Хайар çулсем,
        çепĕç кĕвĕсем,
            ҫеҫен тĕрĕсем
    авала
    тĕрленсе йулаççĕ.

Çук!
    Истори странитсисем
        таса мар.
Етем йунĕпе вĕсем
    вараланнă.

Мĕнле халпа
    авала асăнар?
Мĕн сăлтавпа
        истори
            харамланнă?

Авалăх мар
    Пурнан кунçулăмăр та
        пирĕн
Чоххă айăпне
    каçараймарĕ.

Каçару çук!
    штык çине,
            планеттăмăр, тирĕн!
Йулашки хут
    штурăмлат сана
        пролеттари.

Курат пролеттари,
            пĕлет:
Тĕнҫере
    икĕ клас
        туртăшаççĕ.

Кунçул йĕрне
    пĕтĕм тĕнҫипелех
Çын йунĕпе
    ислетет
        пуршуаçи.

Пĕлет пролеттари,
    курат:
ĕмĕр ҫеҫекĕсем
    ун вăйĕпе сывлаççĕ.
Çавăнпала
    вĕсен сĕткенĕ—
        хура,
            етем
                йунĕпе
                    кўпсе
            вĕсем хуралаççĕ.

Рим ҫурисен
    ҫунне кăларнă
йунĕçевçĕ
    сăхă Неронран—
Париш комунарĕсен
    кăварлă,
        çапăçуллă

ђаплăхĕ таран
сăнђăр кăна
ђăтнă пролеттари.

Пайан,
мĕлйун клаткаттăр пек,
хăйуллăн,
кăпиттала хирĕç
ђышкă ђăмăртарĕ;
кĕрешĕве çĕкленђĕ вăл
мĕлйунăн.
Ăрусем мар рассăсене хирĕç
çĕкленђĕç—
клас кĕрешĕвĕ
пайан кăварланђĕ.
Кăпитталпа
пролеттари
çитсе перĕнђĕç—
ĕçхалăхĕ
револђутси хĕçпăшалĕпе
авăрланђĕ.
Тинĕçрен те тарăн,
оккеанран та анлă
револђутси хумĕ
çĕр ђăмарне хĕртет
кăвар пек...
Тĕнђе пролеттарийĕ
ку аттаккăна тăрса
пĕр тăванлăн
кăпитталăн
пыршине
кумса кăтартĕ.

Тĕнђене шĕкĕлђен
пуршуаçи хурђĕ
историрен
çухатсан çулйĕрне
вара тинех
ђураллăхри колонисем те
пурте
Тинех ђеђеклĕç
етемлĕх ĕмĕрне.

**Пролеттари калаt:**
«Пăлхавсенђе епĕр,
парикката çинђе
кăпиттала хирĕç
çĕклерĕмĕр ђышкă.
Шăпуна тыт
ес, çĕрĕк тĕнђе,
револђутси
çĕнтерĕ,—
и...
крышкă!
Тоуерăн
нўрĕ пашнинђе
мĕн ђул йун
пăнтăхса
кĕвĕлейнĕ—
Çавă йун
халђ вĕрет кашнинђе,
Çав вăй-хал
мула хирĕç
çĕкленђĕ».

## 2.ÇĔРШЫВ ЙУНПА ХĔРЕЛТЂĔ

Хирсем...
Йалсем...
Хуласем...

* * *

Ылттăн тырпул тинĕсĕ
Пархатар кўрĕшĕ.
Хире шупка-симĕсĕн
Хумсемпе ђўхетĕ.

Хапрăк савăт тĕтĕмĕ
Шурă тĕтĕреллĕ.
Пурнăç картне кĕтĕмĕр
Хурăçă ђĕреллĕн.

* * *

Аçта ђикки
ытамлайми уй-хирĕн,
аслă Сойусăмăр
йăранĕсем
ăçта?

Кусем
веçех—
ĕçхалăхĕн.
пирĕн,
Тăшман кунта
пусаймĕ
пĕр шыт та!

Ку çĕршыва
епĕр
йунпа хĕретнĕ.
Лађкам ислетнĕ
етем йунпе.
Хĕнхур хуранĕнђе
мĕскер вĕренĕ?
— Епр вĕренĕ,
мĕлйунĕпе!
Кĕрешӳре çĕнме
епĕр çуралнă.
Тăшман умне
пуçăмăра
тайар-и?
Кĕрешрĕмĕр.
Выççăн та,
сураплăн
Планеттăна
штурăмларĕ
пролеттари.
Кĕрешрĕмер.
Мула хайаррăн
тронĕ çинђен
тапса сиктертĕмĕр.
Тĕнђе, тĕнђе!
Мĕншĕн
шăлна хăйратăн?
Тĕнђе,
тĕнђе!
Ансат-и тертĕмĕр?
Ансатах мар çав.
Раççейă мулĕшĕн
етем какайĕ
сайа мар.
Пайтах,
пайтах йун
кирлĕ пулђĕ
ку мăшкăла
çуса йама.
Кĕрешрĕмĕр.
Выççăн та,
суранлăн
мул тĕнђине
сирпĕтĕпĕр
хайаррăн

Кĕрешӳре çĕнме
епĕр çуралнă.
Тăшман умне
пуçăмăра тайар-и?

### 3. ПОЉШЕВИКСЕН ПРОКРАМĔ.

Çак
аслă çĕр
кăкри çинђе
респуплĕк
Çĕнĕ вăрлăх акса
аталантарђĕ.

Ку ытама
мĕнле толлăр ђĕресĕ
хуплĕ,
Мĕнле фашшис елекĕ
пăђлантарĕ?

Нимле ылхав та,
нимĕнле елек те
ку ытама шăлса
сухатмĕ.

Полђшевиксен
пурнăç—тиалектĕк
пĕр тĕллевне,
пĕр ĕмĕтпе
ђупат мĕн.

Полђшевиксен
пурнăç прокрамĕ—
хăвăртлăхсен
шăлтăрмине
кустар ес!

Полђшевиксем
ђăрмавсенђен хăрамĕç.
вĕсем
нихçан
сăмсасене
усмарĕç.

### 4. ВĔÇЕН „ӲСĔМĔ".

Тĕнђе курман
хавхалану.
«Прокрес ĕмĕри»,
Лойт-Шорш каларăшĕ.

Миçе ђёлхе,
мён ђул ăру
çак сăмаха
хуçкалвмарĕ ши?

Прокрес тёнђи
Иевроппăна
ылттăн çăрапала
тăлларĕ.

Анђах ăна
ку пропкаран[1]
мĕнле толлăр
туртса кăларĕ?

Мĕнле хирурк
йе ренекат
мула
ку криçĕсран
хăтарĕ.

Ретсеп пĕррех:
**Тĕпрен аркат**
**кăпиттала вс,**
**Про лет-тари!**

Панкротланаççĕ
пĕр вĕçрен
тем ђутлĕ Форт
йе Рокфеллĕр.

**Кăпитталисăм—**
**криçĕсра.**
Сӳнђим пайан.
Йевроп.
хĕвелĕр?

## 5. ЙЕВРОПРАН ИРТЕТПĔР.

Çĕршыв ыйтатĕ
хурçă-тимĕр.
Мул куçĕнђен
пăхар-и хађ?

Пайан
моноккăле хывса
пăхайсн тинкĕр—
йепле
реккорт çапат
«Електростађ»!

Шăла йĕрсе,
Пите пĕлмесĕр,
Йалан пире
Питлеттĕр есĕр:

«Йевроп ăстанлăхĕ
сиртен инçе...
Хуса çитсен те
пуçа вăрăнĕ...»

А хађ?
Совет
подшипнĕксем çинђе
пĕтĕм Йевроп
камит пек
çавăрăнĕ!

Миçе пин çул
танккарăмăр
çуран?
Мĕн ђухлĕ мил
виçейнĕ пусăм?

А хађ—
«Форт рыссакне»
кӳлес
çапăçуран
Çĕнтерӳпе çĕкленђĕ
Сойусăм.

Каламăпăр:
—«Аға, йшшакамçăм,
йуртах...»

Калар:
—«Совет автомопилĕ
ђукун çамка
ђупой Форта
хуса çитсе
таптама пĕлĕ».

Авал—
Раççей кăкри çинђе
пухра майан та
ват сухађђĕ

Пайан—
Совет витисенђен
хурçă утсем
ђупса тухаççĕ.

1) Пропкăран—криçĕсран.

# 6. ÇĔНТЕРЎСЕН ÇЕКРЕҪĔ.

„Пирĕн прокрамми пурнăçа кĕме пултарин вăл—çынсем, вăл—епĕр сирĕнпе пĕрле, пирĕн ĕç ирĕклĕхĕ, епĕр çĕнелле ĕçлеме хатĕр тăни, епĕр плана пурнăçа кĕртме хăйуллăн тытăнни".
СТАЛИН.

Егем тăват
историйе,
а етеме
истори тăватĕ.
Историре ес пур-и,
йе
пайан
вилсе кайăн,
анҫах
пĕр мар иккен
тĕнҫе хăваҫĕ.
Умра историн
икĕ çул:
Пĕри—
ҫураллăхпа
куççулĕ.
Теприйĕ—
плянлă çапăçу.
Ку çул—
сотсиалисăм çулĕ.
Асра тытатпăр
пĕр тĕллев:
Комунă
çурҫĕ
купалантăр!
Меслет шыра та
çивĕҫлен,
Мĕшĕлгетсе,
упалла ан пыр.
Мĕлйун ҫĕреллĕн
пĕр çĕре,
пер çемйене
пĕрлешнĕ класăн
тăван çĕршывĕ
йешĕрет
Кив тĕнҫене
тĕпрен
кăкласшăн.

Ҫăрмавсемпе йăвăрлăха
сирсе пыма
вĕреннĕ епĕр.
Тĕнҫе курман хăвăртлăха
польшевикла ĕçе
кўлетпĕр.
Éнер
планри тĕллевлĕхсем
Пайан
ҫăн-ҫăн ĕçе кĕреççĕ.
Ўсет
Сойус
ўсейнĕçем,
анҫах,
Ăçта-ха ун çекреҫе?
Çекреҫĕ ун
çиçтемă тейĕпĕр.
Кекемонра
ман аслă класăм.
Çекреҫĕ ун—
ĕçхалăхĕ
ĕпĕр,
влаç тытакан
мĕлйунлă массă.
Авал—
рапоҫҫи куççулне
харам пырсем
сăхса йухтарнă.
Пайан—
тытат вăл
çĕр руҫне,
пайан вăл—
ортĕнлĕ утарнĕк.
Авал
асап та
хĕн-хурта
çăрăлайса
йунланнă массă

Сотсиалисăмлă çурта
      ăмăртмаллах хыват,
            хавассăн.
Авал
      хĕрсурт та
            киремет
Тыткăнĕнђен тухман
            ђăвашшăн пайан
      електрăвăй
            хатĕрленет,
респуплĕкĕн куçне
      уçасшăн.

* *

Пайан никам пуç усмăпăр,
Алла усасшăн мар тинех.

Самар, 1932 ç.
май—ийуњ

Хапха уçат Сойусăмăр
Сотсиалисăм картине.
Утарнĕкле кунçулăмăр.
Вунçиђђĕре—ђĕре.
Амерĕкрен те йулмăпăр
Пулас хĕрў ĕçре.

Йевроппăран та иртĕпăр
Çитес пилĕк çулта.
Хулийĕ, йалĕ, хирте—пĕр
Интустрилле йулташ.

Рекламĕнт—планлă ĕç
Унпах ан ђарăнтăр ђĕрў.
Мĕлйунлă, тимлĕ армире
      малаллах—
            çĕнтерў!

# И Ш Т У Л

РОМАН ПРОЛОКĔ.

**И. САЛАМПЕК.**

## ИРХИНЕ ИРĔХ.

Пал варринҫе, икĕ урам йуплешсе пĕрлешнĕ ҫĕрте, авалтанпах хуралса сăпсăрланнă пĕҫĕк хурал пӳрҫĕ малалла тирĕнсе ларатъ. Пит мĕскĕнĕн курăнат вăл. Тăррипе витнĕ улăмĕ тахҫанах ҫĕрсе шăтнă, вырăнĕ-вырăнĕпе măйан тĕммисем ӳссе ларнă, траппил каштисем хăрăк лаша шăммисем пек курăнаççĕ, кантăк икĕ куçĕ вырăнне хăма таткисем ҫиксе лартнă.

Атăл йенҫи вăрман хысĕнҫен хĕвел йерипен хăпарма пуҫланă вахăтра, хурал пӳртĕнҫен пĕр вунникĕ ҫулхи сар аҫа пусма ҫине тухса ларҫĕ. Вăл малтанах тутлăн апасласа, ҫӳҫеннĕ пек туса илҫĕ, унтан йăмрасем хушшипе курăнма пуҫланă хĕвел ҫине пăхса илҫĕ те, хăй илсе тухнă ҫапăрккине сӳспе вĕҫлеме тытăнҫĕ.

Кăшт тăрсан хурал пӳрҫĕн тури кĕтессинҫен пуш витресем ҫĕкленĕ ҫамрăк хĕр утса тухрĕ. Ҫапăрккапа тăрмашакан аҫа тĕлне ситсен, вăл самантлăх ҫаранса тăрса, тип-тикĕс шурă шăлĕсене кăтартса, ҫемҫен кулса илҫĕ:

— Пит ир тăратăнҫке есĕ, Иштул...

Аҫа хăйĕн ĕҫне пăрахса пуҫне ҫĕклерĕ.

— Каймă вăхăт ĕнтĕ,—терĕ вăл ман ҫынла.—Ҫапăрккана вĕҫлес терĕмха. Хушăран пăрусене тиверткелеме кирлĕҫке, тепĕр ҫух итлемеççĕ, хăйаматсем...

Хĕр урăх нимех те каламарĕ, пуш витрисене шакăртаттарса, пралук йенелле утрĕ. Аҫа та шарламарĕ, малтанхи пекех ҫапăрккипе тăрмашма пуҫларĕ. Ҫемҫе сӳс—лайăх пĕтĕрĕнет, Иштулăн пĕҫĕк те ҫинҫе пӳрнисем ăна пит ăста майлаштарса йавса пыраççĕ...

Тăрашсах ĕҫлет пĕҫĕк Иштул, пăру кĕтӳçĕ, хăвăрт хуҫкаланаççĕ пӳрнисем, ĕҫленĕ май вăл темле йурă кĕввине шăхăркалат, пуçĕпҫе шухăшсем ҫуралаççĕ.

— Пайан, ыран... Ҫитурай патĕнҫе пурĕ икĕ кун апатланмалла. Мĕн ҫитереççĕши ĕнте? Висен, пуйансен, тем тĕрлĕ тутлă апат та пур пуҫ...

Нумайах та пулмарĕ—Иштулан ĕҫĕ пĕтрĕ, вăл ҫапăрккине пуҫтарса ҫĕклерĕ те, урам тăрăх аналалла кайса, икĕ хутлă капăр ҫуртăн вырăсла хапхаллă алăкĕнҫеч килкартинелле кĕрсе карĕ.

— Хам-хам-хам,—вĕрсе илҫĕ пуйан Ҫитурайăн сăнҫăрта тăракан ҫăмламас хура йытти.

— Хăр-р... Хам-хам-хам.

Йытăран пăрăнкаласа Иштул пӳрте, алăк патне кĕрсе тăҫĕ.

Пӳлĕмре никам та курăнмарĕ, кăшт тăрсан тин таçтан шалтан шăвăлтатса калаçнă сасăсем илтĕнҫĕç, унтан Иштул умнэ çап-çут нушмакпа симĕç ҫăтха тăхăннă, алшăлли çĕкленĕ хура куçлă илемлĕ хĕрата тухса тăҫĕ.

— Кам есĕ, мĕн кирлĕ сана?

Хан шап-шур, майралла çĕлетнĕ кĕпе тахăпнă, сенкер хăйупа çыхнă икĕ çивĕт тунисем. ик хулпуççи çийĕпе çĕленсем пек усăнса тăраççĕ.

Иштул тăрук нимĕнле мар пулса карĕ, калас тепĕ сăмаххисем пырне ларҫĕç, вăл куçĕсене çĕрелле усрĕ.

— Мана... епĕ апат...

Хĕрата кăна илтсен, аллинҫи алшăллине хулпуççи çинелле ывăтса куҫĕ те, тутисене йĕрĕнҫĕклĕ пăрса илсе, аллине сулҫĕ.

— Гур патăр, тур патăр... Тухса кай! Çӳреççĕ анҫăксем!

— Çук, епĕ... кĕтӳç,—терĕ хăраса ӳкнĕ Иштул, куçĕсене мăҫлаттарса,—пару кĕтӳççи, ҫеретпе... сирĕн пата апатланма килтĕм..

Хуçа хĕрĕ калаçса тамарĕ. Варт, калла çаврăнҫĕ те, нушмаккисене ҫĕрик аттарса. шалти пӳлĕмелле кĕрсе çухалҫĕ.

* * *

— Шарт,—тутарҫĕ Иштул хăйĕн вăрăм кĕтӳ ҫăпăрккипе. Йăвали пăрусем, халхисене выҫҫатса, уйалла ҫупса тухрĕç те, кĕççе пек симĕс курăка çатăртаттарма тытăнҫĕç.

Йал хыçĕнҫи симĕс курак пĕтĕмпех ирхи сывлăмпа витĕннĕ. Пăрусем утса тухнă хыççăн курăк çинҫе пысăк мар çаврашкасем пулса йуласçĕ.

Иштул уй карти çумне тайапса. пĕр вăхăт пăрусем мĕнле сиппне пăхса тăҫĕ, унтан тавралла пахрĕ. Унăн умĕнҫе—илемлĕ хир, сипсимĕс ыраш пусси вĕçе хĕррисĕр, аслă шыв йĕвер саралса выртат. Атăл йенҫи вăрман тăрне хăпарнă хĕвел ҫайаркисем йăвашшăн хумхапасан ыраш пусси çинҫе выҫаççĕ.

Илемлĕ т нҫе! Нумай хутҫен курнă кун пек сăплăхсене Иштул, касама та çук йуратат вĕсене, çавăн пек ҫух пурин çинҫен те манса кайат, тĕнҫере хайĕнпе парусемсĕр нуçпе никам та çук пек туйăнат ăна...

Çĕр каçа выçнă пăрусем васкасах çийеççĕ. Вĕсем хĕвел пĕçертме нуçлинҫен хырама тарантарасшăн, сĕткенлĕ ҫурăка çыртаççĕ. малалла лайăхрах курак çинелле туртăпаççĕ.

Хĕвел васкамаҭ. Нит вăраххан йаранат тӳпере, нитĕ ирĕккĕн пурăнаҭ вăл, нит хуллен капа çӳлелле хăпараҭ.

Кĕтӳ çырма т.рăх сапаланса, ката патнелле пыраҭ. Темиçе пăру ыттисенҫен ирĕп а сăрталла хăпарса кайма пуçларĕç. Вĕсене пĕр çĕрелле хăва ама пына Иштул пĕр самантлăха ҫарăнса тăҫĕ те, типшĕм аллине çамкп патне тытса аналалла пăхрĕ. Вăрманкас йалĕ ҫаппинҫен хĕсĕнсе тухса, хĕвеланаç йенелле çул пĕтĕрĕнсе выртаг.

— Ку пирĕн йала кайакан çул,—шухăшларĕ Иштул.—Авă, çак севе: сарт урла таçсан, пумай та каймалла мар, йал куранакан пулаҫ...

Çул çине пăхса тăни тĕрлĕрен, ҫерене ыраттаракан шухăшсем кĕртет.

— Килтисем йеплеши. Анне...

Амăшне аса илсеп, Иштул нимле мар пулат. Пит лайах пелет вăл амăшĕ вĕсемпе мĕнле асап курса пурăннине.

... Ҫăпăрккине йашт ҫăсса хурса, ура хуçса ларат, тип утпăхпе пухса ҫĕлĕм ҫĕркет те кĕссерен авă, вут ҫулĕ кăларе çĕçĕпе ҫула ҫанк-ҫанк! тутарма пуçлат. Пеҫĕк авă татки çутăлса, тĕтĕмпе йасăрланма пуçлат.

Уйра сывлăш пит усă. Таса сывлăш шухăша та тасатат.

— Кунтап инçе те мар, авă çав çулпа тӳрех кайсан, лаппа ансанах—пирĕн йал. Унта епĕ çуралнă таван кил-çурт, манан анне. Пĕҫĕк шăлăм пур... Атте те пулнă теççĕ манăн. Анҫах халĕ вăл çук, инçетре, кунтан курăнмаст...

Аннĕ çинҫен шутласанах, Иштул, хăйĕн амăшне калаиине аса илет.

— Пĕтерҫĕ пире атам аçу, пĕтерҫĕ... Йулашки ĕнене, 2 сурăха сутрĕ, акса хăварнă ик ыраш анине тата анкартине 3 çуллăха тара парса. Çĕпĕре тухса карĕ. Унтанпа 8 çул ĕнтĕ ывăлам, 8 çул...

Хаҫ каланă пекех астăват Иштул çак сăмахсене. Пайанхи пекех хĕвел те нахатҫе ун ҫухне, пирвайхи хут, Иштул кетĕве кĕрĕшнĕ çурхи ăшă кун!

— Аннен кăгак кусĕсенҫен шăрçа пек куççулсем йухаççĕ.

...Анне хурланат, аннене йăвар, тӳсме çук йавар пулҫĕ вал ир...

Ыттăн хӳрелĕ автан санур çине улăхса...

— Ки-ки-ри-к! тесе автрĕ хĕвел тухаçнелле пахса.

— Автан мĕн тег, Иштул?

— Ат-те-çу-ук тет!..

...Йăваш парусем Иштул шухăшне пĕртте пĕлмеççĕ, вĕсемпен пулсан çийес те, выҫас, выҫас та çийес капа. Икĕ хушка пуçла пăру калҫа çинелле кĕнине кура, Иштул весене хăвалама ҫупат.

— Çурĕр курăк çинҫе. Нивушлĕ сире курăк çитмест?

Кантăрлаҫҫен хĕвел хур кайăк çине утланса веçтерет, кантăрла иртсен мулкаҫă çине ларса ҫиктерет. Кантăрла ҫас çитет, кас ҫас пулмаст.

Хĕвел ҫылай çӳле хăпарҫе. Ака тапара антарăс вăхăт та ҫасах çитĕ. Уйра пеҫҫен çӳреме питĕ киҫем. Пер вăхатлаха, пăрусем выртнă ҫухпе, Иштул татах калла-малла уткалаҫ, нимĕн тума антăрапне утăмне шутлаҫ. Пĕрре, иккĕ... пилĕк, вуннă, çирĕм... Аллă патне шутласа çитерне çĕре, шур хăлхалă йака, хамар пăру патне çитсе тараҫ те, «алă» тесе хытараххăн каласа хурат. Кавлесе, капса выртакан йăваш пăру, кĕтӳç çине пăхса илет те, тем пĕлен пекех пулса, лаштварамаи сывласа йăраҫ. Халхисене пĕрре тăратса. тепре усса, калех пуçне ҫиксе кавлеме тытăнаг.

— Тпруççа, тпруççа,—аҫашласа шалат парува Иштул. Пăру каллех, пысăк куçĕсемпе хуçи çине пăхса илет, хăй кавлет.пĕрмаях, ҫарапа пĕлмесĕр кавлет.

Вăрăм ҫăпăрккава ҫĕре пăрахса, Иштул хăй мĕлкине висме пуҫлаҫ. Мĕлке пĕр утăм йулсан кăнтăрла ҫитет, кăнтăрла ҫитсен—тапăр, тапăрта—апат.

— Ҫук. пĕр утăм ытларахха, вăхăт ҫитеймен, ир антарсан стришна варҫаҫ, стришна—Петĕр Макарҫ, ун патĕнҫе пайан апат ҫимелле.

Кĕтӳ тавра ҫаврăнса килес тесе, Иштул ҫăпăрккине ҫăсса сырма хĕррипе малалла уттарҫĕ.

---

## 2. ХУРАЛ ПӲРҪЕ УМĔНҪЕ.

Хыпаланаҫ, васкаҫ Иштул. Кайалла пĕрре ҫаврăнса пăхмасăрах. хаварт утаҫ вăл ҫул тăрăх хăйсен йалнелле.

Уйра шăп. Ҫӳлĕрех вырăнсене йулашки хут ҫутатса илсе, хĕвел тасти инҫетри йалсем хыҫне анса пытанҫĕ.

Тĕттĕмленнĕ ҫемĕн тĕттĕмленет. Ыраш пуссиҫе, ҫара ҫатма пек тап-такăр сукмак ҫăсăлса выртаҫ. Те васканипе, те тата каҫ пулса килнипе, такăр сукмак та Иштулшăн пулсан тумхахлăн туйăнаҫ. Тăкки-такки такăнкаласа илет Иштул, унтан каллах малалла васкаҫ. Утпă ҫĕрте утаҫ, ҫупнă ҫĕрте ҫупса та илет. Пайан, кĕтӳ кĕртнĕ хыҫҫăн, киле кайса пăхма шутланă вăл. Килте пулманни нумай пулаҫ, сывăхра пулин те, ывăннă хыҫҫăн урасем нтлесшĕн мар. Анҫах пайан Иштул ывăнни-мĕнĕ ҫине пăхмасăрах, киле тухса утрĕ.

Акă, Шăнăр Таҫукĕн виҫĕ ҫунатлă арманĕ те курăнма пуҫларĕ.

— Тепĕр кăшт утсанах, йал та инҫе мар йулаҫ. Епĕ киле килмении виҫĕ ерне те ҫитрĕ пулас...

Айпеҫ йалĕ пĕрик анкарти пĕвĕ тăришĕ ҫеҫ йулаҫ. Йал патне сывхарнă ҫемĕн Иштулăн ҫĕри хытăрах тапма пуҫларĕ.

Пала кĕриҫҫен, уй хапхи сывăхĕнҫех, ултă кетеслĕ, шашшур сарпа сăрланă пысăк ҫӳреҫеллĕ аслă ҫурт лараҫ. Ҫав ҫурт патне пилĕк-улт утăм йулассн ҫитсен, Иштул ун ҫумĕнҫе пĕҫĕк вут ҫути палтăртатса илнине курах карĕ. Икĕ сын ҫĕлĕм ҫĕртме тăнă мĕн. Иштул вĕсем патне ҫитсен:

— Аҫта васкатăн, Иштул? Пурнĕрех шыва кĕртме ҫитеймерĕн вет.—терĕ пĕри... Тепри хуллен, ҫих-ҫихлатса кулса илҫĕ.

Ку мĕне пĕлтернине нимĕн те ăнланмасăрах, Иштул вĕсенҫен иртсе карĕ. Ҫамка ҫине тухнă тарпе кĕпе ҫаннипе шăлса илҫĕ те, ҫупна пекех утрĕ.

* * *

Уй хапхи ҫумĕнҫи хурал пӳрҫе умĕнҫе кантарларан варах йавине сатна кăтка пекех халăх керлет. Сынсем вĕҫĕ-хĕррисĕр килеҫҫĕ те кайаҫҫĕ. Каҫ пулна пулин те, халĕ ватти-ветти, арҫынĕ хĕрарăмĕ те ҫавăнта пухăнна. Мен пулнăши, мĕн тума халăх нумай пухăнна кунта.—шутласа илҫе Иштул хурал пӳрҫе патне сывхарсанах. Мал-

чавах нимĕн те ăнланса илме пулмарĕ, пан-пан-пан туса халăх палкани анçах хăлхасене туласа ларçĕ.

Хурал лупасĕ умĕнçе уйрăмăнах, халах кĕперленнĕ. Мĕн пулнине пĕлесшĕн, Иштул та çынсем хушшине хĕсенкелесе, пушар урапи çине улăхса тăçĕ.

— Çырлахтăр турă!..

Иштул куçĕ умне сăмахпа каласа пама май килмен тĕслĕх куранса карĕ...

Хурал пӳрçĕ умĕнçе, ик урнпçен çаклатса пăйавпа çыхнă. кăн кăвак кăвакарса кайнă пĕçĕкçеç аçа кутан çакăпса тăрат. Аçан тути-çăварĕсем кĕл тăпра йеверлĕ хуралса кăвакарнă. Тути çумĕнçе çăварĕнçен йухса тухнă шур кăпăк купаланнă. Çăварне карнă, куçесене хупнă, мăйĕ тĕлĕнçе çип çĕлеп пек хура йер курăнса тăрат.

Нимĕн пĕлми пулса, йупа пек хытса каре Иштул...

— Ей, Иштул, мĕн тĕлĕнсе пăхан, палларăна мĕн хаван шăлпуна?—кăшкăрса илçĕ хулăм сухаллă тĕреклĕ хура çын. Çак сăмахсене илтсен çывăхра тăракансем ахăлтатсах кулса илçĕç. Иштул нимĕнне ăнланаймасăр, пĕтĕмпех çухалса карĕ, унтан шывлапса, çарăлса кайнă куçĕсемпе йĕри таврa пăхса çаврăнçĕ те:

— А-а-а!—тесе, вăрăмăн кăшкăрса йаçĕ. Никам пер сăмах каламасарах, урапа çинçен сиксе анса, халăх хушшинçен хĕсĕнсе тухрĕ те, хыçалтан такамсем хăвалань пекех, килелле çупрĕ. Хурал пӳрçĕ патĕнçи халах вăл курăнми пулиççенех хыçран пăхса нулçĕç.

* * *

Кайри касра йытпырпи курак пек çинçе саслă хут купас çухартса йаçĕ.

Иштул хашкаса килне çитре.

Хире хирĕç килĕн пахçинçе ларакан наштака авăс çулçисем витер кӳпшеме уйăх пăхат. Уйах çути Иштулсен улăм витнĕ пӳрçен кантăкĕ çине ӳксе выçат. Хайсен килĕ Иштула кичемĕн, салхуллăн туйăнат.

Çанталăк ашă, анçах уйах пал çине сивĕн пахат. Иштулан çорнчçе те сивĕ пăр.

Хирĕç тухса илекен никам та пулмарĕ пайан. Иштул пӳрте кĕрсе карĕ.

...Сĕтел куркринçе ик аллипе питне хупласа Иштул амăше пер шарламасăр ларат. Путмар çинçе 8 çулхи шăлнĕ Кĕçтен ыйăха пелетет. Шур кĕпи уçăлса кайнă, хăрах аллине вăл хырамĕ çине хуна. тепĕр аллине пуç айне хывна кĕлентĕр пек кукарăлса выртнă:

— Анне, мĕн пĕртте çĕнместен, епĕ килтĕмçке,—терĕ Иштул. Каласа та петерейменрĕ—амăшĕ пуçне йалт çĕклесе пăхрĕ те, пер çĕнмесĕрех нĕшĕклетсе макăрма тытăнçе. Иштул тепĕр хут тем сăмах хушăс тесе çăвар уçма тытăнсанах, пӳрт алакĕ йарах* уçăлса карĕ,—пӳрте йалт касак Иван Марккĭç улпут пек сарăлса кĕрсе тăçе.

— Ну-с, лав паҫҫ, кайас полат натӑ—терӗ вӑл.

— Камӑн?

— Ӑҫта каймалла?—йарса илҫӗ Иштул касакӑн мунтирӗ ҫаппишҫен.

Касак Иштул ҫине вӑкӑр пек ҫалӑшса пӑхса илҫӗ те, аллине карт туртса илсе, тепӗр аллипе сулӑнтарса йаҫӗ. Иштул алӑк йанахки ҫумне ҫӑмха пек пырса ҫапӑнҫӗ, анҫах пӗр сас-ҫӗвӗ те калармарӗ.

— Хе-хе-хе!.. шуйтан пек вӑрӑмӑн тӑсса кулса илҫӗ Иван Марккаҫ касак.

— Ийке,—терӗ йури ҫинҫе илемсӗр сасӑпа—ҫуҫҫу йарӑнма йоратрӑн полсан, ҫовашкине тортма та ан ӳркен, живо!—тесе пӗтерҫӗ вал хаҫаппе.

Иштулӑн амӑшӗ ура ҫине тӑҫӗ те:—ах тур, вилес пулаҫҫӗ перех хут,—тесе тагах йапашса ӳлесе йаҫӗ... Унтан Иштула ыталаса илсе, куҫҫул витӗр калама тытӑнҫӗ:

— Аҫам, аҫам. Аҫу сукки хупларӗ пире, ҫавах пӗтерҫӗ... Вӑл парахса каймап, йе укҫа йарса тапӑ пулсан, ҫак намӑса курматтамӑр епер... Хупларӗ ҫитмен пурнаҫ, ҫавах хупларӗ пире-е...

— Сана аҫа ҫуратнӑшан мар, вӗлернӗшӗн айӑплаҫҫӗ. Аҫа, ут-ут!—терӗ касак.

Хурал пӳрҫе умӗнҫе камӑн аҫи ҫакӑнса таппе Иштул халӗ тин тавҫӑрса илҫӗ, тем тума хатӗрленнӗ пек йӗри тавра ҫавранса пахрӗ. Унап ҫупӗ кутне китҫӗ, тем калама таҫӗ... Ҫав вӑхатра пӳрт алӑке шалт туса хупанни илтӗнҫӗ.

Иван Марккӑҫ касак Иштулан амашне хысна шурӑ ҫуртӗнҫе хысна ҫӑкрине ҫисе пурӑҫма тытса тухса карӗ.

... Иштул ҫӗрӗпе ҫывӑраймарӗ.

Йархапаха йарса ларакан кӗтесри Микул турӑ умеҫе нумайҫҫен ҫӗркуҫҫи ҫинҫе таҫе. Унтан пӑшт-пашт сывласа лӑпкӑн ҫывӑракан шӑлне валҫи сӗтел ҫине касса хуҫӗ те, Вӑрманкас йалне тухса утре. хамаҫ пек ҫутӑ паларсан ҫенӗкрен йулашки ҫӑкӑр тӗппе илсе кертсе шӑлнӗ валҫи сӗтел ҫине касса хуҫӗ те, Вӑрманкас йалне тухса утре.

## 3. ТАП-ТАР КАНТАРЛА.

Ҫитурайан пӳрҫе икӗ хутлӑ. Ҫӳреҫе укнсене йавӑнса ӳсекен парҫа хӑмӑлӗсем пек кукӑртса хуна. Ҫӳреҫе йанаххисене сапсара сарпа сарлапӑ. Пӳрт ҫине те, йори таврипе ҫавӑрса лартнӑ ытти ҫурт тавраш не пурпе те тимӗрпе витнӗ, симӗс сӑрпа сӑрлапӑ. Пиг катмарӑн курӑнаҫҫӗ Ҫитурайан ҫурҫӗсем...

... Ҫитурай сӗтел ҫине тайӑнса ҫӳреҫерен пӑхса ларат. Ҫӳреҫене хирӗҫех—решоткӑ карта тытнӑ пысӑк сат пахҫи. Пахҫара улмуҫҫи, ҫимва, хурлӑхан, хӑмла ҫырли, тем те пур. Пыл хурҫӗ вӗллисем, сапсарӑ та шупка кӑвак курӑнса ларассӗ.

...Сат пахҫи урлӑ, рашҫа вармане кӑвакарать. Рашҫа тӗлӗпе—Ҫӗрпӳ ҫулӗ иртет. Вӑл ҫула аса илсен, тӳрех Ҫӗрпӳ йармӑркки аса килет.

Вунӑ ҫул ытла иртрӗ ӗнтӗ унтанпа. Ку 1906-мӗш ҫулта пулнӑ.

...Уйӑрӑлса тухнӑранах вара Ситурай йепле те пулин лайӑх сыинсен шутне кӗрестӗн вутра ҫунна пекех хыпаланнӑ. Ҫӗр те тара илнӗ, калҫа тымарланисан та илнӗ, май килнӗ таран сыина ларса пураннӑ.

Кашни ҫулах хӑмла пухса, ӑна хусана, Питӗре сутса тана. Хӑмла татнӑшӑн ерипе ӗҫлесен те пилӗк пусран ытла паман. Виҫӗ патавкка кивҫен тыра парсан, йаланах уншӑн пиллӗк илнӗ.

Саттак маткисем ваҫҫи тухнӑ вӑрмана улталаса илсе, Айпеҫре хупах ҫуртне лартса панӑ. Ҫитурайӑн теп сакайӗнҫе ларакан ҫӳлмекре кашни уйӑхранах кӗтериккасем хутшӑнса пынӑ.

Пайанхи пекех аставатӑ Ҫитурай:—вӑл ҫулхине йур нумайҫҫен выртрӗ. Нумай ҫӗрте ыраш калҫи лаптӑк лаптӑкӗпе ҫӗрсе, шурса ларҫӗ. Вӑл ҫулхине Ҫитурай пурак-ҫӗреспе сут тума пуҫланӑ. Ҫӗрпӳ йармӑрккипе 10 лавпа ҫӗрес-пурак ӑсатнӑ та, хӑй пӗҫӗк ывӑлӗпе иккӗшех лашапа ҫӗр хута Ҫӗрпӳве вӗҫтернӗ.

Йӗкел катишҫен тухсан, ҫӗресрен тӑкнӑ пек шултара ҫӑмӑр кӗреleттернӗ. Ҫитурайӑн йӗп ҫикме те тинӗ выран йулман, пӗҫӗк ывӑлӗ Саҥкка, сиксе ҫетрекен пулнӑ, нимӗн тума ҫуккипе, ҫул ҫинҫе ларакан Ырашпулӑх йалӗнҫе пӗр киле ҫӗр выртма кӗчелле пулнӑ. Хваттерте пер сехете йахӑп сывӑрсан, Ҫитурай тула тухнӑ. Ак тамаша. Лупас айӗнҫе икӗ ҫын мӗлки палӑрнӑ. Вӗсем ырӑ тума нымапине ҫухласа, Ҫитурай вӑрттӑн, ҫӗрне вӗҫҫӗн кӑна утса, аслӑк йупи хӳттипе ырса пытаннӑ... Йут ҫын пӑшалтатса йумахлапи илтӗннӗ...

— Пулҫӗи?

— Пулнӑпа пӗрех. Партак тапрана такӑрласан пулҫе те вара. Нумай тамалла мар, паман тата тепер ӗҫ тумалла...

— Ата епини, лашине ҫавӑр...

Ҫитурай хӑйне хай анланайма ар, темиҫе самант пӗр сывламаар тӑнӑ. Мӗн ку, тӗлӗки, йе ҫӗнахи? Мӗн пытараҫҫӗ ку палламан сынсем?

Вырӑсла хапха уҫалнӑ та, ик ҫын трантас ҫине ларса ҫил пек тухса сирпӗннӗ, Ҫитурай тарантас хыҫне ҫеҫ курса нулма ӗлкӗрне.

...Кайран мӗн пулни ҫинҫен Ҫитурай алеене хуҫкаласа, хӗнертесе ҫеҫ аса илет. Палламан сынсем лупас айӗнҫе пер саран кушелкке укҫа пытарнӑ пулнӑ...

Ҫак йармӑккӑ хыҫҫӑн вара пушшех те пуйса кайнӑ Ситурай. Ана вара йалта Петӗр Макарҫ тесе ҫеҫ ҫеимо пуҫланӑ. Енӗи шывӗ ҫинҫе икӗ ҫуллӑ шыв арманӗ ларттнӑ вал, кӗрпе арманӗ хута йана.

...Ҫитурай ҫаксене аса илсе тӗлернӗ пек пулса ларнӑ ҫӗре Лена йатлӑ пӗҫӗк хӗрӗ ҫупса кӗҫӗ те:

— Атте, есӗ мӗн ҫак пӗҫҫенех ларатан,—тесе, ашшӗ майӗнҫен ырса ҫаканҫӗ. Пушмак кӗли ҫинҫе хӑрах ура ҫине тӑрса пор-р ҫаврӑнса тула тухса ҫухалҫӗ.

* * *

Тāп-тāр кантāрла. Хĕвел ылттāн пек çап-çутā пĕрҫĕсене тĕнҫе çине пĕр шелремесĕр салатать. Инçетри йапаласем āшāпа вĕлт-вĕлт сикнĕн туйāнаççĕ. Тĕнҫе хайĕн тĕсне пāхса савāнпā пек туйāнать.

Çитурай саҫĕ вāрман пек кашласа ларать. Кам шутласа тухнāши вāл сатри йывāççен хисепне? Кам вāйĕпе, кам хура тарĕпе шāварса шӳтернĕши ĕретĕн-ĕретĕн, вĕçĕ-хĕррисĕр йышлāн ларакан улма йāвāççисене?

Мул—акā мĕн çуратнā çак илемлĕхе. Мул—акā кам хуçа пайан кун тĕнҫере!

— Укçа ҫула кастарать, тĕнҫене кāшлать, етеме те паваг,—тесе ахалех каламан пулĕ кāшт хĕрĕнсен Çитурай.

Çамрāк, лāстāркка улмуççисем айĕнҫе хурлāхан, хāмла çырли тĕммисем шāп шāпланса, тĕнҫе илемĕ çине пāхса савāнаççĕ. Кас-кас ашā çил улмуççи шулçисене сĕртĕнсе, аҫашласа кай ап, вĕсем çак илемлĕхе ытарайми пулса аҫашлаççĕ. Йе пĕр кас çāмāр килсе шӳтерсе иртсе кайсан, симĕс çулçāсене сарса, ĕмеççĕ вĕсем çӳлтен çāвакан кĕмĕл пек тап-таса шыв пĕрҫисене.

Пысāкран та пысāк, илемлĕ Çитурайāн саҫĕ! Сат варринҫе шурāпа сāрлана шĕвĕр тāрāллā пеççеткā хĕвел çуттипе ҫӳхенет. Унтан Атāл хайарĕпе сапса тухнā тāватā утма çул тāват йенелле каркаланса выртаççĕ.

Акā, пĕр çулĕпе, пеççетка йенелле шаппур майралла кĕпе тāхāнна хĕр утат... Пĕр аллинҫе кенеке, тепĕр аллипе пилĕкĕнҫен тытнā, самса витĕр вырāсла йура ĕнерлесе пырат. Пеççеткā тĕлне çитсен пĕр самантлāха хурāн çинҫе ларакан кайāксен илемлĕ йурриие итлесе ҫарāнса тāҫĕ. Вāл Çитурайāн хĕрĕ Ленā.

Йалта шāп. Вāрманкас йалĕ кāнтāрлахи йывар ыйахпа çывāрат. Кам пĕлетши йалта, хāçан вāранĕ ыйāхран ватā Вāрманкас йалĕ?

Ленā пеççеткā çумĕнҫи симĕс сāрпа сāрланā сак çине пырса ларҫĕ. Кĕнекине уçрĕ те, сасāпах вулама пуçларĕ:

„... только ресницы обращенного к нему глаза чуть-чуть дрогнули—только еще ниже наклонила она свое исхудалое лицо—и пальцы сжатых рук, перевитые чотками, еще крепче прижались друг к другу. Что подумали, что почувствовали оба? Кто узнает? Кто скажет? Есть такие мгновения в жизни, такие чувства... На них можно только указать и пройти мимо".

— Ах, Туркенĕв! Йепле илемлĕ çырать вāл!..

Ленā кĕнекине шалт хупса, ик алла сулкаласа сат тāрāх паскамасар, ман кāмāллāн утса карĕ те, хурлāхан йāвāççисем хушшипе, курак çине ӳпне ҫāсāлса выртрĕ.

Ик аллипе ик йавахран тытнā. ҫавсаланнā, урисене тапкаласа выртат. Ленā тĕлĕрет. Çĕрпӳри пурнāç аса килет āна.—Кимнаçи... класра унпа йунашар ларакан йулташĕ—Литā. Уҫитлĕсен сāнĕсене перерĕн, пĕрерĕн суса тухат вāл... Акā вĕсем парттā хушшинҫе лараççĕ. Класа тиректāр пырса кĕрет...

— Ах!—Ленā сасартāк кāшкāрса йарат.

— Кам унта, кам?...

Хура сукнаран ҫӗлетнӗ хура кепе, хура йӗм тӑхӑннӑ йаштака аҫа хыҫалтан пырса Ленӑ куҫӗсене хупласа илет.

Хӑйӗн пӗҫӗк шурӑ аллисемпе Ленӑ куҫӗнҫен тытнӑ алла хапатасшӑн тем пек тӑрӑшат, анҫах нийепле те вӑй ҫитеймест. Капла туни Ленӑна килӗшмест. Вӑл ура ҫине хӑвӑрт сиксе тӑрат те, хӑйне тытнӑ аласене вӗҫертет.

— А-а, Миттӑ, есӗҫке?—тесе, вӑл хупласа тӑнипе ывӑпнӑ куҫӗсене шурӑ сӑмса тутрипе шӑлса илҫӗ.

— Мӗншӗн асапландаратӑн есӗ мана.

Пӗр сӑмах хушмасӑр тӑракан Миттӑ ҫап ҫутӑ атӑ кунҫипе ик-виҫ хут хулӑпа ҫапса илҫӗ те, симӗс сӑрпа сӑрланӑ тенкел ҫине пырса ларҫӗ.

— Лар, Ленӑ... Санӑн аллунта мӗнле кӗнеке?

— Ку-и, Ку Туркенӗвӑн... «Дворянское гнездо». Епӗ, Миттӑ, хам та ҫав Лисӑ пек пулӑттӑмҫҫӗ... Йепле ҫӗре, йепле тинӗс пек тарӑн йурату!

Иккӗш те ура ҫине тӑрса пӗр-пӗрне алӑран тытаҫҫӗ.

—Миттӑ—Иван Маркӑҫ касак ывӑлӗ. Вӗсем йаланах пӗр-пӗрин патне ҫӳреҫҫӗ. Ҫулла пулсан Ҫитурайӑн аслӑ сатӗнҫен тухма та пӗлмеҫҫӗ вӗсем. Халӗ те—икӗ телейлӗ ҫун карта хӗррипеле ахӑлтатса пыраҫҫӗ.

— Ай, Миттӑ, Миттӑ, тӗлӗнтертӗнҫке есӗ мана!..

Ленӑ решутка карта хушшинҫен икӗ хура куҫ шӑтарас пек пахса танине сисрӗ.

— Ей, есӗ мӗн куҫпа-пуҫпа ҫарса пӑрахатӑн кӗтӳҫ тус, татах хырӑму выҫре-и мӗн?

— Ха-ха-ха! хыттӑн ахӑлтатса илҫӗ Миттӑ.

Карта тулашӗнҫе тӑракан Иштул каласма хӑйаймарӗ. Алӑри туйине ҫамартарӗ те, карта хӗррипе малалла уттарҫӗ.

— Мӗскер туса тӑтӑмха епӗ ҫӑнах?—терӗ вӑл ӑшӗнҫе. Апат илес те, васкарах тапӑра ҫитес пулат вӗт...

---

Ҫитурайӑн килне, унӑн пуйанлӑхне кунӗн-ҫӗрӗн йӗм хура ҫамламас йытӑсем сыхлаҫҫӗ.

Ҫитурайан йыттисенҫен йал сыннисем вӗрн ҫӗлентен хӑранӑ пек хараса пурӑнаҫҫӗ. Ҫитурайа асӑнсанах, ӑна пӗлекен сынсем тӳрех унӑн ҫӑмламас йыттисене аса илеҫҫӗ.

— У-уй, унӑн йыттисем пит хайар вара...

— Ан йӗр, атту Ҫитурай йыттине паратӑп!—тесен, макӑракан аҫасем те макӑрма ҫарӑннӑ. Йал ҫине сӑмах ахалех сарӑлмасӑ, вутсӑр тӗтӗм тухмасӑ,—тенӗ ваттисем. Ҫӑнахах та, Ҫитурайӑн йыттисем хуҫине пӑхнӑ, пуҫи-пуҫми ҫынна килҫурт таврашне ҫывӑха та наман, ҫыртса татса илмех хатӗр пулнӑ вӗсем.

... Ҫитурай хӑй килӗнҫе укҫа шутласа ларат. Пайан килнӗ укҫана вал пайанах шутласа типтерлесе хурат.

Хупахра кашни кунах ерех сутаҫҫӗ—хупаха Ҫитурай тытат, укҫа килет...

Енӗш шывӗ ҫинҫи ик ҫуллӑ шыв арманӗ купӑн-ҫӗрӗн аварат, майка ҫӑпӑхӗ парат—каллех укҫа.

Кашни ҫулах пилӗк-ултӑ теҫеттинран кайа мар тара илнӗ ҫӗр акат, тыррине сутат—татах укҫа...

Айпеҫ вулӑсӗнҫе кантурта стришнара ларат—татах укҫа, укҫа! Акӑ йепле пурӑнат Ҫитурай...

Ҫитурай укҫине пуҫтарса ҫикрӗ те, тӑрса килкарти йенҫи кантӑкран пӑхса илҫӗ. Сасартӑк вырӑсла хапха уҫӑлса карӗ,—унтан вӑрӑмлатса кӑкарнӑ йытӑсем арӑслан пек тулхӑрса илҫӗҫ те, виҫҫӗш те ҫӗтӗкрех сӑхманла, ватӑрах ҫын ҫине сикрӗҫ.

Палламан ҫын сехре хӑпнипе кӑшкӑраймарӗ те,—йытӑсем ӑна ҫӗре ҫӗшӗрсе те ӳкерҫӗҫ. Ҫитурай пӗр сас та памарӗ, кантӑк йанаххи ҫине тайанса пӑхса таҫӗ. Кайран кантӑка уҫҫа, хыттӑн:

— Полккап, Лортик, Куш,—тесе кӑшкӑрсан тин йытӑсем хӳресене пӑлтӑртаттарса лаҫ ҫумнелле кайса лӑпланҫӗҫ.

— Ес ман патан?—ыйтрӗ Ҫитурай ҫӗртен аран танӑ сухаллӑ ҫынтан.

— Сан патаҫҫӗ те, Петӗр Макарҫ, санӑн йыттусем ҫына илеҫҫӗҫ...

— Мӗн сӑмахпа килтӗн вара?

— Сӑмахӗ-мӗнӗ... Пирӗн пурнӑҫӗ ҫаплалла та,—терӗ старик Ҫитурай ҫине хӑйусӑрӑн пӑхса,—ҫӗн тырҫҫеп пӗр виҫ пӑтавкка параймӑнши тесе килтӗм те... Ҫунса карӑмӑрҫке, хута пӗлетӗн ҫунса карӑмӑр. Аҫасем ерпинех выҫӑ. Турӑ пул, Петӗр Макарҫ, тархасшӑн пар ҫӗн тырҫҫен...

Ҫитурай шӗвӗр сухаллӑ ҫын ҫине шӑтарас пек пӑхса тараг. Сухаллӑ ҫынан куҫӗсем хӗсӗк те хӗрлӗ. Хытти куҫ суха сухаланӑ некех пит ҫӑмарти пӗркелепсе ларнӑ. Алписем ҫӗтреҫҫӗ...

— Акӑ мӗн, Ирсупай пиҫҫе. Тырри хамӑн та ытлашши ҫук. Хута пӗлетӗн пулӗ, пӗлтӗр ыраш уйарпа пӗрӗнсе ларҫӗ. Анҫах, пит кирлӗ пулсан, сана пулӑшма пултаратӑп. Есӗ тура саккупӗпе пурӑнкаан ҫын. Епӗ сана виҫӗ пӑтне паран, анҫах есӗ те ахаҫ туман, тетеп. Хавӑрапне вырма тухиҫҫен мана пӗр ана вырса пар ешши вара...

— Ӑрахмат сана, Петӗр Макарҫ, ӑрахмат! Сана епӗ купшан вихӑҫан та манас ҫук... •

## 4. КУШАР.

Ҫӳлӗ хӳме пек ик айккипе ҫӑсӑлса выртакан сӗвек ту хушшипе, хура ҫӗлеп пек аваккаласа, Енӗш шывӗ йухса выртат. Унан весе таҫта айакка, пӗлӗтпе ҫӗр пӗрлешнӗ ҫӗре кукӑрланса кайса ҫухалат.

Енӗш шывӗн аслӑ лашшинҫе сип-симӗс улӑх йепӗрет. Симӗс улӑх варинҫе лаҫака ҫӑрӑнат, хӑмӑш ӳсет.

— Ай-ай, уҫӑҫке улӑхра,—тессӗнех туйӑнат шывшур анӗнҫе ҫӳлелле кармашса пӑхакан вӗтлӗхсем.

— Кушар, кушар! Кам пӗлместши ку таврара кушар тенипе, кам кӗтместши ҫӑва тухсан кушар ҫитессе.

Çамрăксем кушарта хĕрсем пăхаççĕ. Хĕрсем кушарта хăйсен йаштака çипуçне, çинçе пилĕкне кăтартаççĕ, кăтра çӳçĕпе пурçăп пиçихиллĕ çухи аркипех тĕрленĕ кĕпе тăхăнпă çамрăк кађђăсен кăмăлне çавăраççĕ.

— Есĕр кушара кайатри кăçал?—тетђĕçĕ йут йал хĕрĕсем пĕрпĕр пасарта тĕл пулсан.

— Кушартанах йулмăпăр таха,—çавăрса хураççĕ теприсем.

— Куçайа кайма манан пилĕк пуç укçа пуй, вăт—мухтанат сăмсипе те шăлма пултарайман сакăр çулхи сарă ађа.

— Кăçал кушар тумалла тăхлађсем патне каймаллах пулĕ, тем кукли тăвас ĕнтĕ, те ђер пул кукли, те какай кукли, те тата хуплу тусан авантарах пулĕ,—сӳтсе йаваççĕ инкесем.

Кашни хăйне маперлĕ хатĕрленет кушар иртерме.

*

Кĕрлет кушар... Таçта хăйамата кайса çухалакан сип-симĕс улăхра шап-шур халăх хурт пек йăшăлтатат. Такам та пур кушарта.

Урамăн-урамăн сутăçсем ларса тухнă, премĕк, кăптти, шушкă, тем те пур. Укçа хутаççи çеç йăвăртарах пултăр, вара санпăн тунă тĕнђерс кушара.

Акă, пĕр кĕтесре тĕрлĕрен вăйăсем. Таçтан килнĕ сала вырăссем те пĕлеççĕ иккен кушар хакне:

— Ђипа выпăр неттађок, неттађок!—кăшкăрса илĕртсе тăраççĕ туртса йапала кăлармалли йешђĕксем патне йăхăрса.

— Тутлă кăвас, кама кăвас, килĕр! хавас илĕртеççĕ сăртри йалтан укçа тума аннă çамрăксем.

Круççолĕ, ырма-кайма пĕлменскер, пĕрмайах çавăрнат. Унăн йĕрп-тавра тимĕр кăшăлпа хĕстерсе хытарнă пекех сăрăпса илнĕ çамрăксем. Круççел хуçи лутрака хура çын, хулпуççи çипе çакса йапă хура сăран сумккипе пăхăр, кĕмĕл укçа тултарат кăна.

— Ех, йарапар!

Сар хĕрсем, тутисем уçăлса кайасрап хăранипе çăварпе çыхса лартнă пек ђап тытнăскерсем тутисемпе мар, куçĕсемпе йăл-йал кулкаласа илеççĕ те, сар çурта пек йаштака пӳллĕ ађасем хыççăн вăш-ваш йарăнма круççел çине улăхса лараççĕ. Купăс çухăрат!, парапнан çĕмĕрлет, кушар кĕрлет, çамрăксем савăнаççĕ.

Мĕн ђухлĕ халăх пухăнатши кушара? Миçе йалтан васкаса утаççĕши Ђăп-касси йалĕн аслă улăхне?

Айпеç, Кеђкей, Пăрмас вулăсĕсем, айакри Атăл çинђен, Çĕрпӳ çывăхĕнђен, Урхас вăрманĕнђен,—пур çĕртен те пыраççĕ кушара, савалассĕ вал кун.

Çамрăксем çул тăршшĕпех кулаççĕ, савăнаççĕ, каҫҫăсем хĕрсенҫен тăрăхлаççĕ.

— Хăш йал инкисем пултăр есĕр?

— Хи-хи-хи! Епĕр инке пуласси инçеха,—таварса хураççĕ ҫăрсартарах хĕрсем.

— Есĕр хĕрсем иккен, каламасан пĕлес те çук, инкесем пекех лапăркка,—ха-ха-ха!—ушкăнпа ахăлтатса илеççĕ йашсем.

Вĕçĕ-вĕçĕнех, пĕлĕт пек тусан кăларса лавсем пыраççĕ.

Акă, пар лашапа ҫаплă тăрантас кўлнĕскерсем вĕçтерсе пыни айакранах курăнат. Вунă лавран та иртсе карĕç пулĕ вĕсем. Иштул, сулахай сукмакпа пыраканскер, лаша çулĕ урлă каçрĕ те, кайалла çаврăнса пăхрĕ.

Унҫен те пулмарĕ, пар лашаллă лав çĕмĕрттерсе çеç иртсе карĕ. Тăрантас çинҫе Çнтурай хĕрĕ Ленă ларса пырат. Ик-виç утăм йарса пусаҫҫенех, хура тăрантас хыçĕ апҫах çутăлса йулҫĕ.

... Кушар айакра та мар. Ав, кунтанах унăн шавĕ хăлхана пырса кĕрет. Пĕрмайах йăшăлтатат халăх, пĕри килет, тепри кайат, пĕри кайат, тепри килет.

— Паçук, килха пĕр йапала калам....

— Мĕн вара?

— Мана пайан тукас хусаххи хăйу илсе парап терĕ.

— Хăшĕ? Хури, йе...

— Çук, тепри, йаштаки... Манса карăни вара иртнĕ пасарта пĕрле çўренине, хамăра премĕк илсе çитернĕҫҫĕ...

— Манма епĕ тăмана мар вĕт, какша, астăватăп, йепле манас ун пеккине.

Çапла пăкăлтатса, калаç а пыракан хĕрсене Иштул хуса çитсе пырат

Кушар аслă улăхĕнҫе, кукăр-макăрланса, Енĕше пĕҫĕк шыв йухса кĕрет. Шыв хĕрне çитсен икĕ хĕр ҫарăнса тăраççĕ те, пĕри, малтан пыраканни, шывра выртакан шур ҫулсем çине пусса шывалла пăхса тăрат.

— Паçук, кил, килсе пăххаваскарах...

— Мĕн вара, Лисук?

Кăшт анатарах пит çуса таракан Паçук пуçне çĕклесе пăхрĕ те, Лисук хыçĕнҫе хура куçлă çамрăк аҫа тăнине курах паҫĕ.

Паçукпа Лисук хыçĕнҫе тăракан аҫан куçĕсем пĕр самантлăха тĕл пулса, пĕр-пĕрин çине шăтарас пек пăхса илҫĕç. Унҫен те пулмарĕ, çамрăк аҫа кайалла уткăнҫĕ те, пĕҫĕк шыв урлă туххăм çеç сиксе каçрĕ.

Çак аҫа—Иштул пулнă.

Иштул шыв урлă каçсанах икĕ хĕр каçса кайса ахăлтатса кулса йаҕĕç. Иштул кайалла çаврăнса та пăхмарĕ. Тем, именнĕ пек пулҕĕ те, кĕрлесе тăракан кушаралла уттарҕĕ.

Кушара пырса кĕнĕ çĕртех пĕр ушкăн каҕăсем ташша нслетеççĕ. Хĕрлĕ тĕрĕллĕ сухаллă шап-шур кĕпе, хура шалавар, урара çапçут калуш.

— Хамăр йал, йара пар!.. ех!..

Унҕен те пулмарĕ, Иштул хыçĕнҕех шай-шай туни илтĕнҕĕ.

— Ай-ай, краву-ул, хурах! кăшкăрса илҕĕ йаштака пўлĕ хура хĕр. Ташлакансем самантрах ташлама ҕарăнҕĕç те, кăшкăракан хĕре айакра та мар тăракан пĕр лаша кўлнĕ тăрантас çине пырса та пăрахрĕç. Ик йенҕен иккĕн тăрантас çине сиксе улăхса ларҕĕç, хĕре йарса илҕĕç те, тискер сасăпа:

— Çил пек вĕçтер, Çеркей!—тесе кăшкăрҕĕç.

Палламан хĕре лартнă тăрантас, пĕр минут хушшинҕех Енĕш кĕперĕ урлă каçса, çавра çил пек тусан кăларса хăварҕĕ. Пĕтĕм кушар халăхĕ хĕр вăрласа кайнине хытса кайса пăхса тăҕĕ.

— Аҕн хăш йалши, пуйанши?

— Хĕрĕ тата ăçтисем тет?

— Ес хĕрне те курса йултăнн вара?

— Хĕрĕ Уплер касси, Велнме йатлă теççĕ, аҕн Вăрманкас тет. Аҕи пуйан тет, хĕрĕ те пит тупраллă тет...

— Вăрласах вăрланăши, йе?..

— Вăрланă çав. Хĕрĕн савнийĕ те кунтах, кушартах пулнă тет. Авă пăх, пĕр аҕан сăмсинҕен ҕĕп-ҕĕр йун тухат, аҕи çавă тет ĕнтĕ.

Иштул урăх итлесе тăмарĕ. Йалтăртатса ларакан круççел патне ныҕĕ те хуçинҕен:

— Çавăрма улăхтар мана çўле,—терĕ.

Параппан çапса тăракан кĕреçе сухаллă круççел хуçи, параппан патакkипе шăнкравне шак шаккарĕ те, тепĕр ик-виç хут çаврăнса илсен круççел ҕарăнса тăҕĕ.

Иштул круççел тăрне улăхса карĕ.

Хĕртсе хĕвел пăхнă ҕухне тăп-тăр çăл шывне ĕçсе ăша кантарсан, темĕн ҕухлĕ вăй кĕрет. Анҕах кушарта ун пек таса çăл шывне тупас та çук. Ун вырăнне кушарта сăра, пылак шыв, йўççи те тупăнат сăрталла ухсан.

Кунĕн-çĕрĕн çавăрнат те...
Çил ту çинҕе сил арманĕ

— Ех, карҕăк, епĕр пуранăпăр та, çынсем йепле пурăнĕç!

— Тавăсси, çамрăксем, епĕр карăмăр ĕнтĕ. Йурла, карҕăк, шуйтан кĕвенти, еп сана ахаҕ турттарса çўреппи.

Унҕен те пулмарĕ, хура йалккаслă шĕвĕр сухаллă çын кўлепи урапа çинҕе йурласа пыракансkер, арăмне хăлха ҕикkинҕен тăхăнтарса та илҕĕ.

— Епĕ ăна пĕтĕм ҕĕререн тенĕ пек... ик... вăл мана... мăкартат тата, йавăл пуç...

— Еп кам?

— Ел на Волкĕ куҫал, курносӑй плахайккӑ, старый шилет. Инĕн кĕперĕ ҫине ҫитсен лашин ҫаранса тӑҫĕ.

— Ей, Ваҫка, йарапар!

— Айта карҫак, пĕр ҫавра йура йурласа илер, ну йурла!

Хусанан хулинҫе-е,
Ай хут хаклӑ-ӑ,
Хусанӑн хулинҫе ай ху-ут хаклӑ...

— Старик, старик, урхалах саланса кайна, ҫых тӑрса...

— Ей, карҫӑк, тӑраймасспҫкеха, пыл сӑра пуҫа ҫĕмĕрет, йекконĕ маслӑ...

Киле кайма тухна Иштул кĕпер ҫине кĕрсен, ўсĕр ҫып лашин урхалӑхĕ саланса кайнине кура:

— Кўр, хам ҫыхса парам,—тесе урхалӑха ҫыхса та парат.

— Арахмаг сана, аҫам, йекконĕ-маслӑ, лар, ĕҫтереп сана пĕрре... ҫапла-и, карҫӑк?

Иштул урапа ҫине улӑхса ларҫĕ..

— Итлеха, аҫам, тапак туртатни ҫакӑ есĕ?

— Ҫук, туртмастӑп.

— Туртмастӑн пулсан туртмастӑн, апла та йурĕ. Ҫимха, епĕ сана пер йумах каласа парам, итле.

Пĕр вӑрӑм тумтирлĕ, вӑрӑм... ик... вӑрӑм ҫўҫлĕ пуп Атӑлта путса вилме пуҫланӑ, тет. Ҫакна пĕр ҫын курнӑ, тет те, каларас тесе ҫупса пынӑ, тет те, паҫашкӑ—пар аллуна, епĕ сана туртса кӑларам, тесе калат, тет. Пупĕ нимĕн те шарламасӑ, ҫаплах путат, тет. Хайхи ҫын вара, мĕн иккенне ҫухласа илҫĕ, тет. «Пуп пама йуратмасӑ, пуп илме анҫах йуратат». Вара тепĕр хут пырса—паҫашкӑ ил ман алла, епĕ сана туртса кӑларам терĕм, тет. Ҫакӑн хыҫсан тин пупĕ аллинҫен йарса илсе ҫӑлӑнҫĕ, тет.

Тута хĕррине сулахай йенелле парса, Иштул хӑйĕн ашĕнҫе кулса илҫĕ.

— Но! Ваҫка, йарапар!..

Виҫҫĕп ларнӑ хыт урапана, ула кĕсре хўресене пӑлтӑртаттарса малалла ҫуптарҫĕ.

## 5. ҪЫРМАРА.

— Ваҫук, айта ҫырмапа, пĕве пĕвелотпĕр арман тӑватпӑр.

— Тата пирĕнпе кам пырат?

— Ав, Сашук пырат, халĕ килпе ҫӑкӑр илме кĕрсе карĕ.

— Айта еппин.

Икĕ ата шӑкӑлтатса ҫырма йенелле уттарҫĕҫ. Пралук херĕнҫи хура пўрт тĕлне ҫитсен, урам йенелле тухакан пĕҫĕк ҫўреҫерен шак-шак шаккаса илҫĕҫ. Пўртрен—халех тухап, тепĕ сасӑ илтенҫĕ.

Ваҫукпа Ҫимук 'лапҫӑлса таракан хура пўрт патне пырса таҫĕҫ. Вĕсем патне пўртрен хура ҫўҫлĕ, кукӑр ураллӑ Сашук тухса тӑҫĕ. Хĕрлĕ улаҫа кĕпе, кӑвак йĕм тахӑннӑ. Пуҫне такамӑн пысӑк карттуспе лартса йапа.

— Айтӑр, кайапӑр.

Çырмана çитсен аҫасем кашни хай ваҫҫи выран суйласа илҫӗç те, çамка çине тар йухакан пулиҫҫенех тӑрмашма тытӑнҫӗç.

— Ваçук, пӑхха, манан кунта шыв урлӑ армана кайма кӗпер пулат.

— Ман арман канаве мӗн терлӗ, ех!..

Унҫҫен те пулмарӗ, аҫасем хушшинҫе варçӑ тухса та карӗ:

— Есӗ мӗншӗн ман патаксене илен?

— Есӗ ма тата ман пӗвене таптаса татса йатан, хӑлха ҫиккинҫен парасса кӗтетне мӗн?!.

— Парса пӑхха, епӗ пиҫҫене каласан...

— Сан пиҫҫунтан такам хӑрат, епӗ аттене каласа парсан, сирӗн пиҫҫуна кӑтарте вӑл хуплу!

— Есӗр ма вӑрçатӑр,—хутшӑнҫӗ Ваçук,—мӗн çитмерӗ-ха сире?

Çак сӑмахсене те каласа пӗтереймерӗ Ваçук.

— Пӑхӑрха аҫасем, турӑпа килеççӗ пирӗн йала, айтӑр кайса пелер, мӗн тумаши вӑл?

Пылҫӑклӑ алсемпелех, аҫасем çаврасил нек вӗçтерҫӗç çырмаран. Нем анса ларнине хыçалтан пылҫӑклӑ алпа тытса, çаврӑна-çаврӑна çатӑртаттарҫӗç.

* *

Варманкасӑн аслӑ çалӗ çине халах ушкалӗне йухса анат. Ҫи малта шӑртламан сӳс пек çӳçлӗ сарлака пуп пырат. Уп хыççӑн тийакан, йалапах ӳсӗр çӳрекен тийеҫук, унтан çӳçе йывӑççу сӗрнӗ йалти «ырӑ çынсем», хыçалта хура халах кӑшартатса пырат.

Сарлака пупе тӗтӗм мӑкӑрлантарса пырат.

...Победы его императорскому...

— Мӗн пулӑшнӑши? Праçник та, нимӗн те çук пек, çапах турӑша илсе тухна?..

— Пармансене çӗнтерне тет. Йармансенҫен икӗ хула тытса илнӗ тет, вӑрçӑ та ҫаранмалла тет вара.

— Оспоти, тур çырлах, тур ампарах.—кӗлтаваççӗ ватӑсем.

— Мӗнле вара, пӗтӗмпех пӗтернӗши?

— Пӗтӗмпех мар тет те-ха, пирӗннисем çаплах малалла пыраççӗ тет, леш йармансем ҫиркӳсене сӳмӗрсе пӗтереççӗ, тет те, ӑçтан тура пулӑштӑр вӗсене...

— Воспоти помилуйах, тем те курас пулӗ ку саманара...

— Мӗнле-ха, сирӗн Верук сывалати тата, куçӗсем куракан пулаççи?

— Ах тур-тур, тахлаҫа, ес калин пур! Антӑрарӑмçке ӗнтӗ çав Верукпа. Теп суккарах пулат пуле вал. Ни куçӗ курмаст хӑйӗн, ни пӳре те йухма ҫарӑнмаст.

— Мӗн, йумӑçалла кайаймарари тата?

— Каккуй кайман пулӗ унта. Супрамар енте çӳресе: суртса та темиçе хут пӑхнӑ, тӳркӗллине те парса пахна, йӗрӗхне те асӑнна, йумӑçа та ик-виç хут кайса пахна. Çук. нимӗн те пулӑшмаст...

— Ипекелле ситеймерӗри мӗн?

— Ишеке пĕлтĕртение кайайманçке, лаша çукки аптăрататť, хăйне илсе кайса, Микул турра ђуптутарас шухăшăм пур та... Тем тăвас-çке ĕнтĕ, кинĕм, тем тăвас, турра çилептертĕмĕр пулĕ, хамăрах çылăхлă пулĕ,—тесе ўлесе йађĕ Матик карђăк.

— Ей, ес мĕн çул çинђе йĕрсе тăран, кай уптан,—шăл витĕр тулхăрса плђĕ ђиркў старăсти Енгук.—Кай тенĕ сапа çул çинђен, курмастăним турăпа çăл çине анаççĕ. Ей, суккăр тăмана, тупнă ўлеме. Çынсем савăнаççĕ, а вăл пур...

Пăру кĕтўвĕ тапăрта. Çырмари лапсака та вăрăм йăмрасен сулхăнĕнђе, ăçта кирлĕ унта пăрусем лапланса выртнă. Унта кунта çеç хăшпĕрнсем пуçсене усса тĕлĕрсе тăраççĕ. Иштул карта хĕрринђе месерле выртнă та, пĕлтелле пăхса канса выртаť. Лађака тавраш̆ĕнђе вĕçĕ-хĕррисĕр вĕçекен шăнасем, хуртсем наплатпă çемĕпе Иштул хăйне тĕллĕн йурăсем ĕпĕрлесе выртаť.

Пуçа тĕрлĕрен шухăшсем кĕреççĕ...

Хăçан килетши анне. Кам айаплăши вăл тĕрмене лекнишĕн. Ех, вăл çынна, хам ўссе çитсен, шăнăрĕнђен кантра йавса хурăттăм...

— Иçтул, пиĕн çыçна ăçта çан?

Иштул сасартăк пуçне çĕклесе пăхрĕ. Унăн умĕнђе Çитурайăн селĕп хĕрĕ, ђалăш Аңук шăлсене йĕрсе тăраť. Аңука курнăран тўрех, йалта уп çинђеп калакан йумах-сăмахсем аса килеççĕ:

— Ну, Аңук, ай-йай, пĕр çаклапсан нийепле те хăпăтмасť вăл хăйĕнђен...

— Миçереши вăл Аңук, пĕр 33—35-сенђе пур пулĕ.

— Аплах мар пулĕ те, ватти ватă çав, пуйап хĕрĕ пулин те, кам кађђа илтĕрха вăл сўпĕнкке, катăк хĕре!

Мĕне пĕлтереççĕши çав сăмахсем? Иштул ăпа пĕлсе çитереймест. Анђах çапах та, вăл Аңукăн пурте килтэ мар иккеннине пĕлет.

— Иçтул, илтетни еçĕ?

Иштул тăрса ларђĕ. Вăрăм ђăпăрккине сиктерсе хуђĕ те:

— Мĕн кирлĕ сана, Аңук,—терĕ.

— Иçтул, мана çыçпа пăхма йанă, пирĕн çыçнаçем кунта çук. Ата иккĕп кайса пăхай, çыйма тăйăх, йуйати.

Иштул сăмах вакласа тăмарĕ, кĕтў йĕри тавра пăхкаласа илђĕ те, шăлнĕне ђĕнсе:

— Кĕçтен, есĕ ларха, епĕр кайса пăхар. Çитурай сыспи анатри певе лађакине выртса йулакан вăл,—тесе, малалла уттарђĕ.

— Иçтул, еп те пыйап, ма ваçкан, пĕйе кайăпăй. Еçĕ хĕйçенђсн те хăйа пуçйаçап мĕнйе кађђă пуйап вайа.

Унинђе картинђен тухсан, Иштул хыççăн лĕнђĕртетсе пыракан Аңук сасартăк ђарăнса тăђĕ.. Шупка куçĕсене ђарса пăрахрĕ, вĕрсе хăпартнă пек мăнтăр аллисене сарса пăрахрĕ, Иштул умне тăђĕ те:

— Иçтул, пийĕн çыçписем кийтех пайан, епĕ çана йуйи кунта иçе кийтĕм,—терĕ, Иштула хăй патнелле çăтăрт туртса илҫĕ.

— Есĕ манран кулма пуçлатăн-им? Кам, манăн кĕтӳ патне тăврăнмалла,—терĕ Иштул.

— Çук, Иçтул, каккуй унта мăçкăйама, ун пек çухăç çук манăн. Еçĕ пĕйетĕн, ман атте пуйан, питĕ пуйан, ух çутйаçа та тухаç çук ун укçине... Епĕ çана пĕй çăмах кайам, лайха çумайах. Иçтул, е, еçĕ хăçан авланан халĕ? Кама каҫҫа илес çухăç пуйха? Йкçĕмĕй савçа пуйăнай-и...

— Ес, Аҥук, ан ухмахлан. Манăн санпа лапăртатса ларма вăхăт та çук... Есĕ каçпа вăййа тух, унта каҫҫасем нумай,—терĕ те Иштул аллине карт туртса илсе, пĕтĕм вăйпа Аҥука тĕксе йаҫĕ.

— Ах, çуйттан кӳлепи, еçĕ апйа хăтйанатăнихха. Еçĕ мапа тĕкçе йама-и, кĕтӳç йенҫешке, епĕ çан çинҫеп аттепе кайаçа пайам-ха, вăл çана кăтайтĕ. Ман атте стйншпа.

Аҥукăн куçĕсем ҫармакланса карĕç. Вăл ҫул илҫĕ те, Иштула пĕррех йара паҫĕ. Вăхăтра сиссе, айаккалла сикнипе çеç, ҫулĕ Иштул пуçне тивмесĕр иртсе, ҫанка çыран çамкине пырса çапăпҫĕ.

* * *

...Сĕтел çинҫе хĕрлĕ пуçлă каçонккă кĕленҫи çутăлса ларат. Сĕтел çинҫе икĕ ҫеркке, ăшалана шăрттан, пиçнĕ çăмарта, шап-шур кулаҫ, тăварлана хăйар... Çап-çут шампа хырăм сăмавар пăсланат...

Сĕтел пуçĕнҫе нăрă пек хĕрлĕ Çитурай ҫавсаланса ларат, куçĕсем туп-тулли, шывлă куçсем. Ун умĕнҫе хушка пуçлă хĕрлĕ сухаллă, çут тӳмеллĕ мунтир тăхăннă кӳлепе.—Иван Маркăҫ касак.

Касакăн икĕ аллинҫе икĕ ҫеркке, усси сухалĕсем йĕпенсе айалалла усăннă, касак хăйне хăйех ĕçтерет.

— Тав сана, Иван,—тет те йанк! тутарат касак,—ах, лайăх...

— Хар-ра-шо!

— Будьте здоровы, Марккăҫ!—йанк тутарат тепĕр ҫерккине.

— Ҫеркке тĕпĕ тепле ҫăтат, шат тутарса лартат икĕ пуш ҫерккене харăсах мунтирлĕ кӳлепе.

— Марккăҫ!—йывар пуçпе çĕклесе мĕл-л пăхса илет Çитурай.

Ансăр çамкаллă касак итлеме хатĕр стрпшна мĕн калание. Итлеме çеçши вара? Çук, апла çеç мар, калапă—тупă, тупă—калапă.

— Итлетĕп, Петер... М... Макарҫ, итле...тĕп.

— Есĕ мапа пĕркупне пĕр хĕрарăма шурă çурта уйесри полится правленине кайса леçни çинҫен каланăҫҫĕ...

— Айпесĕнҫи Варвари вăл...

Касак вăрман тăмапи пек вăрăм сăмса тăрăх пăхат, ҫукмар пек аллисемпе çавра-çавра илет, мĕн каласшăнши ĕнтĕ мунтирлĕ кӳлепе?

— Есĕ те... пĕлетĕнн... вара вал çы...нна, Пе-пе-тĕр Макарҫ...

— Еп пĕлмесĕр, кам пĕлмелле тата вуласри ĕçсене. Çӳлте тура, айалта патша, вуласра кам? Епĕ, епĕ вĕт хуçа вуласра!—шат шатлаттарҫĕ сĕтел çине Çитурай. Йан йапраса карĕ аслă пӳлĕм.

— Еп мĕп... ик... еп нимĕн те мар, Петĕр Макарҫ, ик... мм...

— Тоттӑ...

Ҫав тери аслӑ ҫын Петӗр Макарђ кӑмӑлне те ҫемҫетет ерех.

— Марккӑђ, итле. Вал арӑма саккунсӑр ађа туса вӗлернӗшӗн айӑплаҫҫӗ... ађи вӑл манӑн, Марккӑђ, манӑн, итле. Ман ађа ӗнтӗ, ман йунӑм, ман сывлӑш ҫакӑнса тӑнӑ пулат̆ Айпес хурал пӳртӗнђе.

— Хе-хе-хе, тупнӑ калаҫма, ађин ҫамки ҫине ҫырса хуман пулӗ-ҫке сан ађа тесе... тун...нӑ калаҫма!

Стришна пуйан, стришна ђаплӑ. Вӑл ђас-ђасах касакпа иккӗн ларса тулли кӗленђесене пушатат. Вӑл ђас-ђасах хӑй патне касак пырсан йумах йӑвӗҫран тупӑ илемлӗ шкапран хӗрлӗ сӑркӑђлине турт-са каларат̆. Малтан касакне Ҫитурай хӑй тултарса пара-пара ӗҫтерет, кайран... ҫанталӑк пӗртак хӗрсен, касак хӑйне хӑйех тултарат̆, ик аллине иҫӗ ђеркке тытса, хӑйне хӑйех тав туса йӑвантарат̆.

— Лисӑ. Лисӑ, кунта! ·

Пӳлӗме лаптӑк ҫурамлӑ, таса питлӗ тађка хӗрарам кӗрсе тӑђӗ. Ун упӑшки вӑрҫа кайни те иккӗмӗш ҫул ҫине карӗ. Ҫыру та ҫук.

Лисук Ҫитурай патӗнђе виҫҫӗмӗш ерне апатсем пӗҫерсе пурӑнат̆.

— Лисӑ, есӗ сӗтел ҫинђен пуҫтар, унтан вара... Унтан вара Марккӑђа лаша кӳлсе парса йар. Унтан...

## 6. ХУРӐН СУЛЛАНАТ̆...

Пӳрт умӗнђе лапсака хурӑн усӑнса ларат̆. Хурӑн шавламаст̆, шӑп, нитӗ шӑп ларат̆. Пӗр тапхӑр ҫил килсе версен ҫеҫ, шӑр-шӑр-шар туса илеҫҫӗ симес ҫулҫӑсем... ҫилпе хурӑн сулланат̆...

Миҫе кун йе ерне иртрӗши кушар иртнӗренпе. Мӗн ђухлӗ вӑхӑт?

Велиме ҫакна пӗлмест... Ана кашни кун ҫулталӑкран та ытла вӑрӑм пек туйӑнат̆. Аса илсен хальӗ те ун ҫурӑмӗ ҫине сивӗ тир тухат̆...

— Аҫтан манӑн телей, аҫти хӑйамат шатакӗнђе пытанатши вал?

Велиме ҫырмаран шыв ӑсса улӑхат̆. Шап-шур кӗпе. кӑвак сан-пул ҫыхнӑ. Йар йар утса пынӑ ҫемӗн, кӗвенте сулланнине шуҫ витре-сем ђӗриклеңсе пыраҫҫӗ. Сайра хӳтран витрери шыв ҫере пат-пат тумла ласа илет, сукмак ҫине ӳксе тусана хӑпартат̆.

Урара шап-шур тала, хура пасар ђӑлхи, тахӑр пушат̆ ҫӑпати.

Велиме пит тӑпт р ӗ, тӳлех хӗр пулнӑ. Хӑй ӗҫленшех тупра хӑй-не тӑхӑнмаллӑх туйанна. Кам пӗлнӗ ҫапла пулассa.

Велиме хӗр ђухне, хӑйӗн таван йалӗнче — Ӳплер кассинђе пурӑн-нӑ ђухне нумай ӗҫленӗ, тарӑшса ӗҫленӗ. Уйра пӗр ана йулнђђен те Велиме тыра вырма пӑрахман. Хайсенне пуҫлађђен те, хайсенне пӗ-терсен тэ, ҫынсем патне пӗрмайах кӗрӗшсе тухнӑ...

— Ах, ҫав Велиме ӳсет, вӑт пулат̆ хӗр, кам ырри пулӗши вал,— ҫапла калаҫнӑ Ӳплер кассинче хӗрарӑмсем Велиме ҫинђен.

Ҫырмаран хал рса ҫитсе пралукран пӑрӑнсанах, сара ђӳређеллӗ пысӑк ҫӗнӗ ҫурт курӑнса карӗ. Вал пурте курсан Велиме ђӗри кӑрт-тах сикрӗ, темен пама хатӗр вал ҫав килтен тухса кайма май пулас пулсан. Анђах, халӗ нимен тума та ҫук. Касса илнӗ ҫӑкар ђӗллине кайса ҫыпӑҫтарса хума пулмаст̆... Пурӑнма та ҫук, пурӑнас та пулат̆.

Миҫе хут шукӑшлана Велиме ҫакӑнса вилме, миҫе хут... Анђах,

çук, хăрушă çылăх хăй çине илме... хăйас çук Велиме. Хăрушă вахăт, хăрушă ĕмĕр, хăрушă самана!

Шыв кӳрсе килсен, Велиме вĕрекен йашкана антарса лартрĕ те урамра хăма çуракан упăшкине ђĕнме тесе тухса карĕ.

— Ах, упăшка...—Упăшка тесенех пĕтĕм çан-çурăм сăрлатса кайат, хăрушă, тискер кунсем аса килеççĕ...

...Савăнăçлă кушар. Велиме хĕрсемпе кушарта уткаласа çӳрет. Айакра та мар, хăйĕн ђун савнийĕ Петĕр пĕр ушкăн ађасемпе хуткупăс каласа тăратђĕ... Малалла мĕн пулнине аса илме те хăрушă. Тасартăк Велиме патне виçĕ йаш пырса тухрĕç те:

— Ес хăш йал хĕрĕ пулатăн çак?—тесе ыйтрĕç. Велиме ђĕнмерĕ. Ӳсĕр çынпа мĕн калаçмалли, ӳсĕр çын—вилĕ çын,—тепине йаланах астăват Велиме.

Унтан, (каласа та ĕненес çук) виçĕ йаш Велимене йарса илђĕç те, пĕр сывласа илиђђен тăрантас çине çĕклесе те пăрахрĕç. Тепĕр самантра çил-тăман пек симĕс улăх урлă вĕçтерђĕç.

Кууçеç те мар, кайран тата...

Упăшки хăшĕ пуласси не Велиме Вăрманкас йалне çитмесĕр те упăрса илмен.

Çитнĕ-çитменех ампара персе ђикрĕç те шăлтăр-шалтăр çес питĕрсе хуђĕç. Нумай та вăхăт иртмерĕ, терлĕ çухаллă кĕпе тăхăннă тађка туталла ђалăш çын кĕрсе тăђĕ. Алăкран кĕнĕ-кĕменех Велимене хытă аллипе йарса илђĕ... Кăшкăрђĕ Велиме, анђах никам та пулашма пыракан пулмарĕ. Вунçиђĕ çулхи Велиме арăм пулса тăђĕ...

* * *

Çитурай турă йалипе пурнакан çын. Вырсарни куна çитсен. ђиркӳве каймасан йаланах пипли кĕнекине вулат. Çитурай турра саккунĕпе пурăнат, çӳлти патшалăха кĕме хатĕрленет.

Вырсарни кун ĕçмест, унталла-кунталла та пăхкаламаст.

Мĕн каласси пур! Ђăнахах та, ытти кунсенђе, ултă кун хушши, çылăхсем туни те пулкалаççĕ те, тата 'кам пĕр çылăхсăр пулĕ! Пĕр таса атте турă, вăл анђах пĕр çылăхсăр, шутлат Çитурай.

Вăхăтран вăхăта вăл хăйĕн пĕђĕк хĕрне Ленăна—ђĕнсе илсе анла калаçкалат:

— Акă мĕн, Ленăђка, есĕр кимпаçире лашлине вĕренетĕр, каласа пархă мана христос Насарета пырса кĕни çинђен.

— Ну, атте, мĕскер есĕ мана ыйтатăн, халĕ çуллахи вăхăтра ђанас килет манăн, есĕ пур хĕлĕн-çăвĕн вĕрентесшĕн мана.

— Турă саккунне, Лена, хĕлĕн-çăвĕн, кашни кунах веренсе тымалла çав. Ахаљшĕн турă çиленме пултарат...

— Ну, атте... Ах, астуман, та калама сана, паçăр çыру илсе килнĕђђĕ, ђимха, епĕ кайса илем.

Ленă ђĕрне вĕççĕн кайнă пек, пĕр сас-ђевĕ кăлармасăр, апшĕнчимĕс канвортла çыру илсе килсе пађĕ.

— Камранши тата?..

Çитурай çырăва вулама пуçларе.

— Максăмран ку çыру, Лена,—пиҗҗу сырат.

*«Тăван атте, Ленă. Аңук.*

*Сывă пурăнатăри? Турă пулăшнипе енĕ ку тарантуҗен ырă сывă пурăнатăп. Сире те виçĕ ипностаçлă турă йатуҗĕпе çаван пекех сывă пурăнма сĕнетĕп.*

*Ну, атте, сана салам! Ну, Лена, сана та, Аңука та салам! Ну Уртемей питуҗене салам, вăл авланнă тет—маткипе салам! Ну кӳршĕ-кӳпе пурне те, тăвансене те салам! Тапа хавăр кама калас тетĕр, ман йатран пурне те салам калăр.*

*Ну, атте, мана утуҗеннăй камантăна кусартуҗĕç, çутă пакун илсе, йала тавăрнас шухăш пур. Кăсре хăмласа патуҗĕп? Айăр пулсан тилине усрăр. Кунта пире пурăнма пит аплах мар, палйыша курас килет. Ну, атте, укса пĕр çĕр тенкĕ йарса пар.*

*Сире тунтан-вартан йуратакан ывăлу*

*Çитурай Максăмĕ.*

*Минск хули».*

Çырăва вуласа петерне çĕре пер варăм çын хашкаса кĕҗе те:

— Петер Макарҗ прикас, мопилисатси, терĕ.

— Аçта прикасĕ, тавай кунта.

Сăркăҗпа пиҗет пусна пысăк паккета илсе вар-вар ватрĕ те вулама пуçларĕ Çитурай.

— Ей. Лисук, җасрах лаша кӳл, Айпеçе каймалла, кантура!— кашкăрҗĕ Çитурай.

* *
*

Çил пек вĕçтерсе пыракан пар лаша кулнĕ хура тарантас Айпеç кантур хапхиҗен вăшт çеç кĕрсе сухалҗе. Вырсарни кун кĕлĕрен тухнă халăх нумайҗҗен пахса тăҗе пар лашалла тарантас вĕçтерсе хăварнă тусан хыççăн.

— Кам пулҗĕха ку?

— Мĕн е, çемски лаҗҗалнĕкши ку?

— Çитурай, стршина Çитурай тет вал, прикас килне те татах... пăплисатсă...

— Ах, тур-туур. Хаçан җаранапи ку шуйтан варçи, хаçан җаранени...

— Хăçан киле ывалăм...

Кĕлĕрен тухнă халах пайан җасах салăнмарĕ. Тĕрлĕрен пмçамна сут тăвакан лавккаçсем таврашĕнҗе сĕртĕнкелесе çӳрерĕç. Пурнаç тĕвви çинҗен те, варçă җарăнмани çинҗен те, кинсем усалли çинҗен те таранпҗҗенех калаçреç вăл кун.

Авă пупĕ те җиркӳрен сарканса тухрĕ. Ват хур аçи пек суланса, сип-симĕс сат варринҗе путса ларакан җартаклă çурта, матăшкапа кĕрсе сухалҗĕ. Пуп хапхаран кĕрсен пумай га пулмарĕ, йаштака пӳллĕ çурта пек илемлĕ хĕрарăм пырса таҗĕ.

Пуп хапхи умне çит еп, вăл хĕрарам теме пула вара нерн тавра

çавранса илђе те, тем туса хупа нек, вайна хапха шанполки çине уртанђё. Тепер самантра вырăсла хапха шатлатса çеç йулни илтёпђё.

Пуп пўлёмне шăп çеç кёрсе тăђё çак хёрарам. Ăна хирёç шалти пўлёмрен кёресе сухаллă пуп тухсан:

— Касар мана... таса атте, тесе ђёркуççи çине тăђё вăл.

— Мён пулђё турă ђури, кала, мёншён йёретён, мана мар, пёртен пёр аслă турра калани пулё... мён йатлă пулатăнха есё, хёрём. прт, кёр çакăнтарах....

Ванакан кёленђерен те çемçерех тытса, илсе кёђё пуп шалти пўлёмне,—лар, ан йёр, кала...

Пунан сасси кушак сар çу çине йаншăнниă пек пăваш (ах, ку хёре, йе хёрарăми тен... аçта çуралнăши, ăçта ўснёши куп пек çеçке.). Мён тăвас тетен. Пупăн та йун выђђат. Матăшкăпа перл вунвиç ађа çуратнă пулсан та, 56 çине пуснă пулсан та... ах, куçё-сем, хура куçёсем, ку хёрарăмăн мăнтарăн куçёсем.

— Епё Велиме. Мана Велиме тесе ђенеççё. анђах, пулăш мана, таса атте, çылăхран хăтăлма... пулăш...

— Мёнле çылăх... мён пулђе. Кала, хёрём кала, ан хăра... «Çветтуй атте» Велимене аллисенђен йарса тытат (ах, вёриçке алли-сем, ните вёри).

— Акă мён, таса атте... ах, çылăхлă епё, çылăхлă. Мён турăм пўтсёрскер, мён турăм...

Сăмахсене вăрăмăн тасса каласат кăвакарма пуçланă пуп, çем-çен, мăйа тытса, пуçа сулласа, шăппăн... шăппăн...

— Итле, Велиме. Çўлти турă хăватлă, мухтавлă: вăл пурне те курат. пурне те пёлет. Унăн хавађё пысăк. Ўкёнсен, пётём ђеререн каласа парсан, санăн çылăху та каçма пултарё, епё санпа пёрле çаваншăн кёлтăвап...

— Епё çылăхлă, таса атте. Мана вăрласа кађа илсе килђеç. Епё унашкана (унăшка тесенех Уртемейён сăра сёлеки хăстарасшăн лёклентерет. анђике патратат.)... йуратмастăп, вал тискер, лапра çын. унпа перле ларса апатланасси те маншăн вилём пекех...

Çавăнпа та манăн пуçа хăрушă, çёлен пек хайар шухăшсем ытала ма пуçлареç. Епё нумай çёрсем ђем куç хупмасăр каçрăм. Вара. таса атте... вара кўршё карђăкки мана питё çылăхлă ес тума верентрё...

...Хайен ёçне тусассăн Уртемей çёрле вилнё пек çывăрса кайат. Ах, таса атте. манан сăмсара халё те. Уртемейрен килекен усал шăрша тарат. Вал шарша мана нисçта та прёк памаст...

Епе Уртемей çывăрна ђухне çёрле, ђас-ђасах сата тухса, кўршеме уйăх çине пăхса ларма пуçларăм. Çавăн пек каçсенђе епё, хама хам вилес тесе, хам çине хам ал хурас тесе те темён ђухлё шутласа пахна та... анђах çылăхран хăранипе çеç ђарăнса тăтăм. Пёр уйăх хушши çапла асапланса пурăнтăм... Пёрре кўршё карђăкки çёрле сатра ларнă ђухне ман патăма пырса ларђё. Вăл ăпнă сăмах-сем каласа. мана напатрё, ман апа кёрсе ларђё. Çапла каларё вал мана: «Велиме, санăн пурнăçу йăварпине куратăп епё. Есё ђун-

сăр каскала пурăнан, вă асаплантарат сана... епĕ хам та хĕр пулса курна, мана та кушартан варласа кайнă, унтанпа ĕнтĕ хĕрĕх çиçĕ хĕл каçрăм... санăн пурнăçа çăмăллатасси манран килет»... терĕ

Ах, таса атте, епĕ айăплă мар... мана çапла тума Упхин карçăк вĕрентрĕ...

— Мĕне хĕрĕм, мĕне вĕрентрĕ вăл сана.—пуп Велиме аллине тата хытăрах çăмăртаса илет,—кала, ан хăра..

— Тепĕр кун ирхине, Упхин карçăк тутăрпа çĕркесе мана темскерле кăвак имçам илсе килсе паçĕ. Никам илтмелле мар çĕрте, лупас хыçĕнçе, вăл мана çапла ĕнентерçĕ:

«Çак йапалана Уртемей кĕпине çăвакан шыв çине йар. Вăл кĕпене хăма çурнă çухне кашни кунах тăхăнтар, вара есĕ те телейлĕ пулăн»,—терĕ. Епĕ вал каланă пек турăм... Тепĕр виçĕ кунтан, упа пек çирĕп сывлăхлă Уртемей пуç ыратат теме пуçларĕ. Пĕр ерне иртсен пир пек шураса карĕ, пайан тата апат тунă хыççăн... ах. хăратăп епĕ, таса атте, çап мана, хўтĕле... апат çинĕ хыççăн вырт-сан тăраймарĕ, вырапалах выртат... Ах, мĕн турăм епĕ, мĕн турăм.

— Лăплан, Велиме, лăплан. Турăн кăмăлĕ пысăк, ăна никам та пĕлес çук. Анçах сап çылăху та калама çук—пысăк. Кĕлтавас пулат Велиме, кĕлтавас пулат. Пĕр уйăх хушши есĕ кашни каçах хĕвел анса ларсан ман пата кĕл тума çўре, вара турă каçарĕ... Есĕ çĕт-ретĕн пулас, Велиме.... Лăплан, хĕрĕм, лăплан. Акă вырт çакăнта, тиван çине, епĕ сана кăмăла уçакан емел кайса илсе ĕçтерĕп, вырт çакăнта.

Пуп алака йерипен çеç хупса хуçĕ.

— Кам унта, мĕн пулна,—тесе ыйтрĕ пупран алакран тухсанах ирачвир пек мăнтăр матăшки.

— Ан шарла, пĕр çуи ăшне усал сывлăш кĕрсе ларнă, тасатас пулат. Халĕ партак лăплантçĕ. Анçах асту, кĕç-вĕçех усал тапранма пултарат... Ах, мапса та кайпа, çунăм. Тилаккăн майри сана темĕскер тума çĕннĕççĕ... Епĕ мансах кайнă... Ну, веçтер, çунăм, манăн та вахат çук. Çылăхла çынна çалас пулат.

Çăвара карса тăракан матăшкăна пуп пару пек çулласа илçĕ.

Маташкăна ăсатса йарсан, таса атте Велиме выртакан пўлĕм алакне йерипен уçре те пуçне çиксе мулкаçла хăлхисене тăратса тапларĕ. Унтан пĕтĕмпех кĕрсе таçĕ те алака çаклатса хуçĕ.

Велиме лапланнă. Месерлерех выртнă та, тĕлĕрçе пек пулнă.

Пуп урай çумне çыхса лартнă пек, пĕр вырăнтан тапранаймасăр Велиме çине пăхса çулланса тăçĕ (ах, çеçке!..).

Велимен кăкри вăрăмман пĕрре çўлелле. тепре аналалла хумханат. Пуп ытарайман çўхе тута çине, мăкăрăлса йаранса тăракан кăкăр çине пăхса илет...

Велиме пуçе вĕçне пырса таçе. Алара тытса тăракан стаккане çĕтреннине сисрĕ. Ма çĕтретши вăл алăра стаккан. Ма çак çурăм тарăх вĕри тумламсем йухма пуçларĕçни.

— Ах. кам кунта?..

Пуп вăш-ваш (аçтан тухатни вăл? Велиме сăварне хуплаcа тăрма чма тапратрĕ.

* *

Усал хыпар йал тавра ђасах вѣçсе çаврăнат. Усал хыпар пѣтѣм йал кăмăлне пусарат, вăрăмăн сывлаттарат, ах та ах тутарат.

— Маплисатсă... Маплисатсă...

Икѣ çул хушши йармансемпе вăрçă пырат, икѣ çул хушши тă-каççѣ йун... Анђах вăрçă ђаранмаст, упăн вѣçѣ курăнмаст.

— Ăçта упăшка?..

— Хăçан килет пиђђе?..

— Мѣнле пурăнатши ывлăм?—йѣреççѣ йалсенеђе.

Туллат вăрçă. Урнă самана!

...Салтака тухса кайма хатѣрленме нумай вăхăт кирлѣ мар. Пайан прикас, ыран хулана прийома каймалла... унтан карттус çине тăрăхла коккарт çакса йараççѣ те, салтак та пултăн. Еç нумай та мар.

Прийомран килекен çамрăксене йалйышсем тѣл пулсан:

— Ну, мѣнле, Çитăр, илђѣçи?

— Пире илмесен, кама илѣç...

— Петѣр, сана тата. Ай, карттус çине çакса йанă та пулас...

— Çукçке, ăна епѣ хулара, 5 пус парса илтѣм,—хуплаçа хураççе хăпѣ-пѣрисем.

... Виçѣ талăк вăхăт нумай мар. Çавăнна та васкаççѣ çамрăксем хуйхă витѣр савăнма, салтака кайсан—кам пѣлет унта мѣн пуласси.

Кунѣн-çѣрѣн йал тăрах купăс сасси, йурă-кулă, йѣрў-макару. Кам макăрат, ăçта кулаççѣ, мѣн йурлаççѣ—хѣн ăнланма.

Салтак йурри—хурлăхлă йурă. Салтак йурри ђерене кѣрсе ларат, ђуна ыраттарат.

«Карăмар. карăмăр салтакне,
салтакне,
Текех сире вăрçтарас çук,
варçтарас çук...»

Урам тăрăх салтак ађисем çѣмѣрттерсе пыраççѣ. Шур пит шăл-лисем çакса йанă, ыталанна, типиѣ пыртан вилес пек тарăхса кăш-караççѣ.

«Епир кайас çул çинђе, çул çинђе
Ик айккипеле хура вăрман. хура варман,
Хура варман пулмарѣ пуђ. пулмарѣ пуђ.
Хура та халăх пулђе пуђ, пулђѣ пуђ...»....

— Ах, Петук, Петук, савна ывалăм. Ăçта илсе карѣç сана, ăçта. сеншѣн хăвараççѣ мана тăлăха, кам пăхѣ, кам шеллѣ мана, ват тăлăх:

— Ан йѣр, апне. Епѣ нумай пурăнас çук унта. Епѣр кайсан рçи те ђаранѣ... Ех!

Урамра та халăх, çырмара та халах, хапха умеиђе те халăх. айан ăсатаççѣ салтака, вăрçа.

— Кама кирлѣ варçа, мѣн тума кирлѣ вал варçа,—шутлат стѣр.—Ăçташи манан телей хутаççи, ăçташи пурнăç сѣткенѣ. Ака, рщѣ çынни Çитăр сулахай аллине патша вăрçине парса хăварђѣ. тăран алă пулнă. Çитăрăн ала çук..... Тукасин Йармула варсăра

вилнĕ тесе хыпар килнĕ. Йармула аҫисем талаха йулҫĕҫ... Ех, пурнăҫ, ăҫта сан ырлăху.

— Мĕн ҫитменшн патшана. Мĕн ҫитменшн вал йармансене.

— Анттихрис ĕмĕрĕ ҫитрĕ пулĕ....

Йал пĕр ҫăварлă мар. Йалта ґтĕрлĕрен хыпарсем пур. Ҫиркў патенҫе касак калат: «Йармансем пире ҫĕнтерсен пĕтĕм халаха пусса тухаҫҫĕ вĕсем»,—тет.

Ҫăлах Ҫитар урамра халаплат: кам айăпли ҫинҫен шутласа пăхас пулатха ăна,—тет. Вăрҫăра ура пакăлҫакки таран шывра оккопра выртнă ҫухне, епĕр ҫыҫай папаласем ҫинҫен пĕлтĕмĕр. Мĕнле калас, кам айăплăшн ку вăрҫă пирки.

Мĕн калассшанши вал ҫалах Ҫитăр.

...Йурлаҫҫĕ салтак аҫисем.

Ушкăнпа утаҫҫĕ хурал пўрҫе патнелле. Варринҫе Петĕр пырат. Йурлат Петĕр, сасă тухмасан та йурлат. Ах, тўпере пит таҫка пĕлĕтсем йарăпаҫҫĕ. Йенҫен, ҫав пĕлĕтсем лапкăшнех ҫĕре ўксен, мĕн пулĕҫҫĕшн вара? Ах, кусҫашн йывăрҫке!

— Епĕр пурнас тенĕ ҫух шăпкан кутне майан шăтрĕ...

Хурал пўрҫе уменҫе пилĕк лав кĕтсе тăраҫҫĕ, унтан та, кунтан та халăх пуханат. Салтак аҫисем хыҫҫăн пыракан ушкăн кашни минутранах ўссе, йур ҫăмăркки пек хутшăнса пырат.

— Ах, Петĕр, Петĕр,—ўлет хĕрарам сасси.

— Пĕтрĕмĕрҫке, пĕтрĕмĕр. Мен курăпăр, ывлăм, сансăр пуҫне...

Ҫалтăр витер ҫул курнат,
Епир кайас ҫул пуҫ ҫав...
Ҫав ҫул тăрах, ҫул тăрăх
Мана савни асатрĕ...

Кайма вăхăт ҫитрĕ. Салтак аҫисем лавсем ҫинҫе йурлаҫҫĕ те, анҫах сассисем пĕтнĕ пирки—те йурлаҫҫĕ, те макăраҫҫĕ—уйăрма хĕн.

— Ей, йарапар!..

— Сывă пулăр йалйышсем!

— Сывă йул, анне, тавансем!..

Тĕттĕмленҫĕ. Уйран кайа йулса кайнă ĕне кĕтўвĕ ҫасăлса килет. Ҫат! тутарҫе малта таракан лавăҫ лашине. Тапартаттарса илҫĕҫ лашасем. Тепре куҫа хупса илнĕ ҫĕре вĕсем уй хапхирен тухса урса кайнă пек утăнҫĕҫ. Вĕ ене хунхура тусанлă пĕлĕт хупăрласа илҫе, салтак аҫисем курăнми пулҫеҫ, карĕҫ вĕсем ҫуратнă ҫĕршывран. Кам калама пултарĕ: тавранĕҫши, тавранмĕҫши вĕсем тепĕр хут ҫуратна йала.

Ҫитурай хурал пўрҫĕ патне тухман. Акă вал хĕрлĕ кĕпеллĕ, хĕрлĕ йитлĕ тухса тăҫĕ урама.

Уйалла пăхакан халах ушкăнĕ варне кĕрсе ґăҫĕ те Пишула курах карĕ.

— Есĕ те куптаҫке, кĕтўҫ, килха ман патăма,—терĕ ăна.

Пиштул ним шутламасăрах Петер Макарҫ патне пырса тăҫĕ.

Ҫўлтен пуҫласа ура тупанне ҫитиҫҫенех выҫăх ҫине пăхнă пек

пӑхса пыҫе стришна кӗтӳҫ ҫине. унтан ним шарламасӑрах, ҫукмар пек пысӑк ҫышкине ҫӑмӑрккаларе те, шарт шартлаттарҫӗ Иштула танлавран.

— Ах, анне!

Ӑҫта ҫер, аҫта пӗлӗт, Иштул ик-виҫ хут хутланса айаккалла сирпӗнсе ӳкре...

Стришна ҫавсасене тавӑрса пыҫӗ те, Иштула, ҫышкӑпа ислете пуҫларӗ..

— Ак сана. сысна ҫурине, есӗ ман сысна хакне тӑраймастӑн, ӑҫта хутӑн ман сыспана?

Салтак аҫисене асатма пына халӑхран стришнана хирӗҫ ҫӗнекен никам та пулмарӗ. Нурте, ҫӑварсене карса, ҫул пек хытса кайса пӑхса тӑҫӗҫ.

Хайен «ӗҫне» пӗтерсен Ҫитурай хуллен ҫеҫ килнелле уттарҫӗ, Мӗскӗн Иштул ӑнран кайса выртса йулҫӗ.

## 7. КӖРХИ КАҪ.

Ҫил те ҫамар. ҫӑмӑр та ҫил. Кунӗн-ҫӗрӗн, пӗр ҫарӑнмасӑр. ир те каҫ йапӑстатат йӗпхӳ сивӗ ҫӑмӑр.

Ернерен теплерен пӗрре ҫантлалӑк уйартат те, ҫун лӑштах пулат вара. Ун пек ҫухне темҫул ларас тесен те, пӳртре ларма ҫук. тулаллах йӑхарат кӗрхи йӑваш хӗвел.

Вырӑсла хапхалла, капӑрланса ларакан таса аслӑ ҫуртсем. Киве тутӑхна хапхалла, ҫине улӑм витнӗ, ҫӗрелле ӳпӗннӗ ҫерӗк пӳртсем. Сак ӗнтӗ вӑл—Айнеҫ йалӗн илемлӗхӗ.

Ҫеҫен хиртен, вӑрман урла ши-ши-ши шӑхӑрса килет кӗрхи ҫиламӑш. Уҫӑ сывлӑш пуҫран лӑш-лӑш шӑлса аҫашлат. Ата манна пӗрле тӗнҫе курма,—тесе калассӑнах туйӑнат вӑл...

Хура вӑрман хыҫне йӑпшӑм хӗвел анса пытансан, унӑн ҫутти пӗр самантлӑха Айнеҫ йалӗн арман пӗви шывӗ ҫине вӗри ҫӗлен пек ҫӑсалса ӳкет. Шыв хумханнӑ майӗне вӗлтӗр-вӗлтӗр туса, таҫта хайамата пытанат.

Ҫав вӑхаталла Айнеҫ йалӗнҫи йаш каҫҫасем, сар хӗрсем, кӑтра ҫӳҫлисем арман пӗви патӗнҫи лапӑма вайӑа пухӑнаҫҫӗ.

Пӗр кӗркунне йенне кайсан, авӑнсем ҫапса пӗтерсен. ӗҫсем пумайах та мар вара. Вайа та кула апҫах ҫамрӑксене.

Айнеҫри хӗрсем. каҫҫӑсем кӗрхи тӗттӗм каҫсенҫе тункӑсла выҫама пит хавас. Варӑм каска ҫине пухӑнса ларҫҫӗ те. иккӗмӗш автансем авӑтсан тин кӑшт кӑҫӑм ыйах тума саланаҫҫӗ килсене.

— Ей, тункӑсла пуҫлатпӑри выҫама.

— Ӑҫта пирӗн «тунката»?

— Ей, Иштул, манса карӑни мӗн хавӑн ӗҫне.

Иштул хатӗр. Вӗренне вал йаланах вайӑ пуҫламӗшенҫе тунката пулма. Каман пулас килтер «тунката». Кам пулмалла «тунката»—пару кетӳҫҫи, ҫи ҫухӑн аҫа пулмасан...

Пӗҫекренех кӗтӳ пахса ҫакар ҫемҫи мӗн иккенне ҫухланӑскер, Иштул нал хушшинҫе те йӑвашшӑн, тӳлеккӗн ҫӳрет.

Йаваш пулян. Ура ҫӗре тивми каҫака таки пек сиксе ҫӳреме

те ... пирӗншӗн мар вӑл. Кам çын пултлат кӗтӳçе йалта, кам çын вырӑнне хурат.

— Ех, пурнӑç, пурнӑç!..

... Шавлаççӗ çамрӑксем, шавлат çырма хӗрри, тӑнлат вӑл сасса тӗттӗмре пытаннӑ Çитурайӑн шыв арманӗ.

Çырма леш йенђе, тури урамра, тарӑхсах купӑсне тӑсат касӑр Куçма. Кӗрхи тӗттӗм касра, купӑс сасси ытла та хурлӑхлӑн илтӗнет, кӑмӑла пӑтратат, пурнӑçри йывӑр, тапхӑрсене, тинӗс шывӗ пек йӳçӗ купсене аса илтерет, вӑрӑмӑн сывлаттарат...

— Мӗскӗн епӗ, мӗскӗн,--шухӑшлат Иштул. Пӗр самантлӑха тӗлӗрсе кайат те, сасартӑк ӑса кӗрсе, нӑпӑр-йапӑр ура çине сиксе тӑрат.

— Ха-ха-ха!

— Хо-хо-хо-хо!

— Вот тӑк тунката.

— Иштул, Иштул, Варманкасри Çитурайӑн ђалӑш Аңђукне аса илтӗни мӗн?

— Ахађтен мар ђалӑш Аңђукпа çырма тӑрӑх тип вырӑнсем шыраса çӳрет. Пуйан хӗрне илсе хӑй те пуйасшӑн пулас.

— Иштул, сана «хуңђу» мӗншӗн тытса лӑканӑ çав...

— Епӗ, мӗн... камра пуласси çинђен шутларӑм... Санра мари, Хӗветле?—витсе хурат Иштул.

— Манра мар, манпа йунашар анђах пулнӑ вӑл,—тӑрӑхлат Хӗветле.

— Ну, Иштул, пайан каллах пӗрик пӳртлӗх пӗрене касрӑн пулӗ, тек кивӗ пӳртре пурӑнан, акӑ турӑ панӑ телей.

Иштул шарламаст. Çиленсе мӗн тӑвайрасси пур. Кађакан макрасси, хӗрипраçӑн куласси, ђухӑнсен йӗресси, тенӗ ваттисем.

Йал хысӗнђен кӳпшеме уйӑх шуса тухат. Упӑн çути çамрӑксен касхи вӑйине пысӑк илемлӗх кӳрет, çамрӑк ђӗресем тапассиневаскатат.

— Йара пар! Ех, хамӑр йал!

Ах, салтак йурри пит киђемӗн илтӗнет. Ма çавӑн пек киђемши. Ма пит сивӗши ђӗрене илемсӗр кӗрхи кас.

Тункӑсла вылђасси çухалат. Ђаплӑ кађђасем пуйантарах, хитререх хӗрсем хушшипе «ђӑмаççӗ».

Иштулӑн савни çук. Кам йураттӑр йалти ђухӑна, кӗтӳç ађипе. Иштул халӗ ӳссе те çитейменха, ађа çеç. Вӑрманкасран та Çитурай ђӗп-ђӗр йуна ӳкеређђеп хӗнеНӗ хысçӑн кӗтӳве пӑрахсах киле таврӑнмалла пулнӑ. Çитменнипе тата, ӗçлесе тупнӑ, хӑйне тивӗçлӗ укçине те илеймен... Çапла çав, кам йуратма, шелleme пултартӑр Иштула. Кашни хӗр пуйана кађђа кайасшӑнçке. Авалтан çапла пырат.

Утат Иштул çырма хӗррипе.

— Шӑпкӑр... Шӑнкӑртатса выртат çырмари тӑп-тӑр шыв.

— Ђӑт-ђӑт-ђӑт,—ђӑтлатат арман урапи. Авӑрат Çитурайӑн икӗ ђуллӑ шыв арманӗ...

Арман йӗри тавра, лӑђах ӳсеççӗ лапсака йӑмрасем. Кӗрхи сивӗсем пуслансан, ӑнсӑртран пӗр татӑк çил килсе вӗрсе, вӗл-вӗл вӗçеççӗ айалалла саралса кайнӑ йӑмра çулçисем.

— Мĕншĕн вĕçеççĕ, ăçта васкаççĕши вĕсем. Шухăш, шухăш. Питĕ çивĕҫĕçке вăл. Пуç ҫанкине шатарса витĕр тухассăнах туйăнать...

— Çамрăк пуçăм, мĕн курăнши есĕ малашне.

Арман вешникки тĕлне çитсен, Иштул пĕр самантлăха ҫарăнса тăҫĕ. Ик аллипе вешник карлăкĕнҫен йарса илҫĕ те, айалалла пăхса тăрать.

...Шăп. Нимĕнле сасă-ҫĕвĕ те илтĕнмест. Арман урапи кăна пĕр ҫарăнмасăр ҫăрлатса ларать: Çитурай пурăнать, çынсем йепле пурнĕç,—тесе калапă пекех туйăнать вăл.

— Ах, Ленă, ҫупăм...

Иштул сасартăк шуçне çĕклесе йĕри тавра пăхкаласа илҫĕ. Арман вешникки урлă каçса канав хĕррипе пырать Иштул.

— Ăçтан илтĕнҫĕ, камăн сасси пулҫĕши ку?

— Ленă, Ленă...

Ленă тесен Çитурайăн çӳхе туталлă, хура çӳçлĕ хĕрĕ аса килет. Çитурайа аса илсен пĕтĕм çан-çурăм ҫĕтресе кайать.

— Ах, халĕ те ыратнăн туйăнать шăм-шак, çан-çурăм, Çитурай ним айăпсăрах ăш мунҫа кĕртсе кăларнăран вара.

...Аса илет Иштул. Пĕрик уйăх кайарах, Çитурай патĕнҫе апатланнă ҫухне курнăҫҫĕ вăл хура куçлă, хура хĕре. Акă мĕне вĕрентеççĕ вĕсене кимпаçире. Акă вĕсем, Çитурай хĕрĕсем. Пĕри шăтнă шăтманах, арман сатĕнҫе каҫҫăпа йăпанса вăхăта иртерет. Тепри çырма тăрăх арçынсем шыраса çӳрет. Йăмра çумне тарса тăн... тăнларĕ Иштул. Йывăç хушшисенҫен, арман лупасси хыçĕнҫе икĕ çын мĕлки курăнать. Мăкăлтатнисем илтĕнеççĕ.

— Анҫах, кампа иртерет вăхăта хура хĕрĕ?

— Миттă, есĕ... мана пĕҫҫикĕ тесе шутлатăн пулĕ... Çук..: епĕ Туркенĕв романĕсене пурне те вуласа тухнă...

— Е-е, Миттă, касак... стришна... вĕсем пурте пĕр йăваран тухнă...

Çан-çурăм тăрăх темĕскер сиввĕн йăр туса ура тупанне вĕçсе çитсе çухалҫĕ.

Куççем пĕр тĕлленĕ çĕре ниçта сикмесĕр пăхаççĕ. Çăтса çăварти сурҫăк та анмасть, ăшра çав тери капланса çитрĕ, ҫĕре тулса çурăлса кайас пекех тапать. Ҫĕре танни уççăнах тăплава çитсе хăлхана илтĕнет.

Керхи таҫка пĕлĕт айĕнҫен кулкаласа кӳпшеме уйăх тухать. Унăн çути арман лупасси хыçĕнҫе ыталанса ларакан икĕ çын мĕлки çине ӳкет... Икĕ çын мĕлки нумайҫен çыпăçса таннине курах паҫĕ Иштул. Авă... айакрах та мар.

Пытанмалла выҫанă пек, уйăх каллах таҫка пĕлĕтсем айне кĕрсе çухалать. Уйăх пытаннипе Иштула темле киҫемĕп туйăнать.

Арман канавĕ тăрăх утрĕ вăл кайалла çаврăнса. Канав хĕрĕнҫи кайу курăк ура айĕнҫе ҫаштăртатса пырать. Уйăх çуттипе пĕрре çуталса, тепре тĕттĕмленсе илекен çут тĕнҫе, кăкăра кăшăлласа илнĕ пекех туйăнать...

Лапăран хапарса йал хĕррине çитсен сывлăш çавăрса илме ђарăнса, çырма йенелле ђылайђђен пăхса таđĕ Иштул.

Мĕн шутларĕши вăл ирĕкре. Ун çинђен кĕрхи тĕттĕм кас кăна пĕлет, анђах вăл никама та, никама та калас çук...

Çул хĕррине, çырманалла пăхса урасене усса ларђĕ Иштул. Хырăм выçнипе тата ывăннипе кăмăл иатранпă пек, ђĕркуççисем тăр-р... тăрлатса илеççĕ.

Йалта шăп. çырма лаппинђе пађ тĕттĕм. Сывлăш çăл шывĕ пекех тăрă, иçта та пер сасă-ђĕвĕ илтĕнмест, ђĕре тапи йывăç млатукпа шакканă пекех туйăнат. Хутран-ситрен çеç, йытăсем вĕрнипе хутăш вăйăри çамраксен сассисем илтĕнеççĕ те. çырма тăрăх таçта хăйамата кайса çухалаççĕ.

Тӳпенелле пăхса илет Иштул. Ните аслăн, пушăн, сиввĕн туйăнат çӳлте. Пĕлĕтпе çĕр хушшинђе пĕтĕмпех хуйхă. пуша пухăннă пек туйăнат.

— Мĕнши унта, тӳпере?..

— Турă, теççĕ... Мĕншĕн вăл тура çĕр çиђи пурнăçа йĕркелеме пĕлмест, ђухăнсене пулашмаст. Пуйансен вађђи çеçши вара вăл. Пулсан та, пирĕншĕн мар пулĕ çав... Епĕ, аннене илсе кайпă кас, ссрĕпех Микул тура умĕнђе ђĕркуççи тарĕнђе кĕлтурам, ним усси те пулмарĕ... Пикек çине синкек тенĕ пек, пуйан стриппа тытса тӳпкерĕ... Мĕншĕн? Мĕн тупă епе Çитурайа? Унтаипа пĕр уйăх вырăппа выртрăм. халĕ те пĕтĕмпех сывалса ситнĕ теме çук, епĕ вунвиç çулхи аđа...

Вĕсен аđисем ава. арман сатĕнђе ыталанса лараççĕ, çава вĕсен ĕçĕ, вĕсен пурнăçĕ... Епĕ пур кĕтӳ патĕнђе çӳресе тупнă укçана та илес çук. кама кайса калас, камран пулăшу ыйтас... Анне халĕ те килеймерĕ. хăçан килессине те пĕлме çук.

Ех, тĕнђе, тĕнђе!..

— Ех, мăнтарăн мĕскĕн пурнăç...

Те сивĕ пек пулнипе—шăлсем ниййепле те тĕл пулаймаççĕ, шаклатаççĕ пĕрмайах пĕр-пĕрипе. Сӳлти тута хĕррисене йун тухас пек çаварса çыртат Иштул. Кантарлахип пек сута пулнă пулсан, ђышкăсем хăйсем ђăмăртанниие çеç те мар. ураххине те курпа пулĕђђĕс çынсем пулнă пулсан. Анђах куракан пулмарĕ; пĕтĕмпех хупларĕ тĕттĕм çĕр...

...Ака, пуранаççе пуйансем. Ма пурапас мар, ма саванас мар вĕсен. Мĕн çийес тенĕ. çавна çиме пулат, мен тахăнас тенĕ, çавна тахăнма пулат. Вăл та пур, ку та пур: лаша та, ĕне те, сурăхсем те, сыснасем те, укçа та... Мункун çитет—çĕнĕ кĕпе. Çăварни килет—лаша кӳлсе тухаççĕ те катаđђи ђупаççĕ, раштавра—ĕçкĕ-çикĕ Мĕншĕн пурăнас мар апла пулсан. Епĕ пур сĕтне çăвĕне те пĕрик хут анђах тутанса пăхатăп...

— Ах, пуйасђе манăн,—шутлат Иштул.

...Пĕр çĕр тенкĕ пулсан хулана кайса тавар илĕттем, лавкка уçаттăм. вара лавккара хĕвелçаврăнăш çисе çеç лараттăм...

Анҫах, ҫӗр тенкӗ укҫа ҫук, тупӑнас та ҫук. Иштулӑн пуйас тенӗ ӗмӗҫӗ те ахалех йулат.

— Мӗн тӑвамши.

Пит ҫӑмӑртисем ним мартанах хӗрелсе кайаҫҫӗ, куҫҫуҫ тухасшӑн макарас килет. Анҫах макӑрса ҫамӑл пулӗши. Ҫук, ҫӑмӑл пулас ҫук, ҫавӑнпа та ҫӑтас пулат Иштулӑн, ҫӑтас пулат...

— Тепӗр йенҫен каласан—манӑн пурнӑҫ ытла пит наҫарах та мар...—йӑпанат Иштул...

Улӑм ҫеҫ витнӗ пулсан та, пӳрт пур...

Хӗл касма ҫитмесен те, ҫӑкӑр пур...

Пӗҫӗккӗ пулсан та... шӑлӑм пур...

* * *

Ҫырмаран икӗ ҫын мӑкӑлтатса хӑпараҫҫӗ. Иштул тӗлне ҫитсен вӗсенҫен пӗри ҫаранса тӑҫӗ:

— Ес кам?

— Епӗҫке.

— А, Иштул, есӗ мӗскер ҫырма хӗрӗнҫе пӗҫҫенех ларан. Йе ытти аҫасемпе, пирӗн пеккисемпе ҫӳрес килмести.

Икӗ мӗлке иртсе карӗҫ...

Вӗсен хыҫҫӑн Иштул та хӑйӗн вырӑнӗнҫен тӑрса килелле уттарҫӗ.

Акӑ, килте куҫ умӗнҫех. Кӗрхи тӗттӗм касра, ӳпӗннӗ ҫӗрӗк пӳрҫӗ, Иштула тата ытларах ҫӗрелле пусӑрӑнса ларнӑ пек туйӑнат. Хапха йунисем киҫемӗн кӑнтарса лараҫҫӗ. Пӳрте кӗрсен Иштул тӳрех вырӑна тирпейлерӗ, ура салтса силлерӗ, кив аҫампа витӗнсе саланмасӑрах выртрӗ.

— У-у-у! улат кӳршӗ йытти. Вӑл сасӑ ҫере патнех ҫитет, шӑмшака ҫӳҫентерет, пуҫра салху шухӑшсем ҫуратат.

Ыйӑх килмест. Пуҫа пӗрин хыҫҫӑн тепри тӗрлӗрен шухӑшсем кӗреҫҫӗ. Тепле пулсан та, «ҫӗр пуҫ ҫӑтат» теҫҫӗ ваттисем.

...Пирӗн патӑрта ыраш сайра та, лутра, ман апасем там тӑпра та, тимӗр пек хытӑ... Ӑҫта ман шанҫӑк, мӗнре ман шанҫӑк. Урхамах пек ут пулсан, йуланутпа тӗнҫе касма тухса кайӑттӑм. Анҫах та, урхамах пек утӑм ҫук... пулас та ҫук пулӗ... пихӑҫан та. Лаша ҫук—хресҫенен пурнӑҫ ҫук, кам пулӑшӗ мана лаша тупма. Кам пулӑшӗ ҫынсем пек пурпакан пулма.

Шухӑш хыҫҫӑн шухӑш. Шухӑшӑн вӗҫӗ те ҫук... шухӑш ҫил пек ҫавраka...

Темӗн тӗрлӗ ҫаврӑнкаласа илҫӗ Иштул. Унтан вара лӑпланса выртрӗ.

...Йулашки мӑшӑрсем те ыранҫҫен уйӑрӑлса ӑшӑ пӳртсене кӗрсе выртрӗҫ. Айпеҫ йалӗ йывӑр ыйхӑ ӑшне путрӗ...

**Пролок вӗҫӗ.**

# ТАПРАНТĂМĂР

## ЛУККА ЂАПЛИН

*Н. ВАÇАНККАНА.*

1

Тăваттăра тултартăмăр пиллĕк!
Ӳсĕм çине ӳсĕм тăрланат.
Вуншар Тнепростройсен респуплĕкĕ
Пайан [1]) аслă çула тапранат.

Хамăр вăйа виçетпĕр хаљ епĕр.
Пайан, ак, ђаплă парат:
Тăваттăра çирĕплентĕмĕр.
Çĕнтерӳ каллех çĕнтерӳ парат.

Çĕр ђăмăрĕн пролеттарийĕ!
Утарлă прикатă
Раппăртне илт!
Мĕнле м ĕлйунсен хастарлăхĕ
Технĕккă çӳллĕшне çĕнсе илет.

Мĕнле ђыслăхпа паттăрлăх ĕçĕ
Кеокрафине çĕнтерет,
Мĕнле Аслă Атăлăн вĕçĕ
Кĕçех тăватшар тинĕсе кĕрет.

Çĕр ђăмăрĕн пролеттарийĕ!
Илт, утарлă прикатă раппăртне:
Мĕнле çĕр ђăмăрĕн улттăмĕш пайĕ
Ыткăнат комунисăм патне.

2

Мĕнле, ав:
Слоттăй, франккă та толлăр [2])
Айалран айăла вăркăнат.
Çĕнĕ султан миçешер томнă
Лортсен çĕрĕнђе хупăнат?

---

1) Иккĕмĕш пилĕкçуллăхăн çĕнçулĕ кунне çырнă

2) Слоттăй—Пољшăри, Франкă—Франтсири, Толлăр—ÇАПЦ укçа-тенкĕ виçисем,

Ђĕтренђĕ Паппен капинеђĕ,
Кувĕр тĕнђи те крисĕспе силленет.
Çĕнĕ çулĕ те киввипех килђĕ,
Кувĕра вилĕм сĕнме, пиллеме!

Çĕршер Шлейхĕртан капинет уçăр,
Çĕршер Русвелт та Понкур!
Пурпĕрех ĕçхалăхĕ çĕтĕк те выçă...
Панккăсем те панкрут! [3])

3

Тăваттăра тултартăмăр пиллĕк!
Ўсĕм çине ўсĕм тăрланат.
Вуншар Тнепростройсен республĕкĕ
Пайан аслă çула тапранат.

Патша тапхăрĕнђи пĕр ĕмĕр
Мĕскер илнĕ ылттăн Уралтан,—
Ана вунпилĕк çулта илтĕмĕр,
Ђукун шăратнипе—Йевропăпа тан!

Пилĕкçуллăхăн акă тиакрамĕ
Улăхат ђăнкă пусăма.
Кашнинех тĕллесе кăтартами?
Ђылхвăрнех паратăп сăмах:

Тăватă çул кайалла— **утмăл саккăр!**
(Томнăсен хисепĕ шутланат)
**Вăтăр тăваттă**—пĕрле хушатпăр—
Кăтартат пайанхи ђыслана.

Урал рути айне хуратпăр
Иисçетри Куçнетск кăмрăкне.
Совет влаçпе електритсă хушатпăр—
Йепле хуратпăр аслă çул,
Комунисăм патне.

Вĕçен-кайăксем ĕлĕк виçнĕ тĕр. . .
Тнеппăрăн урлăш-тăрăшне,
Ана вођттăпа, омпа [5]) виçетпĕр...
Шывĕ, çилĕ, хĕвелĕ
Кĕрсе вырнаçат пралуксен ăшне.

Мĕскерле хўме тата хађ, калăр,
Полђшевиксем çĕнтерейми хўме?
Октапĕр вутĕнђе çуралтăмăр
Çĕнтерме, çĕнтерме, çĕнтерме!

---

3) Панккă пысăк парăма кĕрсе йухăнса кайнипе панкрут теççĕ.

4, 5) Вођттă, Ом—електритсăри виçесен йађĕсем.

4

Хăрах ури мар вăтамăн,
Иккĕшлех хаљ вăл
Колхосла çул çинђе.
Трактăрсен хисепĕ **150000** йахăн
Пайанхи **2500 МТС**-сенђе!

Иртсессĕн
Пилĕкшер çулталăк
Çамрăксем ыйтĕç муçейра:
—Мĕн ку?
—Мĕскер акă, çакă?
Ответлĕç:
—Сухапуç
Пулнă
Раççейра..

5

Тăшман „шăлтарат“
„Веçех... пире майлă“,
Пирешкел тăхăнаў тăп тăп.
Пайанлăха вăл—йăл-йăл,
Ыран нăй-нăй,
Тепĕр кунне—тўп-тўп!

Малтанах тыттарăр тўп-тўп,
Сăнаса тăшман йăл-йăлне,
Тăхăнмашкăн ан парăр тăп-тăп,
Тинкерĕр çĕр хутлă тумтирĕ айне!

6

Хамăр вăйа
Виçетпĕр хаљ
Епĕр,
Пайан, ак,
Ђаплă парат.
Иккĕмĕш
Пиллĕке
Кĕтĕмĕр—
Çĕнтерў
Каллех
Çĕнтерў парат.

31-XII-1932 ç.

# ХУРЛĂХЛĂ КĂРАПСЕМ

## ВАЛ. АХТУПАЙ

„...Рейăн çинҫи Тӳисперк портĕнҫе темиçе уйăх хушши кăмакисене сӳнтерсех 1100 пăрахут ĕçсĕр тăраççĕ." „Огонек."

Туран—аната,
    анатран—тăваллаҫҫĕ...
Пĕлĕте
    тĕтĕм карăмĕ карса,
Лăпкă Рейăн
        хăйуллăн
        хăвалаҫҫĕ
Кимĕсем,
    вéçрен-вĕç кăкарса.

Карап хыççăн—карап,
Кимĕ хыççăн—кимĕ...
Çиренăсем
тăсаҫҫĕçĕ
хăйуллăн хитре кимăн,
Йухăнаҫҫĕ
    Лапкă Рейăн
        ĕмĕр тăрăх,
Йăнкăр-йăнкăр
        ҫĕтретеҫҫĕ
        хурçă тĕкĕрне.

Рейăн тарăн,
Рейăн анлă,
Рейăн вăрăм...
Рейăн вăйлă
    Сирпĕтеҫҫĕ
        мĕлйун çутă
        çырансем хĕрне.

Карап хыççăн—карап,
Кимĕ хыççĕн—кимĕ...
Çиренăсем
тăсаҫҫĕçĕ
    хăйуллăн хитре кимăн.

Карапĕ-киммисем
        ишеҫҫĕçĕ
        тăп-тулăх,
Тăнках
        тийенĕҫҫĕ
        тем-тĕрлĕ йапала:
меттал,
машшин,
какай та
тырă-пулă...
Вĕл! вĕлкĕшсе вĕçеҫҫĕç пин йалав.

Карап хыççăн—карап,
Кимĕ хыççăн кимĕ...
Çиренăсем
тăсаҫҫĕçĕ
    хăйуллăн хитре кимăн.

Пайан
    мăн Рейăнăн
        илем пăртакçă йӳнĕ.
Мăн Рейăн тĕкĕрне те
        савмаст
        хитрен хĕвел.

Карап.
Карап.
Карап...
Кăмакисем
    пурин те сӳнĕк.
Пăхаççĕ
тĕттĕмĕн,
ним сас-ҫĕвĕ.
Трупа.
Трупа.
Трупа...

Вăрман пек йăвă маӡтă.
Пăхаççĕ хурлăхлăн,
Пĕри те сывламаççĕ.

Ниçта пĕр ӡĕрĕ çын...
Хутсем çинӡе—пиӡет.
Масар пек шăплăх та,
Сакай пек
тĕттĕм хурлăх.
— Хăçан хĕвел пăхат?!.
— Хуçа хăçан килет?!.
Çыран тулли трупа
пăхаççĕ сăртсем урлă.

Трупа.
Трупа.
Трупа...
Вăрман пек йăвă маӡтă.
Пăхаççĕ хурлăхлăн,
Пĕри те сывламаççĕ.

Карапăм-кимĕмсем,
Йăм-йăнкăр лăпкă Рейăн
Ӡăн-ӡăн хуçувăр вăл—
ĕçри хайар мĕлйун.
Тĕнӡе хĕвелĕшĕн
тăкин-тăкат вăл йун,
Çавах вăл килĕ ак,
Хăйуллăн
килĕ те
Мухтавлăн
çĕнтерейĕ.

Трупа.
Трупа.
Трупа...
Вăрман пек йăвă маӡтă.
Пăхаççĕ хурлăхлăн,
Пĕри те сывламаççĕ.

1932 ç.

---

# ТĔНӠЕ ИЛЕМĔ

## ВАЛ. АХТУПАЙ

„Здравствуй Европа!
Твой галстук хорош,
Фрак замечателен,
Вид... никудышен",
А. Безыменский.

Тĕнӡемĕр
çăлăнӡĕ
империалисăмлă вутран...
Планеттăмăр тулли
йешĕрейтĕр
канăç-савăнăç...
Планеттăмăр
Канттуӈри
телейлĕх кавăнĕ,
Ĕмĕтри
утоппиллĕ утрав.

Планеттăмăр çинӡе
йавăнат
пĕр «шăплăх кайăкĕ».
Çут тĕнӡе:
«проçперитги»,
«прокресс»
сăмахсем сирпĕнет.
Çут тĕнӡен
ӡи усал
пăх-шăклă пайĕ те

Пулмаллăн
туйăнат
пыллă-çуллă кĕтес.

Çеçкелĕхлĕ илем—
тĕнђен пайанлăхĕ.
Йурлат
Пенкалире
сатур Рапинтранат.

Тĕнђе
пуйан пайан.
Тĕнђен пуйанлăхĕ:
паллон-паллонĕ
кас,
орути те
кранат.

Илемлĕх
вĕçĕмсĕр çĕр ђăмăрĕн:
Йалсем те
хуласем,
çеçен-хирсем,..
эван пăхма.

Кунта
куллен çăват
телейлĕх çăмăрĕ.
Телейлĕх çăмăрĕ:
вут-хĕм,
тăхлан...

Ўсет кранитсăсăр
тĕнђе пахалăхĕ:
Нйу-Йорк тăрри
ўссе пĕлĕте илет.
Савăнат, савăнат иккен
Америк халăхĕ:
Урам-урамĕпе
выçса вилет.

Кунта:
кафе-шанттан,
тшас-пант,
илемлĕ хĕр...

Ташлаççĕ
некăрпа франтсус варйеттерэ...
Кранитсăсăр
тĕнђен илемлĕхĕ:
Йурла ташлах
ўкеç варвиттирен.

Куљттурă
кĕт кайрађђĕ ĕлĕкрех.
Ку пулнă, тен,
тратитси хурлăхĕ?..
Пайан
ўсет йăхсен
куљттурлăхĕ:
Профессăрсем
ĕçлеççĕ
творнĕкре.

Типломатти тени
ђĕреллĕ
кăмăллă:
Курка тулли
тыттарĕç
тутлă интервйу...
Тулли курка тытса
«франтсусĕ» кăмăллăн
Тафилалет çĕрне
тăват ђĕп-ђĕрĕ йун.

Кранитсăсăр ўсет
йăхсен тăванлăхĕ:
Йепле
лăпкат пĕри
Манђшурине.

Çĕршывĕпе
сапат
кăварлă хĕм,
Манђщуринне
кăшлат
çан-çурăмне.

Тĕнђе илемлĕхĕ:
ултав!
шыв пек шывак.

Ман çĕршывра
кăна
етемлĕх
ирĕклĕ!

Ман çĕршыра
йанрат
ĕç лирĕкки,
Ман çĕршывра
кăна
ĕç ирĕклĕ!..
Еп ђĕререн
савап
çак çĕршыва.
Еп нихăçан
сутмасп
çĕршывăма!..

Ийуђ, 1932 г.

---

# ТĔНЂЕ ПРОЛЕТТАРИЙĔН ПАЙАНХИ КĔРЕШӲ ЙУРРИСЕНЂЕН

Тĕнђипех, пролеттарисем, пĕрлешĕр!
Пирĕн вăй вăл, пирĕн ирĕк, пирĕн влаç.
Пур вăйранах, комунарсем, кĕрешĕр,
Тăшмана хĕрхенмешкĕн йурамаст.

Ĕççыннисем, хĕçпăшал хаљ алла илĕр,
Тăпăлтарар палађсене тĕпренех,
Тĕнђипех пролеттарисем, пĕрлешĕр.
Çĕнтерер те, хĕвел пăхĕ хĕрӳрех.

---

„Пур савăт, хусканăр!
Пĕр харăр пуçтаркăр!
Тухăр çапăçмашкăн,
Вăрçмашкăн, вăрçмашкăн.

Пăшал авăрла,
Ес тĕлле лайăхрах.
Кĕреш, пролеттари»
Ĕçӳшĕн хăвах.

(«Коминтерн»).

---

# ТĂВАЛЛА

## РОМАН

### ИККĔМĔШ ПАЙĔ

### В. И. КРАСНОВ (Асли).

### 1. ПАЛЛАМАН ÇЫНСЕМ КИЛСЕН.

Шкул умне райĕçтăвком лаши килсе ђаранна-ђаранманах Анатçырри çынсем хăйсен ĕçĕсене хăпăл-хапăл пуçтарма васкарĕç... Михетер те, пĕр пухуран та йулманскер, шкул умне палламан çынсем килсе ђарăнсан:

— Каллех пуху тума килђĕçĕ пулĕ, колхос çинђен пулĕ-ха,— тесе пуринђен малтан йăпшăнса васкаса утрĕ.

Пахђа алăкĕнђен лăпăпа арпа йатса урама тухнă Тиђук Йакурĕ сăмах хушмасăр васкаса утакан Михетере кăшкăрса ђарђе.

— Ăçта капла васкатăн?

Михетер уттине ӳстерсе:

— Шупашкартисем килнĕ пулас,—терĕ те, Тиђук Йакурне хăвăртрах васкама хушса малалла утрĕ. Тиђук Йакурĕ малаххай çĕлĕк айĕнђе хăйпе-хăй мăкăртатса кĕçĕн каликкерен кил хуппине кĕђĕ. Кил хушшине тухнă арăмĕ упăшкине Михетер сасси васкаса пыма хушса хăварнине илтрĕ. Выђăхсем вађђи илсе тухнă таса мар шывлă лаххание умне лартса çатăртатма пуçларĕ.

— Кулкус тăвасшăн пул-ха, тата мĕншĕн çӳређђĕр. Авă малти Атав-кассинђе колхоса прĕксĕрех çырăнтарнă, тет. Ђăх-ђĕпсене те пĕрлештермелле тунă, тет,—терĕ Тиђук Йакур арăмĕ васкаса.

Тиђук Йакурĕ ытла кăшкăрашса калаçакан арăмне ђасах пӳлсе лартрĕ. Тавран пăхкаласа илђĕ те темскер итлесе тăнă пек пулђĕ. Арăмĕ патнерех утса пыђĕ.

— Мĕн есĕ, пĕлнĕ-пĕлмен—лăркатăн...

Тиђук Йакур арăмĕ упăшки ӳркенсе, итлесшĕн мар пулса итленине ђухламарĕ.

— Хирĕçри кинеми каçса ларђĕ. Вăл Натали патне хăнана кайса килнĕ те, сыснине ђиктерес тесе ларать.—Çынсем çывăрмаççĕ...

— Вара?.. Мĕн есĕ кирлĕ-кирлĕ мар йапаласене пухса çӳретĕн.

— Вара, вара, мĕн есĕ хирĕçетĕн. Итле-ха... Ăçта, ир-ха вĕт, тетĕн. Натьлисем пĕр каçра иккĕшне те ђиксе пăрахнă, тет,— терĕ те Тиђук Йакур арăмĕ, упăшкине кура пулас, тавран пăхкаласа илђĕ. Çапах та ăшĕнђе капланнă шухăшсене веçех упăшкине каласа парасшăн пулђĕ.

— Ҫанах та, тăваҫҫĕх ĕнтĕ вӧсем ăна... Саккупа пикам та хирĕҫ тарас ҫук. Пурĕпĕрех пĕрлештереҫҫĕ пулсан, хамăрăн та пусас пулат... Тиҫук Йакурĕ нимĕн ҫĕнмесĕр тăрсан аллине сулҫĕ те:

— Тата ҫынпа ан калаҫ... Хĕрарăмсем есĕр пурсăр та ҫапла ухмах вĕт, терĕ те лăпăри арпине хытса ларнă йур ҫине сапаласа тăкрĕ. Унăн арăмĕ тата та темскер каласшăн пулҫĕ пулас, анҫах упăшки нимĕн ҫĕнмесĕр сурăхсем хушшинҫе хутăшса ҫӳренине курсан, хăйпе-хăй мăкăртатса, лаххан шывне ĕнине хисте-хисте ĕҫтерҫĕ. Тиҫук Йакурĕ, калăн, темскерле хăрушă шухăшсем ҫинҫен шухăшлат. Унăн хăлхине арăмĕн макăртатнă сăмаххисем илтĕнмеҫҫĕ. Кирлĕ мар ҫĕртенех вите умĕнҫе таракан сенĕке илсе улăмсене сапалам пек туса ҫӳресен, Михетер каласа хăварнине асне илҫĕ пулас, сенĕкне выранне хуҫĕ те ҫĕлĕм тивертсе хапха патнелле утрĕ.

Арăмĕ кăна курса, кăшкăрса пăрахрĕ:

— Аҫта?!.

Тиҫук Йакурĕ утма ҫаранса, калла ҫаврăнса пăхмасăрах, арăмне хирĕҫ тавăрҫĕ:

— Ҫаврăнса килес-ха...

— Ҫаврăнса-а?.. Мĕн хатĕрлесе хупă унта сана ваҫҫи!..

— Ытла нумай калаҫатăн... Есĕ ху ĕҫне пĕл. Ав, аҫасем ҫухăраҫҫĕ...

— Хăҫан петĕ ҫак сирĕн пухусенҫе лăркаса ларасси! Ак тĕнҫе мăшкалĕ. Мĕскер йапала ку! Пуху... Ан ҫӳре, килтен тухнă ан пултăр! Унта ҫӳренипе хырăм тăранас ҫук...

Ҫурт пуҫĕ пӧр вырăнта мăлаххай ҫĕлĕк айĕнҫен тĕксĕмĕн пăхса тăрсан нимĕн каламасăрах урама тухса утрĕ.

Арăмĕ ĕрлешсе карташне йапратса йулҫĕ:

— Мĕнле самана ку!.. Вăт паҫмих, хĕл каҫмалăх вут-пашкă хатĕрлемен вĕт. Иртнĕ ҫулсенҫе ку вăхăтҫен тăватшар хутăрнă. Каҫал... пĕрре хутăрман. Ҫарамас ҫӳремелле пулат... Ҫапла ҫухăрашса ҫамарта тума аптăранă ҫăхă пек пăркаланса, шăртланса, аҫисем ҫĕмĕрĕлни илтĕпекен пӳрте кĕрсе кайрĕ.

Каҫ та пулҫĕ, анҫах пайан тепле ҫанталăк лăпкă—хĕллехи вăхăт тесе те калас ҫук. Пĕҫĕкҫĕ пӳртсенҫен ҫемҫе йур ҫине хай ҫутисем сапаланнă. Шурă тăмаи перҫисем лĕпĕшсем пек вĕлтĕртетсе вĕҫеҫҫĕ.

Тӳлеккĕн «шăкăлтатса» ларакан ҫăваш йалне тепĕри, пасланна куҫлăх витĕр пăхакан: «ҫăваш йалĕ улшăнман, ĕлĕкхи пекех, хура пӳртсем те пĕтмен-ха», тесе те калама пултарат. Ун пек калаҫакансемпе тĕл пулма пулат пурнăҫра. Анҫах Кипек-касси никам паллаймии улшăннă: Ку йалта револуци пулаҫҫен сырăва пĕлекенсем те 19% çеҫ пулнă, 1930-мĕш ҫулăн пуҫламăшне 84% ҫитнĕ. 600 йатаклă Кипек-кассинҫе револуци пулаҫҫен пурĕ 16 плук ҫеҫ пулнă. Аслă револуцин хăватлă хумĕ йала ҫитет: укҫа-тенкĕ киңçен паракан йултавлăх, машиналлă йулташлăх уҫăлат. Сахал мар хăйĕн ĕмĕрĕнҫе лаша кӳлсе курман ҫынсем лашаллă пулнă. Йур-варсăр типсе пурăннисем ĕнеллĕ пулнă. Йăвăҫ сухапа йăвăҫ сӳрене пăрахса пĕр касăллă, йе икĕ касăлла плуксем туйанна. Анҫах пурте пулса

çитмен-ха... Тăваллах утас тесессĕн сахал мар кĕрешмелле, вĕренмелле...

Кипек-касси улшăнна, тултан çеç мар, унăн пĕтĕм ăшчикки раснах урăхланнă. Анчах ăна курма иĕлес пулать. Кипек-касси вăçĕмсĕр пĕр таттисĕр кĕрешӳре, вĕçĕмсĕр пĕр таттисĕр социализм сулĕпе улшăнать. Тен, мука пуртăпа вутă çурнă хыççăн хăйне хăй стулчар вырăнне шутлакан, Анаткасри Сахимен тахçанах Чăваш музейĕ валчи сăрласа илмелли хура пӳртне курсассăн:

— О-о! Улшăнман. Йупа у йăх нимех те памарĕ, тесе те кăшкăрĕ. Тепĕри, çавăн хăраххийех, Сахимеп хура пӳрчĕ çинчен çавар уççанах, ăшне кĕрсе пăхма пĕлмесĕр, (ун çинчен шутлама та пĕлмеççĕ вĕсем) ытла та çĕкленсе, пурне те илтерсе хăйĕн йатне вăхăтлăха та пулин чапа кăларасшăн çапла çухăрашать:

— О-о! Улшăнман, Октапĕр нимех те паман-им?—тесе кăшкăрса ыйтать. Çапла çав вăл пурнăçра, тĕрли—тĕрлĕ куçпа виçет, тĕрлĕ хак парать.

Акă, тăхăр йалпа ĕçкĕ-çикĕ туса савăннă аслă урам.

Хăрушă тăман тухсан мăн кăмăллăн кашланă вăл. Сивĕпе çил ачи ĕнтĕркенĕ, пысăк çуртйĕрсен чӳречe йанахĕсем хушшинче йĕрсе çĕр каçнă. Лăпкă, тӳлек çанталăк пулсан, йурă сасси йанранă...

Кĕчухнехи кас урăхла.

Пуйанкас ĕлĕкхи хăйĕн патмар пулнă кĕлеткине сыхласшăн аманнă çунатсемпе те пулсан вĕçсе, хăйĕн пысăк, çĕрме пуçланă кĕлеткине хура пĕркенчĕк айĕнчен çĕлен-калтан шăхăрса чашкăрать. Аклатса та пахать. Вĕçĕмсĕр пăшăлтатса калаçать...

Йал çывăрмаст...

Таçта айакра çамрăк йанраклă сасă сăвăланса хăлхана кĕрет.

«Пуйан хапхи сăнчарлă,<br>
Çапах утса кĕтĕмĕр.<br>
Пуйан пусми пуставлă,<br>
Çапах пусса кĕтĕмĕр...»

Йурă петет. Йал тăплансан пус тарасисем кăтартатса калаççа йал шăплăхне сиреççĕ. Йыт-качка иртен çӳренсене пулас хар тапăнса сыпăçат...

Ĕлĕкхи мар...

Йал улшăнна—çĕнĕ мечет, çĕнĕ йăла, çĕнĕ хуйхă, çĕнĕ савăнăç!

Çприттун Мирунчăн аслă ачи, пионерсен вошаттăйĕ Миккул, урамран кĕнĕ-кĕменех шăнна урисемпе шукаласа, йалти çĕнĕ хыпара килтисене пĕлтерчĕ.

— Шкула лайăх лашаллă çынсем килчĕç,—терĕ вăл.

Çприттун Мирунчă тепчеме пуçларĕ:

— Ăçтан, камсем?..

— Ай, лаши, ех çавăн çине ларса чупасчĕ пĕрре.

— Пăрах-ха çав катавчипе, мнçен килнĕ?..

— Виççĕн. Пĕри саран сумккă йатнă.

— Сут йала килмелле терĕç, çавăн пек илтнĕччĕ пĕркун, çав ĕçпе мар-ши?..

Пионер ђӑлхи-ҫӑпатисене салтса пӑрахма та ӗлкӗрђӗ. Кӑмакана тирме хурса, аллине кӗнеке илсе сӗтел хушшине кӗрсе ларнаҫрӗ.

Ҫприттун Мирунђӑ кӑмака ҫинђен анђӗ.

— Кайас пулат...

— Кайас пулат ҫав,—хушрӗ пионер.

— Мӗн есӗ пӗђӗклех виртлеме вӗрентӗн!? йатлаҫса пӑрахрӗ ашшӗ.— Ну-у, самана... урӑх сӑмах тупаймасӑр «канӑҫсӑр ҫул»,—тесе хуђӗ.

Пионер ђӑтаймасӑр каллех ашшӗне тавӑрђӗ.

— Елӗк пире ђитла канӑҫлӑђђӗ-им вара?—тесе ашшӗн суранлӑ вырӑнне тӗртсе астутарђӗ.

Амӑшӗ ӗҫђен ўснӗшӗн хӗпӗртекен ывӑлӗ май пулђӗ.

— Тӗрӗс калат вӑл. Хађхи самана ҫинђен санна пирӗн мӗн калаҫас. Йепле пулсан та ҫын шутӗнђе. Револђутси пулатђен мӗн пурђе вара! Ађасем сӗтсӗр ўсрӗҫӗ вӗт. Ҫапах та халӗ шӗкӗр. Иađар-и, аван-и лашамӑр, ӗнемӗр, ура-алӑ вађђи тума сурӑхсем пур. Тата мӗн кирлӗ сана?

Ҫприттун Мирунђӑ нимӗн ђӗнмесӗр алӑк урати ҫине ларса тӑла сырђӗ.

— Вӑт, анне... тӗрӗс калатӑн, тесе аллисене хире-хирӗҫ ҫапса хӗпӗртерӗ.

— А вҫуттӑкки пуретӑк сахал. Пӗр кун хушшинђе темскерле саккунсем сиксе тухаҫҫӗ. Ентремен кассинђе ван ав клат саккунӗ тухнӑ,—тет. Вӑт пӑх ӗнтӗ. Миҫе тӗслӗ саккун тухмасӗ... Пуҫӗ ҫаврӑнӗ—мӗнле саккун кӑна кӑлармаҫҫӗши!

Ҫприттун Мирунђӑ алӑк патӗнђе ҫакӑнса тӑракан йакала пуҫланӑ кӗрӗкне илсе тӑхӑнђӗ.

— Кайса килес-ха. Ҫывӑрса ларсан ӗҫ тухас ҫук.

— Кайса кил-ха епшн, итле, мӗн калаҫаҫҫӗ,—терӗ пионер амӑшӗ.

— Хађ ӗнтӗ йулмастӑп. Ура ҫине ӗне пусрӗ...

— Ҫав тырӑ пирки калатӑп пуђ ӗнтӗ.

— Тата...

— Ҫўрес пулат ҫав. Вара кулаксем алхасас ҫук. Ҫавӑн ђух йађейккӑсем пулӑшман пулсан пайан кун выҫӑ ларнӑ пулӑттӑмӑр-ха, терӗ Ҫприттун Мирунђӑ карђӑкӗ. Ҫприттун Мирунђӑ пуҫне хыҫса шутласа тӑђӗ те, сӑмси айӗнђе хӑйне тӗллӗн кулђӗ.

— Мӗн есӗ кулатӑн? Ђӑн мар-им тата!

— Унтан мар епӗ. Акӑ хађ астуса илтӗм, ҫав малтанхи комиҫсийе пӗтерсе ҫӗнӗрен суйланӑ кун епӗ Малттинпа калаҫрӑм. Хам та ҫав ухмах, халӗ вӑл йалта пулсан, куҫне курӑима намӑс, тархасшӑн ђакарӑр тетӗп, пӗр пӑлштух суттине лартатӑп, терӗм.

— Вӑл мӗн тет?—терӗ Миккуђ.

— Мӗн тетӗр, кулат...

— Ха, тавтапуҫ те, уншӑн хунтарма та пултарнӑ,—терӗ арӑмӗ.

— Ухмах ҫав. Вӑт мӗн вӑл кивӗ йала... Пирӗн тӗттӗмлӗх...

Ҫприттун Мирунђӑ васкаса тухса утрӗ.

* * *

Шкул ђĕнмесĕрех пуçтарăннă халăхпа тулнă.

Уђитĕл пӳлĕмĕнђен хĕрлĕ хăмаç пуставпа витнĕ сĕтел умне Çеркуни тухса тăђĕ.

— Тăвăртарах та ĕнтĕ, йепле те пулсан çавăнта вырнаçкалăр—кăшкăрђĕ уђитĕл.

Софйе Павлăвна та кунтах.

Ађисене кăларнă хыççăн, сĕм тĕттĕм пулађђенех ликпунта пуçтарнисене вĕрентнĕ. Ыванса, ваталнă шăмшаккине кантарас тесе хваттерне таврăнăскерне, шкул тулли халăх хăй хушшине туртса илђĕ.

— А-а, Софйе Павлăвнă,—вырăн парас пулаť.

Ларнă вырăнтан пĕри сиксе тăђĕ. Стсенăран инçех те мар вырнаçна Карук та Софйе Павлăвнă халăх хушшинђе хĕсĕнкелесе мала тухса танине курсан, хăй вырăнне ларма сĕнђĕ.

Софйе Павлăвнă хĕпĕртенине хыпăнса ӳкрĕ. Иккĕш те хăй вĕрентсе кăларнă ађасем... Пуçне тайса сĕннĕ вырăна ларђĕ.

— Спаççипă...

Хађ вăл сут пуçланиђђен, нимĕн çинђен шутламасăр канса ларасшăн. Пĕрмайах: Вĕренме вăхăт çук, хаçат та вулаймастпăр, нимĕн те пĕлместпĕр—тесе хайпе-хăй мăкăртатса çӳрекен шухăшсем çĕнĕ сăнсем айне пулђĕç. Сутйе калаçма пуçласанах унтан ђĕрĕ шухăшсем тытса илесшĕн пулса итлеме хатĕрленђĕ.

Софйе Павлавна мĕнле вĕрнинне, унăн çĕнĕ йăла мĕн таран йавăррине пĕр Çеркуни çеç ђухласа илнĕ. Унăн йăвăр. Вахатăн-вăхăтан хыпалашса çеç пыраť, мала тухнă çынсем йепле туса пынине сăнаť.

Револђутси пуçлансанах нимĕне пĕлмесĕр, поľшевиксене те вăрçкаланă. Анђах хађ—йулташлă калаçнă вăхăтра, унăн хăйпе-хăй йатлаçаť.

— Ухмах пулнă çав. ара киве шкул мĕне вĕрентнĕ-ха пире. Хамăра хамăр ытла та пысăка хунă, такам вырăнне шутланă. Халăх хушшинђи ђĕре, йӳçсе хăпаракан вăй-хала курман, йĕрĕннĕ,—кун пек шухăшсем ун пуçне ђас-ђасах килсе кĕнĕ.

Вĕсем çинђен хађ вăл йĕрĕнсе çеç шутлаť... Çирĕм тăхăр çул вăл халăха çутта кăларасшăн тăрăшса ĕçленине Совет влаçĕ манман. Хăй ĕçне йуратса ĕçленĕшĕн пенççи параť, анђах вăл унпа çеç çураçмасť, вăй пур ђух ĕçлес-ха, ађасемсĕр йепле пурăнас, тет.

Унтан инçех те мар ларакан хай вĕрентсе кăларнă Уљкийе курђĕ. Софйе Павлăвнă Уљки сехетшерĕн малалла утнине ђухлаť, сăнаса пыраť. Хăш ђух вара манăн уђђенитсă вĕт, а-а, аван вĕренетђĕ, пăрђакан пек ђĕрĕ йапалађђĕ,—тесе калаçаť Уљкирен пытармасăрах. Уљки тав тусан хепĕртенине сахал мар унăн пĕркеленнĕ питђĕ çине куççулисем йăрлатса йухса аннă.

— Ай, Софйе Павлăвнă, ес кунта та çитме ĕлкĕрнĕ-çке, терĕ Уљки, нимĕн калама аптраса, амăшне йуратнă пек ђĕререн.

— Ха-а. епĕ тепĕр хут çамрăкланас тетĕп. Йепле сывăрас тетĕн.

Тарйепе Марйе вырӑнсӑрах пӗрӗхсе кулса илҫӗҫ.
Уҫки шӑмарса пӑхсан тӑпах ҫарӑнҫӗҫ.
Йӗркеллӗ пулас пулат, мӗн кулмалли пур—пӑшӑлтатрӗ Уҫки.
— Вӑт ват супнӑ, мӗн каласат вӑл,—хушрӗ Марйе пӑшӑлтатса.
Уҫки, Тарйепе Марйе ӑнланманнипе сиссе, куҫ хӗсрӗ.
— Кайран... терӗ хуллен.

## 2. СУТ УМӖНҪЕ.

Хӗрлӗ хӑмаҫпа витнӗ сӗтел умне виҫҫӗн тухса тӑрсан, шкул тулли халӑх ҫелӗксене хывса ура ҫине тӑҫӗ. Сутйе пӑшӑлтатма ҫаранна ҫынсене аллипе сулса ларма сӗнҫӗ.
— Ларӑр...
Ларҫӗҫӗ.
Хӑшпӗрисем ларса вырнаҫсан йулашки хут ӳсӗркелесе илҫӗҫ.
Ҫирлӗ пулӗ ку, йепле пӗтсе кайнӑ?—Исуттӑв сутйа ҫине пӑхса шутласа илҫӗ Уҫки.
Ҫӑнах та, аллӑ патне ҫывхарнӑ Исуттӑв курпунланма пуҫланӑ. Ҫинҫелнӗ мӑйӗ ҫинҫи хура ҫӳҫлӗ пуҫӗ ырхан йанахпа шӗвӗрленнӗ.
Тапак тӗтӗмӗпе саралнӑ усси айӗнҫен хуралнӑ шӑлне кӑтартса, йӑвашшӑн, ҫамрӑккӑн выҫанса тӑракан куҫӗсемпе тавран пӑхат. Калӑн, вӑл пур пуҫтарӑннӑ халӑха та пӗрре пӑхса илниепех сӑнаса илесшӗн.
Ҫавӑнтах Ухаҫван ҫине ҫарӑнса тӑҫӗ. Унтан Ухӑҫван аллине тыткӑна лекнӗ Ҫӗрӗк, Шӗшлӗ, тата Хырӑм ҫинҫен шутласан, нимӗн каламасӑрах, уменҫе выртакан кӗпеке хулӑмӗш хут купине ҫавӑркаласа пӑхрӗ.
— Ҫвитеттӗлсем пурте-и?
— Пурте,—терӗ сутйеп ҫекреттарӗ.
Уҫки куҫпе сутйе ҫинҫен илмест. Сутйе халӑха мӗнле тӗпҫенине, йулашкинҫен Ухаҫван ҫине хайаррӑн пӑхса ҫарӑнса тӑнине ҫухласан, Уҫки ӑшне тулнӑ сывлӑшне ҫӑмӑллӑн ҫавӑрҫӗ. Тӗктӑмалах хӑй ҫумӗнҫе ларакан Тарйен аллине тытса ҫӑмӑртарӗ.
Тарйе нимӗнне те ӑнлапаймарӗ, анҫах йулташлӑ пурӑнма пуҫланӑ Уҫкин аллинҫи вӗриленнӗ аллине хирӗҫ ҫӑмӑртаса хӗстерҫӗ.
Тӗрлӗ ҫын, кашни хӑй май хӗсӗнкелесе вырнаҫнӑ. Шӑпа вӗҫни илтнӗ таран шӑпланса итлеҫҫӗ.
Ҫынсем хушшинҫен, малти ретре уйрамах ларакан Шӗшлӗ, вӑрттӑн хайаккан, куҫ айӗнҫен халӑх ҫине пӑхса илҫӗ те, нимӗн каламасӑрах, хӑй вырӑнне пӗкӗрӗлсе пуҫне ҫиксе ларҫӗ.
Шӗшлӗн йӑлшӑнса ларнӑ ҫанҫурӑмӗ сиккелеме те вӑтанаӗ. Пур ҫынсем те ун ҫине ҫи йурӑхсӑр, сӑтӑрҫӑ ҫын ҫине кураймасӑр пӑхнӑн туйӑнҫӗ.
Сут? Ҫухӑн ҫынна? Йепле-ха?—Шӗшлӗ патранса вӗрекен пуҫне уҫҫӑн кӑтартакан сӑлтавсем тупса парасшӑн пулҫӗ. Акӑ вӑл, шутламан ҫӗртенех, 1921-мӗш ҫулхи ҫаппан варҫине астуса илҫӗ. Кунта та ҫав Ухӑҫванӑн сӑнпиҫех кармашса хупларӗ. Мӗн тунӑ-ха епӗ унта? Мӗн?—нимӗн туппне те тупаймарӗ.—Кам тухман ун ҫух урама?

Пурте.—Кам кантура ватма пымаст, вăл çĕрсĕр йулат, тесе Ухăҫван килĕрсп çӳрени асне килсен, Шĕшлĕ çăмăллăн сывлама пуçларĕ.

Çавăнтах хĕллехи шартлама сивере пĕр комунистпа хĕрлĕ салтака çарамаслантарса ҫĕрĕ хулăсемпе хĕнесе вĕлернипе астуса илҫĕ.

Малтан Ухăҫван камантă паҫе, çапасса та хăйех çапрĕ. Ун хыççăн ыттисем, кам çапмаппине—хăйне. Шĕшлĕ те çапрĕ. Хытă мар, анҫах çапрĕ.

Ним айăпсăр çынсем пулăшу ыйтрĕç, йăлăпҫĕç... Кайарахпа вăл та пулмарĕ. Пĕри те çапмасăр йулмарĕç. Вилес патне çитнĕ пулсан та кашнинех астивмелле пулҫĕ.

Шĕшлĕн ăшҫикки патранҫĕ, анҫах пăлханакан шухăшсен вĕçне тухаймарĕ...

Çумĕнҫе ларакан Çĕрĕкĕн сăранланса ларнă кĕрĕк аркп ун аллине сĕртĕннĕн туйăнсан, çĕлен-калта перĕннĕн çӳçенсе, çĕтĕлнĕ тăла йĕм ҫĕркуççи çине туртса илҫĕ.

Шĕшлĕ йывăррăн сывлăш çавăрнипе Исуттăв сывăххăн асăрхарĕ.

Ах, шереметсем, камшăн пуçĕсене çиеççĕ. Иккĕленет пулас. Кунтан çын тума пулат пек, теп, пыра-киле кунтан çĕнĕ пурнăçшăн усăллă çын та пулас çук.

Çавăнтах тата Çĕрĕке те сăнасшăн пулҫĕ. Вăрттăн Çĕрĕк çине ҫарăнса пăхса илсен, нимĕн шухăш та вуласа тухаймарĕ.—Нимĕн те йулман пулас. Çиййĕнҫех хăйĕн шухăшĕнҫен калла ҫакрĕ—йăнăшма пулат,—терĕ.

Исуттăв иккĕ уйăрăлса ларҫĕ.

Усал, ланҫашка çĕлен курăк пек, çыхланҫăк йапала ăçтан вăл усăллă пулма пултарат терĕ,—вĕриленсе кайнă шухăшсем ун кăмăлне сӳренлетрĕç...

Такам çине çиленҫĕ вăл... Паллă мар, те сутйе пулнăшăн, те пĕрмайах айăплă çынсемпе калаçмалла пулнăшăн. Ак ун пуçĕнҫе темскер йалкăшрĕ.

Тытрĕ.

— Сутйе кам вăл? Петакăк анҫах, урăхла пĕлместĕп,—çавăнтах 25 çул уҫитĕлте ĕçлени, вĕсене йĕркеллĕ çын тăвасшăн тăрăшса вĕрентни—татах пăтранса пăсланса салапҫĕç.

Пушă, калăп, ун мĕн пур пек тĕшне шĕкĕлҫесе кăларса илҫĕç. Тпсе ларнă аллипе çамкине сăтăрса пăхсан, ытла та ĕшеннише ҫухларĕ—канмалла, пăртакçă та пулсан канмалла. Ăçта? Ăçта канмалла? Прорыв, кунсăр пуçне 50 ĕç кĕтсе выртат. Теп, çак самантрах ун ваҫҫи татах хатĕрлеççĕ. У-ух! çак усал ирсĕре, хăçан есĕр пĕтĕр!

Çапла шутласа ларҫĕ пирĕн 25 çул хушши петакăк ĕçĕнҫе ĕçленĕ хыççăн сутйе пулнă сутйе-комунис.

Исуттăв сăнав ĕçне пăрахса, шкул тулли халăх шăпланса ларнине ҫухларĕ.

Ун çумĕнҫе ларакан нарсаççетаттĕл те пуçлама вăхăт çитнипе:

— Мĕнле, пуçлатпăр-и?—тесе ыйтрĕ.

— Пуçлатпăр,—терĕ Исуттăв.

Мĕнле ĕçе пăхса тухассине каласа пĕлтернĕ хыççăн айăплав хутне вулама тытăнҫĕ.

Исуттӑв сут ӗҫне хӑнӑхнӑ. Малтанхи ҫулсенҫи пек ӗрӗхсе каймаст. хыпаланса ӳкмест.

Хӑйӗн вӗри ҫӗри сиксе ӳкессе ҫухласа, ӑшӗнҫи тарӑн шухӑшсене тата та шаларах пытарҫӗ.

Хаҫ вӑл саккун йӗркине, саккун статйисем хушнӑ пек, тӗрӗслӗхпе айапласа йӗркелесе тухса, кама мӗн тивӗҫлипе валеҫсе парасшӑн. Ҫавӑнпа та мӗн тӑршшӗпех пӗр манирлӗ йухӑнтарса вуласа тухасшӑн, анҫах вӑл класлӑха манмаст.

Ака Кулине, мӗскӗн ҫура, Ухӑҫван патенҫе пушаланса пурӑннӑ вырӑна вуласа ҫитрӗ. Сутйе вуланӑ ҫӗртех-унӑн сӑмаххисем вӑрӑмӑн тӑсӑлаҫҫӗ, ҫамки ҫинҫи тар пӗрҫисем ҫуталҫӗҫ. Вӑрӑммӑн сывлӑшне ҫавӑрса, сӑмаххисене ҫирӗппӗн кастарат.

«...Акулинӑ, краштанин Ухӑҫван килӗнҫе усрава илнӗ хӗр, пӗр йыш вырӑнне шутланман. Ӑна иртен пуҫласа каҫҫен ӗҫлеттернӗ, хӗненӗ. Акулинӑ апат-ҫимӗҫе те храса ҫеҫ ҫикеленӗ. Ҫак 18 ҫулхи хӗре краштанин Ухӑҫван ывӑлӗ—Кенати совет саккунне хирӗҫ пынӑшан, пайан кун пилӗк ҫуллӑха тӳрленмелли ҫурта хупса лартнӑскер, пусмӑрласа мӑшкӑл тунӑ...»

Сутйе касйинҫен сӑмса тутри кӑларса, тарланӑ ҫамкине шӑлса тиӗтрӗ.

Нимӗн ҫӗнмесӗр ларакан халӑх та ӗхлетсе сывлӑш ҫавӑрҫӗ.

— Ну-у, сырнӑ та, йӗрсе йарӑн ҫав—терӗ Ҫприттун Мирунҫӑ хӑй ҫумӗнҫе ларакан Упаҫҫана.

Упаҫҫа, ним калама аптӑраса пулас, ҫӗнмерӗ. Уптан:

— Кенеке пек ҫырнӑ, вӑт мӗн вӑл пурнӑҫ—тесе хирӗҫ тавӑрҫӗ.

Улҫки Кулинен пурнӑҫӗ ҫинҫен пуриҫеп те ытларах, тарӑн пӗлет. Ҫп малтан, Кулине тӑн кӗрсе 18 ҫула ҫитиҫҫен пӑҫаланса тӑканнӑ йӑвӑрлӑхсене Улҫкийе каласа панӑ. Ҫавӑнпа та вӑл уп пурнӑҫне аван пӗлет. Тӗрӗс ҫырнӑ, тӗрӗс, ҫаккӑншӑн та кулака айапламасан мӗнле, терӗ те вӗриленсе кайнӑ Улҫки пурин ҫине те сӑпаса пӑхрӗ. Унӑн сӑппитенҫе, хӑварттӑн тапакан ҫӗринҫе пурне те кулака хӑй покех курайми тӑвасшӑнни сисӗнҫӗ.

— Мӗн есӗр пуҫӑра ҫикнӗ?—тесе ыйтрӗ Тарйене Марйерен.

Марйен куҫӗ шывланнӑ. Вӗрсе тултарнӑ пиҫӗ хӗрелнӗ:

— Мӗн тутарас тетӗнха есӗ?..

— Епӗ хама хам йатлатӑп,—терӗ Тарйе, Марйен сӑмахне пӳлсе.

— Мешпӗн?

— Аҫа пулнӑ ҫав, малтан унтан култамӑр.

Улҫки, Тарйе мӗн ҫинҫен каланине аванах ҫухласа илҫӗ.

Пӗр кӗтессе хӗсӗнсе ларнӑ виҫӗ хӗр, ҫапла пӑшӑлтатса калаҫса илнӗ хушӑра, сутйе ҫарӑнса тӑмарӗ.

«Краштанин Ухӑҫван айапӗ хӑй килйышӗнҫи ҫыппа ҫав тери асаплантарса пурӑннипе ҫеҫ иртмест. Вӑл пур ҫухне те хӑйӗн ирсӗр ӗҫӗсене те тума тӑрашат... Совет сойусӗнҫи ӗҫхалӑхӗ

çĕнĕ пурнăçшăн çапăçнă вăхăтра, тара ялсе акса, çын аллипе пухнă тыррине патшалăха парасшăн мар кĕрешет. Тыррине çĕр айпе ђикет, çпекулентсă хакĕпе сутаť. Хăйĕн ирсĕр ĕçĕсене пытарса хăварасшăн пулса, ытти хресђенсене те хăй май туртма пăхаť. Çавăншăпах, Мускавра вĕренекен студента, Малттина, тыра хатĕрлес ĕçре çине тăрса клас йĕркине çухатмасăр ĕçленĕшĕн, пуçĕпех пĕтерме шут тытаť.

Çавăншăн вăл «ђухăнсене», хăйсен класлăхне çухатнă çынсене, ĕçтерсе ирсĕр ĕç тутарма тытăнаť...»

Йĕп çинђи пек ђĕтресе ларакан Шĕшлĕ Çĕрĕк çине хайар куçĕсемпе сиввĕн пăхса тĕллерĕ. Сан ĕçÿ ку, есĕ карлапкуна ђараймасăр пире те çак ĕçе сĕтĕрӗтĕн,—текен çилĕллĕ куçĕсем вырханђакăн йейелсе саланђĕç.

Çĕрĕк хăрах хулпуççине сиктерсе малалла итлерĕ.

«Хайсен класлăхне çухатнă...»—тенĕ сăмахсем кам çинђен каланине пур çынсем те йатне калађвепех ăнланђĕç: Кайарахпа йађĕсем те палăрђĕç.

Çак ĕç пирки тытса кайсанах Шĕшлĕ тарăн шухăшлама пуçланă, анђах сукмакне пĕлмен. Хађ ун сăн-питне, пĕтĕм ăшђикне пĕђђенлĕх хупăрласа çавăрса илђĕ. Ђăнах та вăл пĕђђеп. Уппа йунашар ларакап Çĕрĕк?Хырăм?—Çук, хађ вăл пĕђђен.

Мĕн-ха ђанă вĕсем мана?—тесе ыйтрĕ Шĕшлĕ хăйĕнђен хай Ухăђван çуртĕнђе пĕрле ĕçнинђен пуçне, 1926-мĕш çулта халăх çĕрне сутсан ĕçни. Унтан? Унтан?.. Урăх нимех те асăрхаса илеймерĕ...

Çĕрĕкĕн пуç мимн çĕрнĕпе пĕрех, нимех те шутламасť вăл.

— Ну, што, ларатпăр, ĕçĕ пĕтнĕ. Унпăн персех пĕлерес çук. Ђухăн çын, патрак, мĕн пур ман.

Тăват уйăх ĕнтĕ вăл ерех ĕçменни. Еçе кăларсан, Кисренмен йал кулакĕпе пĕрле вăрттăн пĕр штух ĕçнине астуса илсен, кăвакарнă тутин икĕ айаккипе те, çăварĕнђен сĕлеки йăрлатса йухса анђе.

— Ак çакăнта çутти пулсан?.. Тата мĕн кирлĕ? Йÿçĕтнĕ хăйар...

Çĕрĕк ерех хăçан, мĕнле ĕçнисене асăнса, тĕлĕкри пек тинĕ пырлă çăварĕнђи сĕлехисене çăтса кантараť...

Сутйе вулама тытăнсанах, Хырăм, анаслама пуçланăскер, мĕлке пек çыхлапса кайнă сухалне йатса сĕнксе ларђĕ. Хырăм, теп, итлене те пулĕђђĕ, урăх шухăшсемпех вăл халĕ те асапланаť-ха.

Хĕрелсе кайнă Ухăђван икĕ милитсионер хушшинђе лараť. Калан, ăна сасартăках пĕри пĕлтренпе пĕтелесе илнĕ. Тĕк сĕнкс ларпе çĕртенех Ухăђван ура çине тăрса кăшкăрђĕ:

— Суйаť вăл! Суйаť!..

Шкулти шăплăх йăшăлтатса сăрласа каđĕ

— Лар, санран кайран ыйтăпăр.

Вериленсе кайнă Кĕçтук ђатаймарĕ:

— Тĕрĕс çырнă!—тесе кăшкăрса йаđĕ.

— Ан капсĕрлĕр. Камран ыйтмаллине сут хăйех пĕлет...

Пусăранђĕç. татах лăпланса итлеме пуçларĕç

* *
*

Алӑк патӗнҫе тӑракан Михетер ҫикарккинҫеп тухакан тӗтӗмне пӑлтӑралла кӑларса йанӑн туса, хуллен мӑкӑртатрӗ:

— Хӑтлапаҫҫӗ ӗнтӗ. Калӑн темскерле пысӑк ӗҫсем тӑваҫҫӗ. Ҫӑркӑпса та илеҫҫӗ, хирӗҫсе те пӑхаҫҫӗ. Ҫӑваш йалине веҫех пӗтерсе лартрӗҫ.

— Ара Кулине те ҫӗрӗлет темест-и—ыйтрӗ Тиҥук Йакурӗ.

— Ҫӗрӗлнӗ тет,—терӗ Михетер.

— Таврӑнмап-им-ха вӑл?

— Сут иртмесӗр килет-и!?.

— А-а, ну кӑҫухнехи халӑх пӑсӑлнӑ та.

— Вилмеллех пулнӑ пулсан сӑмах та ҫук,—тесе тӗртсе хуҫӗ Михетер.

— Вӑт ӗлӗк... Кун пек кӑна ҫапӑҫнӑ-и, ҫӗп-ҫӗрӗ йуна пӗвӗнсе тулашнӑ. Ҫӗмӗрмен ҫӳреҫе хӑварман, ҫапах та ку терийех хытӑ пулман. Ӗҫӗ те ҫӑвашпа ҫӑваш хушшинҫе пулнӑ вӗт, йут халӑхпа пулнӑ пулсан хӑт тарам. Халӑха пӑсрӗҫ...

— Пӑсрӗҫ, пӑсрӗҫ!—терӗ Ҫприттун Мирунҫӑ шала кӗмесӗр пӑлтӑрта итлесе тӑракансkер,—кам пӑсат-ха йала? ҫав куштансемех,—терӗ.

— Ҫук, Ҫприттун Мирунҫӑ, есӗ тарӑнрах шухӑшламасӑр калаҫатӑн,—терӗ Михетер.

Ҫприттун шарламарӗ, хӗсӗнкелесе алӑк урлӑ каҫса шала кӗрсе тӑҫӗ:

Михетер пӑлтӑра тухрӗ те, хӑй пек шутлакан шанҫӑклӑ ҫынсем умӗнҫе именсе тӑмарӗ.

— Комуниссем халӑха хире-хирӗҫ ҫапӑҫтарса тулаштармасӑр пурӑнма пултараймаҫҫӗ. Вӗсен ӗҫӗ ҫавӑ. Ҫейе... кулак, вӑтам, ҫухӑн, патрак, хаҫ тата колхоҫнӗк теме пуҫлаҫҫӗ. Вӗҫӗмсӗр, ҫапла халӑха уйӑрса хирӗҫтерсе пыраҫҫӗ. Ҫав хушӑра хӑйсен ӗҫне тӑваҫҫӗ. Комунисӑм, сотсиалисӑм тӑватпӑр тесе халӑха ӗҫлеттерсе усӑ кураҫҫӗ. Кам хаҫ ыр курат?—Ҫав антихриссем!..

Михетер тата та каласпан пулҫӗ те, карташӗнҫе Кӗркуҫ сассине илтсен лӑпланҫӗ.

— Тишпе!..

— Хуллен!..

Михетер ҫӑварӗнҫи сурҫӑкне ҫӑтса айаккалла пӑрӑнса тӑҫӗ.

Ыттисем шӑмасӑр, вӗҫӗлтетекен ҫӗлхисене сӗлекелле ҫӗлӗм ҫӑвӑксене ӗмсе пусарҫӗҫ...

* *
*

— Никколайӗв Павел!..

— Епӗ пулатӑп,—терӗ Ҫӗрӗк шартах ура ҫине сиксе тӑрса. Шыҫанса ларнӑ куҫӗсемпе хӗрлӗ сӗтел ҫине пӑхса ыйтасса кӗтрӗ.

— Краштанин Никколайӗв, тата мӗн хушса калама пултараӑн?—ыйтрӗ сутйе йӑвашшӑн.

Çĕрĕк, сутйе уппалан капла сапăр калаçасса кĕтменскер, сутйен çемçе сассине илтсен, аҫа пек пĕҫĕкленсе кайрĕ. Ун пуçĕнҫе çĕнĕ шухăшсем çуралма пуçланă пек пулҫĕç, анҫах тарăн шутлаймарĕ, йăсăрланса çеç иртрĕçĕ.

— Кала тата... кунта именсе тăмалли çук,—терĕ сут ҫленĕ.

— А-а, çырнă сăмахсем тĕрĕс,—терĕ Çĕрĕк.

— Тата мĕн хушатăн?

— Тата-и?—Çĕрĕк темĕскер каласшăн пулса хуралса кайнă аллисене çыхланнă вăрăм çўçĕсене сăтăркаларĕ. Çав хушăрах шăппăн ларакан-тăракан çынсем çине куç хĕррипе пăхса илҫĕ.

Уҫкин шăтарас пек сиввĕн шăмарса пăхакан куçĕ Çĕрĕке ҫĕтретсе йаҫĕ. Унтан Упаҫҫан. Упаҫҫан тутисем çыртса йунаса тăнине курсан, Çĕрĕкĕн ăшăтма пуçланă çĕнĕ шанҫăкĕсем сўнсе ларҫĕç.

Тĕпсĕр шыва путакан çын, улăм пĕрҫинҫен те пулин тытса çăлăнасшăн. Çĕрĕк те çаплах, анҫах вăл нимĕн те хăй уссишĕн сăлтавсем калама тупаймарĕ.

Ухăҫван Çĕрĕк ҫĕнмесĕр хытса тăнипе курсан хĕпĕртерĕ.—Çавă кирлĕ те мана. Кайран хамăнне калап епĕ,—терĕ хăй ăшĕнҫе.Çĕрĕкĕн пĕр çĕре хытса пăхнă куçсене çаварса илесшĕн пулҫĕ вăл. Анҫах Çĕрĕк ун çине пăхмарĕ.

Çĕрĕк пĕр ури çинҫен теприн çине тĕренсе тайкаланса илҫĕ те:

— Епĕ айăплă. Ĕçкĕ пĕтерҫĕ мана. Ав çав шуйттан,—терĕ те Ухăҫван çине çаврăнса йатлаçма пуçларĕ.

— Есĕ турăн ку ĕçе, есĕ!—тесе кăшкăрҫĕ.

Куçкĕретĕнех Çĕрĕк капла сăмах тытасса Ухăҫван шутламапҫĕ. Хăрах хулне туртса, вăрăм сăмса тăрăх йунаса пăхрĕ те, ларнă вырăнĕ çине татах çирĕпрех çыпăçса ларҫĕ.

— Йепле вăл сапа пĕтерме пултарнă?—тесе ыйтрĕ сутйе.

— Вăт, мĕн тăвас тетĕн-ха, ухмахсене... Айăплă... Пĕр пулвă йапаларан тунма май çук.

— Миçен пултăр-ха есĕр?

— Тăваттан.

— Кам-кам? Астăватна?

— Астăватăп: Епĕ, Шĕшлĕ, Хырăм.

— Тата?..

— Кенати те пирĕнпе пĕрлех ҫупрĕ.

— Мĕншĕнха есĕ ху унта тухса ҫупрăн?

Пўлĕнне Çĕрĕк ҫаранса тăҫĕ.

— Çав тăлăх хĕре çав терийех курайманăна?

— Çук, уншăн мар.

— Мĕншĕн?

— Усĕр çынна пĕлетĕн, темĕн те каласнă пулас, итлесе тăнă пулĕ тесе хăрапипе пулҫĕ.

— Есĕр сĕтел кутĕнҫе хăрамасăрах калаçнă пулĕ нĕт?

— Вăл çапла та, кайран хăрарăм...

Шăппăн ларакан халăх ахăлтатса кулса илсе, тата итлеме лăпланҫĕ.

— Урӑх хушма пултараймастӑр?

— Ҫук.

Ҫӗрӗк пуҫне ҫиксе хӑй вырӑнне ларҫӗ.

Хырӑмпа Шӗшлӗ те хушаматсене ҫӗнсен, умлӑн-хыҫлӑн сиксе тӑҫӗҫ.

— Ну, есӗр мӗн калатӑр?—терӗ Исуттӑв.

— Ҫавах, пирӗн урӑх сӑмах ҫук,—терӗ Хырӑм.

— Есӗ?..

Шӗшлӗ варӑмӑн сывласа малтанах шутласа хунӑ шухӑшсене вӗҫӗх каласа парас терӗ те, анҫах кал, вӑл пӗрне те астумин пулҫӗ. Пуринҫен ытла ун ҫӗрине итлесе ларакан ҫынсем пулайӑн ыйтарат. Пурте вӗсем ун ҫине йӗрӗнсе пӑхнӑн туйӑнҫӗ, ҫавӑнпа та вӑл шӑппӑнтарах, сутйесем ҫеҫ илтмелле калаҫма пуҫларӗ.

— Никкулайӗв тӗрӗс каларӗ. Манӑн хамӑн та айӑп ҫакӑнта тетӗп епӗ,—терӗ те тытӑнса тӑҫӗ.

— Ӑҫта?—ыйтрӗ сутйе.

— Ҫав кулак патӗнҫе ӗҫнинҫе.

— Кулинене хӗнепине, Малттина вӗлерме шутлапине ху ҫине илесшӗн мар апла есӗ?

— Сӑмах пулҫӗ ӗнтӗ усем ҫинҫен те, анҫах епӗ хам иӑсӑк шут тытман. Айӑплӑ, пирӗн ҫӑвашӑн ухмахлӑхӗ ҫакӑнта, ӗҫнӗ те, мӗн тӑвас тетӗн-ха, нимӗн те калама та ҫук.

— Ӗҫкӗ тесе, ерехшӗн ҫын вӗлерме кӗрӗшеҫҫӗ-и?

Виҫӗ ҫын ҫавра ҫилпе ҫӳхенсе пӗтӗрӗнекен йӑмрасем пек, хыпӑлса ӳкрӗҫӗ.

— Ҫо-ок!—васкаса хушрӗ Шӗшлӗ.

— Вӑл пулман,—терӗ Ҫӗрӗк.

— Сутӑнас шут пулман...

— Ӗҫкӗ, ухмахлӑх, ҫав хырӑм ҫирӗ ӗнтӗ пуҫа,—терӗ Хырӑм йӗрес пек.

Хырӑм сӑмахӗ кулӑшла тухрӗ пулас, сутри ҫынсем кулса янҫӗҫ. ҫапах та сутйесем кулмарӗҫ.

— Тата мӗн калама пултаратӑр?—йулашки хут тӗпҫерӗ Исуттӑв.

— Мӗп каламаллипе каларӑмӑр,—терӗҫ вӗсем.

Комсомолӗс Карук, сут вӗсемпе вӑрах калаҫнӑшӑн пулас:

— Тата вӗсемпе аҫашланса тӑраҫҫӗ. Кулак йытти кулак йыттийех пулат ӗнтӗ. Масар анҫах тӳрлетме пултарат вӗсене!—терӗ.

Ҫемйун такҫантаппах ун ҫине шӑл ҫисе ҫӳрекенскер, мӗнле меллӗ вырӑн тупрӗ:

— Тӗкех лар, санран ыйтмаҫҫӗ. Ку сан сулахай сиктӗрми!—кӑшкӑрса пӑрахрӗ.

Ытти комсомолӗссем Карук хӗрелсе кайса ларпине курҫӗҫ, анҫах пӗри те шарламарӗҫ. Хӑшпӗрисем йӗкӗлтесе кулса илҫӗҫ.

Карук хӑйӗн вӗрилеисе тухнӑ «йӑпашпе» ҫасах ҫухласа илҫӗ. Йӑнӑш та пулман, анҫах Ҫемйуна ҫӗлхепе тавлашса ҫӗптерме май ҫукки паллӑ. Ҫавӑнпа та Карук ҫӗрӗп пек шӑртланса нимӗн ҫӗнмесӗр ларҫӗ.

Çемйун кулпа çеç пĕтермерĕ. Шĕвĕр йанахне Карук патне илсе пырса, кăшт кулам пек туса:

— Сан çинђен пӳрора лартатăп. Кун пек йапалана комсомол ђăтма пултараймаст,—терĕ.

Карук та Çемйуна хăйĕн вăйне кăтартасшăн пулђĕ пулас, ытти çынсене илттермелли сасăпа каларĕ:

— Мĕн йунатăн! Кама хăратас тетĕн, лартан тăк ларт, мĕн ват-карђăк пек кунта хăрлатса тăратăн.

Çемйуна ку сăмахсем вĕресе çийелтен тăкăнтарма пуçларĕç.

— Ак курăн, комсомолран кăларса сирпĕтетпĕр.

— Курăпăр,—терĕ лăпкăн Карук, анђах унăн ђĕтрекен тути тата та темĕскер çинђен каласшăн пулђĕ, çапах та шарламарĕ.

— Краштăнсем, ан шавлăр. Кам унта кансĕрлет!?

Сутйе сĕтел урлă кармашса, тĕтĕмпе карăннă шăналăк витĕр уртăнса пăхрĕ. Маларах ларакансем те хыçалалла çаврăнса пăхрĕç.

Самсун уђитлĕ, пĕр çыртсан хытă çыртма йуратакан скер, тĕртсе хума та ĕлкĕрђĕ.

— Колхоçнĕксем пример кăтартаççĕ!—терĕ.

— Кунта камсулсем çапăçса карĕç!—кăшкăрђĕ, кулак ывалĕ Митта, иртнĕ çул уйăрăлса тухнипе ђухансен çпискипе çакланнăскер.

— Примерлă пулмашкăн вĕренеççĕ вĕсем!—кăшкăрђе Тиђук Йакурĕ.

— Хи-хи-хи!..

Вăрттăн ђашкăрса кулса илђĕ Михетер ларнă кĕтес.

Сутйе сĕтел урлă тепĕр хут уртăнса пăхса:

— Йулташсем! Кунта тавлашмалли вырăн мар. Кам йумахлас тет, вĕсем халех тухса кайма пултараççĕ—терĕ.

Сăмах пĕтрĕ. Шăп...

Ухăђвана сăмах парсан, кукшаланма пуçланă пуç тӳпине ђĕтрекен аллипе шăлкаласа илсе, йăвашшăн, йурласа калаçна пек, васкамасăр йухăнтарма пуçларĕ.

— Мана ĕнтĕ Кулак та, терĕç. Çынсене вĕлерттересшĕн ĕçтерсе те хĕтĕртнĕ, теççĕ.

Ухăђван пăртакçĕ ђаранса тăђĕ. Калăн вал мĕн пур вăйне пухса пурне те таптаса кайасшăн.

— Краштăн сутйесем, ара çак упа пек çынсемпе епĕ, ват çын, мĕн тума пултарнă-ха?Çук, тавариш сутйе. Пустуй, улталаççĕ...

Ухăђвап калаçнă çĕртех тытăнса тăђĕ. Унăн хĕреллсе кайнă ват сăн-пиђĕ ăшĕнђи шухăшсене пытарас тесен те пытараймаст. «Мана килсен ун пек ухмахсене çеç мар, хуна та хăна тума пултаратăп, мана ĕçкĕ мĕн, хуй хырăму çурăлађђен кӳп, ĕçĕ пулсан, çитнĕ» тесе шар çурса тăрат Ухăђван сăн-пиђĕ.

Ана сутйе ђасах вуласа илђĕ.

— Çамрăк çынсем вĕт, ĕçсе-çинипе тăрапмарăр пулат. Тата хама та пуçĕпех путарасшăн,—терĕ хăй çывăхенђе ларакан Çĕрĕкпе Шĕшле.

Çĕрĕк айăплăн пуçне хыçса илђĕ.

Шĕшлĕ каллех Çĕрĕке айăпларĕ.—Есĕ йертсе кайрăн, вăт хал

ӗнтӗ тун, сана пула епӗр те ҫурӑка хӗсӗнтӗмӗр,—терӗҫ Шӗшлӗн йӑмӑхмасӑр пӑхакан куҫӗсем.

Хырӑм пуҫне ҫӗрелле ҧиксе, хӑҫан иртет ку йапала,—тесе, шухӑшласа ҫӳҫенсе ларҧӗ.

Ухӑҧван, Ҫӗрӗкӗн кӑшт хӗсӗннӗ куҫӗсем ӑна хирӗҫ: Есӗ ытла ан тӗпӗртет, сан-ха пире тав тӑвас пулат, мӗн пулнинҧен ҧӗрӗкне те каламан вӗт, тата сана мӗн кирлӗ?—тесе каласа тӑнине ҧухласа илсен, сассине ҫемҫетрӗ.

— Краштӑн сутйе, тархасласа калатӑп. Епӗ ватӑ ҫын. Ун пек ҫынсемпе савлатат тума манӑн пуҫ та пулман. Ара ҫемйеллӗ ҫынсем вӗт. Ҫук, ҫук, епӗ вӗсене хӗтӗртмен.

— Апла есӗ вӗсене хӑна та туман-и.

Ухӑҧван пӗрре Ҫӗрӗкӗн систерсе тӑракан куҫӗсем ҫине, тепре сут ҧленӗсем ҫине пӑхса илҧӗ. Ҫавӑнтах, хӑй ӑшӗнҧе хаҧ ӗнтӗ вӗсем ҫӗнӗ хут кӑтартса пама пултараймаҫҫӗ, терӗ те, Ҫӗрӗке кӑшт куҫ хӗсем пекки турӗ те, вӗсем ҫинех йавантарма пуҫларӗ.

— Ҫук... Каккуй тума, кашкӑртан хӑранӑ пек шикленсе пурӑннӑ епӗ вӗсенҧен.

Ухӑҧван вӗриленсе ытларах персе йанине ҧухларӗ. Хӑрах куҫ вӗҫпе тепӗр хут Ҫӗрӗк ҫине пӑхса илҧӗ. Ҫапах та кӑларса йанӑ сӑмахран калла ҧакма май ҫуккипе, иккӗленнӗлӗхне кӑтартасшӑн мар пулса, тепӗр хут хушса хуҧӗ:

— Ҫук, ҫук, туман.

Итлесе ларакан шкулти ҫынсем пӑшӑлтатса илҧӗҫ.

— Хӑҫан ку капла йӑвашланма ӗлкӗрнӗ?

— А-а, тилӗ мар-и вӗсем!—терӗ.

— Ну-у, ҫӑват те ӗнтӗ, епӗр пулсан тахҫанах пӗтсе лармалла.

Ухӑҧван, тӗрлӗн пӑшӑлтатса калаҫнӑ сасса илтмене персе, урӑх шухӑш ҫине пӑрӑнса кӗрсе кайрӗ.

Шкулта ларакан халӑх ҫинелле кӑтартса:

— Пур ҫынсем те епӗ халӑха усал туманни ҫинҧен каласа пама пултараҫҫӗ,—терӗ.

Унтан мӗн пур пек налука, тата патшалӑхӑн ытти парӑмӗсене вӑхӑтра тӳлесе пыни, ӑна ҫирӗплетекен хутсене ҫлетӑваттӗле панисем ҫинҧен калаҫса кӗрсе кайрӗ.

Исуттав Ухаҧван сут ӗҫӗнҧе кирлӗ мар йапаласем ҫинҧен каласине ҧухлат. Ҫаванна та вӑл: айта кала, йурла, есӗ те тӳлемесен тата кам тӳлетӗр, тесе шухашланӑ хыҫҫӑн, ҫавантах умӗнҧе выртакан ҫӗлӗке майлаштарнӑ хут купинҧен Ухӑҧван налук тӳленӗ хутне тупрӗ.

— Е-е, ну налук... Вунвиҫӗ тенкӗ. Страховкка 18 тенкӗ.·Вӑт пуйан пулӑ. Йепле-ха вӑл ӗҫӗрӗнсе йулнӑ. Мӗншӗн ун ҫине интивитуаллӑ налук шатлаттарман—тесе шухӑшларӗ сутйе. Сутйе шухӑшне малалла тӑснӑ май, Хуралыр йалӗнҧе сут туса иртерни ҫинҧен ҧарӑнса тӑҧӗ. Унта та иалсовет претҫетаттӗлӗ, пӗлмене хывса, кулаксене витсе хӑварнӑ. Хаҫан пӗтӗҫ-ши ҫакӑн пек ирсӗрлӗхсем?—Шухӑшларӗ вӑл.

— Еҫ ҫинҧен кала! Ытла шала кӗрсе кайатан,—терӗ сут ҧленӗ.

— Коспотни прицашни, кĕскен калама вăрр...

Сут ђленĕ пўлсе лартрĕ.

— Покоти...

— Коспотасем çук. Хура типĕсе путарнă вĕсене!—кăшкăрса пўлĕ Карук.

Ухăђван, вăрăмрах сăмсн тарăх йунаса пăхса, сăмси айĕнђе йпланмалла мар çмăкăртатса илђĕ.

Хăй çине сут ђленĕ ăшшăн пăхса илсе пуçне суллапине курсан, Карук хĕпĕртерĕ.—Тĕрĕс, аван, çапла кирлĕ те,—тесе каланăн туйăнђĕ ăна.

— Та, та. Кунта коспотасем çук,—терĕ сутйе те.

— Виноват...

— Пĕрре те ĕçтермен апла? Апла вĕсем сан çинђен суйаççĕ?

— Суйаççĕ. А-а..., ĕ-ĕ..., такçан çав, вăхăтне те ђистиех астуса çитерейместĕп. Пĕрре çапла, кĕрхи вăхăтра, çаксем пырса кĕђĕç.—Тавай ĕçкĕ, тавай апат, теме пуçларĕç. Карђăк хăраса ўкрĕ. Хам та ђĕтретĕп. Ўсĕр çынсемпе мĕн тăвас тетĕн-ха?—ĕçтертĕм, хăра-хăрах ĕçтертĕм. Пулнă йапалана каласах пулат,—терĕ те, куç вĕçĕпе Çĕрĕк çине пăхса илђĕ.

— Вăт, шуйттан, мĕн ес суйатăн!?—кăшкăрса йађĕ Çĕрĕк.

— Краштании сутйа, суйат.

— Йытă, çын вырăнне картмаст вĕт,—ђўхенсе илђĕç Шĕшлĕне Çĕрĕк.

Сутйа кăшт аллине çĕклесенех иккĕшĕ те лăпланђĕç.

— Мĕншĕн-ха есĕ вĕсенђен çав терийех хăратăн?—тесе ыйтрĕ сутйе Ухăђвантан.

— Е-е, а-а..., хăрамалла çынсем вĕсем. Кунта мĕнле хăтланса ларнинђенех паллă вал. Е-е, а-а... мĕнле калас, шухăрах çынсем.

— Мĕн вăл шухă?

— Мĕнле калас, ĕ-ĕ, а-а... урăхла ăна епĕ калама та пĕлместĕп, шĕвĕ çынсем тесен те йураг пулĕ?—тесе, тўп-тўрĕ тăнă милитсионер çине çаврăнса пăхрĕ.

— Тырă та пытарман-и.

Ухăђван нимĕн калама аптараса ђаранса тăђĕ.

— Çук.

— Кам кил хушшинђен, çĕр айĕнђен, 200 пăт тырă ђавса кăларнă?—терĕ сутйе.

Ухăђван кана илтсен ђĕтресе ўкрĕ. Нилĕк уйăх хушши мунђара ларнăскер, вăл çук хушăра килĕнђе мĕнле улшану пулнине пĕлмест.

Йепле-ха вĕсем ана тупна? Кам кăтартнă. Кам ĕçĕ ку? Маруках каласа пађĕ-ши, тесе арăмĕ çинђен шутларĕ. Кутăн ђакса тăма май çуккине пĕлђĕ. Анђах çапах та хăй çине йышăнмарĕ. Çук хам çийе илес мар, пĕр сут тунăскер çаплипех иртĕ, тесе шутласа илсен, ђасах кукăр çул, пытанмалли май шыраса тупрĕ.

— Çуук, ађа пытарнă-пулсан çеç, епĕ пĕлместĕп.

— Пĕлместĕп, тетĕн?

— Çук, çук... пĕлместĕп.

Сутйе кун синђе тишкĕрсе ђаранса тăмарĕ.

— Мĕнле, краштанккă Аккулинă Александрăвнă сирен патăртан тухса кайсан пыркаласа килетђĕ-и, çук-и?

— Ура та йарса пусман, çу-ук....

— Çук, тетĕн?

— Çапла.

— Апла пулсан, краштанккă Аккулинă Алексантрăвна улталат.

— Улталат. Так тођнă.

Тенкелсем ђĕриклатса сас панă хушăра кĕтесри хĕрарăмсем пăшăлтатса илђĕçĕ.

— Вăт пăх ĕнтĕ, йепле вăл ухмаха персе сăмахлат. Шуйттана туласа пăрахассăм килет,—терĕ Уђки хăй ăшĕнђе. Ђăтаймасăр, ђĕтрекен аллисемпе шупăр аркине лăђĕркесе, Марйе хăлхи патенђе пăшăлтатрĕ:

— Вăт пăх ĕнтĕ, йепле вал куçа-кĕрет улталат, куртăна кулаксем мĕнлине!?

— Йепле-ха çав тернйех улталас!—терĕ Марйе те ăна хирĕç.

Çынсем пĕр-пĕрне мĕншĕн улталани çинђен Марйе те шутлама пуçларĕ. Малтан вăл пур улталакапа та йатларĕ. Кайарахна хăй улталанисене астуса илђĕ. Нимĕн калама аптăраса ларсан, ку ĕнтĕ ыталашни те улталат, тесе хăйне хăй лăплантарђĕ.

— Меншĕн-ха вăл сан çинђен капла елеклет,—терĕ сутйе, йулашки хут Ухăђван умне ыйту лартса.

Каллех Ухăђван нимĕн калама аптараса хытса тăђĕ.

— Ну?..

— Ман ађана кађђа пырасшăн пулса пурăнђĕ вăл. Ађа кăмаллажаст. Епĕр хамăр та, çемнесем, çураççах каймарăмар.

Сутйе айăплă çын вĕçĕмсĕр суйнине аван ђухлат, хăвартрах пĕтерме васкарĕ.

Уђкин ђăтăмĕ татăлђĕ. Çавăнтах, сăмах тавраш ыйтмасăрах, ларнă çĕртен сиксе тăрса нимĕн ђĕнмесĕр халăх çине вĕрп сăмахсем ывăтма пуçларĕ.

— Йалти ђи пуйан кулак вĕçĕмсĕр суйат. Вал пире пурсăмара та çын вырăнне хумаст пулас. Вĕреннĕ вĕсем çапла тума. Епĕ сут умĕнђе 125 ђухăн хĕрарăм сăмахĕсене калаcа пĕлтерес тетĕп. Ун çинђен епĕр район çлетаваттĕлĕ патне те çырса йанăђђĕ. Çухалнă пулас.—Ун çинђен шарламарĕç.

— Çук, çухалман, ĕçре пур,—терĕ сутйе.

— Çапах та, апла пулсан... Уђки хыпăнса пӳлĕнсе таканђĕ. Çӳлелле çĕкленĕ аллипе сывлăша касса труках айалалла антарса вăшлăрса йаđĕ.

— Çав усал кулака, пире çĕнĕ пурнаç тума кансĕрлекене, йалагалла тавранмалла мар тăвасђĕ.

— Правĕлнă!..

— Çапла кирлĕ...

Пуханнисем Карук сарлака çаварне уçса хыттан кăшкăрђĕ:

— Тĕпписех иртерсе пулат вĕсене!

Тепри çăпата пек пысăк аллисемпе алă çупса йаҕĕ. Ыттисем те ун çумне хутшăнҕĕç.

Сутйе аллине çĕклесе лăплантарсан. сут канашлу ларăвĕ тума кайни çинҕен пĕлтерҕĕ.

Шкул тулли халăх.

Татах алă çупрĕç. Ура çине тарса пăҕа сывлашран уçă сывлăша тухма васкаса пурте алăк патнелле сулăҕĕçĕ. Хăшпĕрисем, пĕҕĕкрех-хисем, парттăсем урлах йăраланса мала тухрĕç.

Сут Çеркуни уҕнтле пӯлĕмне канашлу ларăвне кĕҕĕ. Пӯртри халăх йĕпе тăмаппа витĕннĕ картишне йăтăнса тухса сапаланҕĕ...

Виçĕ комсомолĕс пĕр кĕтессе пуçтаранна. Пăҕă пӯртрен тухнă Çеркуни те вĕсен патне ҕупса пыҕĕ.

— Мĕн есĕр тĕксĕмленнĕ?

— Тĕксĕмленĕн,—терĕ Карук Çеркунине хирĕç.—Ним çукран темĕн туртса кăларма хатĕрленсе çӯреççе çынсем. Ара мĕнле пăсăк сăмах каларăм-ха епĕ пайан? Ну, калăр.

Калăн—пурте пĕр харăсах, тĕрли-тĕрлĕ виçепе Карук сăмахĕ-сене виçме пуçларĕç.

— Карукăн айăп çук,—терĕ Кĕçтук.

Çеркуни те хăйĕн шухăшĕсене калама васкарĕ.

— Тĕлĕнмелле çын çав Çемйун, хăйĕн ҕаруллахне кăтартман-ха. Такки ҕăркăшса çӯрет. Хаçат та вуламаст вĕт, çын-и вăл.

— Райкомолта ун сăмахне ытлашшипех шанаççĕ, çакă пĕтерет. Нимĕн тума та çук унпалан. Хут те мĕн калăр, пирĕн çын мар вăл. Ҕĕлхепе вăл темĕн те тăват, ĕçпе мĕн тунă-ха?! Хирĕç сăвар уçса калама çук, çиҕҕасах тулашма тăрат. Сылтăм, сулахай, мĕнле кăна сулăнҕăк туртса кăлармастăр,—терĕ те, Карук пĕр самантлăха ҕарăнса тăҕĕ. Ăшĕнҕе нихçан шутламан сăмахсем шĕвĕрленҕĕç. Татах вăл:

— Йулташсем, хут те мĕн тăвăр мана, капла пулсан епĕ йалтан гаратăп. Çав кулак аҕи айĕнҕе хур пулса пурăнас çук!—терĕ.

— Ей, унпăн тарма,—терĕ Кĕçтук.

— Тарăн çав... Мĕн тунă-ха вăл Совет влаçĕшĕн?! Сапах та-никама çын вырăнне хумасăр, пуç урлă таптаса çӯрет. Çакă комсомол органисатси ĕçĕ пулҕĕ-и?—Çук!

Çеркуни те хутшăнҕĕ.

— Капла пирĕн ĕç тухас çук, ун пеккисемпе кĕреше пулат, тарса мĕн?—терĕ Çеркуни.

Карук сăмахне итнĕ хыççăн Кĕçтук тарăн шухăппа кайса варăмăн сывласа сывлаш çавăрҕĕ. Ех, çакăнта Малттин пулсассăн. Вăт парĕҕҕĕ, вăл мĕнле пуçа çĕклеме,—тесе шутласа илҕĕ.

— Ҕăппуха! Партти йаҕейккинҕе лартас пулат,—терĕ Саңук.

— Ҕăнах та Çемйун ытла иртĕнме пуçларĕ. Кун çинҕен калаçас пулат; йулташлăх пулмасан, ĕçлеме май çук,—Çеркуни тата темĕскер çинҕен каласпăн пулҕĕ пулас та, апҕах ăна Кĕçтук урпне тĕртсе систерҕĕ.

Çемйун йапшанса килсе таҕĕ.

— Ырапах пуху тăвас пулат. Левый перекипсене пĕтерес пулат—верна?!—тесе ыйтрĕ Çемйун Çеркунирен.

Çеркуни тӳрех ăна хирĕç персе йађĕ:

— Мĕн темократла выђанатăн? Тӳрипех калатăп, есĕ Карук çине пустуй кăшкăратăн. Ну, аван пулђи-ха пасăр кăшкăрни. Култарни пулђĕ, урăх нимех те çук.

Çемйун хĕрелсе кайрĕ. Ури айĕнђе выртакан пăх муклашкине тапса сирпĕтрĕ.

— Курăпăр. Ку кăна мар. Ун тата...

Вĕриленнĕ Карук сиксе ларђĕ.

— Мĕн есĕ хăратса çӳретĕн?! Курăпăр, темĕскер. Ним курмалли те çук.

Санран никам та хăраман, так тăрналла вĕçтерсе çӳретĕн çав. Есе пăсма кăна вĕт есĕ. Мĕн тунă-ха есĕ? Çиелтен ташласа çӳреме кам пултармаст. Вăт ху, ху аллупа, пуçупа конкретлă мĕн турăн-ха есĕ? Кала!..

Карук мĕн пур пек калана шухăшне пушатрĕ те, ик аллине хыçалалла тытса, урисене ылмаштарса çирĕппĕн тĕренсе пăхрĕ.

Çемйун ђĕтресе ӳкрĕ.

Унăн сăн-пиђĕ: Ах, май çу-ук, атту епĕ сана ђĕрĕллех тытса çурмалла,—тенĕ пек хăрушăн, тискерĕн йунарĕ.

— А-а, пĕлетпĕр, рукковотствăна хирĕç!? Ревиçи тăвасшăн есĕ? Райкомол кăтартнă çулпа пырасшăн мар. «А»-не каларăн тăк «Б»-не те калас пулат,—терĕ йулашкинђен Çемйун.

— Ну-у?!

— Ытлашки?!

— Пустуйах калаçатăн есĕ.

Пурте Карук майлă пулса Çемйуна хирĕç аллисене сулђĕçĕ.

— Пустуй? Çапла пултăр. Кун çинђен кирлĕ çĕрте калаçăпăр,—терĕ Çемйун, вĕсен панђен çавăнтах тăртлатса нăрăнђĕ.

— Çавна Райкомол уполномођăннăй туса йана... Уполномођăннăй,— терĕ Карук, йĕрес вырăнне кулса.

Пĕри пĕр сăмах ђĕнмесĕр пуçĕсене хыçса шухăпа кайрĕçĕ.

— Ну мĕн тумалла-ха çав сурăхпа. Вăл тепĕр вутлă ђĕрене хуçса парахма пултарат,—терĕ Карук, нервăлланса кайса.

— Хуçа-ат?! Ђеппухха!.. Ака ун çинђен Исуттăв йулташпа калаçăпăр—лăплантарђĕ Саңук Карука.

Халах кĕпертетсе шкул пусми умне йăтăнсан, Саңук йулташĕсене шкула ђĕнђĕ.

— Ну, ђеппухха! Кукăрпа таçтах кайас çук-ха вăл. Кайран калаçăпăр. Прикăвăр вуланине кĕрсе итлер...

* * *

Карук хай йулташĕсемпе шкул ăшне кĕпĕ çĕре сутйе аллинђи хутне куçлăх патнерех çывхартса пĕр майăн йухăнтарса вулана çĕртен, сывлаша çаварса илнĕ пек туре те:

— Краштанин Ухăђвана пилĕк çуллăха тӳрленмелли çурта хуп-

малла. Çак юрука тултарсан виçĕ çуллăха Ђăваш республĕкĕнђен кăларса йамалла,—терĕ.

Ухăђван хăй вырăпне пусне усса ларђĕ. Шĕшлĕ çăмăллăн сывласа, кăшт кулпăн пĕринпе темĕскер çинђен калаçрĕ. Çĕрĕк пуçне хыçса илсе тапак ђĕркеме пĕринђеп ыйтрĕ. Хырăм, тутине усса, Çĕтĕк çĕлĕкне таварса пăхрĕ. Малти ретрисем каллех алăк патнелле кĕпĕртетсе сулăнђĕç.

Карук ыттисене мĕн ђухлĕ панине итлемерĕ. Никамран ыйтма аптăраса пĕринђен ыйтса пĕлђĕ.

— Ыттисене мĕнле, ыттисене?..—терĕ Карук.

— Ей, пăх... условнă тупă,—терĕ леш.

Карук ăна шанмасăр çурхи авăрти нек пăтранакан халах хушшинђен Çприттун Мирунђа кĕрĕк çаннинђен тытса ђарђĕ те, татах çавăн çинђен тĕпђерĕ:

— Ну, менле?

— Ухађванне аван пађĕç, анђах ыттисене мĕнле—илтеймерĕм, терĕ Çприттун Мирунђă.

Çприттун Мирунђăпа Карука халăх хушшинђен хĕсĕнсе тухакан тарланă Кĕркуç тĕл пулђĕ.

— Ну, мĕнле?—терĕçĕ иккĕш те.

— Тĕрлĕ. Çĕрĕк Павăлне—пер çул çурă. Шĕшлĕпе Хырăма—условнă, терĕ те, алăк патнелле хĕсĕнсе тухрĕ.

Шкул тулли çынсем урама тухса, пĕрерĕн-пĕрерĕн килĕсене саланђĕç.

### 3. КОЛХОС ТУМА.

Пăспа кăђăкăланнă вăрман ăшăнђи фосфорит сăнав шахти хула пулас поççолкăра çинçе сассине йантратат. Кулак несĕлĕсенђен тухнă мешђенсемшĕн канăçлăх çук. Ăшă вырăнсем çинђе сывăрса выртакан кулакла мешђенсемшĕн сивĕ ђир наркăмăшлă варăм туна пăйăлтатнăн туйăнат. Вăрласа, йе кукăр алăпа тупнă йуман вуттине ăшăтнă шатрун пÿртсенђе канăçлă ăйхă çĕрме памаст...

Çак сасах нумайĕшне ађашласа вăратат. Çпеккĕр çеç пайан вăхăтра вăранаймарĕ. Пайан ăна ĕнерхинђен те, виçĕмкунхинђен те ăшă. Айне те, çине те ђĕркенсе сывăрнă пађттинђен çемçе тÿшекпе минтер тунă. Çийĕнђе каçранах хатĕрлесе хунă ăшă тăлăп. Йара куна çĕр-икçĕр çынна ĕç пĕтерсе парса йе тавлашса вăхăт иртерпĕ хăйĕн ђериклатакан сĕтелли çинђе виçĕ хутлам хутланса тутлă ăйхăпа сывăрат...

Каçранах каласа хунă йамшăк, Микулай, лашине шăварса сĕлĕ парă хыççăн хăйпе-хăй мăкăртатса Райĕçтавком канђелерне кĕђĕ. Çпеккĕр сывăракан пÿлĕм алăк умне сырса çапнă хута вуласа пăхрĕ.

**ÇĔР ĔÇ ПАЙĔ**

Халиђђен пĕлмен пек:—çакăнта,—терĕ те алăка хуллен уçса пÿлĕме кĕђĕ. Микулай туртăнса тăмаст. Хăйĕн тăван пиђђĕшне вăратпă пекех, пÿске пек ђамăртанса выртнă Çпеккĕре силлерĕ.

— Çпеккĕр! Ну, мĕнле, лаша кӳлмеллен? Çпеккĕр сасартăках сиксе тăҫĕ.

— Ой!-ой!-ой!..

— Есĕ те нервăллă иккен?—ҫăтаймастăн...

— Тăхăр çул ĕнтĕ пĕр канмасăр сĕтĕрĕнетĕп. Шуткă штолн? Ху та çав, хулленрех те вăратма пултарнă вĕт.

— Йурĕ ĕнтĕ, йурĕ, ан çилен.

— Çиленсе мар.

— Ну мĕнле? Апатланатна есĕ, йе çаплипех-и?—Епĕ хатĕр, хуҫ халех.

— Кăшт çырткалăпăр та уттарăпăр.

Çпеккĕр çӳçепкелесе хăвăрт-хăвăрт тумланҫĕ.

— Йурĕ еппин çаплипех, апатне йалта та тупăпăри тен.

Микулай сиксе ӳкрĕ:

— Çул май хам пата кĕрĕпĕр. Пĕрре çимелĕх кăна тупăпăр ĕнтĕ. Ҫухăн нулсан та мĕн пурри пурах:

— Латнă...

Микулай васкаса лаша кӳлме тухрĕ...

Çпеккĕрпе Микулай çул çинҫе. Çапталăк сурсан сурҫăк ӳкмн шартлама сивĕ тăраҫ. Фосфорит ҫулне турттарса такăрланнă çул çуна тупапне карт çыртаҫ. Анҫах çинçе виҫкĕн потреслă йумап çуна тупанĕ ăна парăнастăн мар. Лăтăртатса тавлашса хытăран хытă малалла шаваҫ. Çула тухма вăхăтлă илнĕ лапсăркка хура тăлăп пĕр наҫҫасрах Çпеккĕре мунҫари пек пăҫăлатрĕ.

Вăҫ улпут, çуралсан та аппе мана çак тарапҫҫеп ешлеиен пулĕ,—терĕ Çпеккĕр хăй ăшĕнҫе. Капла тăлăппа йатăнса ларса йамшăкпа çӳреме вĕренменскерс темскерле пек туйăнса кайрĕ. Пурте ун çине пăхса: «Ава çĕнĕ улпут кайаҫ»,—тесе каланăн туйăнҫĕ. Çавантах ун çинҫеп шухăшлама пăрахса Микулай килне кĕресси çинҫеп шухăшлаҫ. Унтан хăйĕн ҫирлĕ аҫипе йулнă арăмĕ çинҫеп, пулашкинҫеп, унăн вĕçĕмсĕр ҫупакан шухăшсем каç пулса иртнĕ районри актив пуххинҫе, райкомра каланă самахсем ун умне ҫăмăртанса килсе кăҫĕçĕ...

«Пирĕн район кайра, пурĕ 48 проҫ. çеç,—терĕ те нимĕн каламасăр аптăраса пусрăнса ларҫĕ. Каллех вăл пуçĕнҫе мĕн пур пек ҫĕрĕ шухăшсене вичсе алласа пăхрĕ. Акă вăл ĕнер çеç тавлашуллăн иртсе кайнă ыйту çинҫе ҫарăнса тăҫĕ те хăйĕн татăклă шухăшĕссне вĕçлерĕ: Прохвоссем, йепле вĕсем тăватă çул хушшин халăх нурлăхне тустарса пуранниă. Тăватă çул вĕт, вăхăт сахал мар. Колхос йатне илтнĕ, варман, мунҫала, мĕн кăна вĕсем унтан турттарман. Патсене тата мĕнле пама пĕлнĕ «Пуш хут», «Панапă», «Ирĕклĕх», «Шатмă». Миçен вĕсем. Пурте суйа колхоссем. Вăт сана колфонт? Вăт пăх «Комунă октапĕр»?—вăл веçех урăхла. Ҫурккин те унта аван ĕçлет. Çук, пур çĕре те туртса илсе «Комунă октапĕре» парас пулаҫ. Купаксем вĕсем ҫейе... Çитменнине йалта та варманта та, икĕ тĕлте усă курса пуранаççĕ. Тăватă çул хушши сахал мар. Сахали вĕсем унтан хысна пурлăхне тултиă. Шупашкара, хуҫ Мускава çырҫҫĕр, нурĕ-ирех вĕсене унтан хăвалаcа кăларас пулаҫ. Уншăн нимех

те пулас çук,—терĕ те, ун пирки Райком çыруçине каласа паниие астуса илсеп хĕпĕртесе кайрĕ.

Çпеккĕр, ăшă тăлăп çухи ăшĕнђен тарлапă самсине кăларса, Микулайран ăçта çитпине ыйтса пелђĕ.

— Микулай!

— Ей!

— Инçеп-ха тата?!

— А-а! пур-ха, çитет!—терĕ Микулай, тăлăп çухине кăшт парса.

Микулайа сивĕ вите пуçларĕ пулас. Тăлăп çухпе лайăхрах тăратса вĕтелесе ђĕпĕтекен сивĕ çилтен хўтĕленђĕ те, лашине хытăрах хистеме пуçларĕ.

— Ооо-оох! Айван, йара пар!..

Виђкĕн ђăпăрккипе ђăштах тивертсе илђĕ. Парка çилхеллĕ, сакăл уралла çирĕп урхамах пек риссак тапса сикрĕ.

Çул урлă çуранлă тăман вăштăр-вăштар кустарат. Киђемĕн ларакан майаксем салхуллăн пуçсене тайнă.

Сивĕ. Тăман...

Çпеккĕр икĕ ерне хушши ĕнтĕ ĕретлĕ выртса канман. Ăшă тăлăп сырăшĕнђе тутлă ăйхăра тĕлĕрђс.

Ун пилĕк-çурăм çине нумай пысăк ыйтусем тиениĕ. Район ĕçтăвком упполномођђăннăйе пулса 12 йала колхос тума кайат. Çураки кампанине хатĕрлепесси, контрактатси, вăрмапа ĕçлеме çынсем йамалла, фосфорит турттарма лавсем тупас пулат. Кашни йалтах çураки валђи вăрлăхсем тасатттармалла, хатĕрлесе хумалла. Мĕн ђухле ĕç, пуриншĕн те вăл Райкомпа районĕçтăвком умĕнђе ответ тытмалла. Çпеккĕр кун пек пысăк ответлă ĕçре кăçал çеç ĕçлеме пуçланă. Тăхăр çул йалĕçтăвкомĕнђе хастарлă ĕçленĕшĕн йалтан района ђĕнсе çĕр пай пуçлăхĕ туса хунă. Пĕрмайах йалтан-йала çўреме тўр килнипе хăйĕн ĕçне те тĕплĕ ăнланса çитеймен-ха, анђах вăл вĕренесшĕн, ĕçлесшĕн. Вут пек çунакан канăçсăр ђĕрине çывăрттармаст.

Хирĕç килнĕ çунасем кăшкăрашса иртсе кайсан, тĕлĕрнĕ çĕртен Çпеккĕр вăранса кайрĕ. Акă вăл каллех ĕç çинђе. Ун пуçĕнђе çĕр тĕслĕ шухăш карăнат: йалти актив çывăрмаст, кунне-çĕрне пĕлмесĕр йалан ĕçре. Хĕрарăмсем, ђухăнсем, çамрăксем пуххи... мĕн кăна çук Акă Çпеккĕр йалта... йалканашпе актив пуххи пухат. кайран ђухăнсен ларăвĕ, йулашкинђен пĕтĕм халăх пуçтарăнат, токлат тăват, вара ĕç пулат. Татмăшра питĕ аван иртрĕ, терĕ те унта пуху мĕнле иртнине аса илђĕ. Кам колхоса хирĕç?—Çук! Кам хирĕç те, май та мар?—Çук? Аван!? Йетинокласно?.. Пăх ĕнтĕ пĕр самантрах иксĕр хуçаран пĕр хуçа пулђĕçĕ. Çпеккĕр ку тĕрĕс маррине ђухланă пек те пулат, çавăнтах: ирĕкрен кĕртмелле, теççĕ. Çпеккĕр шуђĕпе уççăнах ирĕкрен хресђене ниййепле те колхоса кĕртес çук. Çпеккĕр кун çинђен нумай шухăшланă, йалта пурăннă ђух кўршĕри суккар Пађђапа та нумай тавлашнă. Çавăнпа та вăл хал колхос çинђен шутланă хыççăн, Пађђапа тавлашни çине куçса хăй пуранса ўсне йал çине кайса ўкрĕ. Мĕнле вĕсем пурăнаççĕ, уйрăм хуçапа пурăнаттăр тесе, кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Йалан пуйасшăн харпăр

хайлăх шухăшпа пăнтăхса ларнă куçĕсене уçаймаççĕ. Хăçан вĕсем унтан тасалĕç?!—Хресҫен пуç мими тасаласса кĕтсен, епĕр пĕр колхос та тăвас çук, тесе шутларĕ вăл. Кунта ĕç усăлăхра, машшина парсан, тĕрлĕ ҫкутăсем кăтартсан, мĕн пур ăнланни çавăнта.. Тĕттĕмлĕх нумай, мĕн ҫухлĕ-ха вăл халăх хушшинҫе. Вăт вĕсемпе колхос ту...

Çпеккĕр çавăнтах иккĕленнĕ пек пулҫĕ: хамăр та çав, ытла сикетпĕр, мĕншĕн-ха çав пĕрлешсе ĕçлемелли йулташлăха тăвас мар?!. Кайсан, тен ыранах, колхоса куçĕçи теп. Çук, Çпеккĕр куп çинҫеп ҫарăнса тăма пултараймаст. Унăн пуç мимипе пусарнă шухăшсем ăшне ытти йала тухса кайнă райĕçтăвком уполномоҫҫăннăйсемпе токăвăр тупи шăтарса кĕрет. Ăмăрту, сотсиалисăмлă ăмăрту, пĕтĕм район талкăшĕпех колхосра пулмалла. Кам малтан!?. Çпеккĕр такама çиленнĕ пек теркĕшсе кайрĕ. Тăвас пулат, турткаланса тăмалли çук. Хе, мĕн калаçмалли пур, малтан ĕçлесе пăх-ха, кур, кайран вара кала. Кĕрес мар-тăк пошалстă ан кĕр, кам сана çиллам сĕтĕрет?—Кахалсем колхоса кирлĕ мар. Мĕнле калас, колхос ват-хĕт çурҫе мар вĕт вăл. Кĕрес мар тетĕнтĕк? Çĕпĕре, анҫах çĕнĕ ĕç тăвакансене ан капсĕрле. Хунă клатна тӳлле. Сăмах кĕске, мĕн унта пустуй ҫăмламалли пур. 12 çул калаçни те çитет. Мĕн ҫухлĕ çăвар тути сайа йаман-ши?—Колхос ҫĕлхе ҫăмланипе пулакан ĕç мар ĕнтĕ куçанна таварса тарласа ĕçлес пулат.

Çпеккĕр вăрахҫен хăйпе хăй шутласа ларса пыҫĕ. Микулай, йамшăк, вăйлă тăманран пĕркеннĕскер, лашипе калаçса хистенет. Калăн вăл та Çпеккĕр васканине ҫухлат. Микулай вăрахҫен Çпеккĕрпа калаçмасăр ларса пырсан:

— Çпеккĕр йулташ, çывратни,—тесе ҫĕнҫĕ.

Çпеккĕр ҫасах çĕр тĕрлĕ шухăш ăшне путнă çĕртен вăранса кайрĕ.

— Каккуй çывăрма, пуç çаврăнат,—терĕ.

— Манăн та пуç çаврăнат!

— Мĕншĕн?

— Вăт, калаха есĕ мана, мĕншĕн кăларнă çак колхоса, мĕншĕн?

Микулай калла çаврăнса Çпеккĕр çине тинкерсе пăхрĕ.

Çпеккĕр ку ыйтăва аван ăнланнă. Çавăнпа та вал пысăк хуçалăха пĕрлешмесĕр тума май çукки çинҫеп, трактăр, пысăк машшинсемпе кампайăнсене уйрăм хуçалăхпа тума май çукки çинҫеп йулашкинҫен, пысăк çурт-йĕрсем çине, клуп, аҫа-пăҫасен çурҫĕ, шкул, ратио,—пурин çине те куçса çаксене пурне те пĕрлешӳллĕ вăйхалăр ăçтан туса лартма пулат,—терĕ.

Микулай хăйĕн пуçĕнҫи ăнланманлăхсене Çпеккĕр умне кăларса хурсан лăнланнă пек пулҫĕ пулас, лаши йенне çаврăнса, малалла хистерĕ. Çпеккĕрпе Микулай хушшинҫи сăмах пĕтсен, Çпеккĕр нимĕн çинҫен те шухăшласшăн мар пулҫĕ. Анҫах ун пуçне çĕнĕрен çĕнĕ шухăшсем çил тăвăл пек кашласа, çуранлă тăман пек шуса кĕҫĕç. Çпеккĕр нимĕн калама антăранипе хăйпе хăй калаçса сăмах татрĕ:

колхоса хăваласа кĕртни тамăка кĕртни мар вăл. Кайран хăйсемех ăнланаççĕ...

Ђăштăр, ђăштăр çуна шăват. Хутран ситрен лаша тулхăрат. Районран çирĕм çухрăм ытла кайсан Микулай ларкăç çинђен калла çаврăнса тапак туртма ыйтрĕ:

— Çпеккĕр йулташ, туртма пури сан!?

Çпеккĕр лапсăрка тăлăп çухипе сирсе калаçсан лашана ђарса тапак ђĕркерĕç. Çпеккĕр Микулай вăрăмăн хашлатса сывлаппипе ђух-

— Мĕн есĕ ватă çып пек ытла пăшăрханатăн, терĕ Çпеккĕр.

— Çемйере суклаç çук.

— Суклаç çук тетĕн?

Микулай Çпеккĕрĕн кайранхи сассипе илтмерĕ пулас хăйĕн лашипе калаçса мăкăртатрĕ:

— Вăт çапла, айван!.. пăхха, мĕнле вăл толхăрат,—ађашларĕ лашипе. Кĕлте пек хÿреллĕ пысăк станлă Машкă хашка пуçне сулласа йарăнса йуртат. Айван, калăн, йамшăк унпа калаçнине ђухлат, ађа пек хĕпĕртесе малалла сиксе ÿкет. Микулай тахçанах ку ĕçрен тухма шутланă. Ăна ĕç укçи сахал пани килĕштермен, пуринђен ытла ђас-ђасах вăл хăйне вăрман хуçалăхĕнђи йамшăксемпе танлаштарса виçнĕ. Вăрман хуçалăхĕнђи йамшăксем уйăхне 40-шер тенкĕ илнĕ, Микулай 28 тенкĕ çех. Çавăнпа та вăл ђас-ђасах çакăн çинђен йатлаçат:

— Йепле вăл пуретăк çук, йеплеха капла?—вĕсен ĕç те сахалтарах... Ес пур йытă пек ђупатăн, укçа пĕр пек мар. Хăйаккăн выртса 40-шер тенкĕ укçана илеççĕ вет. Камран килет-ши кун пек ирсĕр йапала?—Ах, Рĕк претçетаттĕлĕ хам пулсан?.. Пур йамшăксене те пĕр тан пама приккас парăттăм,—терĕ Микулай. Микулай шутласан-шутласан хăйпе хăй çиленђĕ. Ухмах!—Хут вĕренмелле пулнă иккен. Вĕреннĕ пулсан, тен, хађђенпе укрумун пулнă пулăттăм. Халех вĕренме пуçлас. Вот, ђорт, хаçат вулама вăхăт çук та. Çу-ук, иртрĕ пулĕ ĕнтĕ вăл ирен вĕренесси, луђђă йала таврăнса колхосра ĕçлес. Кунта капла Машкăна вара нађар пулат. Çав савхус, çын-и вал?—Лашасене виçсе пана икĕ пăт сĕлĕрен çурри ытла вăрларĕ те. Çавах вăрларĕ ăпа,—тесе кулђанђĕ Микулай, Машкă пĕр каç сĕлĕсĕр утă çинђе тăнипе астуса илсен. Пăх-ха ăна, шуйтана, мĕн кăна вăрламарĕ-ши вăл çак хĕлте? Арăмĕ хăнана килсен икĕ тилхепе, пĕр трупа татти,—сăмакун савăт тума тет, çуна тулли каçонки утăна пĕрле танкаса йађĕ. Хе, çуни тĕпĕнђе тата урăх йапаласем те ђикнĕ-и тен? Пулнă пуђ,—хунах ĕнтĕ вăл. Çуртра çĕрĕк турта пăйавĕ те вырăнăçлă, тет те вăл. Пур вĕт тĕнђере çынăнне хапсăпакан çăткан çынсем. Ăна тата икĕ тенкĕ ытлашки параççĕ, старшăй тупă. Лашисем мĕнле ун сăрхăнса кайрĕçĕ. Çав айван выђăх апат-çимĕçне вăрлат те, çын-и вăл?—çаплах нурăнат, ђĕлхи çемçе, йăпăлтатма пултарат. Шуйтан? Ват сунпă. Выђăх апатпе те пулсан вăрласа пуйасшăн вĕт...

Микулай ватă йамшăк çинђен шухăшлама пăрахса хăй йуратнă Машкипе йăпанђĕ...

— Ех-ех-хеех!—Айта-а! ђушă ђух ђуп, çинĕ ђух çи, тесе

Машка умĕнҫе мухтанҫĕ. Ху пайна та спулна ҫиетĕн, ытлашши те леккелет тесе калассан Машкă ăнланманнине Микулай туйрĕ куран, шарламарĕ. Ун пуҫĕнҫи шухăшсем таҫта та ҫитсе ўке пуҫларĕҫĕ. Акă вăл килте. Икĕ аҫи: Атте!—тесе макраҫҫĕ. Урса кайнă арăмĕ шăлне ҫисе йатлаҫат:—Уру килсе ан пустăр, йепле пурăннă ҫапшипех пурăнатпăр хамăрах. Ху пайна нл те тух. Выҫҫа вилмĕц, анҫах епĕ кулхуса кайас ҫук. Намăссăр!—пĕр арăмна тăрантма хăратăн, йытă туйĕ хăвалама кайасшăн... Майра тух та кулкус ту, епĕ унта пырас ҫук! хам хăваран тухас ҫук,—тет арăмĕ.

Микулай нумайҫҫен йуратнă Уҫтукне ўкĕтлерĕ. Кулаксем сарнă шухăша сирме тăрăшрĕ. Вунҫиҫҫĕри аслă аҫипе йатарласах каласрĕ. Анҫах вăл та: «Аннепе йулатăп»,—терĕ.

Виҫĕ кунлăха кĕпе улăштарма киле таврăннă Микулай хăй пĕр йатакпа ҫеҫ колхоса ҫырăнса хăварнипе астуса илҫĕ.

Микулай салхуллăн сывлăш ҫавăрса: Хăй хут тарам, аҫасене вĕт пăсат, ҫĕнĕ ĕҫреп пистерет. Вĕсен ҫулне картлат,—тесе хăйпе хай калаҫса илсен... тата темĕн те тепĕр ҫинҫен йăсарланҫĕҫ ун пуҫĕнҫи шухăшсем. Анҫах ăна Ҫпеккĕр сасси уйартрĕ.

— Суклаҫ ҫук тетĕн иккен?—терĕ Ҫпеккĕр, хăйĕн пуҫĕнҫи шухăшсем ҫинҫен шухăшлама пăрахса.

— Халĕ пĕлетĕн ĕнтĕ, ҫав кулкус пиркийех...

— Тата мĕн ҫитмест?—терĕ Ҫпеккĕр.

— Поти, ыйт унтан? Пĕлен пирĕн ҫăваш хĕрарăмне. Пĕрле ҫийесрен хăрат. Пĕр хуран тесен ҫĕри ҫурăлат вара. Сехрисем хапнă.

— Ниҫҫево-о!.. урисем ҫине ĕне пуссан хăйсемех апланаҫҫĕ. Кулак йуррипе ўсĕрĕлнĕ вĕсем. Урăлтарма тăрăшас пулат.

Микулай ҫаврăнса:

— Ҫапли ҫапла та, анҫах... Пирĕн тĕттĕмлĕх пĕтерет,—терĕ.

Ҫпеккĕрпе калаҫнă хыҫҫăн Микулайăн ҫĕри ҫăмăлланна пек пулҫĕ. Пĕр манăн ҫемйе ҫеҫ мар вĕт, тен, унăн хăйĕн те ҫапла.—Сан хăвăн мĕнле тата?—тесе ыйтса ҫĕптес, терĕ те, анҫах ана тăман витĕр илтĕнекен шăнкăрав сасси ҫăрмантарҫĕ.

Кипек-кассии йурпа витĕннĕ униҫисем куранса кайрĕҫ. Пуштара ҫул парса йал хапхи патне ҫитсен Микулайпа Ҫпеккĕр ҫапла кăшкăрса калаҫса илҫĕҫĕ.

— Ҫак йал ĕнтĕ,—терĕ Микулай.

— Ехĕ, пысăк йал иккен!?

— Пысăк, таврара пĕр йал!

— Анҫах кайа йулнă йал,—терĕ Ҫпеккĕр.

Ҫпеккĕрпе Микулай ҫиркĕве хирĕҫ тĕлме-тĕл каралса ларна шкул умне килсе ҫарăпсан, шкул аҫисем пиллĕкĕн-улттăн ҫупса тухрĕҫ. Хапхан пысăк алăкĕ уҫăлса хупăнсанах потреслĕ ҫуна йĕрне тăман шăлса тикĕслерĕ...

## 4. ПУҪЛАМĔШ.

Уҫитĕл—Ҫеркуни, пайан Ҫпеккĕр килнипе аҫисепе килĕсене иртерех салатрĕ. Тата унăн тепĕр сехетренех пысăк «аҫасем» вĕренме

килмелле. Весем те сахалăн мар, Çеркуни тўпине 50 çын тивет. Ун крушюкĕнҫе пуринҫен ытла хĕрарăмсем нумайтарах вĕренеççĕ.

Суккăр анса йулнă ҫăваш хĕрарăмсем хушшинҫе, вĕсен куçне уçас ĕçре Улҫипе Çеркуни, Софйе Павлăвнă сахал мар ĕçлеççĕ. Ҫăваш ĕççыннине, ĕмĕр-ĕмĕр тĕттĕмлĕхре нуша курса, ҫура пулса пурăнна халăхшăн, ĕлĕкхи кивĕ йерке нихĕш йенҫен те пулăшман. Ҫăваш ĕçхалăхĕ халĕ ирĕкре. Пур ытти ĕçхалăхсемпе те пĕрле, пĕр тан пулса сотсиалисăмшăн кĕрешет... Хăйĕн хуçалăхпа ăслăлăх ĕçне хăпартса, авалтан-авала амаланнă траххумпа кĕрешсе тĕттĕмлĕхе пĕтерме тăрăшат.

Еç нуммай, анҫах Çеркуни ывăнмаст. Фронтри çын ывăнма пĕлет-и? Çеркуни урăхла калат. Пĕр уйăх хушшинҫе халиҫҫен саспалли уйăрман çынсем мăкăртатса «Пирĕн йал» хаçат çинҫе саспаллипе саспалли хушса ҫĕрене çыпăçакан сăмахсемпе хуçаççĕ. Çеркуни ăна курсан хĕпĕртет, çакăнта вара вăл пĕтĕм ҫĕраниех канат...

Çпеккĕр Çеркуни пўлĕмне ывчаçрĕ.

Тăрăхларах ансăр пўлĕме пкĕ пысăк ҫўреҫерен хĕвел çути çапăнна. Кĕтесри сĕтел çинҫе ăçта килҫĕ унта кĕнеке йатăнса выртат. Тимĕр кравать çинҫи вырăнĕ ĕретлĕ пуçтарăнман. Лўҫĕркеннĕ минтер çинҫе çуррипе касман питне тавăрнă кĕнеке выртнипе Çпеккĕр курҫĕ.

— Хĕ, ку кĕнеке вулама та вăхăт тупат иккен, сторăвă!?: Ес пур, хаçат та ĕретлĕ вулаймастăн. Купĕн-çĕрĕн йалтан йала ҫупатăн. тесе аллинҫи кĕнекепе ўркеннĕ пек пулса, çавăркаласа пăхрĕ.

«П-о-о-лит—экономия».

Да-а! Вăт вуласҫĕ ĕнтĕ çакна, хăçан? Кун пеккине пирĕн пуç варит тума путтарас çук, пĕр-пĕр курса кайасах пулат. Вĕренмелле, крушок, темĕскер, теççĕ. Вăт виçĕ уйăх ĕнтĕ йалтан йала сĕтĕрпетĕп, каккуй вĕренеси. Хăçан пĕрре мунҫа хуттарса кĕпе-йĕм улăштарасҫĕ, тесе çўретĕн те. Çук, манран вĕренсе пулмарĕ ĕнтĕ вăл, тепле, хăш-пĕрисем вĕренеççĕ, йепле ăшшĕ вĕренеççĕ? Çпеккĕр кĕнекине уçса пăхсан вăл пĕрĕнсе ларнă шит-куçне сăмси çунаҫĕ патне пуçтарҫĕ.

Т—Д—Т.
Д—Т—Д+д

Мĕне пĕлтерет ĕнтĕ ку йапала? Ҫыхвар тесен—ҫыхвăр мар, пуквăсомех. Мĕн йапала ку?.. Çпеккĕр çилепе кайса çак вырăна виçтăваг хутҫен те вула-вула тухрĕ.

Укçа тепкĕ çинҫел çырпи найне вулама тытăнҫĕ.

— Вон штоо!?... Ну, ку йапала малашне кирлĕ те пулас çук. Пасар вăл пĕтмелле, пасар тесен укçи те кирлĕ пулас çук... Ҫим-ха, ҫим,—кăна урăхла ăнланма май çук-ши?.. Варахҫен шухăшласа тăр ан п сăх а лиш вăрăм п рансĕне хура варам лансарлка çўç аппне пытарҫĕ. Кăшт куçне хупса тăрҫĕ. Пĕр сасартăках:

— Стоп! йеçт! Ехее! так-так-так! Вот што!? Халĕ ĕнтĕ пĕтĕм-

пех ӑнлантӑм. Сӑмахран. епӗ пасара ҫӑпата илме кайатӑп. Укҫа мапан ҫук. Сваҕҕӑт, ҫӑпата илмеллех, вара мӗн ҕухлӗ те пулсан ҫав тыррах йӑтас пулат. Мана ваҕҕи кирлӗ ҫӑпатана сутма илсе тухакана тырӑ кирлӗ мар. Вӑл ҫав ҫӑпатипе пӑрттанай улӑштарса илесшӗн. Пӑрттанай сутма тухнине ҫӑпата мар, тырӑ кирлӗ. Епӗ тырра укҫапа сутмасан ҫапатана илес ҫук, ҫӑпата илсе тухни пӑрттанай илес ҫук. Вот и всо! Ехӗӗ! Ӑнланма пулат иккен...

Ҫав вӑхӑтрах пӳлӗме пӗр палламан ҫын килсе кӗҕӗ. Лутра пӳлӗ шатра пит куҫлӑ, куҫӗсем симӗс шапа шывӗ пек пӑтраннӑ. Ҫӳхе тутисене таваткӑллатса пӳрт ӑшҕикне ӑслӑ ҫын пек сӑпаса пӑхрӗ те, Ҫеркуни уҕҕитлӗ килти ҫинҕен ыйтса пӗлҕӗ.

— Ӑҫта есӗр кайатӑр?—ыйтрӗ Ҫпеккӗр, аллинҕен кӗнекипе лӳҕеркеннӗ минтер ҫине парахса. Ҫавӑнтах хӑй ӑшӗнҕе куҫ хӳрипе каракулҕ ҫухаллӑ палҕтти айенҕен курӑнакан симӗс шӑрҕануй тшемпӗр (жилетки) ҫине пӑхса илҕӗ те: мӗнле Тит Титӑҕ ку?—тесе шутларӗ.

— Ҫул май. Шупашкара,—терӗ лешӗ, ун ҫине пӑхмасӑр. Ҫеркуни сарӑлса лӳҕӗркенсе выртакан вырӑнӗ ҫине ларса нирус тивертрӗ.

— Вулатӑн иккен,—терӗ анҕах килсе кӗнӗ уҕҕитлӗ Ҫпеккӗре. Ҫеркуни кравать пуҫӗнҕе ҫакӑнса тӑракан алшаллипе шӑлӑнҕӗ.

— Вулу ҫук ӗнтӗ, хӑш-пӗр ҕух канма выртсан пите хупласа ҫывӑркалатӑп,—терӗ Ҫеркуни кӑшт кулса.

— Есӗ мӗн ҕарманатӑн?

— Примӑс ҕӗртрӗм-ха. Ҕей хут ӗҫӗр, ашӑтас, ҫул вӑрам, сивӗ.

— Хӑнӑхнӑ ӗнтӗ,—пӗр ҕӑрманнӑ йапалана ӗҫӗпӗр, терӗ Ҫпеккӗр.

Ҕей вӗренӗ ҫӗре Микулай та Машкӑна вырӑпаҫтарса пӳрте кӗҕӗ... Вӑрӑм ҫул килнӗ ҫынсем ӑшӗнҕӗҫ.

Ҫанҕук, Керкуҫ, Кӗҫтук та персе ҫитрӗҫ. Районран килнӗ тенине илтсен тата ытти активсем те васкаса шкул йенне уттарҕӗҫ. Никам та хӑваламаст, хӑйсемех утаҫҫӗ.

Ҫпеккӗр Ҫеркуниреп колхос ӗҫӗ менле пыни ҫинҕен ыйтса тепҕере.

— Пирӗн колхос аван ӗҫлет, усаллине илтмен. Вӑтӑр ҕлен, ак ку йулташ уп ҫинҕеп аван каласа пама пултарӗ, вӑл «Калинӑ» колхос претҫетаттӗлӗ,—терӗ Ҫеркуни, Санҕукпа паллаштарса.

— Колхос йаҕӗ-и вӑл?—ыйтрӗ Ҫпеккӗр.

— Ҫапла,—терӗҫ пӗр харӑс.

Санҕук «Калинӑ» историне кӗскен каласа паҕӗ.

Район тӑрӑх ҫӳресе Ҫпеккӗр кун пек йапаласем ҫинҕен сахал мар илтнӗ. Анҕах ку таранҕҕен Ҫпеккӗрӗн ҕӗри нихҫан та капла тӑвалланса веремен. Вӑл хӗрсе кайса темиҫе ҫӗр ҫынпа калаҫнӑ пек хыттӑн калаҫма пуҫларӗ.

— Ҫапла ҫав, йулташсем. Ҫапас пулат вӗсене, кулаксене тымарепех кӑклас пулат! Кама-кама раскулаҕҕнт тумалли ыйтӑва пайанах сӳтсе йавас пулат. Вклатне те хурас пулат. Йулапкинҕен кӑрлаҕӑн 31-мӗш ҕыслинҕе йыпилӑ пухӑннӑ райӗҫтӑвкомӗн ларӑвӗ райопа талӑпипех колхоса куҫарма йышӑну туни ҫинҕен каласа паҕӗ.

Çак хушăрах Çемйунпа Паҫук та килсе кĕҫĕç. Çеркуни—ку йалĕçтавком претçетаттĕлĕ тесе, Паҫукпа Çпеккĕра паллаштарҫĕ.

— Есĕ тата ăçтисем?—тесе ыйтрĕ Çпеккĕр Çемйунтан.

— Камсул çекреттарĕ вăл, тăрăхларĕ Кĕркус. Çпеккĕр Кĕркус Çемйунтан шўтлесе кулнине ҫухласа илҫĕ пулсан та, ун çинҫен ҫаранса тăмарĕ. Çемйунĕн ҫейе куçĕсем унăн-кунăн выҫанҫĕç, питтăрри кăшт хĕреллĕ пек пулҫĕ.

— Есĕ пĕрмайах çынран куласшăн,—Çемйун пĕрре Çпеккĕр çине, тепре Шупашкара кайакан çын çине пăхса илҫĕ. Çемйунăн хĕрелсе кайнă сăн-пиҫĕ: вăт пăхăр ĕнтĕ, çавăн пек кутлă-пуçлă çынсемпе йепле ĕçлес тетĕн-ха, анҫах епĕ çапах та ҫăтатап, тесе каларĕ. Шупашкара тавранакап шурналис, умĕнҫи калстăкне тўрлеткелесе, пуçне кăшт пăрса кулам пек туса илҫĕ. Çпеккĕр ăна-куна асăрхамарĕ. «Камсул» тенĕ сăмах ăна хăйне те кулăшла туйăнҫĕ, çавăнпа та вăл:

— Ниҫҫово! Хăш-пĕр ҫух кулас та пулат. Кулни те усăллă, пулма пултарат,—итерсе йаҫĕ.

Уҫитлĕ пўлĕмĕнҫен аҫасем вĕренекен пўлĕме тухса парттăсем хушшине саланса вырнаçрĕç.

— Пĕр сăмахпа каласан, сирĕн йала епĕ çав колхос тăвас ĕçпе килтĕм,—терĕ Çпеккĕр.

— Аван, аван... кирлĕҫҫĕ-ха вăл пирĕн йала килни,—хушрĕ Çемйун кулкаласа. (Ашшĕ вĕрентнĕ ăна çапла йăпăлтатма).

— Ну вăт, сирĕн йалта колхос тĕшĕ пур, апҫах ăна сарма тăрăшмалла. Мĕн пур ĕç çавăнта, çав вăтăр йетаклă «Калинăран» пысак колхос тăвас. Пĕтĕм йалĕпе пĕр вăй туса пысăк хуçалăх тапратса йарас пулат. Ку ыйтăва ҫăн малтан йалти патраксемпе ҫухăнсен хушшинҫе сўтсе-йавас. Кайран вара пĕтĕм халăх пуххи умĕнҫе тĕрĕслесе тухас пулат.

— Пур комсомолĕссене те ҫĕнес пулат,—тесе хушрĕ Çеркуни.

— Ҫĕнес, халех ҫĕнтерес!—Çемйун алăк панҫе тракан комсомолĕсе хушрĕ.

— Лешĕ, хура тăла пиншаклăскер, алсппе тăхăнса пуçĕнҫи мăлаххайне тарăнрах пусса лартса тухса кайма хатĕрленҫĕ.

— Покоти! Миçен-ха есĕр кунта?—Çпеккĕр ура çине тăрса пур шкулти çынсене те суса тухрĕ.

Пĕрре вырăнне иккĕн-виççĕн шкултан урама тухса ҫупрĕçĕ. Комсомолĕссем, тата парттире тăман ытти активиссем те килҫĕç. Шкул тулли çын лăпланса райĕçтăвком уполномоҫҫăннăй сăмахне итлеме хатĕрленҫĕç. Уҫки те, телекаткă, хайĕн активлă хĕрарăмĕсене йертсе çитрĕ.

— Пуçтарăнҫĕç пуҫ ĕнтĕ?—терĕ пĕри.

— Уçас!..

— Комсомолĕссемпе активсен пуххи уçална, тесе шутлăпар еппин. Пухха йертсе пыма преçитнум суйлатпăр пуҫ,—терĕ Çемйун комсомол йаҫейккип çекреттарĕ, пĕрре Çпеккĕр çине, тепре шурналис çине пăхса.

— Суйлас!—терĕçĕ.

Уҫки, Саҫук, Кӗркуҫ, Ҫеркуни—преҫитиума суйланҫӗҫ. Актив пуххи пуҫланҫӗ. Ҫпеккӗр, пысӑк аллисемпе лӑпсӑрка ҫӳҫне сӑтӑркаласа, вӑрӑммӑн оӑтӑрттарса калаҫма пуҫларӗ..

— Хаклӑ йулташсем! Епӗ хам сӑмаха ҫакӑнтан пуҫлатӑп. Есӗр кивӗ саманара хресҫенсем хӑйсен ҫӑкӑрне кулака парса темиҫе ҫӗр ҫул выҫӑ пурӑннине пурсӑр та аван пӗлетӗр. Совет влаҫӗ хресҫенсемшӗн усал тӑвасшӑн мар. Вӑл йепле те пулсан хӑйӗн халӑхӗ тутӑ, хӗпӗртесе ӗҫлесе савӑнса пурӑнтӑр, тесе тӑрӑшат. Халӗ ӗнтӗ ҫав кулаксене ҫӗллипе мар, пӗр пӗрҫине те пэмалла мар вӑхӑт персе ҫитрӗ. Йешӗли кулак хӑй вӑйӗпе тарласа ӗҫлесе пурнас тет-тӗк, пире ҫӗнӗ пурнӑҫ тума ҫӑрмантармасан, хӑй ҫине хунӑ палуксене вӑхӑтра тӳлесен, совет влаҫне хирӗҫ тӑмасан епӗр ӑна кансӗрлеместпӗр, анҫах хамӑр йуна кулаксене сӑрхӑнтарма ирӗк парас ҫук.

Пирӗн хосутарствӑра, ҫӗр ӗҫӗнҫе, пайан кун пур вырӑнта та ҫӗнӗ пурнӑҫ ҫулӗӗр ҫине анлӑ утӑмсемпе куҫма пуҫларӗҫ. Колхос тӑваҫҫӗ. Талкишӗн-талкишӗн, йаллӑн-йаллӑн, пӗтӗм районӗпех, окрӗкпех пӗр колхос тӑваҫҫӗ. Пӗтӗм Совет сойусӗпех пурнӑҫ ҫапла кӗрлесе улшӑннӑ вӑхӑтра, епӗр, ҫӑвашсем те, айакка пӑрӑнса йулма пултараймастпӑр. Тӗрӗс-и ку?—Ҫпеккӗр сывлӑш ҫавӑрпӑ май, пурин ҫине те шӑтарас пек тинкӗрсе пӑхса илҫӗ.

— Правелнӑ!—терӗ Кӗркуҫ.

Ыттисем йӑшӑлтатса илсе: ата, кала, итлер-ха, тенӗн куҫсене мӑҫӑлтаттарҫӗҫ.

Ҫпеккӗр татах калаҫрӗ.

— Ҫак ӗҫ пирӗн районра ҫеҫ мар, вӑл пӗтӗм Ҫӑваш респуплӗкӗнҫе пуҫӑннӑ йапала. Сирӗн йалта ҫак ӗҫрен кайа йулмалла мар. Ку ӗҫре ҫӑн матти ретре комсомолӗссем, йалти активсем пымалла. Пӗр комсомолӗс те, пӗр комунис та айакка пӑрӑнса йулмалла мар...

Ҫпеккӗр хӗрсе кайрӗ. Итлесе ларакансем те уп шухӑш йӗрне ҫкрӗҫ. Шупашкара тавранакан шурналис ҫеҫ хӑйне хӑй пысӑккӑн кӑтартса, кӗсйинҫен темӗскер хут пӑкки кӑларса, пӑхкаласа, ҫырам пекки тука аса ларҫӗ. Ҫпеккӗр ӑна ҫухларӗ, куҫ харшисене сӑмси ҫине антарса пӑрахрӗ те, сӑмахпе малалла тӑсрӗ.

— Йепле-ха хӗпӗртес мар, йепле-ха ҫакӑн пек пысӑк ҫаплӑ ӗҫе пуҫӑнас мар. Кивӗ авалхи ҫуралӑхла пурпӑҫа пумай ҫул сӑнанӑ! Анҫах уп ыррӑ не сахал курнӑ. Кам ӗмӗтленмест-ши тутӑ, савӑнӑҫлӑ пурӑнма?—Тепӗр патрак йе ҫухӑн ҫынах, мӗн аталанма пуҫлапсанах, пурпӑҫне йусасшӑн малалла тапаланат. Ул ҫук, ку ҫук, йалан ҫитмест. Аҫи-пӑҫи выҫӑ, ҫарамас, шкула кайаймасӑр урамра напккаса ҫӳреҫҫӗ. Ашшӗ пуйан ҫын пулас ӗмӗтне пуҫӑнҫен пӑрахмаст. Акӑ кӗ ӗнсе ӗҫ (п р. у ҫа тывапӑр, ва а ӑна-кӑна илӗпӗр, тет. Сисмен ҫӗртен инкек-синкек сиксе тухат. Кайа йулнӑ анана сухалаттарма вырлӑх ҫук, анат ҫимӗҫ пӗтсе ҫитнӗ. Ҫӗнӗ тырӑпа пӗр пӑтшӑн икӗ пӑт леҫ е пама пулат. Ҫийӗнҫен—вӑлах, ӗҫ хӗрӳ вахӑтӗнҫе, ҫемйипех пӗр икӗ кун кӗтез парақан патне кайса ӗҫ тават. Хӑйӗн уйри мӗн пур пек тыр и тыканат. Ҫуркуние ик хак хурса кӗтмелле пана тыраҫӑп хӗртсе пӗҫортелен шарӑхпа пуксе, самах ҫине тӑрас

тесе, сурапланнă ђĕрине ыраттарса пуйан ĕçне тăват. Пĕрмайах çитмест, анђах ĕмĕт тулмаст. Вара кăçал тырă naђар пулђĕ, тесе хăйне-хăй лăплантарат: килес çул турă тырă парсассăн парăмсене те татăпăр, путăк-шăтăксене те питĕрĕпĕр, тесе ĕнтĕркесе сивĕ хĕле иртерет.

Çук, йулташсем! пыршă татăлађтен ĕçлесен те çавах пуйансем пек:

«Çуртсем тавра ай кил-çурт
Ђул хўме пек çавăрнă.
Сарă хапха килсерен
Ђĕнтĕрленĕ тăрăллă» —тесе епĕр пуйан йуррине нихçан та йурлас çук. Хастарлăх пирĕн çителĕклĕ, ĕмĕтленпĕ ĕмĕтсем татăлман. Çĕнĕ аслă çул-йĕр пирĕн куç умĕнђе сарăлса выртат. Вăл сотсиалисăмлă çул! Пĕрлешетпĕр!—Пĕр вăй-хăват пулса, выçлăтутлă пурнăçран: тутă, савăнăçлă, кулђтурăллă пурнăç çулĕ çине тухатпăр. Çавăнта пирĕн савăнăç, ĕмĕт тулни, йăвăр пурăнăç йусанни.

Çпеккĕр тарлана çамкине шăлса типĕтсе вырăнне ларђĕ. Ун хыççăн комсомолĕссем пур те пĕрин хыççăн тепри сăмах çине сăмах илсе калаçрĕç.

Пĕр Уђки çеç:

— Апла пирĕн «Калина»—колхос пĕтсе ларат пулĕ?—тесе ыйту лартрĕ...

Çпеккĕр ăпа хирĕç таварса ăнлантарса парсан, Уђки те шарламарĕ.

Карук, нимĕн ђĕнмесĕр ларнă хыççăн, сăмах илђĕ:

— Пирĕн йалта мĕнле кирevсĕр йапаласем пулса иртнине районра çеç мар пĕлеççĕ ĕнтĕ. Еçлекенсемпе хресђенсен инспекоинђен те килђĕç, «Çамрăк колхоçнĕк» çинђе те çырђĕç. Ухăђвана хупса лартрĕçĕ. Паткулађнĕксене те ахалех иртмерĕ. Çапах та кулаксем майлă çаптаракансем пĕтĕмпех кăкланман-ха, вĕсем пур!.. Тен, вĕсем малашне те çапла пĕрмайах кансĕрлĕç...

— Пĕтерес пулат вĕсене! кăшкăрђĕ Çемйун.

— Çавăншăн купта пухăннă та... Вăт имĕннă, вĕсене пĕтерес пулат. Анђах мĕнле? Пухура кăшкăрнипе çеç пĕтес çук вĕсем. Сăмахпа епĕр нумай калаçатпăр, анђах ĕçре курăнсах каймаст. Кенапала Михетере тытса кайрĕç, пулăшкум машшинне вĕсем çĕмĕрнине куракансем те пулнă. Ку ĕçе йалтисемех хуплама пуçланă пулас. Михетере, вăтам хресђен шутĕнђе тăнăран, çвитетлĕсем уççăн каламанран пулас, кăларнă. Каллех килте пурăнат. Тен, Кенине те кăларĕç, ку ĕç йалтан тухат. Çакна пирĕн манмалла мар.

— Ку ĕçе районран слетăвăттĕл килсе тĕрĕсленĕ,—терĕ Çемйун.

— Çлетаваттĕл йăнăшма пултараймаст-и? Пултарат!

— Комсомолĕссем кăтартмасан вĕсем хăтăлаççех!—терĕ пĕри.

— Колхос çинђен калаçха есĕ?—терĕ Çемйун, хĕрелсе кайса.

— Ун çинђен те калатăп, анђах епĕ ку ыйту çинђен те сўтсе йавма ыйтатăп.

Çпеккĕр итлесе ларсан, райком çекреттарĕ совешђанинђе Кулинене хĕненĕ историйе пример илсе калани çинђен астурĕ. Çавăнпа та

пулас, Карука пӳлсе, ун ҫинҫен ҫӗнӗрен тепӗр вăхăтра пăхса тухасси ҫинҫен сăмах хушсан, Карук колхос ыйтăвӗ ҫине куҫрӗ...

— Колхоса ҫăнах та, ҫи малтан комсомолӗссем пуҫласа йанă ҫух, епӗ хут килте пулайман...

— Аҫта пултăн?—тӗпҫерӗ шурналис.

— Шупашкарта, Опкомолпа Ҫӗр камиссарнаҫӗ уҫнă колхос курсӗнҫе,—терӗ те хăй сăмахне тăсрӗ.

— Пирӗн халӗ колхосăн куҫа курăнмалăх ӗҫсем ҫук тесен те йурат. Ун ҫинҫен тӳрех каламалла. Вăтăр тăват хуҫалăхпа епӗр. ҫанах та, хут ҫинҫе ҫеҫ шутланма пултаратпăр. Пурте ҫамрăксем ҫеҫ ҫыраннă.

Пурӗ миҫе лаша-ха?—Ултă лаша. Саҫук Карука пӳлсе справка паҫӗ:

— Ултта мар, саккăра ҫитет ӗнтӗ, ӗнер тата сайавлени паҫӗҫ. Ава пăхса тухмалла. Тăвату плук. Ҫакăнтанах колхоса тата та сарасси палăрса тăрат.

— Та-а, вернă, весене епӗ маннă. Анҫах мӗнле сармалла?—ҫакăн ҫинҫен пирӗн калаҫас пулат те ӗнтӗ.

— Правӗлнă—терӗ Ҫпеккӗр—Тавай малалла кала.

— Атавра йалӗпех колхос тунă. Ку аван чапала, унпăн епӗр, комсомолӗссем, хӗпӗртемелле. Ёнер каҫ епӗ унта пултăм. Парттн йаҫейкки ҫекреттарӗпе калаҫрăм та, вăл пире йатлат, паҫар ӗҫлетӗр, тет. Тӳрипех каласан, пире йатлани те кирлӗ...

— Йатлама аван вăл,—тесе хушрӗ Саҫук,—тăхăр ҫухрăм хушши выранна ҫулталăка хăй те тăваттă ҫеҫ килҫӗ.

— Кулине истори тухман пулсан, тата ҫывăраҫҫӗ-ха вăл,—терӗ Улҫки те.

Партйаҫейкки ҫекреттарӗ пирки Ҫпеккӗр справка паҫӗ:

— Ана оппортунисăмлă ӗҫлесе пынăшăн выкăвăр парса вырантан кăлармалла тунă. Тырă хатӗрлес ӗҫре пăсăк ӗҫлесе пынă вăл. Ҫак сирӗн йалти ӗҫ те ҫав шута кӗнӗ.

— Кунта, пирӗн ҫав кăнтитатсен круппипе тăвасах пулат,—терӗ Саҫук,—унсăр ӗҫ тухмасть...

— Лартас пулать ку ыйтăва,—терӗ Ҫпеккӗр.

— Ытла нумайăн калаҫма пуҫларăмăр,—терӗ Саҫук, Карука сăмахне кӗскетме хушса.

Карук сăмахне вӗҫлерӗ:

— Ана ҫекреттартен кăларнине халҫ анҫах пӗлтӗмӗр. Ҫапах та вăл ака мӗн калать. Вăл пӗтӗм йалӗпех колхос тума хушать... Ман шутпа, пайан кун пӗтӗм йалӗпеххишӗн тăрăшмалла мар. Ҫи малтан лайăх ӗҫлекенсене ӳкӗте кӗртсе, ҫухăнсемпе вăтам хресҫенсенҫен пӗр 50—60 хуҫалăха ҫитерме тăрăшас пулат. Анăҫлă ӗҫлесе кăтартсан вара ытти хресҫенсем вӗсем хăйсемех тепӗр ик ҫултан кӗме пултараҫҫӗ. Сăмахран, епӗ Ҫприттун Мируҫăпа калаҫрăм та, вăл тата кӗрес тесе тăракансем пур тет. Комуниссемпе комсомолӗссем хут те мӗнле пулсан та ку ӗҫрен пăрăнмалла мар, епӗр малта пымалла.

Карук сăмахне пĕтерҫĕ. Вăл капла каласса пĕри те кĕтменҫĕ. Пĕр Сањук ҫеҫ хăй ăшĕнҫе Карук сăмаххисемпе килĕштерсен, ун ҫинҫен уҫҫăнах калама шутларĕ, анҫах та ҫав хушăрах Ҫемйун кăшкăрса сăмах ыйтрĕ. Ҫемйун сăмаххисене ҫĕклентерсе, пĕрре Ҫпеккĕр ҫине, тепре шурналис ҫине пăхса каласма пуҫларĕ.

— Йулташсем, Карук кун пек каласса епĕ тахҫанах пĕлсе тăтăм,—терĕ те, Ҫемйун ытлашширех каланăран пулас, сассине пăртакҫă ҫемҫетсе:—Карукран кун пек йапаласем кĕтме пулаť... Кунта Карукăн сылтăм сулăнҫăклă шухăшсем лайăх курăнҫĕҫ. Пурте ытрĕҫĕ, пĕр каланă йапалана пытарса хăварас ҫук, кунта ҫŷлтен килнĕ йултащсем те пур. Мĕн каларĕ-ха вăл? Вăл талкăшпех колхос тăвас ыйтăва пăрса хăвараť. Вăл партти политтĕкне самоттŏк ҫулĕпе кĕртсе йараť, хĕрсе хускалнă массăна тытса ҫарасшăн. Акă ăҫта унăн сулăнҫăкĕ. Вăл, районран килнĕ ҫынсен умĕнҫе те капла калакан, вĕсем ҫук ҫух темĕн те каласси такамшăн та паллă. Хаљ йултащсем, мĕншĕн епĕр унпала пĕрмайах тавлашнине тавҫăрса илме пултараҫҫĕ пулĕ, тесе шутлатăп. Кун пек шухăшсене, кулак акĕнҫĕсем пулса ĕҫлекенсене, пирĕн хамăр хушăран тасатмалла...

Карукпа Ҫемйун сăмаххисене танлаштарса итлесе ларакан Кĕҫтук, Ҫемйуна хирĕҫ нимĕн те калама май ҫуккине ҫухлаť. Карукăн шухăшĕ колхос йухăмне талкăшпех ĕрҫетсе йарасса хирĕҫ маррине те вăл ăнланаť. Ҫапах та Ҫемйун, ҫăкăлташса сăлтав тупса, районран килнĕ ҫынсем умĕнҫе Карука варланине ҫăтаймасăр, Кĕҫтук Ҫемйуна йŷлсе лартрĕ:

— Есĕ тĕрĕс калатан, анҫах Карук та ҫавнах калаť вĕт. Есĕ питĕрмен алăка ҫĕмĕрсе кĕретĕн,—терĕ Кĕҫтук.

— Е-е, ҫук, ку ĕҫ ҫŷлтен килнĕ ҫынсем умĕнҫе пулса иртет. Пытарас ҫук ку ĕҫе, тесе васкаса хушрĕ.

— Нимĕн пытармалли те ҫук!—терĕ Карук.

— Курăпăр—мĕнле есĕ пытаратăн... Мĕн пур сăлтав сотсналлă тымарта.

— Ну! ытла шала кĕтĕн,—терĕ Карук,—епĕ кулак мар, вĕсен таврашĕ те мар... Претҫетаттĕл вырăнĕнҫи Сањук хĕрелсе кайса тавлашма пуҫланă Ҫемйунпа Карука пŷлсе ҫарҫĕ.

— Ҫарăнăр, мĕнле есĕр!..

Ҫпеккĕр хăй ҫумĕнҫе ларакан Уљкирен Карук ҫинҫен хуллен ыйтса тĕпҫерĕ:

— Ăҫта вĕреннĕ вăл?

— ШКМ-ра. Пурĕ улта ҫул вĕреннĕ.

— Апшĕсем мĕнле?..

— Вăтам пурăнаҫҫĕ. Аван аҫаҫҫĕ те вăл,—тесе хушрĕ Уљки, калăн, вăл Карука инкекрен хăтарасшăн пулса;—капла пулакан марҫ ҫĕ-ха вăл та, тепле хаљ кун пек сăмах ĕҫертрĕ... Ҫпеккĕр Уљкин йулашки сăмахне итленĕ хушăра, тетраҫĕ ҫине Уљкирен пытармасăрах «Бузотер» тесе ҫырса хуҫĕ. Уљки хăрах куҫ вĕҫĕпе «Бузотер» тенĕ сăмаха вуласан ăнланманнипе ку сăмах мĕне пĕлтерни ҫинҫен шутлама пуҫларĕ.

Актив пуххи кĕрлесе кайрĕ... Кĕçтук сĕтел умне пырса:

— Епĕ тӳррипех калатăп, купта лиђнă сђот!..

— Кăтартса парас пулат, терĕ Çемйун,—факт!?... тайош факты!.

— Факт? Факт?.. Есĕ ху факт! Ђĕлхепе есĕ аçу пекех çантаратăн,—кăшкăрђĕ Карук.

— Товариш! осторошнă! Епĕ Райкомол ђлене, 24-мĕш çултанпа комсомолта таратăп!.. Тӳррипех калас пулат, лађакана путрăм, урăх тумастăп тес пулат. Вăт ку большевикла пулат. А есĕ, Кĕçтук, примирентсă!..

Кĕçтук хыпаланса:

— Примерентсă!?—Тӳррех калатăп, примерентсă есĕ ху!..

Кирука сăмах пађĕ Саньук. Кирук ларнă çĕртен ура çине тăмасăрах васкамасăр, лăпкăн калаçрĕ:

— Епĕ пăхатăп та, купта ытла хĕрсе карĕçĕ. Епĕ пимĕн манлă та мар, анђах Карук Çемйуна вырансăр хăртат. Пĕркун та вăл ушă йатлаçрĕ. Кулак йытти-мĕн текелесе пĕтерђĕ. Çемйун ватă комсомолĕс, йалта первăй активис. Епĕр ун сăмахне итлемелле, анђак Карук хăй ун выранне кересшĕн тапăçат, кĕвĕçсе çӳрет. Ман шутпа, историйĕн историйĕ çакăнта.

— А-а-а! вăт калат...

— Ухмах!..

— Ну!?

Ульким, Кĕçтукăн, Карукăн сассисем Кирука ђарђĕçĕ.

Кирук темскер кăшкăрђĕ, аллипе сулђĕ. Ыттисем те ана «сакройс»! тесе кăшкăрсан Кирук ђарăнса çĕлĕкне сăмсин çине антарђĕ.

Саньук Кĕркуçа сăмах пађĕ.

— Ытла шала кĕтĕр. Мĕн уйăратăр есĕр? Капла тавлашса ларнипе колхос тăвас çук...

— Правĕльна!—терĕ Спеккĕр.

— Ман шутпа, Карука куншăн айăпласах та пăрахмалла мар. Мĕн хăрушă сăмах каларĕ-ха вăл. Ну, труках пĕтĕм йалĕпех тăватђен ĕçпе кăтартса парас пулат тепĕрен çак тери çил-тăвăл ђавса кăларни мĕне пĕлтерет ку?—Ку—епĕр йулташлă ĕçлеме пĕлменни. Карук йăнăшрĕ пулсан—тӳрлетес, ĕçĕ те пĕтнĕ. Ку тери ђакăлташни вăл анăçлă ĕçе ватни пулат. Пайанран пуçласа пирĕн «Калина» колхоса сарма тăрăшас пулат. Кун пирки Карук тĕрĕс калат. Труках пĕтĕм йала хăваласа кĕртсе колхос тупи, ман шутпа, партти тирективĕ мар вăл. Ирĕксĕр кĕнĕ çынна сотсиалисăм тутарас çук. Çавăнпа та Карука хурласа тулашмалли те çук... Еçлес пулат, кĕрешес пулат!..

Çпеккĕр Кĕркуç сăмаххисене палăртсан, йулашкинђен: «Самотток» тесе çырса лартрĕ.

Çирĕм ултă комсомолĕс, тăватă партти ђлепĕн кăнтитађĕсем Кĕркуç каланă сăмах хыççăн шавласа илђĕç.

— Çпеккĕр йулташа калаттарас!..

— Правĕльнă!

Çпеккĕр ларнă çĕртен ура çине тăрсан, пурте лăпланђĕç.

Çпеккĕр пĕрре шурналис çине пăхса илҫĕ, унтан ыттисем çине те сăнаса пăхса тăнă хыççăн, ӳсĕркелесе калаçма пуçларĕ.

— Кунта талкăшпех колхос тăвасси çинҫен ҫорре кĕҫĕç,—тере те Çемйун йенне çавăрăнса вăл каланă сăмахсене çирĕплетрĕ.

Кĕçтук нимĕнпе пĕлмесĕр Карук йенне пăхса пуçне сулҫĕ. Хĕрелсе кайнă Карук ларнă çĕртен ҫăтаймасăр сиксе тăрса:

— Справкă!—тесе сăмах ыйтрĕ.

Саҥук хăй ăшĕнҫе Карука халех те сăмах парасшăн пулҫĕ, анҫах, кун чек нала таврал çуккине кура пулас, аллине сулса: «Кайран»—терĕ.

Карук лăпланса итлеме пуçларĕ.

Çпеккĕр, калăн, Карук «тĕк» ларманнине кура, ун çине тăрăнҫе:

— Справка пама ан васка! Сана пикам та çăвартан çапса калаттарман. Акă епĕ пĕтеретĕп, вара калăн,—терĕ.

Карук труках ура çине тăҫĕ, тенĕн каласшăн пулҫĕ, унтан пурни çине те пăхса илсе нимĕн ҫĕнмесĕр лăпланса ларҫĕ. Карукăн çамрăклăхĕ вĕрилеппĕ ҫĕри ĕçе пушшех те ҫĕрре кĕртсе йаҫе. Карук пуринҫен ытла Çемйун сăмахĕсене çирĕплетнипе килĕшме пултараймаст: Мĕн каларăмха епĕ?—Мĕн пăсăк ĕç турăм? «Сылтăм сулăнҫăк», «пусатҫор» тесе йат паҫĕ.—Мĕншĕн?—Карук тĕрлĕ çавăрса вир̧рĕ хăйен çак пухура тухнă сăмахĕсене. Çпеккĕр Карук çинҫен Кĕçтук çине, ун хыççăн Коркуç çине куçса пурне те нĕр калăпна калăпласа тухрĕ. Райĕçтăвком пĕтĕм района талкăшпех пĕрлешӳллĕ хуçалăха куçарасси пирки йышăну туни çинҫен асăрхаттарнă хыççăн. хăйеп сăмахне çапла пĕтерҫĕ:

— Ку ыйтава сирĕн пурсăрăн та пайан татмалла. Калла-малла шутласа тăракансем çак пуху пĕтнĕ хыççăн пулмалла мар. Ку ĕç ҫапла ĕç, епĕр уншăн кĕрешмелле!..

Актив пуххи нимĕн сасҫĕвĕсĕр итлерĕ. Çпеккĕр хĕрсе кайнипе хăйĕн малтан калана токлатпе тепĕр хут калама пуçласан Саҥук Çпеккĕре хут татки çипе çырса паҫĕ. Çпеккĕр Саҥук хутне вуласа тухрĕ те пĕтерме пулҫе. Анҫах Çпеккĕр ҫасах манҫе, лайăх ăнлантарасшăн пулса, ҫăвашсен авалхи пурнăçĕсем çине кайса ӳкрĕ. Киреметсем, ҫӳк çырмисем урлă каçса, 1905-мĕш çулти револҫутси çинҫе ҫарăнса тăҫе. Унтан 1914-мĕш çулти импернализсам вăрçи çипе куçса, тăвата çула тăсăлнă вăрçăра вилнă мĕлйун çын капиталисăмшăн пĕтнине ăнлантарҫĕ. Февраҫ револҫутси, унтан Октапĕр, краштăн вăрçи, вăрçăллă комунисăм вăхаҫĕ, востановиттĕлнăй тапхăр урлă рекконструксиллĕ тапхара куçса, колхос ыйтăвĕ çине çитерҫĕ.

Çеркупи сăмах хушшинҫе çырнă ресоҫутсипе вуласа паҫĕ.

«Епĕр комсомолĕссемпе пайти активсем, йулташ Çпеккĕр токлатне итлесе сӳтсе-йавнă хыççăн, «Калинă» колхос çумпе пур ҫухăпсемпе вăтамсене йертсе, пĕтĕм йалĕпе пысăк колхос тăвас ĕçе пахалатпăр. Кам «Калинă» колхосне çырăнманнисем пайанах çырăнатпăр. Пĕрлешсе, пĕр вăй пулса ĕçлемесĕр епĕр пиейепле те хамăрăн наҫар пурнăça çăмăллатас çук. Сыва пултăр комуниссен парттийĕ! Сывă пултăр çĕнĕ ĕçĕн пуçламĕш!»

— Йышӑнас!..

— Аван!..

— Ларсан-ларсан пӗри ала ҫупса йаҫӗ, ун хыҫҫӑн ыттисем те. Шӑтӑр-шӑтӑр! алӑ ҫупрӗҫ.

Шухӑша касйа ларнӑ Саҫука ҫумӗнҫи Кӗркуҫ тӗртсе:

— Мӗн кӗтетӗн, сасӑла,—терӗ.

— Саслатпӑр еппин?—терӗ Саҫук ура ҫине тӑрса.

— Саслас!...

— Пурте...—терӗ те Саҫук вырӑнне ларҫӗ.

Ҫпеккӗр сӑмала пек хура вӑрӑм ҫӳҫӗсене аллинҫи вӑрӑм пӳрнисемпе хыҫалалла тураса илсе:

— Вӑт аван, ҫапла!—хӗпӗртесе ҫӑвар тулли сасӑпа—йетнюкласнӑ, терӗ.

Тӗп ыйту ҫинҫеп сӳтсе йавнӑ хыҫҫӑн кама-кама раскулаҫҫит тумалли, тата кам ҫине клат хумалли ҫинҫен сӑнарӗҫ. Ҫухӑнсен пуххинҫе сӳтсе-йавиҫҫен тӗплӗн тӗрӗслесе тухма виҫӗ ҫынтан комиҫҫи суйларӗҫ. Ҫемйун, Паҫук, Улҫки комиҫҫи ҫленӗсем пулҫӗҫ.

— Пайан ҫакӑн пек пысӑк ӗҫ туни те ҫитет. Ыран ҫухӑнсен пуххи тӑвӑпӑр, унта ҫак пухура пулнӑ йулташсем пурсӑрӑн та пулас пулат ӗнтӗ,—терӗ Ҫпеккӗр, пурне те илтӗнтермелле сасӑпа.

Аслӑ Кипек ҫывӑрмаст. Кашни килӗре хӑй ҫути мӗкӗлтетет.

* * *

Пеҫекҫе пӳрт тӑррипҫен мӑрйесенҫеп макалтатса тухакан ӑшӑ тӗтӗм ҫӑмӑллӑн йӑлшӑнса купаланнӑ кӗрт ҫинҫе ҫерҫенкӗн ҫӳкенсе вылҫат. Ӑшӑ мунҫара уллах кӗрлет. Йӑл-йӑл хӗр-ипраҫ, ҫамрӑк-кӗрӗм, йурӑ сасси, хуткупӑс, трӑс! тарӑс! трипакка,—урама тухса вӑркӑнат. Пыт вӗрии илтӗнсе ҫухалат. Ҫиркӳн пысӑк ҫанӑ сехет ҫапат... Кашни ҫуртра тӗрлӗ ҫын, ҫӗр тӗслӗ ӗҫ...

## 5. КӖҪТУК ВӖРЕНЕТ.

Камака ҫинҫе ҫыварса выртакан Упаҫҫа вӑрансан, ӑшӑпа хытса кайнӑ ҫан-сурӑмне ҫемҫетесшӗн пулас, карӑнкаласа тарса ларҫӗ. Упаҫҫа хуллен тайкаланса ҫунакан пӗҫӗкҫӗ лампӑ умӗнҫе Кӗҫтук кӗнеке вуласа ларнине курҫӗ.

— Аҫам, есӗ халӗ те выртман-и-ха ҫав? Куҫна шеллес пулат.

А-а-х ҫамрӑк-ха ҫав, ҫамрӑк. Малашне кирлӗ пулӗ те-ха. Куҫна ытла пӗтеретӗн, куҫ суттине сыхлас пулат...

Кӗҫтук кӗнеке ҫине тӑрӑннӑ пуҫне ҫӗклемесӗрех Упаҫҫапа хирӗҫ таварҫӗ.

— Ҫиҫҫас... Выртатӑп...

— Аах... мӗн пур ҫав кӗнеке ҫинҫе?—тӗлӗнетӗп. Пӑван пек сӑрпатан. Ну, калӑпӑр, ӗҫ ҫук хушӑра ларсан та йурат. Пухура мӗнҫен ларнӑ... Хуна шеллесе ҫеҫ, маншӑн пулсан... Упаҫҫа сӑмахне каласа пӗтерейменсӗрех вӑрӑммӑн тӑстарса сывлӑш ҫаварса илҫӗ. Кукар ҫӑлӑклӑ ҫӗлӗмне тапак тултарса тивертрӗ те хӑйӗпнех йурлама

— Мӗн ҫавӑ?

— Ав, манăн çывăрас тесен те айхă килмест. Çава пĕтерет те. Çамрăк ђух сывлăха сыхлама пĕлместпĕр те, кайран ўкĕнетпĕр...

Упаңђап ўслĕкĕ пуçланђĕ.

Кĕçтук кĕнекине сĕтел çине хăварса калла-малла уткаласа çўрерĕ.

— Упаңђа тете, епĕ хам та малтан сан пекех шухăшлама пуçланăђђĕ.

— Халђ урăхла-и?..—тепђере Упаңђи.

— Халђхи пекех астăватăп. Малттин Мускавран таврансан пĕрнк кунтанах ун патне кайрăм. Апат çисе ларăт. Çав хушăрах хăй кĕлэкĕ, вулат.

— Йепле есĕ икĕ ĕç тума пултаратăн?—тетĕп. Малттин кулса йађĕ те:

— Аван мар çак йапала, питĕ нађар. Çапах та таватпар.—терĕ ун ђух вăл мана. Çапла калаçсан Малттин кĕнекине мана пађĕ.—Ме вула, ахалђ ан лар,—терĕ. Халђхи пекех астăватăп. А-а... мĕн йатлађђĕха вăл кĕнеки?—терĕ те Кĕçтук пуçне хыçса илђĕ. А?.. астурăм. Палђсак. «Утраченные иллюзии»... кĕнеки çакăн хулăммăш. 909 йенлĕ. Куна пĕр çулта та вуласа тухас çук, тетĕп. Епĕ çапла каласан Малттин кулса йађĕ.

— Ман вăл, китĕ пумай вуласан виçĕ кун,—терĕ. Ват вулат...

— Вăт вулат!.. Унăн ĕçĕ çавă. Ну, çавна есĕ аван тетне? çавăнпа та вĕсем ђас вилеççĕ. Вĕсен ђĕрани шурă пулат, ђас пĕтет,—терĕ Упаңђа.

— Тăрăшмасан нимĕн те пулмаст. Ĕçлес пулат.

— Тăрăшмалла... тĕрĕс вăл. Анђах ђухăн çыннан çўпçи шатăк, теççĕ. Нийепле те тултарас çук есĕ ăна, ађам есĕ çакна ан ман... Авă Караç кум йепле йыта вилĕмпе вилђĕ. Аллă тăвата çула ситиђђен пурăнђĕ. Ĕçђен çын, ман пекех тăрăшрĕ. Никам та ăна найан çын тесе калама пултарайман. Выçлăх çул вилмесĕр йулђĕ. Таçта хĕвел ăшши йенне кайса пурăнса килђĕ. Çуралнă çĕр-шыв çав, тутлă пулас, çапах та каллех çук пурăнăç çинех таврăнђĕ....

Кĕçтук Упаңђа тетĕш хăйĕн шухăшĕсене вăрахан, тата пурниђен ытла иртнĕ пурнăç çинђен çеç калаçма йуратнине аван пĕлет. Çавăнпа та вал Упаңђан тĕп шухăшне тытса илесшĕн пулса:

— Мĕнле вăл йытă вилĕмĕпе вилђĕ?—тесе ыйтрĕ.

— Мĕнле, Ухăлђван патĕнђех ĕçлесе ватăлђĕ. Çаваншăн ăна Ухăлђван вилсен виçĕ хăма памарĕ. Икĕ кун тупăк тума хăма шырарăм.

— Такки памарĕ?..

— Çук...

— Вăт çын...

Кĕçтук шухăша кайрĕ. Ђасах вал тĕрĕс çул-йĕр çине ўкрĕ.

— Çук, Упаңђа тете, кивĕ пурнăç вăл ĕлĕк çапла пулнă, çапла çав капиталисăм вăхăтĕнђе. Ђăнах та, ĕлĕк ђухăн çынна нимĕн вырăнне те хуман. Унтан кулнă, найан тесе мăшкăланă. Çо-о-ок, халĕ урăхла! Есĕ хăвах калатăн вĕтĕ. Караç кум ĕçђен çын тесе.

— А-а, мĕн калама... Вилес кун та Ухăлђванăн сăт пахђине пўлнĕ çĕрте ĕçленĕ.

— Мĕншĕн вăл çын пек пурăнма пултарайман?—айăп çав капиталисăм йĕркинче. Чухăнпа патракăн ĕç хатĕрĕсем çук. Лаши çук, урапи, сухи, плукĕ çук. Мĕн пур çитменлĕх çакăнта. Кулакăн мĕн çук?—пурте пур. Хут те мĕнле ĕçре те чухăн çав кулак патнех пырат. Мĕн тĕрлĕ кайас мар тесен те, çав çитменлĕхех, кулак патне хăвалат. Кулак кивçен ахал памаст, вăл çав сухаласа панăшăн çеç виç хак ытла илет. Ку сахал, тата хăй хуçалăхĕнче пĕр пуссăр тенĕ пек ĕçлеттерет. Акă ăçта ĕлĕкхи пурнăç çулĕ. Акă мĕншĕн чухăнăн лаççи тĕпĕ шăтăк...

Кăмака çинче ларакан Упаçча нимĕн калама аптăраса пуçне хыçса илсен Кĕçтук хĕпĕртесе кайрĕ. Вăт каларăм, Малттин те каппла калас çук, тесе шутласа илчĕ хăй ăшĕнче. Вăт мĕн вăл вĕрении ăнланни...

— Тĕрĕс калатăн, ачам,—терĕ Упаçча,—вĕрен ачам, вĕрен, санран çын пулат. Пашка!—терĕ те чĕлĕмне пуçелĕк айне хурса выртрĕ.

Кĕçтук шухăшлат. Вăл вĕренесшĕн, вăл ăслăлăх ахалех килменнине ăнланнă. Ĕçлемелле, нумай лармалла, нумай пуçа ыраттармалла... Кĕçтукăн патрапакан шухăшсем пÿртри шăплăх ачашланă май Кулине çине кайса ÿкрĕçĕ. Акă вăл килет, вара пĕрле вĕренетпĕр, ĕçлетпĕр, кĕрешетпĕр,—тесе шухăша кайса пĕр ерне кайалла Кулинене курма пулчнитсана кайса килни çинче, унтан, шурса кайнă Кулинепе каритурта калаçнисем çинчен шутларĕ.

Пÿртре лăпка, нимĕн сас-чĕв те çук. Калăн ку шăплăх Кĕçтукăн тутлă ĕмĕтлĕ шухăшсене кансĕрлесшĕн мар, йатне пулса тăнă.

Тулта лăпка каç. Кĕпер патĕнчи Çпрттун Мирунчă лартнă ватă йăмрасем, Ухăлван пахчи çумĕнчи çÿлçĕсем те шăппан ларса темĕскер çинчен шутласа тĕлĕреççĕ. Йаваç хупписсемпе витĕннĕ пĕчĕкçĕ мунчасем йур айĕнче выртакан мулкаçсем пек йăмрасен айне йăпшăнса хĕсĕннĕ.

Шăп... Хăй çутисем сÿнпĕ. Пĕр Кĕçтукпа Упаçча пурăнакан тайăлнă пĕчĕкçĕ пÿрт çех,. арлан шăтак пек чÿречинчен, вăйсăр çутине тăмап иртсе лăпланнă урама пăрахнă.

...Сĕтел умĕнче ларакан Кĕçтук умĕнче йуратпă кĕнекине ÿркепсе çавăркаласа пăхрĕ.

**«Политтĕк екконимийĕ»**

Тата айаларах: «пичетлеме Алентей К. хатĕрленĕ» тесе çырнине курсан, ара, «Пирĕн Сăвă» авттăрĕ марши ку тесе шухăшларĕ те, хушамат çумĕнчи «К» саспаллине курсан валах, тесе хĕпĕртесе кайрĕ. Сăвăç кун пек йапала çырнă. Чăвашла çырнă вĕт,—йăвăрне йăвăр. Вуланă чух ăнланатăн, кайран пуçра ыраттарат. Теп ман пуç ĕçлемест. Нумай вăл çапла иккĕленнĕ. Ун пирки Çеркунипе те калаçса пăхнă. Вăл Малттин мухтанă кĕнекине хурламан. Акă тата вăл Çеркуни сăмахне астуса илчĕ.

— Аслăлăх çирĕп чăтăмлăхсăр парăнмаст. Политтĕк екконоомичи йăвăр йапала вăл. Ăна вуласан ман хамăн та пуç пĕçертме пуçлат.

Кĕçтукан хăрама пуçлани ђĕри лăпланђĕ:

Упађђан ăйхи вĕçме пуçлана. Айак пĕрђи тĕлĕнђе пĕçертнĕ пек пулнă вырăна ура тăлине хулăмлатса хутлатса хуђе те, тепĕр айак пĕрђи çине çаврăнса выртрĕ. Çапах та, Упађђан ăйхи килмест. Куçне хупсан ун куç умне револђутсиђђен çул çӳренисем, сĕм тĕттĕм çĕрсем, сăрланса тăраççĕ. Ун хăлхинђе сĕм тĕттĕм çĕрте, таçта айакран шăнкăрав сассисем хирĕç килнĕ пек. Ех! пăрăн!.. Çемски нађђалнĕк йамшăкĕ пуç урлă ђăпăрккапа çурса хăварнисем килсе тăђĕçĕ. Упађђан пуçĕнђе Сăрнай хуçа лашисемпе, приккас йамшăкĕ ђупнă ђухнехисем тарăн йăранлапса йулнă. Сахал мар вăл вăйлă çил тăмансенђе аташса çӳренĕ... Картасăр саланса кайнă шухăшсем пĕр пăтранма пуçласан темĕнле тутлă ăйха та вĕçтереççĕ. Упађђа нимĕн çинђен те асăнасшăн мар. Хăй тĕллĕнех сĕкĕнсе кĕрекен иртнĕ пурăнăçри йапаласем çине йĕрĕнсе çеç пăхат. Пуçелĕкне майласа хурат, иртнĕ пурнăç çинђен веçех манса кайса çывăрасшăн çан çурăмне лăшт сарса выртат. Çук, ăйхă килмест.

Кăмака çинђи çурăксене тулнă таракансем çурăкран çурăка ђăштăртатса çӳренĕшĕн çиленђĕ те, Урлав панă çулçăллă тапакне ывăç çинђе ватса ђĕлĕм ђĕртрĕ. Упађђа Кĕçтук кĕнеке çине тăрăннине курат. Çамрăк-ха, вуласса вулат та, мĕнле ђина тухĕ,—сасăпа мăкăртатса шухăшларĕ.

— Ађам, епĕ сымарлантăм пулас. Ăйхă вĕçет.

Сымарлантăм тенĕ сасă Кĕçтук хăлхинђе распах сăркăлтатрĕ.

— Упађђа тете, мĕн ыратат?..

— Ыратии-мĕнĕ, шăмшаксем йăвăрланаççĕ. Ăйхă вĕçет.

Кĕçтук ун пек ђире хăй çан çурăмĕ çинђе ђухламап. Мĕнле çав ватă çынсен шăмшак сурат, пилĕк ыратат, йепле вăл ыратма пултарат. Кĕçтук пуçĕнђи шухăшсене Упађђана кăтартмасăр:

— Ђирлепĕрен вăл,—терĕ Кĕçтук.

— Мĕнтен?

— Сивĕ шыв ĕçнĕ пулас.

— Ей, мĕн калатăн... Ватăлатпăр çав ĕнтĕ. Ватăлтăмăр...

Упађђа кăмака çинђен апмасăрах хуралса ларнă урайне лађлаттарса сурђĕ.

Кĕçтук кĕпекери 184-мĕш питри Комунисăм йатлă уйрăмĕ çинђен астуса илђĕ. Хĕпĕртенĕ пек пулса, сĕнксе пуçне ђикнĕ çертен, аллисене хире-хирĕç çупса илђĕ. Унтан карăпкаласа анасласа каллех кĕнеке умне пырса ларђĕ.

— Упађђа тете.—Итлетне.

— Мĕн йĕлетĕн епĕ...

— Итлетĕн пулсан, сасăпа вулатăп.

Упађђа—итлеместĕп тесе калама хăймарĕ. Кĕçтук йăлине авап пĕлет, савă мĕн çырсан та вăл ăпа ирĕксĕрлесех вуласа парат, итлемесен тата тутине тăскалат.

— Итлетĕп, вула—терĕ те ђĕлĕм ђăпăкĕпе пуçне хыçса илђĕ.

Кĕçтук хăй çеç мар, Упађђа тетĕшне те ăилантарасшан пулса умĕнђе выртакан кĕнекепе варăмăн тăстарса вулама пуçларĕ.

«...Комунисӑм опҫӗстви уйрӑм пурлӑха пӗтерсе, мӗн пур ӗҫ хатӗрӗсене опҫӗства аллине илет. Пӗтӗм ӗҫ план тӑрӑх пулса пырать».

— Мӗн йапала вӑл план?—тӗпҫерӗ Упаҫҫа.

— План? План!..

Кӗҫтук нимӗнле те тавӑрса пама пӗлмен пек пулҫӗ. Ҫавӑнтах тавҫӑрса илнӗ пек пулсан, хӗпӗртесе кайрӗ. Астуса илҫӗ, ӑшӗнҫе лайӑхах ӑнланать, пухура та пилӗкҫуллӑх план ҫинҫен калаҫнӑ. Колхоса та ҫавӑпшӑнах тӑватпар ӗнтӗ, терӗ те Упаҫҫана калама пуҫларӗ.

— План, ҫавӑ ӗнтӗ вӑл. Ҫав пӗрлешсе ӗҫлени, унҫен малтан ӗҫе мӗнле-мӗнле тумаллине малтанах шутласа палӑртса хуни пулать...

— Вула-ха еппин, вула...

Кӗҫтук малалла вулама пуҫларӗ.

«...Уйрӑм пурлӑх тата классем пӗтсе ларнипе ҫӗр ҫинҫи мӗн пур етем пӗр-пӗрнипе танашать. Вара ӗҫ те хӑйӗн сӑн-сӑпатне улаштарать. Кулленхи ӗҫ етемшӗн апат ҫийесси, пыв ӗҫесси пекех кирлӗ йапала пулса тӑрать. Ҫухӑнлӑх пӗтӗмпех ҫухалать...»

— Капла пулсан, мӗн калама-а. Хӑҫан пулӗ-ши вӑл. Ҫаван ҫинҫен ҫырман-и унта?—тесе Упаҫҫа аллинҫи ҫӗлӗмне кӑмака карнис ҫине шаккаса ҫӑварне хыпрӗ.

— Акӑ малалла вулар-ха,—Кӗҫтук вулама пуҫларӗ.

«...Ҫӗр ҫинҫи ҫынсем пурлӑх тӗлӗшӗнҫен пурте танлашаҫҫӗ. Пуйанни, ҫухӑнни пулмасть. Ҫак вӑхӑтрах хӗрарӑмсем те арҫынсемпе танлашса ҫитеҫҫӗ...»

— Ну ку пустуй. ӑҫтан хӗрарӑмпа арҫын танлашма пултарать. Пустуй ку...

— Итле-ха, пустуй мар ҫав. Мӗнле майпа ҫапла пулма пултарнине хӑвах ҫухласа илме пултаратӑн.

— Вула-ха еппин...

Упаҫҫа ҫӗркуҫҫи ҫине тайӑнса йатарласах итлеме пуҫларӗ.

«Алӑ-урапа ӗҫлекенсемпе ӑс-пуҫпа ӗҫлекенсем хушшинҫе уйрӑмлӑх та, хирӗҫӳсем те сӑтӑрӑлса пӗтсе пыраҫҫӗ. Ҫаканпа пӗрлех пӗр клас теӧпӗр класа пусмӑрта тытса усрамалли оркӑнсем те ҫухалаҫҫӗ: патшалӑх аппараҫе кирлӗ мар пулать».

— Мӗн вӑл клас,—ыйтрӗ Упаҫҫа, ҫавӑнтах сӑмси айӗнҫе ӑнланмалла мар мӑкӑртатса илҫӗ: мӗнле вӑл тата пӗтме пултарать...

Кӗҫтук кусем ҫинҫен ӑнланать, ҫавӑнпа та ҫупатланса каласа тӑнлантарса парасшӑн пулҫӗ.

— Клас-и? Вӑл ҫынсем пурлӑх тӗлӗшпе пӗр пек марри. Ҫӗр ҫинҫи ҫынсем, хӑвах пӗлетӗн, пурте пӗр пек маррипе.

— Ҫапла...

— Хамӑр йалах илсе пӑхар. Санпа епӗр мӗнле пурӑнатпар та, Ухаҫвана ил, тата Михетер, Тиҫук, Йакур таврашсем. Уйрӑмлӑх пур-и?—Пур. Ҫакӑн пек уйрӑмлӑх пирӗн йалта ҫеҫ мар. Вӑл пур вырӑнта та ҫапла. Ват ҫынсем хушшинҫе пӗрпеклӗх ҫукки ҫынсене уйӑрса тӑратать...

— Вăл тĕрĕс-ха, алăрн пилĕк пÿрне те пĕр тан мар та, ăçтан пурте пĕр тан пулма пултараççĕ-ха. Апла клас тепи çакна пĕлтерет еппин...

Кĕçтук тата лайăхрах каласа парасшăн пулђĕ те, вуласа тухасси ђарђĕ.

Кĕçтук вуларĕ.

«...Классем пĕтсе ларни мĕн пур етемлĕхе ăслăлăхсене пер пек вĕренсе пымашкăн çул уçса парат. Вĕренес ĕçри монополи пĕтет...»

— Мĕн тата вăл мунукнили...

— Кăна хам та пĕлместĕп вара... Кĕçтук Упанђа тетĕш умĕнђе хĕрелсе кайрĕ. Вĕренмелле çав,—тесе шухăшласа илђĕ те нимĕн каламасăрах малалла вулама пуçларĕ.

«...Пĕтĕм куљттурă пур етем пурлăхĕ пулса тăрат. Ун ђухне вара науккăла технĕккăшăн тем пек пысăк, сарлака çулсем уçăлаççĕ.

Тĕнђери комунисăм опђĕствин тăвăм вăйĕсем питĕ хăвăрт ÿссе пыраççĕ. Етем пурнăçĕ пĕр майах çăмăлланса пырат. Халиђђен пулмап çĕнĕ машшинсем ĕçе кĕрсе пынипе, етем хăйне кирлĕ пурлăха тумашкăн ĕçлесе иртерекен вăхăт кĕскелсе йулат. Етемĕн хăйĕн куљттурлăхне хăпартмашкăн пушă вăхăт нумай пулат. Çапла етем опђĕстви халиђђен истори курман куљттур çулĕ çине тухат. Çав çĕнĕ куљттур çĕр çинђи мĕн пур ђикĕсене пĕтерсе, çынсем хушшинђи йулташлăх çинђе тĕрекленсе тăрат. Çĕнĕ куљттур кивĕ тĕнђерен йулнă мĕн пур лăпăр-лапăра, тĕнсене, тĕшмĕшсене, етем ăс-пуçне малалла каймa ђарса тăракан йăласене пĕтĕмпех шăлса тасатат. Çак вăхăтра вара комунисăм опђĕстви «кашни çынран—хăй пултарнă таран, кашни çыннах—хăйне кирлĕ таран» текен лосăнка пĕтĕмпех пурнăçа кĕртсе çитерет.

Анђах каллех калатпăр: комунисăма пайан-ыран çитме çук. Сотсналисăм туса пĕтересси вăрăма тăсмалла...»

Куљттур тепĕ сăмах çинђен вăрах ăнланмасăр шутласа ларнă Упанђан хăлхинђе йулашки сăмахсем çакланса йулђĕç.

— Е-е, вăрăма тăсăлат ĕнтĕ унта, апла епĕр ăна курас та çук.—терĕ Упанђа, Кĕçтука вулама ђарса.

— Курас та çук?.. Хамăртан килет ĕнтĕ вăл. Хамăрăн тăвас пулат ĕнтĕ. Еçлес пулат, кĕрешес пулат...

— Çук, ађам, ку йапалана епĕ ăнланмастăп.

— Мĕн ăнланмастăн?...

— Ватăлатпăр ça-ав...

Упанђан каллех ÿслĕкĕ пуçланђĕ. Кĕçтук умĕнђе выртакан кĕнекене хăй ăшĕнђе вулама пуçларĕ.

«...Капиталисăм темиçе çĕр çул хушши сарăлса пынă. Сотсналисăм тумашкăн ун ђухлĕ нумай вăхăт кирлĕ мар ĕнтĕ, çапах ăна пĕр çулта туса хума çук. Капиталисăм сотсналисăма хатĕрлесе пĕçерсе кăларассине нихăçан та кĕтсе илме çук...»

Кӗҫтук пӗҫерекен пуҫне тытса пӑхрӗ те кашни сӑмах ҫине ђарӑнса тарса вуларӗ: «Кӑпиталисӑм сотсиалисӑма хатӗрлесе пӗҫерсе кӑларассине пихҫан та кӗтсе илме ҫук». Нимӗнне ӑнланмасӑр малалла вулама пуҫларӗ:

> «...Сотсиалисӑм вӑйӗсем кӑпиталисӑм ӑшенђе ҫуралаҫҫӗ, тени—сотсиалисӑм пиҫсе тухат, тенине пӗлтермест. Кӑпиталисӑм технӗккӑна питӗ вӑйлатса йарат, темиҫе ҫӗр пин, мӗлйун ҫынсен ӗҫӗсене пӗрлештерет; тем пек пысӑк претприйаттисем уйрӑм ҫынсем аллинђе тӑраҫҫӗ—вӗсене опђӗствӑ аллине пама питӗ ҫӑмӑл, йулашкинђен, кӑпиталисӑм ӑшђикӗнђе кӑпиталисӑма ишекен пролеттариат вӑйлапса тухат. Кӑпиталисӑм пур йенђен те опђӗствӑна сотсиалисӑм йенне йамалли май хатӗрлет. Ҫав майсем пулмасассӑн, сотсиалисӑм тӑвасси ҫинђен калаҫма та кирлӗ мар пулӗђђӗ. Кӑпиталисӑм малашне те пурӑнсан сотсиалисӑм валђи тата ҫӗнӗ хатӗрсем хатӗрлес ҫук. Вӑл пурӑнни—опђӗствӑна сийен кӳни ҫеҫ пулса тӑрат.
>
> Ҫапла ӗнтӗ, кӑпиталисӑмӑн сотсиалисӑма куҫас ҫул вӑрӑм. Ӗҫлекенсен револђутсийӗ ҫӗнтерсен тин сотсиалисӑм тӑвас ӗҫ пуҫланса кайат. Совет сойусӗнђе сотсиалисӑм тунӑ ђукне тата йӗри тавра хупӑрласа тӑракан кӑпиталисӑм тӗмен пек канҫӗрлет...»

Кӗҫтук ӑнланман пек пулђӗ. Ӑнланман вырана тепӗр хут пӑшӑлтатса вуларӗ. «**Кӑпиталисӑм пур йенђен те опђӗствӑна сотсиалисӑм йенне йамалли май хатӗрлет».** Мӗнле ку капла? Мӗне пӗлтерет-ха ку? Апла Ухаљван та сотсиалисӑм урапи ҫинђе, йепле-ха кӑпиталисӑм сотсиалисӑмшӑн...

Кӗҫтук ҫамкипе шаккаса пӳртре калла-малла утkаласа сӳреме пуҫларӗ.

Упаљђа ђӗлӗмне ђӗртсе йарсан, Кӗҫтук вӑраммӑн сывласа илнинђенех:—Мӗн ҫавӑнпа пуҫа ҫӗмӗрес... Пирӗн пуҫпа тӑнланас ҫук ӑна,—тесе шухӑшларӗ.

Кӗҫтук парӑнасшӑн мар. Тӗнӗ-йӗрӗнех тавҫӑрса илесшӗн пулђӗ. Ҫавӑнтах таварлӑ опђӑ ӑҫтан пуҫланса кайни ҫинђен, унтан кӑпиталисӑм вак-тӗвек харпӑрлӑхсене йепле пӗтерсе лартнисем ҫинђен шутласа илсен, кӑпиталисӑмпа кулак хуҫалӑхӗн распалӑхне шырама тытӑнђӗ. Ђӑнах та кӑпиталисӑмпа кулака таплаштарма май ҫук. Ҫапах та вӗсем пӗр майлӑ, кулак йалти кӑпиталис, унӑн хапрӑк-савӑт ҫук пулсан та, ђухӑнсене вӑл сӗлӗх пек ӗмет, вӗсене ӗҫлеттерсе хӑйӗн хуҫалӑхне хапартат. Уйрӑмлӑх пур,—терӗ унӑн тепӗр шухӑшӗ. Мӗнле. Ӑҫтан килет вӑл... Йеҫт!—тесе хыттӑн шухӑшларӗ,—тупрӑм!..

— Мӗн тупрӑн?—терӗ Упаљђа.

— Тупрӑм. Вӗҫех ӑнлантӑм.

— Пӑрах ҫав пуҫна ҫӗмӗрме. Капла аппаланасан есӗ ухмаха йерсе кайма пултаратӑн. Кӗҫтукӑн ӑшӗ канман пек пулђӗ. Йепле-ха кӑпиталисӑм сотсиалисӑмшӑн май хатӗрлет... Шутласан шутласан пӗрре ӑнланнӑ пек пулђӗ, тепре иккӗленђӗ.

Пуҫӗ ҫаврӑнса кайре, куҫ шарҫи ҫинђе пӗђӗкҫӗ пӗлӗтсем йухма

пуçларĕç. Икĕ аллипе пуçне тытса пăхсан çамки пĕçертнĕ пек туйăнтĕ. Ђирленĕ, тесе хăйне хăй лăплантарса, кĕнекине вырăнне хуђĕ те пĕђĕкçĕ кутник çине ларђĕ.

Ларсан-ларсан пусĕ ыратни ђаранна пек пулђĕ.

— Ну, мĕнле?.. тесе ыйтрĕ вăл Упађђаран. Лешин пĕрĕнкелесе ларнă пиђĕ кăшт ђалăшрĕ, ђĕлĕм ђăпăкне çыртнă шăлĕсем савăнăçлă курăнђĕç.

— Ăнлантăпа, еп сана вуласа панисене.

— Ăнлании-мĕнĕ, ăнлансах пĕтерейменĕм те, анђах аван пек. Кĕçтук кăшт кулса илсе ăслăлăх кĕнеки тăрăх малашнехи пурнăç мĕнле майпа улшăнни çинђен хăйĕн ђĕлхипе тăнлантарса пађĕ...

Кĕçтук Упађђаран ытла та малта. Çавăнпа та вăл хăйне-хăй Малттинпа танлаштарса виçрĕ. Анђах çавăнтах вăл Малттин умĕнђе улăп умĕнђи пĕђĕкçĕ çын пек пулса тăђĕ. Кăна ђухласан, ун сăнпиђĕ кăшт çийелтен çĕкленсе килђĕ. Çав самантрах ун умне капан пек пысăккăн Малттин сăн-пиђĕ килсе хупăрларĕ. Çĕнĕ йун таппи питне çапрĕ. Нихçан та вăл ун пек пулайас çук... Ун пек пуласси çинђен шутлама та хăрарĕ. Малттин ун куç умĕнђе пысăкран та пысăк çын, анђах ăна ыттисем курман пек туйăрĕ. Кам-ха мана ӳсме пулăшат?— Малттин. Вăл çав тери хĕрсе калаçнине илтмен пулсан, теп, епĕ çаплах йулнă пулăттăм. Хăй çинђен шутланине, хăйне Упађђана танлаштарнисене курайми пулђĕ. «Малттин мĕнле çын, ăслă, пуç мĕнле ĕçлет,—çапах та вăл çынсем çине пуçне çĕклесе пăхнине курман...»

— Манатăп çавă-ă, ватална...

— Çапах та хамăр мĕнпĕн керешнине пирĕн пелес пулат,—тере Кĕçтук.

— Вăл, спамă, çапла. Кашни йапалан инструкси пулмалла. Пуретĕксĕр ăçта кайас тетĕн. Саккун. Тĕрĕс калатăн есĕ...

Кĕçтук йакалса кайна кутник çине çĕтĕк кĕрĕкне сарђе те минтер вырăнне улăм тултарнă майахне хуђĕ.

— Мĕнле, çывăратпăр-и?

— Сӳнтер, çыварса пулат-и ĕнтĕ...

Кĕçтук, лампине сӳнтерсе, сарса хатĕрленĕ вырăнĕ çине кайса выртрĕ.

Кăмака çинђи старик харлаттарђĕ. Кĕçтук çаплах çывăраймаст. Пуçĕ вут пек пĕçерет. Шухăшсем пĕрин хыççăн теприсем йухаççĕ. Çапах та вăл выртсан-выртсан тарăн, тĕпсĕр ăйха ăшне путрĕ.

## 6. МĔН ВĂЛ ЙУРАТУ.

Ашă пӳрт...

Кĕçтук ирхине ирех çывăрса тарсан хăй мĕнпĕн хĕпĕртенине пĕлмесĕр калла-малла уткаласа çӳрерĕ. Ватă Упађђа колхос еçне кайнă

Купаланса таракан турăш кĕтесси пулнă вырăнта кĕнекисем çине нихăшне вулама пĕлмесĕр тишкĕрсе пăхса тăђĕ. Унтан пĕр кĕнекине аллине илсе çавăркаласа пăхса тагах вырăнне хуђĕ.

Ун ăшђикки темĕпле пĭтранат. Пушă, тĕпсĕрте пек çавăнтах, каскас ђĕрĕ, ашă тутлăн туйăнса кайат.

— Мĕншĕн, мĕн пулҫĕ мана,—тет Кĕçтук. Хыпаланса хăйĕн хĕпĕртевлĕ ăшҫикĕнҫи сăлтавĕсене шыраса тупасшăн пулҫĕ.

Шкулта Çпеккĕрăн вутлă сăмахĕсем ун умне килсе таҫĕçĕ...

— Аван калат... Шанат вăл,—терĕ унăн тепĕр шухăшĕ.—Хутте мĕнле йапала та çапла, шанмасан тухмаст,—терĕ Кĕçтук. Çавăнтах ун умне Çпеккĕр сăмахне каласа пĕтерсен, Çемйун тухса калани темĕскерле пек туйăнҫĕ. Çук, ҫĕререн каламарĕ вăл... Çук... Акă вăл пайан мĕншĕн хĕпĕртенине шыраса тупрĕ. Тĕлĕк курнă. Мĕнлеҫҫĕ-ха?.. Кулинепе иккĕшĕ вăрман каснă пек. Йывăçсем хăйсемех пуртăпа тĕкĕнпĕ-тĕкĕнменех йăванса кайаççĕ. Пĕтĕм ĕçлĕ халăх вĕсем çине пăхса савăнат.

Виçĕмкун каç хуçса хунă çапата ун куç умне тĕл пулҫе. Унтан Упаҫҫан кĕтӳ кĕтнĕ ҫух сумăрта тăхăнна тумтирĕ çакăнса тăнине курҫĕ те епĕ илсе паман пулсан шанса та пăсăлнă пулĕҫҫĕ, тен ку тарнҫҫен вилсе те кайна пулĕҫҫĕ, терĕ те ун çинҫе ҫарăнса таҫе...

Ватă Упаҫҫа Кĕçтук тараҫҫенех хутса хăварнă камака пӳрте ытлашшипех те ăшăтнă. Упаҫҫа хăй йуратакан Кĕçтукан аша ҫĕрине йăпатасшăн вăл çыварнă хушăра хутса хăварнă. Каллех: мĕншĕн епĕ савăнатăп, мĕншĕн?—тесен тепĕр хут алланҫи çăпатине кутник айне парахса, кĕтесри майланса таракан кĕнекесем çинҫе хĕрлĕ хупăллă «Политтĕк еккономи» кĕнекине курҫĕ.

— А-а,—асăрхаса илҫе.

Ĕнер каç, пухуран ытла çĕре йулса ывăнса таврăнна пулсан та, кенекен вĕçне вуласа тухрĕ.—Асăлăха çавăрса илме йăвар, анҫах кĕнекене çăмăл ҫĕлхепе çырнă,—терĕ те, çавăнтах, Малттин çинҫен астуса илҫĕ:

— Ех, çакăнта вал пулсан! Хăйне Малттипа танаштарса виçрĕ.

Малттин тавалла çулпа хăпарса тасра айакка мала кайнă пек. Вăл май килсен, хыçалтан кăшкăрасса кĕтмесĕрех, ун хыççăн утакан çулпа мĕкĕрленсе тапаланакана аллипе ларса хăй патнелле туртса илме хатĕр.

Акă Кĕçтукăн пуçĕнҫе Малттин. Вăл пысăк, йăвашшăн кăшт çиелтен кулнă та пек, анҫах вăл кулмаст. Йултаншă аллипе тăсса:

— Айта, ҫуп-ҫуп, пĕрле, ҫасрах! А-а! Пепле есĕ ӳснĕ! Аван!— тесе каланăн туйăнҫĕ. Кĕçтук хăймаст. Анҫах унтан йуласшăн та мар. Вăрттăн Малттин çине хĕрĕнсе пăхат.

Кĕçтук алланҫи кĕпекине вырăнне хурса çапата тума ларҫĕ. Ун вĕçĕмсĕр выҫанакан пуçĕнҫе çĕр тĕслĕ шухăшсем хушшинҫен çăпата йурри çеми сĕрĕнсе тухрĕ. Унтан сăмахсем те асне килҫĕçĕ.

...Çапата, çапатааа!

Куртăн есĕ хурлăхааа!..

Çапла йурласа илсен, йуррăн сăмаххисем Кĕçтук пуçĕнҫе сĕлтеленсе ларса йулҫĕç.

Ашă пӳртри сывлаш хумĕсем тикĕсленҫĕç.

Мĕншĕн-ха пайан ку сăмахсемпе йурлаççĕ, мĕне пĕлтерет çăпата?—тесе темĕскерле тĕксĕм салтавсем шырама тытăнҫĕ. Мĕн-

шĕн?—тен, сийеплĕ вăл, хистерĕ хăйне хăй. Ĕнер вуланă кĕнеке тĕрĕс çулйĕр çине илсе кĕртесшĕн. Çавăнтах кĕтӳ кĕтнĕ ђух Упаңђа каласа панă ĕлĕкхи, авалхи пуранăç пăтранђăкăн уйăрса илейми тĕтреленсе тĕксĕмĕн пăлханса кĕђĕ.

Вăт, мĕнле пуранна. Вуланиха вĕсем çапла кĕнеке...

Патак çине кăтартса çырнисем, пысăк ђапла сынсем килсен, пилĕкрен пуç тайнисем çинђен ăна Упаңђа каласа парса тĕлĕнтернĕ.

Пĕр Упаңђаран çеç илтмен. Ун çинђен ăслăлăх кĕнекисем те вуланă, сахал, анђах вуланă. Ваттисем кĕнеке çине улталаса çырнă тенине шанмасть. Вăл хăй те пĕђĕк тетрадь çине тиевник çырса пырать. Анђах нихçан та улталаса çырман. Ăçта унта улталама. Акă вăл пайанхи пуранăç çинђен çырнă кĕнекесене астурĕ. Çĕмĕрлере савăт, Вăрнарта савăт, Шупашкарта електритсă стантси, Канашра пысăк пулђиитса, електритса стантси. Вĕт вĕсем пур, тăваççĕ. Ун çинђен çыраççĕ. Малтанхи шухăш пуçламăшне тытса илсе:—Ак сана çапата!—тесе кăшкăрса йађĕ.

Кĕçтукăн аллинђи шĕплĕ, калăн урăх йышши. вăл хăй тĕлĕнненех пушăт йĕрĕсене шыраса тупать...

Елĕк ђăвашран мăшкăланă, хĕсĕрленĕ. Вĕрентмен. ђирлисене йусаман. Мĕн тупă? Кĕçтук пимĕн тупмасар тытăнса тăђĕ.—А-а, тупрам: Ђиркӳ!..

Лапсăркка çӳçлĕ пысăк хырăмлă пупсем ђартаксенђен ђăвашсем уйра ĕçленине пăхса тутлă апатсем çисе ларнă. Ђăваш ђухане, çапата тупă, ĕçленĕ, налок тӳленĕ. А халĕ?—тесе ыйтсан, Кĕçтук савăннине, (пуринђен ытла хăй вĕреннĕшĕн) анђах ку шухаша пытарса комсомола тавларĕ. Çавăнтах хăй çырнă саввине астуса илђĕ. Пађар çырнă, никама та кăтартман, анђах вăл ăна йуратать.

...Ех, комсомол...
Есĕ манăн шкул,
Есĕ манăн тете,
Тавлатăп сана
Çĕпĕ çуралнă çĕрте...

* *

Ђӳређене Карук шăкăртаттарсан Кĕçтук сăввине кĕнеке ...нине пытарђе.

...Карук аннă тăманна витĕннĕ малаххайне хывса выђанса васкаса кĕђĕ те, килти пекех çийĕнђи сăхмап пиншакне хыврĕ.

— Ну, мĕнле?—терĕ Кĕçтук.

— Мĕнли паллă ĕнтĕ... Капла пулсан епĕ йалтан таратăп. Ђат...а çук,—терĕ Карук. Карук ăшă пӳртре калла-малла уткаласа çӳрере Кĕçтук та нимĕн калама аптăраса ђарăнса тађе.

— Çук, ман шутпа, тармалла мар. Тĕрĕслĕхшĕн кĕрешес пулат. Мĕн тума пултарать-ха вăл?..

— Çемйуни? А-а, вăл темĕн те тума пултарать. Ђĕлхи йепле упан. Шупашкартан килне шурпалис çумне куршанак пек вĕт сыпаçнă. Іепĕ те темĕнле çын, пуçне ытла та пысăка хурать. Вĕçкĕнскер пу-

пас, çавăн пек туйанат... Ну мĕн тăвас тетĕнха çавăн пек çынсемпе? Кимĕнсĕрех тантаса пăрахĕç...

Кĕçтук Карукпа килĕшесшĕн мар пулӡĕ:

— Есĕ шахта кайас тетĕн ĕнтĕ?..

Карук Кĕçтука пӳлсе:

— Та-а! Шахтĕр, пролеттари пулатăп. Епĕ каламастăп йалта çлекенсем кирлĕ мар тесе, кирлĕ. Анӡах...

— Мĕн анӡах?...

— Çул çук... Ех, мĕнле аван пулĕӡӡĕ пĕрлешсе пĕр-пĕрне пулăшса ĕçлесен. Мĕн ӡухлĕ ĕç. Колхосрах мĕн ӡухлĕ ĕçлемелле. Çук, пурĕпĕрех кун пек ирсĕр йапала пĕтет те-ха. Унӡӡен... Ашшĕ те кулакран кайа мар, анӡах ӡейе...

— Ӡейе çав. Пирĕн те çыварас пулмаст. Ун çинӡен «Çамрăк колхоçнĕк» çине çырас пулат. Пĕтĕмпе кăтартса парас пулат. Вăт мĕн тăвас пулат, тарма мар...

Кĕçтук тата темĕн çинӡен каласа парасшăн пулӡĕ. Унăн йăвашшан пăхакан сăн-пиӡĕ хирĕçленсе пăхрĕ. Карук вăрахӡен ӡимесĕр ларсан çăран ӳсе тухнă çӳçне хыçкаласа илӡе те аллипе сĕтел çине çапрĕ.

— Çук, каймастăп!.. Еçлес пулат!..

— Правĕлнă!.. А-а. ак халĕ çеç астурăм. Манăн сана пĕр сăмах каламалла.

— Мĕн, кала...

— Вăт мĕн. Кунта пысăк йапала куранат,—тере Кĕçтук, Карук çумнерех пырса.— Вăт мĕн, Çприттун Мирунӡă Миккулĕ каларĕ кала ...Каркас Миӡӡи патĕнӡе Паӡуксем ĕçнĕ, тет. Çемйун ашшĕ те унта пулнă, тет. Еçсе ӳсĕрлнĕ. Унта Михетер темĕскер те пĕр калаçса пĕтнĕ, тет.

— Мĕн калаçна?—тесе ыйтрĕ васкаса Карук.

— Мĕн?—Унта вĕсем тупнă калаçма. Пур йалти херсене те унта тсăна ăсатмалла, имĕш. Унта вĕсене вирсе пăхаççĕ пулат, вара унта пăтран иртнисене Çĕпĕре ăсатмалла, тет.

— Тата?..

— Тата пур. Вăрçа пулат-и мен. Ӡĕмпĕр йенӡе пĕтĕм халăха колхоса ирĕксĕрлесе çырăнтарна пулат та, тепĕр куннех вăрçа хăваласа кайна,—тесе хыпар сарма тытăннă. Миӡӡи, ӳсĕрскер, аллипе ӡăмăртаса кăшкăрашат, тет.—Комсомолсене пĕтерес пулат, Калинă колхоссене халех аркатса такас пулат. тесе кăшкăрат тет Вăт йепле хыпарсем сараççĕ.

— Миккулӡ хай унта пулна-им вара?

— Миӡӡан аӡи пур вет. Пионера кĕртме кайнă. Лешсем, ӳсĕрскерсем, пĕлмеп те пулас. Ун умĕнӡех шапăлтатна.

— Вăт молотетс! Вăт пионер!—кăшкăрса йаӡĕ Карук. Хĕпĕртенипе Кĕçтукăн аллипе тытса ӡăмăртарĕ.

— Еçлес пулат! Ӡухăнсем пирĕн наӡартарах ĕçлеççĕ. Пĕрлешерес пулат вĕсене. Капла йурамаст...

— Пайан каçпа ӡухăнсен пуххине пыйтăва çирĕп лартас пулат, вер... Кĕçтук та...

Кĕçтук сăмахне тăпланса итлесе ларнă Карук Кĕçтука колхоз правленине ђĕнђĕ. Кĕçтук килĕшрĕ. Ђасах вĕсем пăлтăр алăкне питĕрсе урам тăрăх йалсовет йенелле утрĕçĕ.

* * *

Саңук, колхос правлени претçетаттĕлĕ, шут çинђе ларат. Кĕçтукпа Карук килсе кĕрсен ĕçпе пăрахса çырнă хутсене кăтартрĕ.

— Çитмест! Çураки пуçланиђђен пирĕн хамăр рете сарасах пулат. Пайан мĕнле пулат ĕнтĕ,—терĕ.

Карук Çпеккĕрпе шурналист çинђен тĕпђерĕ.

— Вĕсем Софийе Павлăвнă патне кайрĕçĕ.

— Палђукпа Çемйуп?—терĕ Кĕçтук.

Саңук тепĕр пўлĕме тĕллесе кăтартрĕ.

— Комиççи ĕçлет?.

— Комиççи…

Виççĕн ларакан пўлĕме Миккулђ ђупса кĕрђĕ.

— Çыру, комсомол йађђейккине атрĕслевĕ.

— Тавай вулатпăр.

— Çемйуна ђĕп,—унсăр уçас мар, терĕ Карук.

Саңук ђышкине пкĕ хутђен çапса шаккаре те Çемйуна кашкăрса ђĕнђĕ:

— Çемйун ђасрах кил, Мускавран çыру!..

Çемйун аллипе илнĕ çырăва хăй ларакан пўлĕме ясе кайма тытăпсан, Кĕçтук Малттинран мари тесе тĕпђерĕ. Çемйун канвертне уçре те Малттин çырăвĕ иккенне пĕлтерђĕ.

— Вула…

— Унта вăрттăнлăх пулас çук, пурин патне çырнă ĕнте вăл. Çемйун хăй ăшшĕн вуласа тухрĕ те нимĕн ђĕнмесĕрех Кĕçтука парса, йал капаш вырнаçнă пўлĕме тухрĕ.

Кĕçтук, Саңук, Карук, Миккулђ пĕр сĕтел умне пуçтарăнса Малттин çырувне вулама ларђĕç. Саңук васкамасăр вулама пуçларĕ:

«Йулташлă çыру!

Ђи малтанах пурсăрăн алăра та ђăмăртатап. Кĕскен хам çинђен каласан,—иккĕмĕш çеместăра куçрăм. Вĕренме çăмăл мар, анђах пирĕн умра нимĕнле йывăрлăх та тарас çук. Утарлă прикатăсемпе ĕçлетпĕр. Йулташ Сталин ђĕнсе каланă лосăнка, сотсиалисăмлă ăмăртăва, полђшевикла пурăнăçа кĕртетпĕр. Вĕçĕмсĕр вĕрепў, вĕçĕмсĕр практĕккă. Тата пĕр çул çурăран акроном пулса сотсиалисăмлă уй-хире тавранасшăн ĕмĕтленсе вĕренетпĕр. Хăш-хăш ђух çав тери сире курас килнипе тунсăхлатăп. Епĕ пĕлетĕп, халĕ ĕнтĕ сирĕн унта «Калинă» колхос сарăлса хунаса кайасси çинђеп. Анђах Кулинене шел, ну, мĕн тăвас тетĕн-ха, вăл пире хăратас çук. Кулине ђĕрĕлет тенĕ хыпара илтсен хĕпĕртерĕм. Астăвăр, малашне хытăрах сыхланăр, класлă тăшман пайан кун темĕн те туртса кăларма пултарат. Комсомол çекреттарĕ Çемйунах-и?—ун çинђеп çырса пĕлтерĕр… Миккулђ

мӗнле?—Епе ӑна революцилле кӗвӗсем выљама сӗнсе хӑварнӑҫҫӗ, выљати?...

Ђаваш республӗкӗнђе пулса иртекеп хыпарсене хаҫатсем урлӑ та, пуринђен ытла иртнӗ студентсен пуххинђе Опкомӑн ответлӑ ҫекреттарӗ Петров йулташ паха токлат туса панинђен аван ӑнлантӑмӑр. Ҫапах та хам ҫуралса ӳснӗ йалти хыпарсене нит те пӗлес килет. Йепле пулсан та ҫырма вӑхат тупӑр, тесе шутлатӑп. Васкаса ҫырмалла пулђӗ. Кӗске ҫырнӑшӑн ан ҫиленӗр.

Комсомолӗслӗ салампа, Малттин.

26/1-30-мӗш ҫул. Мускав.».

Саљук аллинђи ҫыруне йеррипен ђӗркесе канвертне ђикрӗ те, пуҫне калла ывӑтса, вӑрӑммӑн сывлӑш ҫавӑрђе.

— Вот. Таврӑнтӑр-ха вӑл. Ӗҫе ӑслӑлӑх вӗрентнӗ йӗркипе лартӑпар...

— Пумай пусӑллӑ уйа халех куҫас пулат,—терӗ Миккуљ, сӗтел умне каҫӑнса.

— Ике ҫул, пайаххи ӗмӗрте икӗ ӗмӗр ӗҫпе тӑват,—хушрӗ васкамасӑр Карук.

— Икӗ ҫул...

Пурте пуҫӗсене хыҫса илђӗҫ. Калӑн вӗсен пурин умне те Карук ывӑтса ниййепле ҫӳреймн йӑвӑр сатаҫҫа каларса хуђе.

## 7. КУЛИНЕ ТАВРАНАТ.

Иккӗн вӗсем.

Пӗри пирӗп йуратнӑ Кулине. Тепӗри ӑнсӑртран тухтӑр хушнипе пуљнитса укҫипе лава тытса йанӑ ђаваш.

Сӑрт тӳпипе хӑпарђӗҫ. Сӑрт тӳпи ваталма пуҫлана ҫыннӑн кукша пуҫ пек йакак, тӑман лармасть, тӳпе урлӑ вӗҫсе ӳксе айлӑмрах ҫӗре ӳкет. Кӗрхи йӗпе ҫулӑп шӑннӑ муклашкисем йур айне пулман, ҫуна тупанӗсене калаҫтарса илђӗҫӗ...

Ҫемҫе йурлӑ вырӑна улӑхса ҫитсен йамшӑк лашине хӑваларӗ. Лаваҫа хӑйен ђашлание анђах пуљнитсаран тухнӑ хӗре тӑхӑнтарнӑран пулас, сивӗ ҫил йенђеп те хыпаласа пӑхма пуҫларӗ. Ђан малтан йамшӑк ђӑркуҫҫисем шӑнма пуҫларӗҫӗ.

Пӗр хут йӗмпе хуплаинӑ ђӗркуҫҫисене сӑтӑркаласа илсе вӑл Кулинепе самах хушрӗ.

— Мӗнле сана сивӗ витмест-и?

— Ҫук.

— Аван. Сивӗрен хӑрас пулать. Анђах пуљнитсаран тухнӑ ҫынна харушӑ вӑл,—терӗ йамшӑк.

— Епӗ сире сивӗ пуласран хӑратан. Хӑвӑрӑн ђанпан пур ҫинђен шанса пымалла пулђӗ,—терӗ Кулине.

— Йурать. Епе ватӑлнӑ ӗнтӗ. Шӑнас пекки шӑпнӑ та пуљ, ӑшаннӑ та пуљ.

Вӗсен хушшинђи сӑмах татӑлђӗ.

Йамшӑк, лаши ҫемсе йурлӑ вырӑнта хӗпӗртесе тӑллхӑрса ђупнӑран пулас, мӑкӑртатса каласрӗ.

Анҫах йамшăк лашипе мăкăртатса калаҫса пынине Кулине илтмерĕ.

Кулине, йамшăк ҫаппалне тăхăнпăскер, сивĕ ҫилтен хӳтленсе ларҫĕ те хăйĕн пуҫĕнҫи тутла шухăшсем ăшне путрĕ.

Унăн пуҫĕнҫи шухăшсем ăҫта кăна пырса ҫитмеҫҫĕ. Темĕншĕн вăл пуррие те тавҫăрса илесшĕн. Темĕншĕн вăл тутлă ĕмĕтсемпе савăнасшан. Кайа йулнă пуранăҫ савăнтармаст. Ун ҫинҫен шухăшласан ун ҫан-ҫурамĕ ҫĕтресе кайрĕ.

Тăлăх ӳспĕ. Вĕренеймен, шкула та пурĕ пĕр ҫул хушши ҫеҫ ҫӳренĕ. Кайран Ухăҫван патĕнҫе... Комсомола мĕнле ҫыраннисем, йулашкинҫен кӳлĕ хĕрринҫе кĕпе ҫӳкенĕ ҫух Кĕҫтукпа калаҫни, ун кăмăлне уҫса йаҫĕ.

— Мепле вăл ăслă,—терĕ вал хăйне хăй калаҫса.

Акă унан куҫ умне вăрманта пулнă ҫух Кĕҫтук шахтăри Ваҫлипе Лена ҫинҫен каласа пани амаланҫĕ.

Уптан: «Пĕрле кĕрешĕпĕр» тенисем... Вăрманта Кĕҫтукпа тĕл пулнипе веҫех, тĕплĕн, пур йенҫен те тавҫăрса илесшĕн вăл.

Каллĕх Кулине астурĕ:

— Кулине, епĕ сана пĕр самах каласшăнҫĕ.—Кĕҫтук ҫапла каласан хăй сăмахĕнҫен хăй хĕрелсе кайрĕ.

Кулине кăна хаҫхи пекех курат. Вăл хăй ăш-ҫиккине веҫех иртнĕ ҫулахи пуранăҫ ҫине кайса ӳкнĕ...

Кулине ларнă ҫĕртех кашт кулса йаҫĕ те, ун ҫух Кĕҫтука хирĕҫ тавăрса калана сăмахне астусан салхуллăн хупăрласа илме пуҫларĕ.

— Ата, кала, итлетĕп.

— Мĕншĕн-ха епĕр те Ваҫлипе Лена пек пулма пултараймастпăр? Сана кун ҫинҫен такҫантанпах каласшăнҫĕ...

Ҫи хăрушă выран. Йепле калас тетĕн-ха труках.

— Кам...

Кĕҫтукăн кам тенĕ сасси ун хăлхинҫен темиҫе ҫын пĕр ҫĕре пуҫтарăнса кăшкăрнă пек йанраса кайрĕ. Кулине ҫуна ҫинҫе пуҫнитсаран Кĕҫтука курасшăн хĕпĕртесе пĕр ерне малтан тухса хыпаланса ларса пынисене те вĕҫех манса кайрĕ. Унăн ҫан-ҫурамĕ пĕҫертме пуҫларĕ. Кулине ҫаппан ҫухине уҫса питне ҫĕпĕтсе вĕрекен ҫил ҫине кăларҫĕ. Лăпланасшăн пулҫĕ вăл. Кĕҫтукăн йулашки сăмаххисем ҫанахах та ăна йăпатаҫҫĕ.

— Кулине, есĕ манăн-и?

— Санăн.,

— Епĕ те санан...

Уптан...

Ватă Унаҫҫа иккĕшне те икĕ аллипе ыталаса илсе аҫашларĕ.

Мĕплеҫҫе?—Мĕпле?—Кулине вăрманта пулса иртнĕ сăнсене темĕскерле пур илемлĕ йапаласенҫен те илемлĕн курасшăн пулҫĕ.

Халĕ вăл урăх пимĕн ҫинҫен те шухăшласшăн мар. Миҫе хут вăл ун ҫинҫен ултă уйăх хушши пуҫнитсăра вуртса санитарккăна Хвеклене каласа панă. Хаш-пĕр ҫух вара хĕпĕртенипе унан куҫĕсем

пывланнă. Пĕрле выртаканнисем тĕлĕнсе кайса Кулинен иртнĕ пурабăçĕпе паллашнă.

Кулинен çупатланнă шухăшĕсем çумăр умĕнхи пĕлĕтсем пек шăвса кăтраннă хушăра шурă тум çинҫен пилĕкне туртса çыхнă Хвекле урама тухса ăсатса йани çине ҫаранса тăҫĕ.

Йулашкинҫен Хвекле аллипе сулласа:

— Ҫипер кай! Кĕçтукна салам кала!—тесе кашкăрҫĕ.

Унпа пĕрле выртнă ытти хĕрарăмсем те икĕ хутлă каптăк витĕр кĕленҫе çумне çыпăçтарнă сăмсисене касăннăн кăтартса аллисене сулларĕçĕ. Çулçисене тăкса йурпа витĕннĕ топпăҫсем те: «Ҫипер кай, телейлĕ пурăнăр», тесе ырă суннă туйăнҫĕçĕ.

Кулине хăй пуçĕнҫи илемлĕ, çав хушăрах салхуллă шухăшсемпе кĕрмешет.

Хĕллехи çанталăкăн хăйĕн илем. Кăштах тĕсмĕртсе пăхсан сарă хĕрлĕрех сăнлă хĕвел ик-виç вут йупасемпе карталапса ларни палăрат... Пĕлĕт илемлĕ сăрпа сăрланнă сурпан пуç пек курăнат. Анҫах ку илеме Кулине те, Йамшăк та тĕсмĕртмерĕçĕ.

Иккĕшин те хăйсен шухăш. Колхос ыйтăвпе перкелешсе пыракан йамшăк калла çаврăнса Кулинерен ыйтрĕ:

— Килте çемйесем пури?..

Çемйисем тенĕ сасă Кулинен хăлхинҫе темĕскерле йутăн илтĕнҫĕ. Ун çинҫен вăл пĕрре çеç мар шухăшланă. Йамшăк хирĕç çавăрса каласса кĕтсе пăхса танине курсан.

— Çемйесем?—терĕ те Кулине шухăшласа тăҫĕ. Унтан кăшт кулам пекки туса:

— Пур,—терĕ.

Йамшăк Кулинен савăнăçлă сăн-питне курсан, кулмалла мар çĕртенех ырхан йанах тирĕсене пĕркелентерсе сухал айĕнҫе кăшт кулса илҫĕ те:

— Йулташ пур пулĕ вĕт?—терĕ.

— Ех-ее! Пу-ур! Йулташсăр кам пулма пултарат.

— Çук, епĕ ĕмĕрлĕх йулташ çинҫен калатăп...

— Ĕмĕрлĕххи çуралман-ха...

Йамшăк калаçма пăрахса лашине хăвалама пуçларĕ. Кулине нимĕн шухăшламасăрах:

— А а! Сирĕн хăвăрăн мĕнле?—тесе тĕпҫерĕ.

— Ман ĕнтĕ! Сан пек хĕр пур...

Сăмах пĕтрĕ.

Йамшăк каллех пулҫнитса совхосĕ çинҫен шухăшлама пуçларĕ: Кăна манмаст ĕнтĕ вăл. Какш, çынпа пурăнма пĕлес пулаť. Çуртра мĕн пулмаст. Тен, хамăнта хам киле таврăноа çитнĕ çĕре пĕри сывмар пулса выртнă-и тен? Çавăнтах сĕтĕрĕнос пулаť вĕт. Наллана çын пулаť. Хайхискер, вара кун çинҫен те астутарма пулаť. Ку ун хурăнташĕ пулас-ха, тесе шухăшласа Кулине çинҫе ҫаранса тăҫĕ. Çавăнтах пулҫнитсана миçе лав кӳнипе, унтан совохсран миçе тенкĕ укçа илмеллине шутласа пăхрĕ те, çак укçа вырăнне вуттăн илме ман пулми-ха,—тесе шухăшларĕ.

Пулҫнитса совхосне тĕрлĕ йенҫен виçсе пăхрĕ. Кулине çинҫен

шухăшласа илҫĕ. Ку унăн хурăнташĕ пулас. Хурăнташĕ тавраш пулмасан та пĕлĕш тавраш паллах ĕнтĕ. Кун хыççăн та пĕр лав та пулин вута памасан мĕнле вăл. Хам та пĕрре каланипех килĕшрĕм вĕт. Хурăнташах пулас. Ара, туртăмлă пулмасан çапла ăсатса йараççĕ-и? тесе шухăшласа пыҫĕ.

Йамшăкпа Кулине хушшинҫе сăмах хушу тавраш çук. Иккĕшин те тĕрлĕ шухăш. Иккĕшин икĕ тĕрлĕ хуйăх.

Йамшăк Кулине ăш-ҫикки мĕнле шухăшсемпе вĕренине ҫухламарĕ. Вăл хăйĕннех перет. Кулинене ирĕксĕрлеттерсе тенĕ пек, хăйĕн сăмахĕсене итлеттерҫĕ. Тĕмĕскер çинҫен вăл шалăпăласа каларĕ.

Унтан вăрманти ĕççем çине кусрĕ. Паракра калаçнисем çине куççан Кулине пусĕнҫи шухăшсене калăн пĕр самантрах айакка нăрса хуҫĕ. Йамшăк сăмаххисене хыттăн итлеме пусларĕ.

— Мĕнле çынсем калаççĕ çапла?—тесе тепĕр хут тĕпҫерĕ Кулине васкаса.

Йамшăк васкамарĕ. Вăл халĕ Кулине унăн сăмахĕсене интереслесе итлеме пуçланине те туймарĕ. Пĕр йевĕрлĕ, малтан калаçма пуçланă пекех, сăмаххисене çăтса калаçрĕ.

— Мĕнле çынсем? Çак çынах. Нумай унта. Вăрманта кам çук, темиçе çĕр çын çинҫе кам-камне никам та тишкĕрсе тухас çук.

— Уççăнах калаçаççĕ-и?

— Уççăнах.

— Вăрçă пулат, теççĕ.

— Пулат кăна мар, пуçланнă, теççĕ. Пĕтĕм йут патшалахсем пĕрлешсе килеççĕ пулат. Комунисcемпе комсомолĕссене, колхоса çырăнакансене, касса тухаççĕ, тет.

— Çакна есĕ шанатăн,—терĕ Кулине.

— Ахаҫрен тухман ĕнтĕ çав сас-хура.

— Тĕрĕс, нимĕнле йапала та ахаҫтенех тухма пултараймаст. Кирлĕрен кăлараççĕ. Анҫах камшăн кирлĕ-ха çакăн пек ирсĕр халлап? Кулаксемшĕн. Йенле-ха есĕ çав кулаксен шухăшне ху пусăнта тĕрĕслесе тухма пĕлмерĕн. Куппа çитмест. Çав кулаксен шухăшнех хăвăн ҫĕлхӳпе ытти çынсене каласа паратăн. Çакăн пек калаçакан çынна тытса тӳре-шара аллине парас вырăнне, ху унăн хăруша шухăшĕсене саратăн. Сапа купшăн хуна та кулакпа пĕр танах айăплама пултараççĕ,—терĕ Кулине.

Йамшăк ҫĕтресе ӳкрĕ. Каҫакан йевĕрлĕ сухалне Кулине патне çывăхартса:

— Есĕ тата ху та камсамул мар-и-ха?—тесе тĕпҫерĕ.

— Кулине ҫĕнмесĕр шухăшласа тăҫĕ те, ăна хирĕç таварҫĕ.

— Çук...

— Суйатăн есĕ...

— Мĕншĕн-ха ман суйас?

— Ытла саккун йĕркине тытма йурататăн, çавăнпа калатăн.

Кулинен сивĕ çилпе хĕрелнĕ пиҫĕ татах та пĕçерме пусларĕ.

— Кашни çынах çапла пулмалла, терĕ те Кулине хăй комсомолкă иккенне пĕлтерҫĕ.

Йамшăк çĕлĕкне пусарса лартса лаши йенне çаврăнса хăйнехай мăкартатса пыҭĕ.

Ҭаппаппа ҭĕркенсе ларнă Кулине тавлашса ывăнна хыççан телерне пек пулҭĕ. Анҭах Кулине çывăрмаст. Татах вăл вилнĕ аҭи çинҭен вăраммăн сывласа хурланҭĕ. Кĕçтук та, тен, йуратнă пулĕҭҭĕ. Мĕнле пулнă пулĕҭҭĕши? Ун ăшĕнҭи йавăр шухăш шăйрăлса тухрĕ. Вилнĕ аҭине пăрахсан, ун халхине кĕрсе йулнă сасă ак халҭ калана пекех йапраса кайрĕ.

— Ах, аҭи, мĕскĕн амăшĕ пекех пулнă иккен!—тенĕ сасă, Кенăран хăракан, ун çине тискерлĕн пăтрапакан шухăшне нĕтерсе лартрĕ.

— Аҭи те шуйттан пек пулман иккен те çав,—терĕ те, пĕрре кулҭҭанса тепре хĕпĕртесе илҭĕ.

Мĕн есĕ кулҭҭанатăн, мĕн есĕ кулакран тăваншан нумай шутлатан?

Ун ашшĕне есĕ йуратман, ăна есĕ кураймаң,—терĕ унан пĕр шухăшĕ çирĕппĕн.

Кулине паҭа нўхрепрен пантахса тухсан сывлăш çаврнăн çăмаллăн уçа сывлаша ўпке тулли сывласа илҭĕ.

Вăл иртнĕ йавăрлăха манасшăн.

Ун çинҭен веçех, пихçан асанасшăн мар пулса, Кĕçтук çинҭен шухăшлама пуçларĕ.

Вăл-ха çак самантра мана кĕтмест. Иртерех пулмарĕ-ши? Çук пулас, тухтăрсем те ыглах ҭармарес вĕт, тесе шутласа Кулине икĕ ерпе малтан пулпитсаран тухса Кĕçтук патне таврăнпашăн пĕртте кўренмерĕ.

Хай ҭĕрĕлнине ҭĕрелменнине пĕлмен пек пуçне пăркаланса çаварĕ те çупа тĕпнерех анса ларҭе.

Йамшăк лупашкана пусăранса ларнă Кипек-кассине курсан лашине хистере.

— Ака сирĕн йал,—терĕ йамшăк.

Ҭапнан çухине витеннĕ Кулине шурса кайнă сăпне кăларҭĕ. Пăслапна хура куç тĕксĕм типсе ларҭĕ. Шурă пит, пăртакçа туртăннаскер, кăшт хĕрелҭĕ. Хире-хирĕç ҭиксе ăшатна аллисене кăларса çавбака çамки çине апна хура çўçне тутар ăпне тĕртсе кĕртрĕ.

Таварланса хĕсĕннĕ ҭери паҭăхса çитрĕ.

Калăп, вăл ăна иреке каларса вĕçен кайăкăн вĕçтересшĕн.

Ака йал. Ака Ухалҭванан çурҭĕ халех сахса илесшĕн хăлаçланнă халат пек. Ав ăна хирĕç шĕвĕр таралла Михетер çурҭе куç хĕссе кулса пахат.

Сахиме карҭăкĕ ĕххем-еххем ўсĕрсе шыв ăсса каçнă çĕртен, аллине çамки çине хурса пахса тăрса йулҭĕ.

Кулине ҭапнан çухине антармарĕ.

Йăмрасем хушшине хĕсĕннĕ иеҭĕкçĕ кĕпер урла каçса тури урама тухрĕçĕ.

Кулине ҭапнан çухине антарса çăмăллăн сывласа пăхсан, Улҭки ҭўреҭе витĕр пăхпине курсан, ҭапнан çанни ăшне пытаннă аллине суласçĕ. Пĕр самантрах, Улҭки йуле пилĕкĕпех урама ҭупса тухрĕ.

Кулине йамшăка лашине ђарма ыйтрĕ. Йамшăк лашине ђарђĕ.

— Ах, Кулине, Кулине...

— У-у, Улђки...

Улђки вĕри пиђĕ, ђĕтрекен тути Кулинен сивĕ питне пĕçертсе иасе, лĕп тутише шыраса тупрĕ.

— Ак, мĕн есĕр майрасем пек аппаланатăр,—тесе кулса йађĕ йамшăк. Вĕрлĕх хапха патнелле пăрăнакан лашине çул çине васкаса туртса кăларђĕ те, сухал айĕнђе тата темĕскер макăртатса илђĕ.

— Ай, пыр,—терĕ Кулине, урăх нимĕн сăмах калама аптăраса.

— Унта та пымасан тата ăçта... Анђах халђ пымастăп. Калаçăрха Кĕçтукпа, кансĕрлес мар...

Улђки кулса йаđĕ.

Кулине те хĕрелсе кайса кулђĕ.

— Ну-у?.. Мĕн ес каласатăн!..

— Пырăп. Çиђђас пыратăп.

Улђки вăрăм шурă каташпир кĕпине вĕçтерсе кил хушшине ђупса керсе кайрĕ.

Тăкăрлăкран пăрăнсан тури урама тухрĕçĕ.

— Ак купта ђар, терĕ Кулине, икĕ ђўређеллĕ пўртĕн кивĕ хапхине кăтартса..

(Малалла пулат).

# АТĂЛ КĔВВИСЕМ

25 ЕППИСОТЛĂ ПЙЕССĂ*)

## И. МАКҪИМĂВ-КОШКИНСКИ

Стсенă ҫинђе виҫĕ плошђаткă: Сулахай йенђи ҫўлĕ, варринђи лутрарах, сылтăм йенђи стсенă урайĕнђен кăшт ҫеҫ хăпарса тăрать. Кашни плошђаткăн пусмисем пур. Варринђин икĕ йенђен те пусмисем пур.

Унăн планĕ ак ҫакăн пек:




Куракансене ак ҫакăн пек курăнмалла:



Варринђине—1-мĕш тейĕпĕр: Сулахайрине—2-мĕш тейĕ
Сылтăмрине—3-мĕш »

Пйессă антрактсăрах иртет. Пĕр епписот пĕтсен, ҫутă сўнет те—тепĕр епписот пуҫланса кайсан тепĕр тĕлте ҫутă ўкет.

Плошђаткăсем хыҫне айаккине шăналăксем кармалла, йе хура сĕмлĕ сукно (ҫитсă) кармалла.

Ку пйессăна уйра лартсан тата авантарах. Ун ђухне автомобилсем, трактăрсем, лашасем, трантассем, плуксем вăййа хутшăнма пултараҫҫĕ.

## 1-МĔШ ЕППИСОТ.

Стсена çинҫе тĕп-тĕттĕм. Айакра авалхи ҫăваш кĕвви илтĕнет. Сăмахĕсене уйăрса илме çук. Кĕвви пит хурлăхлă.*)

Стсенăн сулахай йенне вулаканĕ тухат, ун çине çутă ӳкет.

ВУЛАКАНĔ:
Атăл... Атăл...
Çĕршывăн илемĕ!..
Хумлăн,
Хумлăн
Сикет умăмра ..
Камăн ҫунĕ
Пăхсассăн çĕкленмĕ.

Кам
Çӳçенмĕ
Çак аслă вăйран..

Вăл никамăн йатне пăхăнмасăр,
Анлă кăкăрĕпе çул хывса,
Ыткăнат çеç
Хăватлăн та харсăр,
Урăм-сурăм вăй-хал ывăтса.

Икĕ паттăр та аслă çыранĕ—
Икĕ паттăр пуйан йĕкĕреш...
Сĕм вăрманĕ,
Ҫеҫеклĕ çаранĕ
Ун йатне мухтаса
Йешереç.

Стсенă çине канат туртса пурлаксем тухаççĕ. Ваттисем те, çамрăккисем те, пурте çĕтĕк-çатăк тумтирпе. Урисене хăпĕ çăпата сырнă. Çара ураннисем те пур. Йеррипен, арап-арап утаççĕ. Пит ысăк кимме тăвалла туртаççĕ пулмалла.

(Йурлакансем хуллен кăна «Ей, ухнем», йе «Канат туртакансен йурри» йурлаççĕ).

ВУЛАКАНĔ: -Пин-пин çухрăм
Хăлат пек вĕçеççĕ,
Акăш йевĕр выҫаççĕ кимĕсем.
Аçта пăхан—
Унта хурлăх пиҫеҫе,
Аçта пăхан—
Çавăнта ҫăн илем...
Анҫах Атăлăн аслă илемĕ
(пурлаксем çине кăтартса)
Çак мăнтарăн ĕççынĕшĕн мар. .
Тыткăнланă ăна.
Пийеленĕ
Куллен-кун, сăрхакан
Йунлă тар.
—Тухăр ес р
Çак шыв хĕррине.
Иглĕр
Атăлăн ĕç йурриие...
Йурă мар вăл,—
Вăл—хурлăх куççуль,
Вăл—
Телейсĕр ирттернĕ кунçуль
Ҫунилли пек шăват
Йавăр кимĕ,
Вилĕм йевĕр пăватĕ
Йăлмак...

Пурлаксем йеррипен канат йăлмакĕсене пăрăхса йеррипен тухса кайаççĕ. (Йурă кĕвви хуллен çеç, инçетре илтĕнет). Пĕр çамрăкраххи çеç стсена çине тухат. Вырăнтан сикмесĕр канат çине пăхса вăл шухăша кайат.

ВУЛАКАНĔ:
(Çав çамрăк пурлак çине пăхса)
—Ма ес килнĕ кунта,
Ма ес килнĕ,
Йун сурса кайса ӳквĕ
Пурлак?.

Тутлă мар им сана,
Хавал мар им
Ху çуралнă—та ӳснĕ килӳ?
  Йе йалти
    Йатлă çын пулаймарăн.
Йе ђун йевĕр кĕтен килĕшӳ
Савнă тантăшăнта тупаймарăн...
Тен, ес тухнă телей шыраса
Ху çуралнă тăван çĕршывран.

Пур çĕрте те, тăван, пĕр асап,
Пур çĕрте те—
    Йунлă тăшман.
Уй-хирте-и, йе сĕм вăрманта—
Пĕр пек хуйăх, пĕр йевĕр инкек.
  Куланайĕ,
 Хырçи амантат,
  Пăђăркаççĕ
    Пурмис та тийек...

Пурлак канатне çĕклесе кайалла тухса кайат. Стсенă хыçĕнђи кĕвĕ вăхăтлăха вăйлăланат. Стсенă хыçĕнђен çав пурлаксемех йăвар михĕсем, тавар йешђĕкĕсем йăтса тухаççĕ.

ВУЛАКАНĔ: Умлăн-хыçлăн улпут караванĕ
Шăвăнат, таварна йатăнса...
Ун тавар,
Унăн мул...
Вăл тарламе,—
Унăн кунĕ çамăл, ансат.
Унан килĕ—хула,
Ун керменĕ—
Халлапри çăтмах йевĕр ђипер
Унпан—
    Çакă кимме сĕтреканĕн
      Йун тумламĕ
          Мерђен перђи пек.

Пурлаксем миххисене 3-мĕш плошђаткă умне купаласа, пĕрерĕн-пĕрерĕн стсена варрине, куракансем патнех пырса лараççĕ.

ВУЛАКАНĔ: Вырăсран-и,
        Ђаван-и, тутар-и,—
Пипĕн-пипĕн килсе пурлака,
Йулашкин сывлăшђен вĕт
  Турттарна
Такшнисем пухакан пурлаха.
Атăл, ес илем мар мĕн—
  Куççулĕ.
Атал, ес тăван мар мĕн—
Тăшман.
Асапри халăхсенĕн куççулĕ.
Ех!.. мĕн ђухлĕ купта сухалман...

Çута сухалат. Вулаканĕ стсенă çинђен кайат. Пурлаксем çинђи çутă пĕр самантлаха йулат. Стсенă хыçĕнђи кĕвĕ пĕтет... Пурлаксем çинђен те çута çухалат... Стсена çинђе тĕттĕм. Çухалнă кĕвĕ вырăнне кĕслене таша кĕвви калаппи илтĕнет. (Кĕсле пулмасан, стсена хыçĕнђи хор таша кĕвви йурлама пултарат). Пйессăна лартакапни

(реньиççорăн) ак çакна астумалла: малтанхи кĕвĕ пĕтнĕ-пĕтменех тапă кĕввине пуçламалла.

## 2-МĔШ ЕППИСОТ.

Тапа кĕвви пуçлансанах çутă 3-мĕш площадкă çине ÿкет: Унта **хуçипе арăмĕ**, тата ташлакан хĕрсем иккĕн. Хĕрĕсем ташлакă вахăтра хуçи пысăк куркаран сăра ĕçет. Арăмĕ ăна тултарса парат. Пурте авалхи ђапла ђавăш тумĕпе.

ВУЛАКАНĔ: (Стсенăн сылтăм йенне тухса, хуçи çине аллине тĕллесе, хытă саçăпа).

Çак харампыршăн.
Ÿлпутшăн,
Хуçашăн,
Тар йухтарнă,
Тертленнĕ
Ђухăн халăх авал.

Вулаканĕ стсенă çинђен кайат, 3-мĕш площадкă çинђен çутă çухалат, тата кĕвви ђарăнат.

## 3-МĔШ ЕППИСОТ.

Стсенă хыçĕнђе хĕрарăм йурлани илтĕнет. Калама çук хурлахлă йурă. Малтан йеррипен, унтан вăйлăрах, кайран каллех лăпкăнрах (Шупашкарта выђана вăхăтра А. Касаткова, кайранхисенђе А. И. Токçина «Шал-шал урпа» солă йурларĕç).

Çута стсена çинђе ларакан пурлаксем çине ÿкет.

Пурлаксем нимĕн ђĕпемсĕр ларăççĕ. Пуçĕсене уснă. Хĕрарăм йурри илтĕнет.

Ларсан-ларсан ахлатса илсе:

1-МĔШ ПУРЛАК—Мĕнле пурăнас?

ÇАМРĂК ПУРЛАК—Пурне те хуçана патăмăр. Хамăрăн мĕн çийос?

2-МĔШ—Мен тăвас?

3-МĔШ—Выççанах вилетпĕр пулĕ...

ÇАМРĂК ПУРЛАК—Е-хе-хей!.. Йурамаст капла пурăнма...

1-МĔШ—Малашне хуçана параймастпăр пулĕ...

2-МĔШ—Мĕн калаçатăн.

ÇАМРĂК ПУРЛАК—Хĕртсурт тытасран хăратăн-им.

4-МĔШ—Ан пар-ха... Хуçа хĕнесех вĕлерет пире.

ÇАМРĂК ПУРЛАК—Хамара хамăрах хĕнеттерет вал.

4-МĔШ—Хăйĕн таса аллине варламĕ ĕнтĕ...

ÇАМРĂК ПУРЛАК—Мана хĕнеме хушсан—хĕнеместĕп (сиксе тăрат). Ака мĕн, тăвансем. (Пурлаксем айхăран вăранпă пек вăранса, çамрăк пурлак йенне пăхаççĕ).

ÇАМРĂК ПУРЛАК (стсена сылтăм йенелле кайса)—Атăр, тырра кайалла илер.

(Пурлаксем хăраса ÿкреç. Кун пек сăмаха вĕсем халиђчен илтмепне пĕрех).

1-МĔШ (сиксе тăрса)—Мĕн калаçатăн?
2-МĔШ—Киреметрен хăрамастăн-им?
3-МĔШ (сиксе тăрса, пурлаксене)—Савантăй ђан калат.
1-МĔШ—Ан ухмахланăр!
3-МĔШ—Туртса илес!
5-МĔШ—Кайалла илес!
3-МĔШ—Пурĕ-пĕр выççăн вилетпĕр.

ÇАМРĂК ПУРЛАК—Е-ех! Есĕр кирек мĕн тăвăр, мапăн выççăн вилес килмест. (Купаланă михĕсем патне пырса, пĕр миххине хулпуççи çине хурат те кайат).

Çамрăк пурлак хыççăн ыттисем те пĕрерĕн-пĕрерĕн михĕсем патне пыра пуçларĕç. Хăшĕ хăйулăрах, хăшĕ калле-малле пăхкаларах михĕсене хулпуççи çине хураççĕ. Йерипен стсей синђен тухса кайма тытăнђĕç, анђах...

#### 4-мĕш ЕППИСОТ.

1-мĕш плошђаткă çинђе сăра ĕçекен хуçах халат тăхăннă та, ђӳкпуçĕ пулса тăнă. Вăл хайар, вăйлă сасăпа кăшкăрса йарат.

ХУÇИ—Ђаплă ырсем. Хайар киремет.

(Пурлаксем ун сассине илтсессĕн пурте миххисене хулпуççисем çинђен антарса, ђĕркуçленсе, пуçĕсене тайаççĕ).

ХУÇИ—Арçурисем! Хĕртсуртсем!
Ытти пĕђĕк турăсем!
Сире, сире ђĕнетĕп...
Тархаслатăп...
Куратри, мĕн хăтланат Хура-халăх!
Итлĕр... итлĕр хăвăр ђуруна.
Ђӳк пуçлăхне,
Сармантей улпута...
Хура халăх аташат:
Хуçа мулне тустарат.
(Паусă)
Илтетĕп, Ырсем, санăн ăслă сăмахна.
(Паусă)
Ђăн калатăн, Киремет...
(Пурлаксене)
Илтетри, Ырсем сире мĕн калат?!
(Паусă)
Илтейместĕр пуле çав...
Пĕр мана çеç сӳйласа илђĕ Пихампар
Итлĕр мана...
Епĕ сирĕн пуçлăхар... Ман сассăм—Пихампар сасси.
Ман ђĕлхепе Ырсем калаçат...
Ан тивĕр хуçан мулне.
Ђухапни пуйанăн пурлăхне ан хапсăнтăр, пуйан ђухăннине пулăштăр—тенĕ Пихампар.

Ђухăн çер çинђе пађар пуранаť,
Анђах ун вырăнне ăна леш тенђере савап пулĕ...

(Самахĕсене хуçи калаcа пĕтереймере... Стсенă хыçĕнђи сасă кансĕрлерĕ).

Стсенă хыçĕнђи сасă çывăхарнăçем çывăхараť... Акă самахĕсем те палăра пуçларĕç... Уçă сасăллă Пукађђов паттăрĕ кăшкăраť:

— Тăвансем! Ђухăнсем!

Савăнăр... Ирĕклĕх çитрĕ...

Ђуралăх пĕтрĕ...

Çак сăмахсене илтсен, пурлаксем ђĕркуççи çинђен тăраççĕ, пĕр-перпине калаçа пуçларĕç. Хуçи те хăлхине ђăнк тăратрĕ: вăл та итлет... Пукађђов паттăрĕ кăшкăрса стсенă çине кĕрет. (Уйра лартнă ђух Пукађђов çынни йулан-утпа кĕмелле). Вăл стсенă çине кĕрет те 2-мĕш плошђаткăн пуçми çине хăпарса, хĕвĕнђен хут (приккас) кăларса вулама тытанат. Вуласса ниt лайăхах вулаймаст... Сăмахĕсем ђăвашларах тухаççĕ, çапах та ытлашши тытăнса тăмаст... Тен, вăл ку приккаса темиçе хут та вулана пулĕ...

ПУКАЂЂОВ ÇЫННИ (вулат): «Отныне я Вас жалую землями, водами, лесами, рыбными ловлями, жилищами, покосами и морями, хлебом... верою и законом вашим, посевом, телом, пропитанием, рубашками, жалованьем, свинцом, порохом, провиантом... Словом всем тем, что вы желаете во всю жизнь вашу...

Доброжелатель тысячею великой и высокой, един великой император государь Петр Феодорович третий руку приложил»...

(Паусă)

1-МĔШ—Мĕн çинђен вуларĕ вăл?

2-МĔШ—Ех, çак выраcла пĕлменни!

ÇАМРАК ПУРЛАК—Еп ăнлантăм... Тăвансем, еп ăнлантăм. (3-мĕш плошђаткăн пуçми çине хăпарса) Итлĕр!.. Çĕрсем... Вăрмансем... Çарансем... Пурте хура халăха пулмалла...

3-МĔШ—Тырă çинђен мĕн те пулин калани унта?

ÇАМРАК ПУРЛАК—Калана... Тырă та пирепнех пулмалла. Çапла патша приккасĕ.

ХУÇА—Суяť вăл! Патша приккасĕ мар вăл... Вăра-хурах Пукађђов çырнă çав хута...

ÇАМРАК ПУРЛАК.—Пукађђов-и. Петр Хветаравиђ-и пирĕ пурĕ ĕр. Пирĕншĕн патши ыра пултар...

ХУÇА—Палкав пуçлатăн им? Асту, Савантей! Сыхлан киреметрен, ĕрçурисем, хĕртсуртсем...

ПУКАЂЂОВ ÇЫННИ—Салатар хуçа пурлăхне! Тытса илер тырĕне! Пурте хура халаха! Ђухăнсем! пурте пирĕнпе, пурте пирĕн ыççăн... (Стсенă çинђен тухса каяť).

Стсена хыçĕнђе каллех упан сасси янăраť. «Ђăвашсем Ђухăнсем, савăнăр... Ирĕклĕх çитрĕ... Ђуралăх пĕтрĕ... Пирĕн хыççăн

**Пурте пирĕн хыççăн»...** Пурлаксем пурте ун хыççăн стсенă çинђен тухса кайрĕç.

ХУÇА—(Вырăнĕнђен ђупса анса, стсенă çинђе ђупкаласа çӳрее, нимĕн тума пĕлмесĕр)—Ăçта кайатăр? Кам хыççăн кайатăр? —Улталат вăл сире. Ђарăнăр... ђарăнăр!.. (Кăшкăрса хăйĕн вырăнне (3-мĕш плошђаткă çине) улăхса пуçне аллисемпе ђăмăртаса илсе, ахлатса, шăлне шăтăртаттарса ларат).

Стсенă хыçĕнђе мусăк (мусăк пулмасан—савăнăçлă йурă), халăх шавлани, кăшкăрни илтĕнет. Кăшкăрашнă хушăра çак сăмахсем илтĕнеççĕ:

**«Пĕтĕм тырра кайалла илес!** (Хуçа пуçне çĕклесе пĕр вырăнта «шăнсах ларђĕ). **«Çарансене халех çулас...» Анисене валеçес... Çуртне çунтарас... Выђăхсене пусас...»** Çĕмĕрни, йапаласем ӳкни илтĕнет...

## 5-МĔШ ЕППИСОТ.

Стсенă çине çамрăк пурлак ђупса тухат. Вăл тӳрех хуçан миххине çавăрса илет те, стсенă çинђен кайма тытăнат, хуçи ăна

— Ес мĕн тăватăн. Еп сапа...

Ан тив çын мулне!..

тет те халатне хывса пăрахса, çамрăк пурлака хăваласа çитсе, тикăр пек пăвса илет. Пурлакăн миххи çĕре ӳкет... Хуçапа пурлак тӳпелешме тытăнаççĕ. Нумайђен тӳпелешеççĕ. Урнă кашкăрсем пек пĕр-пĕрне ӳкерме тытăнаççĕ. Ăна хуçи пурлака хай айне турĕ... Пырĕнђен аллисемпе пăвса илсе ђăмăрта пуçларĕ... Ак, ак пурлака вĕлеретех темелле... Анђах пурлак хуçа айĕнђен сиксе тухрĕ те, хуçипе хăйне çавăрса илђĕ. Каллех тӳпелешме тытăнђĕç. Хуçи пурлак аллинђен вĕçерĕнсе, 1-мĕш плошђаткă çине хăпарса кайрĕ, анђах пурлак ăна хăваласа çитсе каллех ăна çавăрса илђĕ. Çӳлте нумайах кĕрешӳ пулмарĕ. Пурлак хуçине çавăрса çапрĕ те пăвма тытăнђĕ... Пăвсан, пăвсан... хуçи вилђĕ...

Стсенă çине пурлаксем хавасланса тухрĕç.... Çамрăк пурлак хуçине пăрахса, 3-мĕш плошђаткă çине ђупса пырат:

— Пурте пирĕн

тет те, михĕсене пурлаксене пама тытăнат.

Пурлаксем михĕсене йатса стсенă çинђен кайма пуçларĕç çеç, анђах ђан çапса йаđĕ... Пĕрремĕш плошђаткă çинђе малтан хуçа тăнă вырăнта, пуп тара парат. Ун сассине илтсессĕн пурлаксем каллех ђаранђĕç.

ПУП—Всевышний бог! Святители угодники... Архангелы, ангелы! Внемлите мольбу мою... Тебя молю, всевышний и всемогущий! Узри своим вездесущим оком, яко сбились со стези господней люди земные... Услышь мольбу раба своего, иерея... Внемли, народ! Бог меня призвал, чтоб поставить вас на путь истинный... Внемлите глас мой... Я ваш отец духовный... Мой глас—глас божий...

Пурлаксем ăнлансах пĕтереймерĕç пулмалла славенла-вырăсла

палкакан пупа. Пĕрерĕн-пĕрерĕн пурте стсенă ҫинҫен миххисене йатса шăврĕҫ...

ПУП ҫаплах палкат:

— Да не посягнет неимущий на добро имущего, а имущий да поможет неимущему... Так учил спаситель...

Пуп айалалла пăхрĕ те, стсенă ҫинҫе никам та ҫуккине кура ҫаранҫе. Малтан сулахайалла, унтан сылтăмалла, йулашкинҫен— ҫĕркуҫлапса ларса, тайалсах пăхрĕ, анҫах никам ҫуккине кура, сассăнах сывласа, сăхсăхса илҫĕ...

Стсенă тĕттĕмленҫĕ...

Ҫап ҫапса йаҫĕ... Унтан вак ҫанĕсемпе вăтаммисем тĕнкĕлтеттерме пуҫларĕҫ...

## 6-мĕш ЕППИСОТ.

Стсенăн сулахай йенҫе парттă хушшинҫе пĕҫĕк аҫасем лараҫҫĕ, вĕсем умĕнҫе—пуп. Вăл аллипе сулласа аҫасене йурлама вĕрентет.

— Ей, турă... етемўсене ҫăл... хăвăн халăхна ырă курмалла ту...

Ун сăмахне стсепăн тепĕр йенҫе тăракан миталлă хвелтхвепĕл, тепĕр ушкăн аҫасене вĕрентсе, ахăрса йаҫе;

— Ҫăн тĕне тытса тăракан...
Хăвăн аслă патшана Никколайа
Александрăвиҫа тăшмансене ҫĕнтерсе...

Ку пĕтерейтерĕ, 1-мĕш плошҫаткă ҫинҫе ерхерей курăнса кайрĕ... Вăл хĕресĕпе халăха пиллесе, пусмипе анса, хăй хыҫĕнҫен турăшсем, хоруквĕсем тытпă халăха стсенă ҫипе йертсе тухрĕ... Пурте ҫав йуррах ĕнĕрлесе стсенă ҫинҫен тухса кайрĕҫ.

Ҫан сасписем тĕкĕлтеттереҫҫĕ. Ҫаранна-ҫарăнманах шăнкăрав сасси илтĕнсе кайрĕ... Ҫан сасси пĕтрĕ, шăнкăрав сасси ҫывăхарнă ҫемĕн ҫывхарат.

Стсенă ҫине пĕр ҫын ҫупса тухрĕ те, ҫарăнса пăхса тăҫĕ те:

— Килеҫҫĕ. Ҫаратма килеҫҫĕ... тесе тухса кайрĕ.

Ун хыҫҫăн тепĕри тухса:

— Куланай пухма килеҫҫĕ пулĕ...

терĕ те тепĕр йеннелле тухса кайрĕ. Хĕрарăмсем, арҫынсем стсенă урлă ҫупа-ҫупа кайаҫҫĕ.

— Пĕтереҫҫĕ.
— Мĕн тăвас.
— Ҫаратаҫҫĕ.

Тенĕ сасăсем илтĕнеҫҫĕ ăҫта килҫе унта.

Шăнкăрав сасси ҫывхарҫе, тррр—тепĕ сасă илтĕнҫĕ, шăнкăрав сасси ҫарăнҫĕ. Стсенă урлă пĕр ҫамрăк аҫа:

— Старшина килҫе... Ўретник ҫитрĕ, тесе ҫупса кайрĕ.

Стсенă ҫине страшник тухрĕ, унтан ўретникпе старшина тухрĕҫ. (Уйра лартнă ҫух страшникĕ йуланутпа, лешсем тăрантаспах стсенă ҫине кĕреҫҫĕ).

Пĕрерĕн-пĕрерĕн стсенă ҫине ҫынсем тухаҫҫĕ.

УРЕТНИК (хытă сасăпа). Мĕншĕн халиҫҫен куланай пухман?

1-МĔШ ХРЕСҪЕН—Мĕнпе тӳлес? Пĕр пус укҫа та ҫук.

СТАРШИНА—Тырӑ сутнӑ укҫа ӑҫта?

1-МĔШ ХРЕСҪЕН—Тырӑ... Сутма мар. хамӑра ҫимелĕх те пулмарĕ.

СТАРШИНА—Старӑста! Куланай тӳлеменнисем нумай-и?

КУЛАК—(3-мĕш плошҫаткӑ ҫинҫен) Пĕтĕм йалĕпех темелле... Пĕр епĕ ҫеҫ... Тата пуйан Шакмакпа Ĕливан купсан татӑлнӑ...

УРЕТНИК—Сирĕн ҫинҫен мĕн калас! Есĕр патша укҫине тытса тӑракан ҫынсем мар ĕнтĕ. (Халӑха) Халех тӳлесе татнӑ пултӑр! Тӳлеменнисене лашисене, ĕнисене, тӳшексене туртса илĕр.

СТСЕНА хыҫĕнҫе хĕрарӑм сасси:

— Памастӑп! Вилсен те памастӑп!

Стсенӑ ҫине страшник ҫамрӑк хĕре сĕтĕрсе тухат. Хĕр пир ҫӑркине парасшӑн мар, страшникĕ илесшĕн. Хĕрĕ йалан:

— Памастӑп! Вилсен те памастӑп... тесе кӑшкӑрат.

1-МĔШ ХРЕСҪЕН—Ан тив ҫухӑн хĕре... Унӑн пирĕ те пĕр тӑрӑх ҫеҫ пулĕ...

Ӳретник хĕр патне сиксе пырат те, пирне ҫавӑрса илсе, хĕре ывӑтса йарат. Хĕрĕ ҫĕре шапӑлтатса ӳкет, пирĕ стсенӑ урлӑ тӑсӑлат. Ҫапах хĕрĕ пир вĕҫне аллинҫеп йамаст. Ӳретник пирне туртса илсе:

— Аппайккӑ!

тет те страшнике пирне тыттарса стсенӑ ҫинҫен тухса кайат. Старшинапа страшник та ун хыҫҫӑнах кайаҫҫĕ.

Хĕр йĕрет. Ун патне ыттисем пухӑна пуҫларĕҫ... Пер карҫӑк хĕре йапатма тытӑнат... Ватӑраххисем урайне ларҫҫĕ... Стсенӑ хыҫĕнҫе хĕрарӑм йурлани илтенет. Хĕр ахлатсах йĕрет.

Ҫутӑ ӳкет...

## 7-МĔШ ЕППИСОТ.

Ҫутӑ 3-мĕш плошҫаткӑ ҫине ӳкет. Кулак калаҫат, хĕр йĕрет, хĕрарӑм йурри илтĕнет...

КУЛАК:

Михетере мĕн ҫитмест?
Мĕнмĕн ҫук-ши ҫуртӑмра?
Кĕмĕл тенкĕ, тĕргнĕ пир
Сахал-ши мĕн ҫупҫере?
Тырӑ-пулӑ туллийех
Ишĕлмести кĕлетре?
Ҫу, сĕт-турӑх, сӑра-пыл
Тулли мар-и нӳхрепре?
Ҫӑн сӑмахӑн суйи ҫук!
Михетере мĕн ҫитмест..
Пĕтĕм йалта пĕр пуйан,
Ана никам ҫитеймест.
Унӑн ҫурҫĕ хула пек,
Кĕрсен витĕр тухма ҫук.
Карташ тулли йапала
Купаланса тӑраҫҫĕ.
Келет тулли тырӑсем
Тӑкӑнас пек тӑраҫҫĕ.
Урхамах пек лашисем
Утӑ-сĕлĕ ҫийеҫҫĕ.
Унӑн выҫӑх-ҫĕрлĕхсем
Пиҫĕке пек ҫуреҫҫĕ.
(Ҫутӑ сӳнет).

## 8-МĔШ ЕППИСОТ.

Çута хресҫем çине ӳкет. Хĕр йĕрсе ывăннă. Кăшт çеç ĕхлетсе ларат. Çав ушкăна пуп кĕрет. Çемçе сасăпа пуçлат.

ПУП—Аслă турă! Турă амăшĕ, Исус Христос! Лăплантар хавал халăхпа, хĕрхеп... Вĕсем çĕр çинҫе тарăхса пурăнаççĕ... Ун вырăнне çӳлти патшалăхунта ырă вырăн парсам вĕсене... (Халăха) Ан хуйхăрăр, тăвансем. Турă сире хăвăр çылăхăршăн çак нкеке йанă... Çĕр çинҫе асапланни çӳлти патшалăхра ырă курĕ... Çапла вĕрентнĕ Христос турă... Пырăр ман хыççăн... Кайăр пуйан патне тархаслама... Вăл ырă кăмăллă, вăл пулăшĕ сире...

Пуп 3-мĕш прошҫаткă патнелле утрĕ, ун хыççăн халăх та çавăнталлах сулăнҫĕ... Çутă пуп хыççăн шуса пырат. Площҫаткă çине улăхсан кулака та çутатрĕ. Пуп кулака пиллерĕ. Иккĕшне темскер шăппăн калаçа пуçларĕç.

ХАЛАХ тархаслама тытăнҫĕ:

— Ан пĕтер, ырă çыннăм!

— Çĕнĕ тырăҫҫен ыраш парсамҫҫе...

— Аҫасем выççăн лараççĕ.

— Хĕрхенсем...

— Тархаслатпăр... Пулăшсам...

КУЛАК—(Çемçе, хĕрхеннĕ сасăпа) Пулăшас! Меншĕн пулашас мар. Христос турă пулăшма хушнă. Мĕтри, сапа тăватă пăт кирлĕ темерĕн-и?—Парас... Уншăн мана тăватă апа тырă вырса парăн. Иванкка! Есĕ çаран çулса парăн... Есĕ вăрман касăн... есĕ... авăн çапма килĕн...

Пурте пуçĕсене тайса саланаççĕ. Кулак патне ӳретник пырат. Сăмахлаççĕ, кулкалаççĕ. Çутă сӳнет.

## 9-МĔШ ЕППИСОТ.

Трупа сасси çухăрса йаҫĕ. Çутă 2-мĕш площҫатка тăррине ӳкрĕ... Унта патша мĕлки ларат. Ун патне çурттук тăхăннă çын улахат... Аллинҫе кĕмĕлпе ылттăнпа илемлетнĕ ҫăвашла кĕнеке... Кĕнеке тăпсинҫе «ҫăвашла йеванкĕли» тенĕ сăмахсем палăраççĕ.

ВУЛАКАНЕ:

Ак сирен умарта
Емиӳ патша...
Ун умĕнҫе
Тепĕр çын
Паттăр çын...
Мухтавлă çын...
Анҫах унăн
Паттăрлăхне
Мухтавлăхĕ
Патшашăн çех,
Улпутшăн çех!
Ҫăваш ĕççыннин

Револютси хĕмне пуçарса,
Ирĕк çулĕнҫеп пăрса,
Çĕр çинҫи инкеке тўссе
Леш тĕнҫери сăвапла
Улталанма вĕрентнĕ.

Çутă сўнет.

## 10-МĔШ ЕППИСОТ.

Сасартăк хут-купăс сасси ахăрса йарать. 3-мĕш плошҫаткă çине çутă ўкет. Плошҫаткă çинҫе: кулак, пуп, ўретник, кулак арăмĕ. Ўретник ташлать. Пуп кулакпа калаçать. Арăмĕ ерех ĕçтерет.

ПУП—Вăрçă çинҫен илтмени? Нимĕçсем пирĕн çара хĕсĕрлеме тытăннă тени илтĕнет...

КУЛАК—Хĕсĕрлевҫĕр, пире мĕн. Пире салтака илмеççĕ... Пирĕншĕн ыттисем вилеççĕ... Пирĕншĕн вăрçă—тупăш. Йалта çын вахаллать... Салтак арăмĕсем çĕрĕсене акаймаççĕ, пире сутаççĕ. Тырă пумай, хакĕ ўсет...

Ех! Снай, кулҫай! (Ўретнике) Ваше плохороти! Вирлĕрех ташла! (Хут-купăс сасси вăйлăланать, ўретник хытăрах сикме тытăнать).

Çав вăхăтрах пĕр наҫар тумланнă çын çур михĕ тырă йăтса ҫырать. Кулак ăна курса:

— Мĕншĕн сахал илсе килтĕн?

Çурмалла акма хут туманҫҫĕ-и?

ҪУХАН—Тырри пулмарĕçке...

КУЛАК—Мана мĕн ĕç?.. Тўтерешкерен 10 пăт тухсан 5-мĕш мана́н...

ҪУХАН—Пурте 4 пăт çеç тухрĕ...

КУЛАК—Мана мĕн ĕç темерĕми? 5 пăт памалла, 5-ĕшнех тавай.

ПУП—Çын тыррине пытарнăшăн çылăх пулать.

Ҫухăн пуп çине ,çавăрăнса пăхрĕ те, нимĕн каламасăр ута наҫĕ кайалла. Кулак тискер кайăк пек сиксе апса, çынна хăваласа çитсе, çухинҫеп çавăрса илҫĕ те, кайалла сĕтĕре пуçларĕ.

КУЛАК—Калаçасшăн та мари? Илсе килетни 5 пăт? (Çавăрса илсе) Илсе килетни тетĕп?

ҪУХАН—Çук ман тырă! (Миххине хулпуççи çине ыткăнтарса утма тытăнҫĕ).

КУЛАК—(ҫарса, çĕре ўкерсе, хĕнеме тытăнҫĕ)

— Е, çуки? Вăрлама хапсăнатăни?

Ак сана... ак сана!!!

Çав вăхăтрах стсенă çине инвалит тухать, ун хыççăн тĕрлĕ йенҫен урăх çынсем тухаççĕ.

ИНВАЛИТ—Ан тив, Иван Петровиҫ. Çыппăн аҫисем выççăн лараççĕ. Намăса пĕл кăшт. Турăран хăрамастăн...

КУЛАК—(пўлсе) Мана турăпа хăратаймăр.

— Ав, пуп мĕн калать... Итлер... Христос...

ПУП—Христос турă...

ИНВАЛИТ—(пўлсе) Епĕр фронтра сирĕншĕн йун тăкатпăр, есĕр пирĕн арăмсене, аҫасене çаратса пурăнатăр...

КУЛАК—Е, ѐсĕ те патшана приçак панăскер те, вĕсем майлах-и? Акă сана! (Айаккалла ывăтса йарат. Инвалит йăвăç туйисемпе çĕре шăплатсах ӳкет. Халăх хăранипе кайалла ђакат).

Стсенă çине хăрах аллипе шурăпа ђĕркенĕ, мăйран кăкарнă алăллă салтак тухат. Вăл йеррипен кулак çинђен куçне илмесĕр, тӳрех ун патнелле утат. Ăна курсан кулак кăшт кайалла ђакат. Нумайђђен пĕр-пĕрне куçран пăхса тăрсан. Тăрсан-тăрсан салтак сывă аллипе кулака йанлаттарса йарат. Кулак хытă çапнипе ђикеленсех кайат.

КУЛАК—(ӳкет) Пăлхав! Револђутси!

Сисмен-кĕтмен çĕртенех пырат те унăн сураланнă аллинђен аллипе çавăрса илет. Пĕр самант пĕр-пĕрин çине пăхса тăраççĕ, унтан ӳретник салтак аллине кайалла туртат. Салтак ыратнипе ахлатса йарат. Ӳретник салтака çавăтса тухса кайат. Халăх пер ђĕнмесĕр вĕсем хыççăн пăхса ăсатса йарат.

Кулак ӳкнĕскер тăрат те, тумткрĕ çинђен тусанне силлет, унтан куштанланса пĕтĕм халăха йерипен пăхса тухат. Хăш-хăш тĕлте, ђарăнса та тарат. Нимĕн те ђĕнмест. Хăй çĕнтернине, хăй вăйлине уткăçĕпе палăртат. Халăха пăхса тухсан 3-мĕш плошђаткă çине улăхса кайат те, халăх йеннелле çаварăнса:

— Куртăр-и? тет.

— Куртăмăр!

тесе кăшкăрса йарах халăх хушшинђен тухнă рапођђи, кулак патнерех цырса:

РАПОЂЂИ—Ĕмĕр куратпăр! Тáрантартăр!

тет те, 2 плошђаткă тăррине улăхса кайса:

— Çитĕ!

тет те, патша мĕлкине сирпĕтсе йарат. Патша мĕлки стсенă çине, йăвăр ђул пек, ухлатса ӳкет. Стсена çинђе оркестăр савăнăçлă револђутси кĕвви каласа йарат. Хаваслапнă сасăсем илтĕнеççĕ.

Стсенă çинђи халăх та тухса кайат. Ӳретник кулакпа пуппа сывпуллашса стсенă çинђен тухса кайма тапанат, анђах ăна рапођђи персе вĕлерет.

Кулакпа пуп вырăнтап сикмесĕр тĕлĕнсе тăраççĕ.

Стсенă хыçĕнђе халăх савăнат. Револђутсии савăнăçлă йурриие йурласа, хĕрлĕ йалавсемпе стсенă çине тухаççĕ, анђах...

Патша вырăнђе таракан ес-ер вĕсене ђарат. Халăх 2-мĕш плошђаткăна йĕри-тавра хупăрлат.

ЕС-ЕР (йăвашшăн уçă сасăпа)—Тăвансем! Йулташсем! Мĕншĕн сирĕн лосăнксем улшăннă?

(Ђанах та плаккатсем çинђе тухнă халăхăн полђшевикла лосăнксем: «Пĕтĕм çĕр хура халăха», «Савăтсемпе хапрăксем рапођђисене», «Империалисăм вăрçине краштăн вăрçи тумалла», т. ыт. те).

ЕС-ЕР—Епĕр, сотсиалис револђутсионерсем, сире кун пек йапалана вĕрентмен... Мĕне пĕлтерет—улпутсенђен çĕрсене, кăпиталиссенђен хапрăк-савăтсене туртса илесси?

РАПОЂЂИ—Ђан сăмах, ку сирĕн лосункăрсем мар,—пирĕн!

ЕС-ЕР—Пољшевиксен йеннелле сулăнма пуçланă есĕр. Пĕлетри-камсем вĕсем пољшевиксем?Вĕсем нимĕç шпионĕсем!

РАПОЂЂИ—Суйат...

ЕС-ЕР—Ленин пирен тăшман шпионĕ...

РАПОЂЂИ—Суйат! Ленин пирĕн! Рапоћћнсемпе ђухăн-вăтам хресђенсен тусĕ... Унăн парттиĕ, пољшевиксен парттиĕ çеç ђăн ирĕк парĕ пире...

ЕС-ЕР—Ан итлер пољшевика! Мĕн пур ĕçе уђретиттĕлнăй сопрани тăват.

РАПОЂЂИ—Хаçан пулат уђретилккă?

ЕС-ЕР—Малтан вăрçса Раççей тăшмана çĕнтермелле, унтан патшалăх ĕçне тытăнапар.

ХАЛАХ хушшинђе шавлама тытăнаççĕ:

— Çĕре улпутсенђен хăçан туртса илетĕр?

— Вăрçă хăçан пĕтет?

— Револютси пулнăранпа миçе уйăх иртрĕ, анђах пурăпăç улшанмаст...

— Вĕсем налан хресђене çĕр паратпăр тесе йĕкĕлтететђĕç, анђах халĕ кайалла тапа пуçларĕç!

РАПОЂЂИ—Йĕкĕлтетеççĕ çеç вĕсем! Вĕсем хыççăн кайсан епĕр ĕмĕр çутçанталăк курас çук. Патшана пĕтертĕмĕр, вĕсем влаçа хăйсен аллипе çаварса илђĕç. Патша вырăнне çĕр улпуђĕпе кăпи-талис тата вĕсен тарçисем, ессерсемпе меншевиксем, пирĕн ĕнсе çине ларђĕç. Халĕ пирĕн умра—пĕрлешсе ĕçлесси. Есĕр, хресђенсем, пролеттариатсар хăвăрăн ĕмĕрхи тăшманăрсене, улпутсемпе кулак-сене çĕнтерес çук. Пире те, пролеттариата, есĕр пулăшмасан хĕн кăпиталиссене сирпĕтме... Пĕрлешсен рапоћћисемпе хресђенсен вла-çĕ—Совет влаçĕ тăватпăр, йулташсем.

ХАЛАХ:

— Тăватпар!

— Пољшевик ђăн калат!

— Ес-ерсем суйаççĕ!

— Совет влаçĕ тăватпăр!

тесе «Интернатсионал» йурласа йарса, стсенă çиңђен тухса кайаћ.

ЕС-ЕР (хытă кăшкарса). Пирĕн, ђавашсен....—Епĕр ђăваш сот-сиалис-револютсионерĕсем....

Сăмахне каласа пĕтереймест, рапоћћи ана плошђаткă çинђен тĕртсе йарат.

Стсенă хыçĕнђе «Интернатсионал» кĕвви.

Стсенă çине сынсем ђупса тухса кулак миххисене туртма тытăнаççĕ.

КУЛАК—Хурах! Çаратрĕç! Пĕтерђĕç! Револютси!

ПУП—Та-а-а... Ку, савнă тусăм, револютсирен револютси... Кăна пољшевиксем сотсиалисамлă револютси, теççĕ.

КУЛАК—Çаратрĕç! Пулăшăр! (Халăха) Сире калатăп... Тархас-

шăн пулăшăр. Мĕн есĕр пурте ман çине пăхатăр? Йе савăнатăри? Йе ман мул сире те кирлĕ пултӗ-и?

ПУП—(ун çăварне хупса) Ан кăшкăр... Сава пулăшас текенсем кунта пулман пулĕ ĕнтĕ.

Çутă сӳнет.

ВУЛАКАНĔ—Анӗах Атăл
Текех пăханмар
Хайар Атăл çитрĕ тулса!..
Аçтăрханăн, Хусанăн, Самаран
Ашкăнас çук улпут та купса.
Аслă Атăл текех парăнмарĕ.
Хĕрлĕ Атăл,
Мухтавлăн йурла!
Аçтăрханăн,
Хусанăн,
Самарăн
Тек йăлмак сĕтĕрес çук,
Пурлак...

## 11-МĔШ ЕППИСОТ.

I-меш плошӗатка çинӗе урисене уеса пупа ӗан çапакан ларăççĕ. ларăççĕ.

ӖАН ÇАПАКАН—Ваше препотонне! Мĕншĕн есĕр Совет влаçне вăрçатăр? Вăл сире те ирĕк паӗĕ...

ПУП—Ӗăваш ерхерей-ĕ тума-и?

ӖАН ÇАПАКАН—Автокефалӗнăй ен р халĕ...

ПУП—Автокефалӗнăйне автокефалӗнăй та анӗах усси сахал... Совет шалу тӳлемест... Халăх та парасшăнах мар...

Атасене шыва кĕртме пăрахрĕç, венӗет тăвас вырăнне САКС-а кайаççĕ...

ӖАН ÇАПАКАН—Йаӗесене те темĕскерле хура пуçларĕç: Серте, Ӗĕкеç, Канаш, Енкĕлс....

ПУП—Шыва кӳртӗĕр... Йат хурассишĕн туртанкаласа тăмăпăр... Трактăр йатлă та хурăпăр... Çапах та улăштарасси темĕскерех марĕçке. (Паусă). Хăшĕ тата аӗине шыва кĕртет те, укçине тӳлеспен мар... (Паусă). Ну, Михеле... Ӗап çапса пăх... Кам та пулин ӗиркеве килет-ши?...

Михеле йерипен кайаť. Ӗан çапин илтевет. Çутă сӳнет.

## 12-МĔШ ЕППИСОТ.

Ӗан çапаť. Çута 3-мĕш плошӗатка çине ӳкет. Унта кулак ларат. Шухăша кайнă. Арăмĕ кĕрет.

АРĂМĔ—Мĕншĕн ӗиркĕве каймастан?

КУЛАК—Ӗан çапатим? Аха... Ну, мĕнле?

— Ӗăпта илсе килӗĕç-и?

АРĂМĔ—Кĕтсех тăр. Пурте Кустрома леççсе...

КУЛАК—Ех, çак Кустпромсем. Наркомсем...
— Рик, ЦИК... Ух. КПУ...у-у-у...
Çирĕç вĕсем ман пуçа! (сăхсăхса) Ей, турă ывăлĕ Иисус Христос... Вал та пулăшаймн пулђĕ.
Çутă сӳнет. Ђан çапма ђарăнат.

## 13-МĔШ ЕППИСОТ.

Стсенă хыçĕнђе савăнăçлă кĕвĕ илтĕнет. Çутă стсенă варринђе ларакан хресђенсем çине ӳкет. Хăшĕ ђĕркуçленсе ларнă, хăшĕ тăсăлса выртнă... Хăшĕ ђĕлĕм мăкăрлантарса, калаçаççĕ.
1-МĔШ—Краштăн вăрçи пĕтрĕ... Колђаксене-мĕнсене çĕнтертĕмĕр...
2-МĔШ—Çĕр пур... Сухалама плукăпа сухалатпăр...
3-МĔШ—Ăçта килђĕ унта плук... Хаçатсем, шурналсем...
4-МĔШ—Халĕ çамрăккисем мар, ваттисем те хаçат вулама вĕренеççĕ.
5-МĔШ—Тырă нађар пулат... Çĕр сахал.
2-МĔШ—Çĕрĕ сахалах та мар та вăл... Виçĕ пайĕнђен пĕр пайĕ çулсереп хура пусăра выртат.
3-МĔШ—Асаттесем мĕнле ĕçленĕ çавăн пекех халĕ те ĕçлетпĕр çав...
4-МĔШ—Акроном калапине итлеместпĕр.
2-МĔШ—Акроном калапине итлесен те пурĕ пĕр ĕç нумайах улшăнас çук. Апасем икшер-виçшер хăлаç сарлакăш. Ана хушши йăрап... Курăк... Çук, ĕçе урăх майлă çавăрса йамалла та...
1-МĔШ—Çавăрса йамалли йамалла та, анђах мĕнле майлă.
4-МĔШ—Каплах пурăнма йурамаст.
Çута сӳнет.

## 14-МĔШ ЕППИСОТ.

Çутă стсенă çине тĕпе ӳкет. Унта сĕтел хушшинђе ларакапĕ, стсенă çумне тайăнса тăракапĕ те, çĕрте ларакапĕ те курапат. Претçетаттĕл вырăнђе шљомлă çын ларат. Пĕри ларсан-ларсан ениксе тăрат те, хыттăн калаçма тытăпат. Ку, йалсовет претçетаттĕлĕ.

ПРЕТÇЕТ.—Акă, есĕ керой. Краштăн вăрçин паттăрĕ! Колђака çентертĕн, Перекопа илтĕн.... Пире парттийе хутшăнтартăн... Совет влаçĕ мĕнле, полђшевиксен парттийĕ мĕншĕн тăрăшнине пĕлтертĕн... (Паусă) Анђах, йалти пурăнăç темĕншĕн питех малалла каймаст. Çулсерен çул йалта каллех кулаксем çураласçĕ... Епĕр, ђухăнсем ђухăнах... Ватам хресђенсем те аран-аран тытăнкаласа пыраççĕ...
ШЛЂОМЛИ—Ђан сăмах, йулташ претçетаттĕл. Капла пурăнма йурамаст. Улăштармаллах пурнăça!

ПРЕТÇЕТ.—Мĕнле улăштармалла? Çавна каласа пар есĕ... Улăштармалли паллă...
ШЛЂОМЛИ—Колхос урлă çех, ĕçхресђепĕ çуклăхран тухĕ...

Колхос çех йала сотсиалисăм картишне кĕртет. Çапла калат пирĕн партти!

Çутă сÿнет.

## 15-МĔШ ЕППИСОТ.

Çутă стсепăн сылтăм йенне ÿкет. Кĕтесре кулакпа пуп тăраççĕ.

КУЛАК—Илтетне, мĕн калаçаççĕ поļшевиксем?

ПУП—Мĕн... Колхос тăвасси çинçеп пулас...

КУЛАК—Пурĕ-пĕр вăл ĕç пулмаст. Хресçен хăй йăвине йуратарах парат.

ПУП—Йăвасăррисем колхоса çăмăртапĕç, акă мĕн. Унтан, вĕсем хыççăн, йăваллисем, вăтам хресçенсем те çавăнталлах сулăнĕç.

КУЛАК—Ан калаç кирлĕ мара. Ан хăрат...

ПУП—Вăтам хресçенсем хыççăн епĕр те колхоса...

КУЛАК—Ан палка... Ĕмĕрне те колхоса кĕрес çук... Кĕрсен те епĕ...

ПУП—Кайăттăн та, вĕсем илмĕç...

КУЛАК—Пулмаст колхос. Тума памастпăр...

ПУП—Пулĕ те... Поļшевиксем вĕсем темĕн те тăвĕç...

Çутă сÿнет. Стсепă хыçĕнçе колхосникселлĕ йурлани илтĕнет.

## 16-МĔШ ЕППИСОТ.

Колхоçнĕксем йурлани çывхарат. Стсепă çине пĕр хресçен, унтан тепĕри, вĕсем çумне тата хутшăнаççĕ.

1-МĔШ—Е... Каçака Михели те колхоса çырăннă пулас...

ВАС.ВАС.—Хăй çырăнасшăнах марççĕ пулас та вăл, ывăлĕ, комсомолĕс. Есĕр кирек мĕн тăвăр, епĕ çырăнатăп терĕ тет те... Ывăлĕ хыççăн вăл та çырăнçĕ пулас.

1 ХРЕСÇЕН—Комсомолĕссем колхосшăн тăрăшаççĕ ĕнтĕ.

ВАС.ВАС.—Комсомолĕссем пултараççĕ вĕсем... Ман акă пионер пекки çеç те... Çапах, вырăн çинçеп сиксе тăнă-тăманах: «Колхоса çырăнтăни, атте? Мĕншĕн çырăнмастăн? Ватала пуçларăним? Тăнна çухатрăним?» тет, шелмă.

1 ХРЕСÇЕН—Çăнах та, мĕншĕн халиççен çырăнман çак есĕ, Ваççил Ваççилç?

ВАС.ВАС.—Епĕ çырăнса та пăхнăççĕ те...

Колхос претçетаттĕлĕ папка тытса кĕрет.

ПРЕТÇЕТ.—Ваççил Ваççилç, есĕ мĕн лашуна колхосран киле кайалла çавăтса кайнă темеççĕ-и?

ВАС. ВАС.—Епĕ мĕн... Арăм ухмахланат!.. (Шăппăн) Есĕ, йулташ претçетаттĕл, çын умĕнçе ан намăслантар-ха мана... Ман арăм, ху пĕлетĕп, пуйан килтеп... Вăл аппĕсем йеннелле туртасшăн мана... Еп... еп...

АРАМĔ—(тухса). Есĕ мĕн çăварна карса тăратăн?!.

ВАС. ВАС.—Акă мĕн, карçăк. Упăшкуна çын умĕнçе ан намăслантарпă пултăр! Мĕншĕн лашана колхосран кайалла çавăтса пытăн? Халех кайалла колхоса леççе пар! Илтетни? Ну...

ПРЕТÇЕТ.—Ес, Ваççил Ваççилҫ, пит ан вăрç-ха арăмна. Епер прĕксĕр колхоса çырмастпăр...

ВАС. ВАС.—Е, арăм хыççăн кайсан... Пирĕн вăтам хресҫенсем çулĕ кулаксен çулĕпе йупашар пымасť... (арăмне) Ну... (кайаççĕ).

2-МĔШ ХРЕСҪ.—(кĕрсе). Ваççил Ваççилҫ та колхоса çырăннă темести?

ПРЕТÇЕТ.—Пурин те çыранмалла... Темĕскер кĕтсе тăратăр тата?..

2-МĔШ ХРЕСҪ.—Çырăнасса çыранăпăр та-ха...

ПРЕТÇЕТ.—(кайса). Ваçук! Есĕр вăрлăха хăрмалиппа тасатманнине тийемеп-и?

САСА—Çук... Тасатнисене çеç тийерĕмĕр.

2-МĔШ ХРЕСҪ.—Ҫăнах та... Пирĕн те çырăнмалла пулат пулĕ çав колхоса... Совет влаçĕ хресҫенсене усă кӳрес тесе шухăшласа кăларнă пулĕ ĕнтĕ ана...

(Пуçне хыçса) Арăм кĕресшĕн мар... Хам пулсан...

Кулак кĕрет.

КУЛАК—Есĕр мĕншĕн колхосра мар, тăвансем?

1-МĔШ—Елкĕрĕпĕр-ха... Колхосĕ майлантăр, унтан епĕр те çырăнăпăр.

КУЛАК—Майлашас çук вал еç.

1-МĔШ—Йе майлансан?

КУЛАК—Майлашсан та, есĕр хăварăн пурлăх пур çĕрте, çав кĕтӳçĕсем ушкăнне хутшăнмăр ĕнте...

ВУЛАКАНЕ:

> Кулак, харампыр.
> Йĕкĕлте,
> Мăшкăла.
> Кĕвĕç шапа пек,
> Хăт шăтса çурăл та—
> Колхоссем
> Шит те
> Халҫ ҫакмеç калла.
> Пур ҫухăн, вăтам
> Пĕрлешӳллĕ çулта.

Сута сӳнет.

## 17-МĔШ ЕППИСОТ.

Стсена çинҫе колхос йурри пит вăйла илтĕнет. Стсена çинҫе кулак пĕҫҫен пăхса тăрат.

КУЛАК—Пĕтĕм йал тепĕ пек колхоса çырăннă...

Стсенă çине пĕр хĕрарăм тухат. Кулак унпа калаçма пуçлат.

КУЛАК—Есĕ мĕн пеҫҫен тăрса йулнă? Йе колхоса кĕресшĕн мари? Тен пĕтет пуле колхос?

АРĂМ—Мĕншĕн пĕттĕр? Савпашкал йапала пĕтоти?

КУЛАК—Мĕншĕн çыранмаран тата?

АРАМ—Еп претçетаттĕлрен кĕркуннеђђен кĕтме ыйтрăм. Керкунне. упăшка хĕрлĕ-çартан таврансан иксĕмĕр те харăс кĕрес тетпĕр. (канат).

КУЛАК—Вăл та унталлах: Кĕркунне йалта пĕр колхоçнĕк марри те йулмаст пуле.

ПУП—(тухса) Йепле, епер пур...

КУЛАК—Атăр, епĕр те çырăнар.

ПУП—Çырăнмастăп теместĕнђђĕ-и?

КУЛАК—Ап палка ес, вăрăм çўç!

Çутă сўнет.

## 18-МĔШ ЕППИСОТ.

Претçетаттĕл сĕтел хушшинђе çыркаласа ларат. Прикатир кĕрет.

ПРЕТÇЕТ.—Ĕçе тухманнисене штрафламалла. Ĕçлемеп çын çăкăр çиме тивĕçлĕ мар!

ПРИКАТИР—Пур те тухна. Леш ђан çапакан Михеле çеç тухман.

КУЛАК—(кĕрсе)—Йулташ претçетаттĕл! Епĕр пĕр сăмахпа килпеђђе те...

ПРЕТÇЕТ.—Мен кирлĕ?

КУЛАК—Колхоса çырăнма май çук-ши тетпĕр те....

ПРЕТÇЕТ.—Кулаксене колхоса илместпĕр!

ВУЛАКАНĔ:

> Тĕрĕс, претçетаттĕл.
>         Ан варала.
>         Çак
>         Хайенђен хăй шаршланнăскерне
> Колхос анине.
>     Хăвала айаккалла
> Ан тив.
>     Пĕлĕтрен кĕттĕр
>         Манна кĕрпе.
> Нумай тăрантарђĕç
>         Мул хуçисем
>         Пире çăтмахпа.
> Хаљ ху астивсе пăх.
>             Кур ху çисе
>         Мĕн тути калат...

Çута сўнет.

## 19-МĔШ ЕППИСОТ.

3-мĕш плошђаткă çине çутă ўкет. Унта пушша кулак ларaççĕ.

КУЛАК—Претçетаттĕлне вĕлерес... Çав колхоса илесшĕн мар пире

ПУП—Та-а-а. Тĕрĕс. Шал йенђен колхоса çĕмĕрме тытăнмалла. Тул йенђен ватасси иртрĕ ĕнтĕ.

КУЛАК—Çав комуниссен çекреттарне леш тĕнђене ăсатмалла та.

ПУП—Пӗтерес йенне кайсан... Халӗ вӑтам хресчене те...

КУЛАК—Вӗсем те комунисла палкама пуçларӗç... Е-ех. Вӗсене вӗлерсе пӗтерейменӗн... Халӗ колхос ӗçне такӑнтарма урӑх мӗн шырамалла...

ПУП—Мӗнле майпа лайӑхрах-ши?

КУЛАК—Есӗ мӗн чиркӳре каласа ӑнлантармастӑн халӑха?!

ПУП—Ей, мӗн кирлӗ мара палкатӑн... Чиркӗве ват супписем çеç çӳреççӗ. Вӗсене ӑнлантарнинче мӗн усси пур.

КУЛАК—Ваттисене ӑнлантарни те пӑсмаст. Колхос халӑха пӗтерет, те. Колхос çинчен йеванкелире каламан те... Ваттисен хӑлхине кӗрсен вӗсем çамрӑккисене каласа пара́ççӗ... Тата йал тӑрӑх çӳрекелес пулат.

ПУП—Йепле йал тӑрах? Урамра-и? Ой, турӑ сыхлатӑр... Комсомолӗссем тӗл пулсан...

КУЛАК—Ех, вӑрӑм çӳç... Ӗçме тесен, йе хӗрарӑмсем патне чупатӑн... Çаванпа вӗсене пӗр çӗре пухкаласа, пӗререн-пӗререн хамӑр йенне çавӑрас пулат...

ПУП—Чу... чу... Астӑватни, Çырмакасси пупне мӗнле турӗç çавнашкал пухнӑ çыннисем. Ана хӑтланнине сиссенех тата Шупашкара хӑнана лартса кайӗç...

КУЛАК—Ех, сиртен пулмаст пулӗ... Халӑх есӗр палканине питех ӗненмест... Хамӑнах тытӑнас пулӗ çак ӗçе...

Çутӑ сӳнет.

## 20-МӖШ ЕППИСОТ.

Çав вырӑнтах кулак сӗтел хушшинче кӗнеке вуласа ларат... Йери тавра çӗктантсем.

КУЛАК—(вулат). Инсус христос хӑйӗн вӗрепекепӗсене чӗнсе калана. Пуйанни чухӑннине пулӑштӑр... Чухӑнни пуйанӑн мулне ан хапсӑнтӑр... Турӑ умӗнче пуйанни те, чухӑнни те пӗр танах... (итлекенсене). Ака мӗн каланӑ пирӗн турӑ... Халӗ йал çыннине вичӗ пайа уйӑрчӗç... Пире кулак йатлӑ пачӗç... Çын вырӑнне те шутламаççӗ... Астӑватӑр-и ӗлӗкхи пурнӑçа? Çимелли пулмасан ман пата килеттӗр... Епӗ çӗнӗ тырӑччен йалан кивçен параттӑмччӗ.

1 СЕКТАНТ—(хӑй ӑшӗнче). Авӑн çапнӑшӑн-и?

КУЛАК—Йал лӑпкӑ пурӑначчӗ... Пуйансемпе чухӑнсем пӗрлӗринне килӗштерсе пурӑначчӗç... Халӗ... Халӗ пире кулак йат пачӗç те йал пуххине те йамаççӗ... Колхос турӗç. Йеванкӗлире колхос çинчен каламан... Вӑл йапала турӑ саккуппе хирӗç туни пулат вара... Мӗскӗн колхоçнӗксем, сире комуниссем тамӑка ӑсатастӑп. Кӗл тӑвар пулӗ çав телейсӗрсемпӗн...

(Çутӑ çутаççӗ... чӗркуçленсе лараççӗ).

КУЛАК—(Пуçлат). «Ей, турӑ амӑшӗ» т. ыт.

(Кулак лайӑх татӑклӑ каласа йурлат, ыттисем ӗнорлесе çеç тӑраççӗ).

ПРЕТÇЕТ.—(Плошчаткӑ патне пырса пӗр колхоçнӗке).

— Есӗ те кунта мар-и? Активискӑ тетӗн хӑна. Пухува пымастӑн, кӗл тума çӳретӗн...

АКТИВИС—Епĕ... епĕ...
ПРЕТÇЕТ.—(Тепĕрне). Есĕ тата мĕн тума килнĕ?
ТЕПЕРИ—Ӳурра кĕл тăватпăр...
ПРЕТÇЕТ.—Турра кĕл тума ђармастпăр. анђах урăххи пулсан... асту. (кулака). Асту-ха, Михетер. Мĕншĕн есĕ тырă леçместĕн. Ырап 12 сехете леçмесен, пӳрт-çуртна торки туса сутма тивет (кайат).
КӲЛАК—(çемçен). Куртăр-и, тăвансем?.. Кавăрлене 7 пăт тӳлемелле тунă, мана 70 пăт...
АКТИВИС—Мĕн кирлĕ мара калаçатăн вара, Иван Петровђă. Манăн пурĕ те тырă 70 пăт çеç пулђĕ, санăн вон миçе капан ларат.
ТЕПЕРИ—Вăрттăн тара илсе акрĕ вăл...
АКТИВИС—Мĕн кутăплапса тăратăп, Иван Петровђă. Совет хушсан тӳлес пулат ĕнтĕ... Совет вăл çын пурлăхне кура тӳлеттерет... Есĕ пĕр пăт та тӳлемен пулас-ха?
КУЛАК—(Кăшкăрса). Тӳлемен... Тӳлеместĕп те! Совет влаçĕ. Кам пухнă ман пурлăха? Хам! Памастăп... Çунтарса йарап та, Совета памастăп!

ВУЛАКАНĔ:

Куратри?
Мĕн калаçат харам пыр!
Çын тарĕпе пухнă тырра
Çунтарат те,
Памаст Совета...
Анђах иртрĕç...
Санăн ђаплă кунусем...
Ирĕкпе памастăн пулсан
Ирĕксĕр те вăтанмăпăр илме!
Çапла мари, йулташсем?!.

Çутă сӳнет.

## 21-МĔШ ЕППИСОТ.

Стсенă çап-çутă. Стсенă хыçĕнђе йурлани, кармуђ калапи илтенет. Стсена урлă «1-мĕш май сывă пултăр» тенĕ плаккат çапăнса тăрат. Йурлани кăшт лăплапсан ђан тĕнкĕлтеттерни илтĕнет. Ваççил Ваççилђ çĕнĕ кĕпепе стсенă çине тухат. Ана хирĕç пĕр колхоçнĕтсă хăмăт йатса тухат.

КОЛХОÇНЕТСА—Ваççил Ваççилђ, леш турă лашап хăмăтне ăçта хунă.
ВАС. ВАС.—Христос ђĕрĕлнĕ.
КОЛХОÇНЕТСА—Ку, кулак хăмăђĕ, турă лашапа йурамаст... Есĕ ĕнер колхос картишĕнђен илсе кайманђђĕ-и вара?
ВАС. ВАС.—Христос ђĕрĕлнĕ.
ПРЕТÇЕТ.—(кĕрсе). Ваççил Ваççилђ! Леш, миттĕнк пĕтсен çуракине тухатпăр... Ес апатланкала та колхос картине пыр. Трактар килеймерĕ. Леш сăртри анана лашасемпех сухаласа пăрахас пулĕ...

КОЛХОҪНЕТСА—Калӑрам кепере йусамалла тесе... Итлемереҫ... Кепер пирки МТС-ран трактӑр килеймест.

ПРЕТҪЕТ.—Асту, Ваҫҫил Ваҫҫилҫ... ап ман. (Колхоснетсӑна калаҫҫӗ, Ваҫҫил Ваҫҫилҫ йулаҫ, пӗр карҫӑк кӗрет).

ВАС. ВАС.—(карҫӑка). Христос ҫӗрӗлнӗ!

КАРҪАК—Е?

ВАС. ВАС.—Христос ҫерӗлнӗ, тетӗп... ват супнӑ.

КАРҪАК—Вара, вара... Саватран рапоҫҫисем май уйавлама пирӗн пала килеҫҫӗ тет... Мусӑкпа килеҫҫӗ тет. Е? Вара, ҫавсене кайса итлес тетӗп. Е? (кайат, унтан ҫаранса) Е? Вара. Куславкка саватӗнҫен. тет (кайат).

ВАС. ВАС. пумайҫҫен пӑхса тарат те, ҫӑтайманнине сурат, унтан пӗтет. Пупа кулак стсенӑн сылтам йенҫен тухаҫҫе. Плошҫатка ҫуменҫе ҫеҫ.

КУЛАК—Пӗтерҫӗҫ... Ҫирӗҫ... Киле туртса илҫӗҫ, хама йалтан хӑваласа кӑлараҫҫӗ.

ПУП—Манӑн та ӗҫсем хӗсенсе ситрӗҫ... Сӑмахран, пайан мӑнкун... Ҫирекре 7—8 ҫын ҫеҫ...

КУЛАК—Ҫук. Ман пурнас килет. Пурӑпатӑпах (пытанаҫҫӗ).

Стсена хыҫенҫе йурлани илтӗнет. Унтан стсена сине йурласа, хӗрлӗ йалавсемпе, халах тухат... Тухсан ҫарӑнаҫҫӗ. Кармуҫ таша кӗвви калат. Хӗрсем ташлаҫҫӗ... Хӗрсем ташлаеа пӗтерсен...

ВАС. ВАС.—Ех... Манкун тавасси пулмарӗ пулӗ... Ун выранне май уйавӗ тӑвас (ташша йарат).

Ташласа пӗтерсен халах йурласа саванат.

(Ку тӗлте миттӗнк тума та пулат. Мӗнле уйавра лартна ҫав телешне калаҫмалла. Йалта лартнӑ ҫух йалсовет претҫетаттӗле, комсомол ҫекреттарӗ, тата хӗрарӑм калаҫсан аван. Кусене акторсем мар—ҫан претҫетаттӗлпе ҫекреттар каламалла. Хӗрарӑм сӑмахне актриссӑ та калама пултарат. Миттӗнкне ташӑ пуҫланиҫҫен тумалла.

Халах саланан кулак тухаҫ.

КУЛАК—Мӗн тавас? Йепле пӗтерес ҫак Совет влаҫне? Йут патшалӑхри улпутсем вӑрҫӑпа килетпӗр тетҫӗҫ... Вӑрҫине пуҫлаймаҫҫе.

ВУЛАКАНЕ:

Авӑ кама кӗтет
Харампыр!
«Пӗр шит ҫӗр
Йутран
Кирлӗ мар,
Хамӑрӑнне те
Никама та
Пер пусам
памӑпӑр!»
Ҫапла калат пирӗн

Сталин
Çапла калаҭ пирĕн
Партти!

Çутă сÿнет.

## 22-МĔШ ЕППИСОТ.

Стсенă çине Ваççил Ваççилҫ тухаҭ, ăна хирĕç претçетаттĕл.

ПРЕТÇЕТ.—Есĕ мĕн, Вас. Вас. кунта çапкаланса çÿретĕн?

ВАС. ВАС.—Пайан уйав... 1-мĕш май уйавлатăп...

ПРЕТÇЕТ.—Апат тусан хире каймалла темерĕм-и?

ВАС. ВАС.—Мĕн васкамалла? Ыран кайăпăр.

ПРЕТÇЕТ.—Ырана хăварма йурамасҭ. Сăртри анана çĕр типиҫҫен акса хăварас...

ВАС. ВАС.—Вăл çаплипе çапла ĕнтĕ... Çĕр типиҫҫен акса хăварасах пулаҭ. Кайса апатланам еппин (каяҭ).

Претçетаттĕл çаврăнса кайма тапансанах, стсенă çине кулак тухаҭ те, пăшалпа перет. Претçетаттĕл ÿкет. Кулак ҫупса пырса унăн кăсйинҫен токкументсене туртса кăларса, хăй кăсйине ҫикет. Тарма тытăнаҭ. Пĕр йенне пыраҭ, çын тухаҭ, тепĕр йенне—татах çын, виççĕмĕш йенне—çын... Ниçта кайма пĕлмест... Унтан ăна хупăрласа илеççĕ те, çыхса, çавăтса каяççĕ.

ВУЛАКАНЕ:

Хайарлăх пĕтмеп-ха.
Нур класлă çапăçу!
Анҫах
Кама кам,
тейекен ыйтура
Çĕнтертĕмĕр
Епĕр!
Шăтас çук тек
пирĕн патшалăхра
Çак хыт-хура
Кулак!

Çутă сÿнет.

## 23-МĔШ ЕППИСОТ

Çута 1-мĕш плошҫаткă çине ÿкет. Унта Вас. Вас. пĕҫҫенех айаккалла пăхса тăраҭ.

ВАС ВАС—Кунтарах! Атăл хĕрнерех! Електритсă стантси латнерех. Кăшт леререх... во... во... Унта мар... во... во... çавăнта.... Ҫипертерех тыткалăр. Пиҫĕкисене ап ватăр.

ИНШЕНЕР—(Вас. Вас. патне пырса). Ну, мĕнле ĕçсем, Вас. Вас-ҫ?

ВАС. ВАС.—Ĕçсем йусанҫĕç. Колхосран çынсем килҫĕç. Приката ÿсĕнҫĕ. (Халăха) Сарай патнерех хурăр ҫомĕнта... во... Çавăнта...

ШОФФЕР (ҫупса кĕрсе). Йулташ иншенер! Машинисем Вăрмаккаю кĕперĕ патĕнҫе ҫарăнса ларҫĕç...

ИНШЕНЕР—Мӗншӗн апла?

ШОФФЕР—Вӑрман шывӗ кӗпере йухтарса кайнӑ.

ВАС. ВАС.—Ех, ҫав, Вӑрманкассин претҫетаттӗлӗ! Найан! Колхоҫнӗксене мопилисатсилеймен....

ИНШЕНЕР—Пӗр сехетрен ҭемӗнт кунта пулмалла (кайат).

ШОФФЕР—Мӗн тӑвас? Мӗн тӑвас?

ВАС. ВАС.—Ҭӑваш правиттӗлстви хушнипе вырӑна кӗртменнинҭен пулса тӑнӑ ӗнтӗ ҫак ӗҫ. Ҫулсерен ун ҫинҭеп ҫыраҫҫӗ, калаҫаҫҫӗ... Ҫулсене тӳрлетмелле, кӗперсене йусамалла теҫҫӗ. (Кӑшкӑрса) Антрей Иванҭҭӑ! Епӗ хамӑн прикатӑпа Вӑрманкасси кӗперне йусама кайатӑп... Йурат-и?

ИНШЕНЕР САССИ—Йурат!

ВАС. ВАС. — (Кӑшкӑрса). Ваҫка! Ваҫук! Куҫма! Пурте кунта, ман пата! Кӗреҫесем, пуртӑсем кирлӗ! Хӑвӑртрах, кӗпер йусама каймалла!

САСАСЕМ—Йурат! Халех! Ҫей минут!

Ӗҫлекенсем тимӗр кӗреҫесемпе, пуртӑсемпе кӗреҫҫӗ. Вӑл вӑхӑтра трупа кӑшкӑртса йарат.

ПЕРИ—Шапаш! Киле кайас...

ВАС. ВАС.—Кӗпере хӑҫҫан тӳрлетмелле?

ПЕРИ—Ыран.

ВАС. ВАС.—Ыран! Ҭемӗнт пайанах кирлӗ. Ҭемӗнтсӑр ӗҫ ҭарӑнса тӑма пултарат. Анлантӑн-и?

ПЕРИ—Анлантӑм.

ВАС. ВАС.—Тоттӑ. Ҫур сехетлӗх ҫеҫ ӗҫӗ те... Ырана хӑварма йурамаст.

ПЕРИ—Пыратӑпҫке... (кайаҫҫӗ).

ВУЛАКАНЕ:

Ҫӗршыв хуҫи—
  хамӑр.
Ӗҫ тухӑҫӗ
  хамӑрӑн.
Ӗҫ вӑл—
  ҭаплӑх,
    хисеплӗх,
      мухтавлӑх та паттӑрлӑх!

Ҫутӑ сӳнет.

## 24-МӖШ ЕППИСОТ.

Стсенӑ ҫине иккӗн кӗреҫҫӗ, иккӗш те хура, ҫаврака куҫлӑхпа. Пӗри—ес-ер, анҭах урӑх тумтирпе. Лайӑх, йут патшалӑхри пуршуйсем тумӗпе. Кӗрсенех стсенӑ варрипе ҭарӑнса тӑраҫҫӗ. Вӗсем ҫине ҫутӑ ӳкет. Тӑрсан-тӑрсан харӑс пӑрӑнаҫҫӗ те, ҫаврӑнса 1-мӗш плошҭаткӑ ҫине улӑхма тапӑнаҫҫӗ, анҭах ун ҫинҭе, Хӗрлӗ ҫарҫӑ пӑшалпа тӑрат. Вӗсене курсан:

— Ҭарӑнӑр! Ан килӗр!

тет. Унтан лешсем тепĕр йенне кайаççĕ, унта вĕсене хирĕç рапоҫҫи пăшалпа иртухса:

— Ҫаранăр! Ап çывхарăр!

тет. Вара каллех тепĕр йеннелле кайаççĕ, анҫах ăçта пынă унта çын: колхоçнĕк, комсомолккă, пионер. Пурте пăшалпа, пурте «ҫаранăр, ан çывхарăр!» «Халăх пурлăхĕ таса, ăна никам та тĕкĕнме пултараймаст!» Аптăранипе лешсем сĕтел хушшинҫе ларакан иншенер патне пыраççĕ, темскер вăрттăн калаçма тытăнаççĕ. Иншенер телехвон трупкине илет те, пĕр сăмах çеç калат. КЕПЕУ...

Лешсем çак сăмаха илтсессĕн куракансен йепле тарма тапăнаççĕ, анҫах куракансем те:

— Ап çывхарăр!

— Ҫаранăр!

теме тапăнаççĕ. Вĕсем нимĕн тума аптăраççĕ. Çав вăхăтра вĕсене пур йенҫен те пăшаллă çынсем хупăрласа илеççĕ. Çынсене курсан аллисене çӳлелле çĕклеççĕ. Хĕрлĕ çарçă вĕсене:

— Марш!

тет те, ăсатса йараççĕ. Çута сӳнет.

## 25-МĔШ ЕППИСОТ.

Стсенă пăҫ тĕттĕм. Стсенă хыçĕнҫе авто сасси илтĕнет. Çывăхарсан ҫаранат те, кăшкăртса йарат. Стсенă çине В. Вас. тухат.

(Уйра ларнă ҫух Вас. Вас. автомопил çине ларсах тухат).

ВАС. ВАС.—Арăм! Арăм! Ăçта ес?

АРĂМĔ—(Тухса)., Еп кунтахçке.

ВАС. ВАС—Ăçта çак пирĕн караш?

АРĂМĔ—(Кăтартса). Авă, леш, колхос картишĕ çумĕнҫе.

ВАС. ВАС.—(Пăркаласа). Мĕншĕн урамра тĕттĕм. Вĕреннĕ тĕттĕмре пуранма. 2-мĕш плошҫатка патне пырса рупиннипе аллипе çавăрат. (Стсенă çутăлса кайат). Ну, аҫа маппа машшинăпа клупа леçсе йарам... «Машшинă пулан, лар ман çумма» тет. Унта пайан Ҫăваш тĕп театтăрĕн кастролĕ.

АРĂМĔ—Епĕ апатланман та-ха...

ВАС. ВАС.—Клупра апат тăвăпăр. Унта килтинҫен авантарах ҫитереççĕ. (Тухса кайас умĕн курса ларакан халăха): Куртăр-и мĕн тăватпăр епĕр?!.

Уйра ларгна ҫух Вас. Вас. арăмне хăй çумне автомопил çине лартса, куракан халăх хушшипе тухса кайат. Куракансен варринче çитсен, куракансене:

— Куртăри мĕн тăватпăр епĕр?!!

тет те, машшинĕ кăшкăртса малалла кайат.

ВУЛАКАНĔ:

Куратпăр!

Ыран пĕвенес

Аслă Атăл

Çаплах тăвĕ

пирĕн çĕршыва!
Пайан Куславкка,
Шупашкар,
Çĕмĕрле.
Ыран—
Атăл китростантсийĕ...
Унтан—
Унăн шăлнĕсем,
хапрăксем,
савăтсем,
Електритсăлă ђукун çулĕсем...

Стсена хыçĕнђе йурлани илтĕнет. «Утарнĕксен йурри» йурлаççĕ (Оркестăр пулсан—оркестăрпа пĕрле).

ВУЛАКАНĔ:
Ех!
Мĕншĕн пурăнас мар?
Мĕншĕн тăрăшас мар?
Мĕншĕн савăнсах тытас мар
Классен кĕрешӳ йалавне
Классăр пурнăçшăн,
Йулташсем!

Стсена çине йурлакансем, мусăкçăсем илемлĕн тăрса «Утарнĕксен маринне» йурлаççĕ.

---

*) Ку пйесса Ђăваш автономийĕ 12 çул тултарнă йађĕпе иртнĕ искуствăсен Олимпиати вăхăтĕнђе Шупашкарта хĕрлĕ площђăтре тата Ђулхулара ђăваш искуствисен текатнĕкне иртерме кайсассăн хула театтăрĕнђе тата Автосавăтра выђаса кăтартнă.

**) Шупашкарта выђанă ђукне çимфонилле оркестăрпа патшалăх хорĕ пĕрле «Октапĕр çулĕ» йурласа пађĕç. Ку йурă—мусăкĕ В. П. Воропйовăн, сăввисем . . Н. Васанккан, ройалђпе тата оркестăрпа калама Ђуплинпа Капĕр й-сем хатĕрленĕ. Унтан хор „Айăр хĕрсем" йурларĕ. Мусăкĕ Ç. Макçимăвăн.

# САВАСЕМ

## УЙĂП МИШШИ

### ХЁР ЙУРРИ

Çаралҫĕ кĕр
Салху тавралăхра.
Мĕн пек тўлек!
Мĕн пек çемçе-çке шăплăх!
Тĕттĕм хăпарҫĕ симĕс улăхран
Вăл çук çаплах...
Ах, кам-ши, кам айăплă?

Йе вутлă анăç илемне кура,
Йе еп сана курса-и, шупка уйăх
Темĕскер хĕсет
Ман çамрăк кăккăра...
Тутлăн ĕмет пĕр савăнăç,
Пĕр хуйăх...

Машшинпала пайан
Уйар кунта
Колхос хирне
Пуçтартăмăр утарлăн.
Çампа ĕç хыççăн тухрăм çакăнта,
Ана курмах...
Вăл çук. Кама мĕн шарлăн?

Пуху хыççăн
Тухап тесеҫҫĕçке!
Кунне ĕнер
Ĕçре, пĕрлех кунларĕ.
Хăй пит те çамрăк,
Хăй—ҫеҫен çеçке.
Ăспуçĕпе мана вăл тыткăнларĕ...

Хĕвел хĕмне
Аҫашшăн пăрахаҭ ир.
Пĕрре епир ирех ĕçе тухсаҫҫĕ.
Хĕрсем калаççĕ:
Килнĕ прикатир,
Хастарлăскер,
Илемлĕ çамрăк каҫҫă...

Çак кунсенђе килсеђђӗ,
Хуларан.
Вӑл ӗнер çеç
Мана та тӗл пулсађђӗ.
Каларӗ шӑппӑн:
— Ма салху ларан?
Йе пӗрле çуким
Хӑв йуратнӑ кађђӑ?

Ун пек ђухне
Ђӗлхе çӗтме ансат.
Сӑмах тухмасť.
Еп пултӑм сӗм ђӗлхесӗр.
Вара, аран, ађашшӑн, вӑтанса
Хуллен каларӑм:
— Савнӑ кађђӑ... Есӗр...

Çанçурм ӑшшӑн карӗ сӑркаса...
Хам сӑмаха
Еп хам та ӑнланмастӑп...
Пӗрле çӳренӗ хыççӗн çӗркаçа
Хыттӑн ђуптурӗ:
— Сывӑ пул... манмастӑп...

Хаљ вутлӑ анӑç илемне кура
Йе сӑнаса: мӗнле шӑваť çут уйӑх
Ана кӗтетӗп...
Çамрӑк кӑккӑра
Тутлӑн ӗмет пӗр савӑнӑç,
Пӗр хуйӑх ..

1931 ç.

*Nelli* не

## МӐЙӐРТА

Йӑвӑççемпе епӗр вӑйӑра...
Вӑрман тӑрӑх йурӑна тӑсар-и?
Пуçтаратпӑр сарӑ мӑйӑра,
Анђах есӗ... мӑйӑртан та сарӑ...

Йӑпатаť мӗн çут хӗвел кулли.
Хирӗç ан пӑх, калама çук çутӑ.
Мӑйӑр сарӑ, тутлӑ та тулли,
Анђах есӗ мӑйӑртан та тутӑ.
Пит хаваслӑ тӑп-тӑрӑ тӳпе.
Куçусем çунса тӑраççӗ вутлӑ...

Тутлăçке мăйриййĕ! Сар çу пек!
Анҫах сан сăмах унран та тутлă.

Ҫеҫен çамрăклăх! Мухтав сана!
Кĕрешӳ те, ĕç те пулсан йăвăр
Пурнăçа сан пек хыт савсанах
Йăвăрлăх та иртсе кайĕ хăвăрт.

Савнипе пайан еп вăйăра.
Тĕнҫе тăрăх йурăна тăсар-и?
Пит савап еп сарă мăйăра
Анҫах есĕ мăйăртан та сарă...

Вăрнар—Ҫулхула
1931—1932 ç ç.

* * *

*Nelli*-не

Ан пытансам çулçăсен ăшне!
Каҫҫă ҫĕрипе ес ан выҫаҫҫĕ!
Ес кала: пиртен хăшши хăшне
Ытларах ҫĕрипеле сават-ши?

Килсем, килсем кăшт çывăхарах,
Килсем, килсем çывăхарах, ҫунăм.
Ес кала: хăшшиййĕн ытларах
Пĕр-пĕрне курасшăн ҫĕри çуннă...

Ак пайан каллех епĕр пĕрле.
Анҫах мĕн пек епĕр урăхланнă!
Ес кулмастăн хаҫ пĕҫĕк хĕрле
Хам та еп хам пек кулмашкăн маннă...

Пурнăç çулĕ пирĕн пит çине
Хайар тапхăр шевлине çаптарнă.
Çамрăклахçке, çирĕм çулҫҫенех
Куçусем пăхаç витĕр те тарăнăн...

Илемӳ сан хĕвеллĕ ирле.
Ҫĕрӳпе ес çав çавах аҫаши?
Унта мĕн ҫул кăмăл ирĕлет,
Унта мĕн ҫул ăшă хĕр аҫашĕ!

Ан пытанҫҫĕ çулçăсен ăшне,
Ан выҫасам манпала ес, ҫунăм!
Еп пĕлеп хăшши сават хăшне
Кам ҫĕри камшăн ытларах çуннă..

Вăрнар—Ҫулхула
1931—32 ç.ç.

# САПАР-ХА ХАРСĂР ÇУТĂ...

## АРК. ĔÇХĔЛ

Хĕвелпеле ыталанса
Аслă хире тухатăп,
Ађашласа калап:
—Сапар-ха çутă,—
Манра—
Çĕрпӳ ĕçлĕх ђăвашĕн йунĕ,
хатăр,
Мĕншĕн пайан куççуллĕ çăмăр
çутăр?..

Ийулђ кунĕ
Тăвăр шăрăхпала,
Ђĕрешĕн—
вĕççĕр тапат,—ирĕк!
Сывлăк савап тăван
Комсомола!
Йаш шăм-шака туптат вăл
çирĕп.

Шнейккă йурри
Çĕмрет пĕр шелсĕр
Вĕт шăрђаксенĕн тутăх йур-
рине,
Ак трактăрĕ—
Маттур ертелçĕ—
Ыраш хумĕсем урлă ишетçке
тӳррипех.

Пайтах поет
Сана савса йурлат,
Мăн кăмăллă аслă уй хирĕм...
...Анђах тытмарĕ акĕђски çурла
Пайан
Хĕвеллĕ ĕçлĕх ирĕ.

Мĕђйунлăх çарĕн йунĕпе тапса
Тапсах ӳсет çак çамрăк ĕмĕр,
Унăн
Нихçан ванми тăпса,
Унăн кăкрийĕ—шанђăк тимĕр.

Телей
Кĕрешӳре шалпар,
Иртрĕç кунсем
телей шырасĕн...
Пысăк колхоçнĕке
Алă пар
Çак шăрăх кунĕн тĕш ырашĕ.

Ĕç тарĕпе
Ђĕре ман савăнат,
Кĕрешӳре
Йаш ђĕререн хуйăр хăптатăп,
Тасан çĕклетĕп сăвăма,
Ăна çампа
Хĕрсех туптатăп.

Ĕçре пĕрмай
Малта, тĕпре,
Йăранпа çех утса ӳсмен еп.
Айта, ђĕрем,
Пур хăлтăка тĕпрет,
Ан тăхăн ес
Киђем сӳсменĕ.

Васка, шнейккăм,
Кастар хастар,
Ан тăк çапса
Ылттăн пĕрђе...
Шнейккăм йурлат вĕри саспа
Ĕçхаваспе
Хайар хĕрсе.

Ĕçлĕх маттурĕн йунĕ хатăр,
Мĕншĕн пайан сив çăмăр çу-
тăр?..
Хире хĕвелпеле ыталанса ту-
хатăп.
—Сапар ха, тетĕп,—
Харсăр çутă!

Ийулĕн 19-мĕш 32 çул.

# КРИТТĔККĂ ПАЙĔ

## СЫЛТĂМРАН КРИТТĔКЛЕНИНЕ ХИРĔÇ

### Т. В. ВАÇÇИЛЙĔВ

### (Краснов Аслин «Тăвалла» романĕ пирки).

Çак пысăк мар статйара епĕр пĕр криттĕк çинђе ђарăнса тăрасшăн. «Канаш» хаçатăн 45—46-мĕш номĕрĕсенђе Кутревтсĕв й-ш «Илемлĕ литтераттурăри тротскисла контропантăпа çĕрĕк липералисăма хирĕç» йатлă статйа кăларђĕ. Кутревтсĕв й-ш асăннă статйана йатарласа Краснов (Асли) йулташăн «Тăвалла» романĕ тăрăх çырнă. Краснов (Асли) ĕçне «тротскисла контропантăран урăх йат пама пултараймастпăр» тесе хайаррăн тўлесе хурат хăйĕн статйинне Кутревтсĕв.

Епĕр Краснов йулташăн романĕнђе çитменлĕхсем пĕрре те çук тесе каласшăн мар. Çитменлĕхсем пур. Анђах, Кутревтсĕвăн «хайар сăмахĕсемпе» те нийепле те килĕшме çук. Килĕшме кăна мар—Кутревтсĕвăн тишкĕрĕвпе, ун тишкĕрĕвĕнђен тухса тăракан шухăшсемпе пирĕн пĕр каçарусăр полђевикла хайарлăхпа кĕрешмелле.

Талкĕшпех сотсиалисăмла наступлени туса пырса, кăпиталисла çўп-çапа, кăпиталисла елементсене тĕппипех кăкласа шăлса тасатнă ђухне клас тăшманĕ сотсиалисăм тăвас ĕçе хирĕç мĕн пур вăйне пухса, хайаррăн, сĕлеке йухтарсах кĕрешнине Кутревтсĕв пĕртте пĕлмест иккен.

«Пролеттариат тиктаттурĕ, вăл—çĕнĕ клас **хăйĕнђен те вăйлăрах** тăшманпа, пуршуаçипе нихçанхинђен хайар, нихçанхинђен çивĕђ, нимле хĕрхенĕве пĕлмесĕр вăрçни. Тăшманăн, пуршуаçин хирĕç тăрасси ăна хăйне ярпĕтниле (пĕр çĕршывра çеç пулсан та) тата **хытăрах, вунă хут та ўсне,** ...ăн вăйĕ те пур тĕнђери кăпитал вăйĕнђе кăна мар, пуршуаçин пур тĕнђери ...хăнăвĕн вăйĕпе тĕрекĕнђе кăна мар, вăл **йăла вăйĕнђе те, вакă проиÿвотствă вăйĕнђе** те. Мĕншĕн тесессĕн вакă проиÿвотствă, мĕн тăвăн ĕнтĕ, нумай, питĕ нумай çутçанталăкра йулнă-ха, а вакă проиÿвотствă кăпиталисăмпа пуршуаçине çтиххийнă, тата массăллă пĕрмайах, кунсерен, сехетсерен **çуратса тăрат***).

(Ленин, XXV т. 173 стр).

Ленинăн 'ак çак сăмахĕсене манни—маркçисăмран уйрăлса кайнине анђах пĕлтерме пултарат.

Кутревтсĕв нимĕн тăваймаст. Ун шуђĕпе Краснов йулташ хăйĕн романĕнђе кулака йăлтах çыхса пăрахнă, çавăнпа та кулак пирĕншĕн пĕрре те хăрушă мар тесе çырса кăтартнă пулсан авантарах пулнă пулĕђђĕ.

*) Пур çĕрте те курççивсем Ленинăн хăйĕн.

Тĕплĕрех пăхар-ха ĕнтĕ. Мĕн çинђен çырнине, тата мĕнле криттĕклет-ха Кутревтсĕв?

«Тăвалла» романăн 42-мĕшпе 63-мĕш странитсинђе кулаксем шăртланса, тĕрлĕ майпа парттипе совет власĕ ĕçĕсене хирĕç тăнинђен пĕр пĕђĕк татăкне çырса пĕлтернипе килĕшмесĕр, Çиновйĕв XIV-мĕш сйес вăхăтĕнђе, «беднота отходит от нас, кулак хозяин деревни» тенине те, Краснов (Асли) романĕнђе «çак кас пуйансем хур тăваççĕ ĕнтĕ. Пĕри пухура кăшкăрсан ыттисем унăн хар тăраççĕ. Ђухăнсем веçех пусăраннă... (шухăшне пĕтермен—В). Усал кас, малтанах канашласа илеççĕ...» тенине те пĕр шăпана лартаť Кутревтсĕв.

Апла туни, паллах ĕнтĕ, тĕрĕс мар. Классен кĕрешĕвĕ çивĕђленсе пыракан вăхăтра кулаксем темтĕрлĕ канашласа, хĕрарăмне, ађипăђине лайăх вĕрентсе пухусене тухнине пурте пĕлеççĕ. Ку тĕлĕшрен Кўтревтсĕв çеç пĕлмене перет. Анђах ăна никам та ĕненмĕ.

Çиновйĕв XIV-мĕш сйесра, унпа пĕрле пĕтĕм тротскисла оппоçитси те, кулаксем ўссе кайнă тесе, парттн политтĕкĕ çине елеклесе, кулакран хăраса оппортунисла вывăт турĕ пулсан, романран керой Малттин кулак хăрушлăхĕнђен хăраса тăрса партти çул-йĕрĕнђен пăрăнса кайса, оппортунисла вывăт тумасť. Партти тĕрĕс çул-йĕрĕ хушнă пек пĕр майах малалла çапăçмаллине асăрхаť, ыттисене те кĕрешме ђĕнет, вĕрентет, мопилисатсилет. Çавăнпа та «вĕсем пĕр шăпара» тени—тĕрĕс мар.

Классен кĕрешĕвĕ çивĕђленсе пынă вăхăтра кулаксем орканисатсиленсе, тĕрлĕ майсемпе хирĕç тăнипе, вĕсем куђттурă тĕлĕшпе кайа йулнă ђухăнпа вăтамсен тĕттĕмлĕхĕпе усă курнипе, уйрăмăн илсен, хĕрарăмсем хушшинђе тĕрлĕ сăмахсем сарса çўресе, хăшпĕр пухусене салатса йанипе, хăйçен хисепĕ пур хăшпĕр вырăнсенђе пухусем пухма паманнипе, тата ытти çавăн пек вĕсен ирсĕр ĕçĕсемпе партти йатарласа кĕрешни Кутревтсĕвшĕн йушă сасă пек çеç туйăнаť пулмалла.

Ку тĕлĕшпе Ленинăн çўлте асăннă сăмахĕсене аса илтерсе, 1925-мĕш çултанпа уйрăмăн йалти ђухăнсен хушшинђе партти хастарлăн ĕçлесе пыни ахалтен маррине епĕр кăтартасшăн.

«Кулак хăрушлăхне нийепле маркçисăмпа та, ленинисăмпа та пытарма йурамасť,—тет Сталин йулташ,—кулак вăл кулак... вăл хăрушлăх, ун çинђен нийепле тситаттăсемпе те комунисссене улталас çук» (Сталин—XIV сйесри отђотран).

Кутревтсĕв «**Тăвалла**»ра ђухăн çинђен çырман тесе кукăрланса, «Тăвалла»ра тăлăх нумаййинђен тĕлĕнсе хытсах кайаť. Тăлăхсем çинђен çăвар уçма криттĕк кулаксенђен хăраť. Йепле каласа сăрлаť-ха вăл хăй хăранине.

«Вăл тăлăх çын,—тесе калаççĕ тет кулаксем,—ђухăн—вăл ĕçлеме пултарайман çын... тесе елеклеме тăрăшаççĕ», тет криттĕк. Кулаксем елеклеççĕ, ку тĕрĕс ĕнтĕ. Анђах епĕр вĕсем çапла елекленинђен пĕртте хăраса тăмастпăр. Епĕр вĕсене тўрех ак çапла калатпăр:—Вĕсем ђухăн, çавăнпа та тăлăх, вĕсен ашшĕ-амăшĕ сирĕншĕн ĕçлесе пурнас кун-çулĕсене татнă, вĕсемшĕн есĕр айăплă,—тетпĕр.

Пирĕн криттĕк ку тĕлĕшпе паттăр çемйеллĕ патракпа ђухăн хыçне пытанасшăн.

«Мĕншĕн хуť пĕр керойĕ те пулин тем тĕрлĕ паттăр çемйеллĕ патрак, те ђухăн пулма пултарайман», тет криттĕк.

Малалла тата вăл—«комунисла партти пролеттариата, ĕç хресҫенне те револҫутсиҫҫен те, револҫутсире те, сотсиалисăм строиттĕлстви вăхăтĕнҫе те йертсе, çул кăтартса, активлă ĕçлесе пыраҭ. Краснов (Асли) çакна пĕлмест», тенĕ пек шухăшламасăрах çавăрттарса çырса лартаҭ.

«Тăвалла»ра, ҫăнах та, йалта тăвата парттийтсă пур пулсан та, вĕсен ĕçĕ курăнмасҭ, анҫах 29-мĕш странитсинҫе тырă пухас ĕç çинҫен сўтсе йавакан райкомол пленăмĕ çинҫен вуласа епĕр райком çекреттарĕн рукковотствине пĕлетпĕр, ку йертсе пырури пĕр ĕç çинҫен калани пулса тăраҭ ĕнтĕ.

— Йалан комсомол ĕçлет,—тесе тарăхаҭ пирĕн криттĕкĕмĕр. Тарăхма пулаҭ те ĕнтĕ, анҫах çакна та манас пулмасҭ: Комсомол парттин пирвайхи пулăшаканĕ пулса тăраҭ, çав пысăк вăй парттийе пулăшас ĕçре питĕ пысăк вырăн йышăнса тăраҭ, уйрăмах партти йаҫекки çук йалсенҫе партти ĕçĕнҫе комсомол орканисатсийĕсем пысăк ответлă сатаҫсене туса пыраççĕ.

Пирĕн криттĕкĕмĕр çапла малалла та лăпланма пĕлмест. Вăл хăйĕннех перет: Малттин... килмен пулсан пĕтĕм ĕç хупланса лармалла пулнă, тесе пат пĕрсе хураҭ вăл.

Çапла вара унăн кунта «тата мĕн хастарланса çўретĕр епĕр, комсомолĕссем, ĕç сирĕнсĕр пуçнех пулаҭ, темелли çеç йулнă, анҫах тўрех кун пек выват тăвасран криттĕк хăрат пулас, васкаса ку тĕлтен куйан пек шăвăнса тараҭ те, каллех партти ĕçленине кăтарманнишĕн айăплама пуçлаҭ.

Малалла та Кутревтсĕв пире шалт тĕлĕнтерсех пыраҭ. Ун шуҫĕпе кулак аҫисем тĕрлĕ ултавлă мелсемпе вĕренме кĕни, тивĕçлĕ çынсем хăш ҫухне лайăх астăвайман пирки совета хирĕçле тĕрлĕ елементсем, пўрократсем уҫрештенисене пырса кĕни, вĕсемпе пĕр ҫарăнмасăр парттн кĕрешни так ахалтен çеç пек. Çук, криттĕкĕм, çавăн пек фактăсем пуррине партти никамран та пытармасҭ, вĕсемпе кĕрешме пĕтĕм опҫăлăха тимлетсе, çавнашкал елементсене пĕр хĕрхенмесĕр аппаратран, шкултан, колхосран кăларса сирпĕттерет. Паллах ĕнтĕ, çак ĕçре те парттийе пулăшас çĕрте комсомол малта пыраҭ. Кутревтсĕв çавăн пек хĕсĕнсе кĕрсе кайнă елементсене сирпĕтес тĕлĕшпе калаçнине илтсен: «Караул! Парометтăр!!!» тесе çухăрма хатĕр. Ку ĕнтĕ совет майлă çынсене кирек кама та тĕлĕнтерĕ.

Хаҫ ĕнтĕ Кутревтсĕв криттĕккине малалла тĕпҫер.

Тротскисла оппоçитсине, патша вăхăтĕнҫе ҫухăнсем 60% пулнă пулсан, халĕ 75%,—кулаксем 5% пулнă та хаҫ 8, йе 12%, вăтам хаҫ патша ҫухнехинҫен те сахалтарах тийекен партти çулйĕрне çĕтернĕ, маркçисăмпа ленинисăмран татăлса кайнă йертсе пырува (рукковотства) хирĕç XIV-мĕш сйесра Сталин йулташ пит те тĕрĕс каланине: «хăйсене хăйсем маркçис текен çынсем çак тĕнҫере çукла ҫеппуххана мĕнле лапăртатма пултараççĕ-ши? Ку вĕт кулă çеç, телейсĕрлĕх, хурлăх» тенине Кутревтсĕв вуласа пĕлкеленĕ, ку йенне пĕлни питĕ аван ĕнтĕ, анҫах Сталин йулташ çав XIV-мĕш сйесрах тепĕр йенҫи хăрушлăх та пурри çинҫен каланине: «**кулак ўсни хаҫхи вăхăтра вăл факт, епĕр ăна економĕк тĕлĕшпе çапса хуçасси айакра-ха. Кулак вăй пуçтарат, ун çинҫен тавлашмалли те çук, кам çавна сисмест, кам ăна пуçҭакки, тет, кам кулак—шуппел***) **çеç тет,—вăл парттин сыхлăхне çухаттарса, кулакпа**

*) «Хăратакан мĕлке çеç» тени.

**кёрешес ĕçре парттийе хĕçпăшалсăрлатса хăрушлăха тăратса хăварат»** (Сталин—XIV сйесре туса панă отђотран) тесе пит лайăххăн каласа панине Кутревтсĕв пĕлмест. (Пĕлнĕ пулсассăн—йури манăçа хăвараť вара вăл).

**Кутревтсĕв криттĕкĕнђе çав халђхи тапхăрта ђи пысăк хăрушлăх пулса тăракан сылтăм сулăнђăкла, вырăнпа кулаксен хутне кĕрсе, вĕсене тыткалакан рапођђи клас пăркăçне пĕрмайах пушаттарма тăрăшаť.**

Унтан тата, пољшевикла пиçĕхсе çитеймен, хунав пек çамрăк вĕри ђĕреллĕ ађасем краштăн вăрçинђе пулнă хăйсенђен аслăрах йулташĕ, пиђђĕшĕ вăрçăра клас тăшманĕсемпе кĕрешни çинђен каласа кăтартнă хыççăн:—ех, мĕншĕн ун ђух епĕ пĕђĕкçĕ пулнă-шн?—тесе каланине, çапла вара ун ђухнехи класлă кĕрешў асапне хăйсен çине те вĕсен куçарас килнине клас ташманĕпе çапăçакан, хăйсен клас йулташĕсемшĕн хута кĕрсе пуçне хывма хатĕрлĕхне кăтартакан комсомолĕссене Кутревтсĕв нимĕскере йурамн шутласа ку йапала тĕрĕс мар тесе, пайанхи ĕçе иккĕмĕш вырăна хунине кăтартаť—тесе лаплаттарса хураť.

Çамрăксене пољшевикла пиçĕхтерсе вĕрентсе ўстерес ĕçре, краштăн вăрçинђе алла хĕç-пăшал тытса тухса, клас тăшманĕпе—куçа-куçăн тăрса çапăçни çинђен кала-кала кăтартни питех те пысăк вырăн йышăнса тăраť ĕнтĕ. Çамрăксене вĕрентсе ўстерес ĕçре куна манмалла марах, пирĕн ватă пољшевиксем патша тискер кунĕсенђе тем тĕрлĕ асап, хĕн-хур курса нимскере пăхмасăр ђăтăмлă, пĕрмайах малалла ыткăнса çапăçса пынинђен, краштăн вăрçинђе хăйсене-хăйсем шеллемесĕр çапăçнинђен сахал мар вĕренмелли примерсем илмелле, раснах кăпиталисăмăн пусмăрлăхне курман çамрăксене çав тискер пурнăçа хирĕç çапăçнинђен примерсем илсе вĕрентсе, малаллахи ĕçре хĕрўллĕ пољшевикла çапăçма пултаракан çынсем хатĕрлемелле.

Çав пољшевикла çапăçури примерсен хакне Кутревтсĕвсем тем каласа çырсан та йўнетме пултараймаççĕ.

Халĕ ĕнтĕ пĕр-икĕ сăмах статйан йулашки пайĕ çинђен, Кутревтсĕв опйективлă криттĕк марри таçтан та палăрни çинђен.

— Арлансем кĕтўвĕпе çўремеççĕ вĕсем—тесе ĕнентересшĕн пире криттĕк. Анђах пур ђĕрђун, вылђăх-ђĕрлĕх те пĕр вырăнтан тепĕр вырăна ушкăнĕпе, кĕтўпе куçнине халĕ ĕнтĕ пĕрремĕш сыпăкра вĕренекен ађасем те пĕлеççĕ.

— Кам курнă-ши сомă пулăсем шыв хĕррине канма тухса выртнине? тесе çавăрттарса хураť малалла çав криттĕкех.

Кутревтсĕв курманнишĕн сомă пулăсем тухса выртма ђарăнмаççĕ ĕнтĕ, ђарăнмаççĕ.

Криттĕк нумай çĕрте çавăн пек пустуйах ђĕрре кĕрсе, нимĕскере кирлĕ маррисемпех хăй статйине тултарма тăрăшаť.

Краснов (Аслин) «Тăвалла» романĕ пирки пĕр Кутревтсĕв кăна та мар, ыттисем те пуçĕсене çухатса пăхрĕçĕ. Ак Мраңкка Микихвернех илер.

Анђах епĕр кунта унăн «Тăвалла»-на хирĕç статйи çинђен халĕ ђарăнсах тăрасшăн мар. Пирĕн шутпа Мраңкка Микихверĕ лайăх вуласа тăнланмасăр пăтрашса пĕтнĕ; пĕр-ик пример илер-ха: «Акă Кулйне пайан Кенăпа йуратса пурăнса йăвăр çын пулнă», тесе çыраť Мраңкка. Роман çинђе йу-

ратса пурăнни вырăнне Кулинене çав кулак аҫи мăшкăл тунине куратпăр. Çапла ĕнтĕ Мраҫкка çийелтен пăхса иртсе кайнă кунта.

Унтан тата çак етемех Малттине хуларан килнĕ интелекент туса лартат е, «рапоҫҫи клас револҫутсине нихăçан та йертсе пыма пултараймаст, пĕр нтелекентсем анҫах револҫутсине йертсе пыма пултараççĕ» тейекен теорипе ыпăçтарса лартат. Анҫах романта ĕç паҫах урăхла, романра—Малттин ав йалти патрак, халҫ вĕренме кайнă йĕкĕт.

Пĕр сăмахпа каласан «Штурăм» хаçаҫĕ çине тухнă статйара Мраҫкка Микихверĕ вуласа тăнланмасăр питĕ пăтраштарса пĕтернĕ, **пирĕн шутпа ăл йăнăша хăйĕннех хăвăртрах тӳрлетмелле.**

Йулашкинҫен епĕр «Тăвалла» роман çинҫен ак çакна каласшăн.

Пролеттарин ҫăвашла литтераттурĕнҫе йалта çĕнĕ пурнăç туса пынă ĕрте клас тăшманĕпе кивĕ йăласем вăйлăн хирĕç тăнипе мĕн пур вăйа урса кĕрешмелли çинҫен çырса пĕлтерни, çав кĕрешĕвĕн тĕрлĕ йенĕсене утатса пама тăрăшни романăн лайăх йенĕсем пулса тăраççĕ. Анҫах çав ĕрешĕвĕн тĕрлĕ йенсене тата та тĕрĕссĕн çутатса парас ĕçре автăрăн алаллахи ӳсĕмĕ кирли паллах.

Сотсиалисăмшăн кĕрешнĕ çĕрте мĕнле майсем, мĕнле хирĕçӳсем пулса ынчине пĕтĕмĕшпе мар (паллах, автăр ун пек сатаҫ лартман та) кĕрешĕвĕн йрăм уҫасткисене илсе кăтартнă пулсан та, хăшпĕр йенҫен çителĕклех утатса паманни куранат.

Романра партти йертсе пыни паллă вырăн йышанса тăрса, вăл йертсе ынне сотсиалисăмшăн вăйлăн кĕрешекен йалти актив тата массă та иçенех хăпарса ӳссе пыни курăнманни, çав пур пек йалти тăватă парттийтсăсен ĕçĕпе вĕсен йĕри-тавра актив ҫăмăртанни çинҫен çутатса паманни, омсомолĕссем хăйсем йĕри-тавра актив пуçтарса массăна ĕçе хутшăнтарса ырас вырăнне пĕтĕм ĕçе хăйсем çине тийеме хăтланни—романăн пысăк итменлĕхсем пулса тăраççĕ.

Ку романăн пĕрремĕш пайĕ кăна-ха, романăн ытти пайĕсенҫе çав итменлĕхсене автăрăн астумалла.

---

**Ретаксирен**: «Тăвалла» çинҫен тата ку статйара хусатнă ыйтусем тăрăх алҫманахăн çитес №-ĕсенҫе тĕплĕеххĕн çырăпăр.

# ТАЙĂР ТИМККИ СĂВВИСЕМ

Тайăр Тимкки—ђăвашсен малтанхи револютсиллĕ рапођђи поет. Вăл 1905—07-мĕш çулсенђе çырнă вăхăтра Хусанти типокрафисенђе напоршђĕк пулса ĕçленĕ. 17 çулта ђухне ăна вăрттăн ђăваш типокрафийĕ тунăшăн ссылкăна йанă. Вăл унтах вилнĕ.

Хăйĕн сăввисенђе вăл сотсиалънă ыйтусене, клас кĕрешӳне палăртат. Çук çынсем (ђухăнсем) улпутсемпе кĕрешнине кăтартат.

Ђухăнсене кĕрешĕве ђĕнет, „ырлăхăра вăрçса илĕр“, тет. Улпутсем çакса вĕлерĕçин те, есĕр хăраса, кĕрешме ан ђарăнăр, тет.

Анђах кĕрешĕве маркçиссем вĕрентнĕ пек кăтартаймаст. Пролеттари револютси ыйтăвĕсене татăклă пĕлеймест вăл.

„Халăхсем“ (пĕтĕмшпе илсе) „çын ырлăхĕшĕн вилĕр“ тесе çырат. Çапах тавăл вăхăтри тапхăршăн ку кĕрешӳ сăввисем, вăйлă, тĕреклĕ сасă пулса тăнă.

Алманаха кĕртекен, „Ђаплă вилĕм йуррине“ автăр 1906-мĕш çулта „Хыпар“ хаçатăн 23-мĕш №-рне пиђетлеттернĕ.

„Хыпарта“ тухнă пекех пиђетлетпĕр. Ку сăвă ђăваш ĕçхалĕхĕн литтераттур историне тĕпђенĕ вăхăтра, тата аслăрах шкулсенђе ђăваш литтераттурине вĕреннĕ ђухне усă курма кирлĕ пулма пултарат.

## ЂАПЛĂ ВИЛĔМ ЙУРРИ

1

Халăх куçĕ умĕнђе,
Çук-çынсемшĕн*) вилетпĕр.
Сыв пул ĕнтĕ, çут тĕнђе,
Йулашкине паратпăр.

Йĕри тавра халăхсем,
Пире курсан хĕрхенђĕç.
Анђах вăйлă улпутсем:
Çакăр! тесе кăшкăрђĕç.

Ман йулашки сăмахсем:
„Пуласси çине шанса,
Хытă тăрăр, халăхсем,
Ан ђарăнăр хăраса!

*) Çук çынсем – ђухăнсем.

„Пирён халё çёр çинђе,
Çырмари пек йун йухат;
Хресђен тăвăр хирёнђе
Кус-çулђипе сухалат.

Нумай тăлăх ађасем,
Йалтан йала çÿреççё.
Çынна тёл пулсан вёсем
Ашшё çинђен ыйтаççё.

II

„Есёр, тăлăх ађасем,
Аçăрсене ан шырăр.
Вёсене ырă çынсем—
Улпутран ыйтма хушăр.

„Ей, пур нушаллă халăх“!
Çакна есир ан манăр.
Вăл халђ вăхăтлăх,
Пулассишён тăрăшăр...

Акă епир вилнё пек,
Çын ырлăхёшён вилетпёр.
Ун пек вилём пулмё тек,
Ырлăхра*) вăрçса илёр“.

Каллех вăйлă улпутсем;
Çакăр вёсене! терёç.
Унта тăракан çынсем
Пуçне ђиксе саланђёç...

Т. Т.

*) Ырлăхăра.

## ТУПМАЛЛИ:

1. ТРУПИНА МАРХВИ—Муђар (*калав*) . . . . . . . 3
2. И. ТУКТАШ—Совет сойусĕпе Йевроп (*поемă кўлепи*) 45
3. И. САЛАМПЕК—Иштул (*роман пролокĕ*) . . . . . 51
4. ЛУККА ЂАПЛИН—Таплантăмăр (*сăвă*) . . . . . . 8
5. ВАЛ. АХТУПАЙ—Хурлăхлă карапсем (*сăвă*) . . . . 85
6. „ Тĕнђе илемĕ (*сăвă*) . . . . 86
7. В. И. КРАСНОВ—„Тăвалла" (*роман иккĕмĕш кĕнеки*) 89
8. И. МАКÇИМĂВ-КОШКИНСКИ—Атăл кĕввисем (*пйессă*) . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 140
9. УЙĂП МИШШИ—*сăвăсем*: . . . . . . . . . . .
Хĕр йурри . . . . . . . . . . . . . . . . 165
Мăйăрта . . . . . . . . . . . . . . . . . 166
*** (Ан пытансам...) . . . . . . . . . . . . . 167
10. АРК. ЁÇХĔЛ—Сапар-ка харсăрăн çутă (*сăвă*) . . . . 168

**КРИТТĔККĂ.**

11. Т. В. ВАÇÇИЛЙĔВ—Сылтăмран криттĕкленине хирĕç („*Тăвалла*" *пирки*) . . . . . . . . . . . . . 169

**ЛИТТЕРАТТУР АРХИВĔ**

12. ТАЙĂР ТИМККИ сăввисем çинђен . . . . . . . . 174
13. Т. Т. Ђаплă вилĕм йурри (*сăвă*) . . . . . . . . . 174

**Огветлă ретактăр Н. ВАÇАНКА.**

**Ретколлеки ђленĕсем: И. Т. КУÇНЕТСОВ, А. СОЛĂТТАВ, УЙĂП МИШШИ, ИВАН МУЂИ, ЙЕМ. САХХАРĂВ, МИТТА В. тата П. Н. ОÇИППĂВ.**

Сдано в производство 11/X—32 г.
Подписано к печати 14/II—33 г.
Техредактор А. Демидов.

Ст. ф. 6. 82×110 Об'ем 11 п. т. 52.600 зн. в п. л.
Уполн. Чувашлита № 1560. Заказ № 1447. Тираж 4100